# УЛӐП

*Чӑваш эпосӗ*

ҪУЙАН ХӖВЕТӖРӖ
пухса сӑвӑланӑ

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
1996

ББК 84 Чув 7-5
С 98

Кĕнекене
В. Г. Бритвин илемлетнĕ

С $\frac{4702710202-06}{М 136 (03)-96}$ 55—96

ISBN 5-7670-0873-6

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1996

*Атăл шывĕ çăлкуç пек.*
*Йăлтăртатать кĕмĕл пек.*
*Кĕмĕл хĕлĕх тăсар-и,*
*Кĕсле çине карар-и?*
*Пирĕн енче вăрмансем,*
*Вăрманĕнче шăпчăксем.*
*Шăпчăк кайăк пулар-и,*
*Ян янратса юрлар-и?*
*Ывăлăм, кĕсле каласам,*
*Кĕмĕл хĕлĕхпе вăл халь.*
*Аннÿ пуçлĕ юррине,*
*Ача чухне илтнине.*
*Улăп çинчен юрлама*
*Мана пĕччен çăмăл мар.*
*Кĕсле калан пулсан та,*
*Ывăлăм, юрла манпа тан.*
*Юррăмăрсем халăхран,*
*Ăна хывнă сĕм авал.*
*Юрра юрлар чĕререн,*
*Халăх чунне кĕмелле.*



# *Юрă пуçламăшě*

Пирěн вăрман юманлăх.
Юманлăхра — çăкалăх,
Çăкалăхра — уçланкă.
Уçланкăра мěн çуккă?
Уçланкăра тем те пур,
Ўркенмесен кай та кур.
Унта пырать акатуй,
Халлăс пулсан — çичçěр туй.
Акатуя хутшăнма
Кěмěл кěсле турăмăр,
Ян янратса юрлама
Шăпчăк кайăк пултăмăр.
Çич хулана çитрěмěр,
Çичçěр кěвě илтрěмěр,
Кěсле вăйне пěлтěмěр.
Çěр-çěр ялта пултăмăр,
Çěр пин юрă илтрěмěр,
Халăх чапне пěлтěмěр.
Çилту çинче пултăмăр,
Шап-шурă юр куртăмăр.
Юрě — çичě çулхискер,
Ирěлмешкěн маннăскер.
Унта вис кас выртрăмăр,
Кайăк йěрне куртăмăр,
Ун йěррипе утрăмăр,
Сукмак тăсса пытăмăр.
Сукмакě те вěçленчě,



Аслă Çавал курăнчě,
Атăл пекех туйăнчě.
Акăш карти çывхарчě,
Кайран таçта çухалчě.
Аслă Çавал илемре,
Улăхěсем чечекре,
Хурăнсем те ўсеççě,
Яла илем кўреççě.
Шур хурăнсем хушшинче
Шур чул выртать çěр çинче.
Хурăн айне лартăмăр,
Курман кайăк куртăмăр.
Кайăк çинчи мерченсем
Пин-пин тěспе çунаççě,
Çавра ахах куçěсем
Вěри куççуль тăкаççě
— Кайăк, мěншěн йěретěн,
Вěри куççуль тăкатăн?
Çунаттуна хуçрěç-и
Е юлташна тытрěç-и?
Кайăк ларчě чул çине,
Улăштарчě сăн-питне.
Пирěн умра сар пике
Тěлěнтерчě сăнěпе.
Сарă хěвел — питěнче,
Çенěç сасси — чěлхинче.
Утать акăш ишшипе,
Юрлать çăтмах кěввипе.
— Сăлтавě нур йěмешкěн,
Вěри куççуль тăкмашкăн.
Эпě Мерчен пулатăп.
Сăрт айěнче пурнатăп.
Ман алăра сăрт мулě,
Ылтăн-кěмěл тем чухлě.
Эп пулатăп çакăнта
Çěр çулта пěр кас кăна.

Çĕр каçиччен çÿретĕп,
Эп Улăпа кĕтетĕп.
Анчах Улăп курăнмасть,
Çавал хĕрне вăл анмасть.
Улăп каллех ĕмĕтре,
Ĕнтĕ пушă ман чĕре.
Паттăр, чунăм, ăçта эс,
Ма ман пата килместĕн?
Саншăн вăййа тухиччен,
Çынсем мана куриччен
Вĕлкĕштерсе çÿçĕме
Çиветлерĕм çиçĕмпе.
Ун чух мана куракан,
Çÿç пĕрчине тупакан,
Асамçăна тухатчĕ,
Ялан телей куратчĕ.
Саншăнах çÿç пĕрчине
Ӳкермерĕм çĕр çине.
Сана анчах юратрăм,
Саншăн чуна парăттăм.
Чĕре туртса ыратать,
Çавал хĕрне уттарать.
Эх, çав Улăп сывах-ши,
Ман çинчен вăл шутлать-ши?
— Улăп çинчен пĕлместпĕр,
Суйса сăмах пеместпĕр,—
Хурав пулчĕ пирĕнтен
Ним калама пĕлменрен.
Пике тутăр вĕçтерсен,
Куçне шăлса типĕтсен,
Эх, пуçларĕ юрлама
Юханшыва хумхатса.
Иртнĕ пурнăç витĕмне
Уçса хучĕ юррипе,
Улăп кун-çул утăмне
Вăл пĕлтерчĕ йĕркипе.



Эй, тантăшсем, ял-йышсем,
Акатуя килнисем,
Мерчен кайăк юррине,
Улăп çинчен хуннине,
Кунта пĕрле юрлар-и,
Улăп пекех пулар-и?

# Пĕрремĕш юрă

## УЛĂП АШШĔ УСЛАТИ

*Чăваш çĕршывне сыхлакан паттăрсем:
Услати, Çĕрпÿ, Сикпăрçа. Услати сасартăк чирлесе ÿкет. Çавна Патти хун Сунартан илтет те Чăваша тапăнать. Чирлĕ Услати Патти хунпа çапăçать, чир хытă аптратнипе çĕре ÿкет. Ун таврa тăшмансем.*

Ай-хай ĕнтĕ, мĕн ĕнтĕ,
Каламалла кĕслепе.
Ай-хай, пире пил пултăр,
Хайлав çапла пуçлантăр.
Тахçан авал çак енче,
Аслă Атăл хĕрринче,
Çеçенхирсем хумханнă,
Сĕм вăрмансем кашланă.
Ват юманлăх çумĕнче,
Çавра кÿлĕ хĕрриче,
Чăваш ялĕ вырнаçнă,
Ырă ятне упранă.
Ялта, урам кукринче,
Мăн йăмрасен хÿттинче,
Чатăр кил-сурт куранна,
Унта иккĕн пуранна.
Кил хуçийĕ, чи ватти,
Шур сухаллă Услати,
Çичçĕр çула пусиăскер,



Арăслантан вăйлăскер,
Тепри — Чĕкеç, ватăскер,
Çичçĕр çула кайнăскер,
Кĕмĕл çÿçлĕ, ăслăскер,
Ĕçсĕр ларма пĕлменскер.
Ват Услати тайăлман,
Килте ларма юратман,
Ял-йышсемпе тавлашман,
Никамран та хăраман.
Лаши унăн — çилçунат,
Çилтен малта вăл чупать.
Чаплă вутхĕç аллинче,
Çитмĕл патман[1] туртать тет.
Пĕрре сулсан вутхĕçне
Çич çухрăма хĕм çисет.
Тепре сулсан — вут тухать,
Çĕр çухрăмран курăнать.
Услатин пур икĕ тус,
Паллаштарма вăхăт пуль.
Пĕрин ячĕ Сикпăрçа,
Хитре каччă таврара
Хăйне тытма пĕлнĕрен.
Тепри — Çĕрпÿ, ватăскер,
Паттăр вара вăй енчен.
Вăрăм çула тухсассăн,
Тусĕсемпе тĕл пулсан
Ват Услати хисепре
Икĕ тусĕ хушшинче.
Çĕр касиччен каласма,
Тĕл пулнине палăртма
Юман айне ларассĕ,
Шăрттан касса çиессĕ,
Шерпетне те манмассĕ,
Тавăçлансах ĕçессĕ.
«Атте-анне чăн пахи,

[1] Патман — 64 кг.

Тăван çĕршыв чăн хакли»,—
Тесе юрра вĕçлесен
Ура çинче виççĕш те.
Кĕрешсе те илеççĕ,
Выртма хÿшĕ тăваççĕ.
Пĕрле выртса канаççĕ.
Сарă хĕвел вăрансан
Вĕсем пĕрле — апатра.
Ырă сунсан пĕр-пĕрне,
Ыталанса чуптуса
Уйăрлаççĕ тăванла.
Тепĕр чухне çула май
Тăшмансене тĕл пулсан
Çил-тăвăлла тапăннă,
Ним хăварми аркатнă.
Пĕрре киле таврăнсан,
Мунча хутса çăвăнсан
Услатни пуç усăнчĕ,
Чĕркуçленсе вăл ларчĕ.
Аса илчĕ вăхăта,
Тĕл пулинне Супарпа,
Мĕнле ăна ирхине
Хăна туса янине.
Ырă çын пек курăнма
Хăй йăнăшне йышăнса
Куççуль тăкса ларнине,
Ĕненмелле суйинне.
«Çын вăл тăван халăхсăр
Уй варринчи хурама
Терĕн мана. Ăнлантăм.
Хам йăнăша йышнатăп,
Каçармашкăн ыйтатăп.
Манран суя тухсассăн
Мана çаптăр тип аçа.
Хам сăмаха тытмасан
Çĕр те çăттăр çавăнтах.



Тупа тытап сан умра
Тăпра çисе пĕр курка».
Тăпра çирĕ ман умра
Çапла сăмах каласа:
«Çак ман тупа пăлатран–
Ĕмĕрлĕхе упранма».
Эх, ват супнă! Энĕ те
Ĕнентĕм вĕт суеçе.
Мĕн тăвас тен, чăвашсен
Кăмăлĕсем çавăн пек.
Ахальтен мар чирлерĕм.
Супар мана тем турĕ.
Ман кун-çула кĕскетме
Уй усалне тыттарчĕ.
Ăна ним те шанма çук.
Вăл çакна та турĕ пуль:
Кăвак юман кăмпинне,
Çич çул хушши ÿсинне,
Татса çимĕк каçхине
Кăларнă пуль сĕткенне.
Эпĕ çавна ĕçнĕ тен?
Çавăншăнах ман чир-чĕр!
Самай йывăр вăхăтра
Чун тухĕ-ши ман вара? —
Тет вăл хăйĕн ăшĕнче.
Тарăн шухăш пуçĕнче.
Чĕкеç енне вăл пăхать.
Ыратнипе шăл сыртать.
Сипленмешкĕн вăл выртать,
Тăлăп витсе ятарать.
Ват карчăкăн алăра
Пуканепе çăмарта.
Укçа — çутă шăвăçран,
Каснă çăкăр чĕлли те.
Ар пуç тавра пĕшхĕнсе
Вĕрÿ-суру чĕлхипе

Чĕкеç çаврать вĕсене.
— Вут алпасти[1],
Шыв алпасти,
Çил алпасти,
Вутлă хаяр!
Шывлă хаяр,
Çырмаллă хаяр,
Сехмет хаяр!
Мускав хушшипе,
Кийў[2] çуммипе,
Тан[3] хĕррипе,
Шешма юханшывпе[4]
Тутар пики килет,
Вунвиççĕре.
Унта кайăр,
Услатне хăварăр.
Йыт алпасти,
Чăх алпасти,
Кайăк алпасти,
Вăрман алпасти.
Çил вупăрĕ,
Вут вупăрĕ,
Шыв вупăрĕ,
Мускав хушшипе,
Кийў çуммипе,
Тан хĕррипе,
Шешма юханшывпе
Тутар пики килет,
Вунвиççĕре.
Унта кайăр,
Услатне хăварăр.

---

[1] А л п а с т и — хаяр усал.
[2] К и й ў — Киев хули.
[3] Т а н — Дон юханшывĕ.
[4] Ш е ш м а — юханшыв ячĕ. Çавăн тăрăх Пăлхар патшалăхĕн хĕвелтухăç енчи чикки тăсăлнă.



Акар йытти[1],
Сехмет йытти[2]!
Эсрелпеле шыçка усал!
Вутлă усал!
Мускав хушшипе,
Кийў çуммипе,
Тан хĕррипе,
Шешма юханшывпе
Тутар пики килет,
Вунвиççĕре.
Унта кайăр,
Услатне хăварăр.
Чĕкеçваскать вăрмана,
Çитет тарăн çырмана,
Хурать юмлă парăмне
Тарăн çырма лапамне.
Унтан утать каялла.
Усалсене шахвăртма
Карчăк утти кутăнла.
Уй хапхине çĕклесе
Хирсе уçать тимĕрпе,
Кивĕ пўртĕн алăкне
Туртса уçать пилешпе.
Ват Услати чирлине,
Вилес пекех выртнине
Тăшман пĕлет виç кунтан
Чее ирсĕр Супартан.
Пит савăнать Патти хун[3],
Хура юнлă ирсĕр чун,
Пысăк çарне йыхăрать,
Çĕр çурасла кăшкăрать:

---

[1] А к а р й ы т т и — хаяр усал. Вăл Эсрелпе çын чунне кăларса çўрет.
[2] С е х м е т й ы т т и — хаяр усал.
[3] П а т т и х у н — тутар-монголсен хунĕ (патши) — Батый. Çав хун чăваш халăхĕ сăмахĕнче чи хаяр тăшмансенчен пĕри.

— Атьăр,васкăр ман хыçран,
Чăвашсене тĕп тăвар!
Унта пурнăç мăн таран,
Пурăнатпăр ташласа.
Тăшман Чăваш çĕрĕнче,
Чăваш — тăшман умĕнче.
Тăван çĕрне вăл сыхлать,
Мĕнпур вăйпа çапăçать.
Çĕрпӳ паттăр аптрамасть,
Никамран та хăрамасть.
Туçи сăрчĕ тĕлĕнче,
Çӳллĕ тусем айĕнче,
Халь çапăçать тăшманпа,
Патти хунпа, кашкăрпа.
Тепри — çамрăк. Сикпăрça.
Тăшмана хăй тапăнать.
Вăл халь Шешма хĕрринче,
Урнă тăшман хушшинче.
Икĕ паттăр ик тĕлте
Хĕçĕсене сулаççĕ.
Нӳкерсене тураççĕ.
Хунăн ĕçĕ ăнманран
Çарĕ çĕре йăванать.
Сехри хăпса тухнăран
Каласмашкăн вăрттăнла
Чĕнсе илет Супара.
— Сăмаху сан — чул касать,
Унтан ылтăн хăвалать.
Сысна айне çитерет,
Пылпа çу ку тетерет.
Эс пурне те пултаран.
Кирĕшметпе тĕл пулсам,
Ăна çапла каласам:
«Пире чăваш çĕнсессĕн,
Кунтан хуса ярсассăн,
Чăваш халăх сана та
Çапса хуçать ман хыçран.
Сан та ĕнтĕ çавăнпа
Хунпа пĕрле пулмалла.
Эсĕ ăна пулăшсан
Сана манмасть нихăçан.
Çавна эсĕ ăнкарсам.
Ман сăмахра суя çук.
Ун пурлăхĕ — çавăн чул —
Шутлама ăс çитес çук.
Халех ăна пулăшсан
Ылтăн айне эс пулан.
Эс чĕлхӳне ан хĕрхен,
Сăмах çапма ан ӳркен.
Чăваш çынни хĕçпе чух
Пире валли пурнăç çук».
Супар ăста каласма,
Чĕлхипе тем çаптарать.
Ăсчаха та шахвăртать.
Халь вăл суйкăн чĕлхипе,
Вăрă-хурах туйăмпе,
Йӳнлĕ шырав йытти пек,
Шырать ылтăн читлĕхе.
Унти чăваш телейне,
Кĕнеке-çыру текенне.
Телей ăста выртнине
Пĕлсен Супар касхине
Кирĕшметпе тĕл пулать,
Ăна йăлтах пĕлтерет.
Усал чуклă Кирĕшмет
Читлĕх енне вĕçтерет.
Хăйĕн асам туйипе,
Читлĕх умне тухнă май,
Çулне тăсать пăрлатса.
Курать: читлĕх таврашпех
Хуралçăсем — паттăрсем.
Кĕççе питлĕ Кирĕшмет,

Туя пур та аллинче,
Хăрамасть вăл вĕсенчен.
Йăпшăнать вăл тилĕ пек,
Шăвăнать вăл çĕленле,
Тупать вăрттăн хӳтлĕхе.
Çав вырăнтан кашнине
Çапать асам туйипе.
Хуралçăсем самантрах
Чулланаççĕ йăванса.
Чи хисеплĕ читлĕхе,
Унти чăваш телейне,
Кĕнеке-çыру текенне,
Хул хушшине чикет те
Тапса сикет ахăрса
Ирсĕр ĕçшĕн савăнса.
    Аслă чăваш халăхĕ
Кĕнекесĕр телейсĕр.
Вăрçă ĕçĕ ăнăççăр.
    Тăшман Сĕве патĕнче,
Юнлă асап вăл енче.
Çитменнине Кирĕшмет
Патти хун йăлăннипе,
Йăваланса ыйтнипе
Асамлăхне хĕрхенмест.
Шешма шывĕ хĕрринче
Сикпăрçана туйипе
Пырса çапать, асамлать.
Паттăр куçран çухалать,
Ун вырăнче чул юлать.
    Тăшман Çĕрпӳ паттăра
Çĕнтерсенех вăрçăра
Яваклать те сăнчăрлать,
Пăрăспала мăйкăçлать,
Туçи сăртне сĕтĕрет,
Ана хупса питĕрет.
    Чăваш хытă кулянать.



Вĕри куççуль юхтарать.
Урнă тăшман ашкăнать,
Чăваш пуçĕ ыткăнать.
Аçтан чăттăр çавсене
Ват Услати килĕнче?
Ним тарламан пулсан та
Вăркăнтарать тăлăпа.
Сиксе ларать сак çине,
Ярса тытать вутхĕçне,
Сиввĕн пăхать куçĕле,
Эсрел тарать пĕшкĕнсе.
Хĕрĕх çулхи шерпетне
Паттăр ĕçет пичкерен.
Чĕнсе илет карчăкне.
Çапла калать чĕререн:
— Тăван çĕршыв асапра,
Мĕнпур чăваш вăрçăра.
Ялта лăпкă пулмалла,
Килтен çын пек тухмалла.
Йышран юлма каламан,
Утма хушнă халăхпа.
Кĕççе питлĕ эп пулман,
Вĕсемпе эп çаваăнпа!
— Ах, Услати, чирлĕ эс,
Урáранах кĕç ӳкен.
Ман сăмахран ан тухсам,
Пĕр виçĕ кун тăхтасам.
Халех пăтă пĕçерем,
Тутлă апат çитерем.
Пăтти симлĕ пулатех,
Вăл сан вăйна хушатех.
Хыр вутти те шарт! терĕ,
Вир пăтти те-халь пиçрĕ.—
Тет те Чĕкеç пăттине
Çитересшĕн мăшăрне.
    Анчах ватă Услати

Пăтă çисе ларать-и?
Виçĕ хутчен шăхăрать,
Урхамахне йыхăрать.
Çилçуначĕ ӳхлет çеç.
Хуçи ĕçне вăл пĕлет.
Пĕлĕтпе çĕр хушшине
Тапса сикет ирхине.
Çилçунатăн сăмсинчен
Çич çухрăма çитиччен
Çулăм тухать шăхăрса,
Тăшмансене хăратса.
Тăвăл вĕрет хăлхинчен
Ват юмансем авниччен.
Ана тейĕн çамкине,
Паллă та пур ун çинче —
Туллн уйăх тетерет.
Икĕ куçĕ хĕвелрен,
Раща пекех хӳри те.
Çилçуната Услати —
Вăл тăшманран хăрать-и —
Анма хушрĕ çĕр çине,
Ирсĕр тăшман хушшине.
— Аллах, пире ан пăрах,
Услатирен хăтарах! —
Сиксе чĕтрет Патти хун,
Сасси çиллес çавах ун.
Ват Услати вутхĕçне
Сулса илет пуç тавра.
Хĕçĕн хĕмлĕ çиçĕмне
Çиçĕнтерсе лапамра.
Айри вĕçет малалла,
Паттăр калать ак çапла:
— Чăваш тĕпĕ тымарлă,
Хĕçĕсем те касавлă,
Харăс тăрса çапăççан
Тăшман ая тăваймасть!



Шалчи тултăр тăшманăн,—
Терĕ чăваш хастаррăн,—
Хура çăхан, халь чĕтре,
Хур тăваймăн ӳлĕмрен!
Тăшман пуçĕ ыткăнать,
Ирсĕр çарĕ юхăнать
Çĕре ӳксе вилнипе
Е килелле тарнипе.
Патти хунĕ ут çинче,
Чĕри — чĕрне хушшинче,
Куян пекех ыткăнать,
Калай хунне[1] асăнать.
Çапах та вăл парăнмасть,
Ирсĕр ĕçне пăрахмасть,
Çилту çине хăпарать,
Хăйĕн çарне кăшкăрать:
— Эсир камран хăратăр,
Ма шаккалла таратăр?
Эй, чарăнăр, йĕкĕтсем,
Çеçенхирти пĕркĕтсем!
Тарсан — пурте пĕтетĕр,
Чăваш кулли пулатăр,
Кунта вилĕм тупатăр,
Тасамарла çĕретĕр[2].
Чăвашсенчен ан хăрăр,
Услатирен ан тарăр!
Курмастăр-и, вăл чирлĕ,
Сăнран пăхсан — вăл вилĕ!
Ун питĕнче çĕр сăнĕ,
Ал-уринче вил вăйĕ.
Айтăр пурте ман хыçран,
Шаршан тăвар чăвашран!

[1] Калай хун — авалхи тутар-монгол халăхĕн вăрçă турри.
[2] Тасамарла çĕретĕр — мусульман тĕнне тытакансем, хăйсене тĕне çирĕп тытакансем тесе, урăх тĕнпе пурăнакан халăха «тасамарсем» теççĕ.

Тăшман çарĕ чарăнчĕ,
Услатие сырăнчĕ.
Каллех сумсăр тăшманпа
Вăрçă пырать тăвăлла.
Тăшман майлă чирĕ те
Услатие тапăнать,
Ана тытса силлет те
Лаши çиччен ывăтать.
Тăшман аллах кăшкăрать,
Паттăра вăл хупăрлать.



# Иккĕмĕш юрă

## УЛАП АМАШĔ ЧĔКЕÇ

*Услати арăмĕ Чĕкеç стариккине
çамка турăсенчен пулăшу ыйтать. Çĕр амăшĕ Услатие хăй патне çĕр айне туртса илет. Турăсем пулăшнипе Чĕкеç йывăрланать, ывăл ача çуратать те Улем тесе ят парать. Ачин ĕнсипе пуç тӳпинче упасарри çуçне асăрхасан, Чĕкеç ачине тăшмансенчен сыхланма урăх ят парать. Унăн ячĕ — Улăп.*

«Чăпар куккук вĕçнĕ чух
Çиллес тăвăл тухрĕ-çке.
Çиллес тăвăл ним те мар,
Мăшăр çукки йывăр-çке.
Çепĕç шăпчăк вĕçнĕ май
Вĕт-вĕт çумăр çурĕ-çке.
Вĕт-вĕт çумăр ним те мар,
Упăшкасăр йывăр-çке».
Чĕкеç юрлать хурланса,
Вĕри куççуль юхтарса.
Уçса пăхать хуранне,
Уйта курать асапне.
Пăтă çинче хĕрлĕ юн,
Çитрĕ ăна асап кун.
Пĕлчĕ: шурпуç асапра,
Тăшман çарĕ ун тавра.
Чĕкеç ӳкет урайне,
Йĕрсе калать сăмахне:

— Ах, Услати, Услати,
Паттăрсенчен чи ватти,
Хăш вырăнта выртан-ши,
Сана мĕнле тупас-ши?
Амăрткайăк пулăттăм,
Сан пата эп кайăттăм,
Суранна хам çăвăттăм,
Шур тутăрпа çыхăттăм!
Куçу кăвак пĕлĕтчĕ,
Ăна шăлса хупасчĕ,
Çÿçÿ — кĕмĕл пекехчĕ,
Йĕс турапа турасчĕ.
Ах, Услати, мĕншĕн-ши
Ун пек пулса тухрĕ-ши?
Вăрçа тухса эс кайрăн,
Мана пĕччен хăвартăн.
Çÿлек çине юр тулать,
Ăш çил вĕрсен мĕн пулать?
Шăнкăртатать Тан шывĕ,
Шăнкăртатмасть Тан шывĕ,
Шăнкăртатать куççулĕ,
Хура халăх хĕн-хурĕ.
Аслă Чăваш çĕрĕнче
Ташă-юрă янрамĕ,
Мĕншĕн тесен пур çĕрте:
Хуласенче, ялсенче —
Тăшман çÿрет çаратса,
Çурт-йĕрсене çунтарса.
Хĕвел амăш[1], пулăшсам,
Тăшмана эс çунтарсам,
Услатие вăй парсам,
Кил çулне те кăтартсам!
Ах, Сăрт амăш, тăшмана
Эс чиксемччĕ хăв айна.

[1] Хĕвел амăш, Шыв амăш, Вăрман амăш, Çĕр амăш, Сăрт амăш — авалхи чăвашсен турă ячĕсем.



Тăшман çарĕ тĕп пултăр,
Ват Услати сыв юлтăр!
Ах, Шыв амăш, авăрса,
Пысăк хумсем кăларса
Тапăн ирсĕр тăшмана,
Шывра путар эс ăна!
Вăрман амăш, хĕрхенсем,
Патти хуна пĕтерсем,
Ват Услати паттăра
Сыватсамччĕ сулхăнра!
Ах, Çĕр амăш, аннеçĕм,
Эс те ан ман, пÿлĕхçĕм!
Услатие, кĕрĕвне,
Туртса ил-ха хăв патна.
Вата Чĕкеç ыйтнинчен,
Вĕри куççуль тăкнинчен
Камăн чĕри çурăлмĕ,
Унтан пăрăнма кам хăйĕ?
Çавăнпа пуль ниçетре,
Сăрт хÿттинче, тĕттĕмре,
Чăваш паттăр тĕлĕнче,
Ирсĕр тăшман умĕнче
Çĕр çийĕ яр! сирĕлчĕ,
Йыхрав сасси илтĕнчĕ.
Ват Услати çĕр айне
Кĕрсе кайрĕ хĕç тытса,
Çилçунат та çил касса
Хысран чупрĕ ун патне.
Сăрт та тăшман сисиччен
Катмар чулсем хушшинчен
Вĕçтерчĕ сăрт чĕкеçне,
Кĕçĕннине, Мерчене.
Сĕм вăрман çав вăхăтра
Симпыл[1] пухрĕ чăтлăхра.

[1] Симпыл — пÿлĕхсем ĕçекен, вĕсене çамрăклатакан тата илемлетекен ĕçме.

Юханшывĕ нӳслĕхе[1]
Каплантарчĕ хăй тĕлне.
Симпылпала нӳслĕхе
Çил пуçтарчĕ пĕр çĕре.
Вата Чĕкеç шур пӳртне
Вĕсем çитрĕç — çепĕç те.
Симпыл мĕскĕн Чĕкеçе
Хăвачĕпе çыпратрĕ.
Нӳслĕхĕ те темскерле
Аш хыпниччен сыхларĕ.
    Мерчен кайăк хуранне
Вучахран вăшт антарчĕ,
Уçса пăхсан хуранне
Шăппăн çапла каларĕ:
— Кĕрӳшĕн юнне Çĕр амăш
Çак хурана пуçтарнă
Тĕпкĕч юлтăр тесе пуль.
Амăш панă пиллĕхрен
Кунти юн чĕм илетех.
    Хуранти юна симлерĕ,
Карчăк айне юхтарчĕ,
Чĕмеленчĕ виçĕ кун
Услатирен куçнă юн.
    Чĕкеç çыврать — вилнĕ тен,
Тĕлĕк курать çакăн пек:
Çырла писнĕ вăхăтра
Сар чечексем хушшинче
Çӳрет пек вăл улăхра,
Унтах, йăмра айĕнче,
Упăшки те çӳрет пек.
Ана арĕ ыталать,
Сава-сава ачашлать.
Çав вăхăтрах ăшĕнче,
Вĕри чĕре айĕнче,

[1] Нӳслĕх — пӳлĕксем çêкен, вĕсене чĕмелентерекен çĕме.



Ача чĕме кĕнĕ пек,
Ывăл ача пулас пек.
    Шуçăм çути шуралсан,
Шăпчăк юрри шăрансан,
Вата карчăк вăранать,
Тĕлĕкĕнчен вăтанать.
«Чăнахах-ши ман варта
Ача ӳсет паянтан?
Урипеле тапкалать,
Хăяр çиме хăвалать».
    Каç пулать те кун иртет,
Тăхăр уйăх та çитет,
Чĕкеç выртать, йынăшать,
Ывăл ача çуратать.
    Ун пек ача камăн пур?
Туртать çичĕ патман çур,
Куç харшине вылятать —
Сар хĕвел пек ăшăтать.
    Чечек çинчи шерпетпе,
Амăрткайăк сĕчĕпе
Вата Чĕкеç ачине
Чăпăл тăвать ирхине.
Кайăксем те чаплисем,
Чăваш енче пулнисем,
Пин-пин кĕвве тытăнчĕç,
Чĕкеç патне пухăнчĕç.
Чĕкеçпеле ачине,
Çич патман çур туртнине,
Ăшă сăмах калаççĕ,
Ырлăх-сывлăх сунаççĕ.
    Сĕнӳсене, кашнине
Калас пулсан çуррине,
Çич кун калăн канмасăр,
Çавах вĕçне тупаймăн.
Кашнин сĕнӳ хăй майлă,
Кун-çул валли пит хаклă:

— Ват юман пек çирĕп пул,
Сар чечек пек хитре ӳс!
— Çăлкуçĕ пек таса пул,
Атăл пекех чаплă пул!
— Пыл хурчĕ пек ĕçчен пул,
Çеçенхир пек аслă пул!
Юрла-юрла чуптусан,
Ачине чăпăл тусан
Чĕкеç çакрĕ сăпкине,
Хурамаран туннине.
Ачн вылять сăпкара,
Чĕкеç ĕçлет лаçăра,
Асла вĕрет хуранта,
Сăри пулать çич катка.
Сăри йӳçрĕ кĕрлесе
Каткасене чĕтретсе,
Тĕсрен — шерпет темелле,
Ĕçсен — çĕре ӳкмелле.
Пиçсен апат-çимĕçĕ,
Çичĕ тĕслĕ чăкăчĕ
Чĕкеç чĕнет хăй килне
Тăвансемпе ял-йышне.
Тăванĕсем, кӳршисем,
Пĕр çăвартан çинисем,
Каçа-мĕне пăхмарĕç,
Чĕкеç патне уттарчĕç.
Пурте мăн чӳк лаççинче,
Çичĕ ялпа лартнинче.
Ал ачийĕ Плискара,
Чĕкеç тăрать хыçалта.
Плиска пăхать тухăçа
Кĕтсе хĕвел тухасса.
Унтан пуçлать хăй ĕçне
Чăваш йăли хушнă пек.
Унпа пĕрле ял-йыш та
Кĕлтăваççĕ пуççапса.



— Эй, Мăнтурă!
Эй, çут хĕвел,
Мĕнпур чĕрĕ чун амăшĕ!
Эй, Çĕр амăшĕ!
Эй, аслă Кепе турă!
Эс те, Çуткун турă!
Курăр пирĕн чипер пепкене.
Ана хăвăр хӳтлĕхе илĕр.
Пуççапса ыйтатпăр сирĕнтен.
Тархасласа ыйтатпăр сирĕнтен:
Çăкăрпа,
Тăварпа,
Чăкăтпа,
Пиçнĕ хурпа.
Çырлах!
Çырлах!
Çырлах!
Хĕвел тухать илемлĕн
Шевлисене вĕçтерсе,
Ват Плискари ачана
Вылямашкăн астарать,
Телей курма ăшăтать.
Çавна Плиска сисрĕ пуль,
Ят кĕлли халь çирĕп ун.
Ана ырлать халăх та,
Унпа пĕрле кĕлтăвать.
— Эй, Мăнтурă,
Пурте сан айăнта çӳретпĕр.
Эсĕ кур пирĕн чĕп-кайкăра.
Ӳлем тесе ят пар ăна.
Çав ятпала йышăн ăна,
Пуççапса ыйтатпăр санран,
Тархасласа ыйтатпăр санран:
Çăкăрпа,
Тăварпа,
Чăкăтпа,

Пиçнӗ хурпа,
Çырлах!
Çырлах!
Çырлах!
Плиска чӗпӗ-кайкăра
Çӗклесессӗн çӳлелле
Халăх пысăк тимлӗхпе
Чӗркуçленсе пуççапать.
— Эй, аслă Кепе турă!
Араскал кӗнеки санра,
Çитмӗл çичӗ читлӗх санра,
Çитмӗл çичӗ тӗслӗ халал санра,
Çитмӗл çичӗ шăпа санра.
Пирӗн Ӳлем-кайкăр валли
Ылтăн читлӗхрен халал уйăрса хур,
Ылтăн читлехрен шăпа уйăрса хур.
Пуççапса ыйтатпăр санран,
Тархасласа ыйтатпăр санран:
Çăкăрпа,
Тăварпа,
Чăкăтпа,
Пиçнӗ хурпа,
Çырлах!
Çырлах!
Çырлах!
Эй, аслă Хăрпан турă[1],
Кашни этемӗн кун-çулне пӗлетӗн,
Ăна тивӗçлине пӗлсе çырса çӳретӗн.
Пирӗн Ӳлем-кайкăр çамки çине
Çăтмах кайăк тӗкӗпе,
Турткăш кайăк тӗкӗпе çырсамăр.
Пуççапса ыйтатпăр санран,
Тархасласа ыйтатпăр санран:

---

[1] Хăрпан турă — Кепе турра пулăшаканӗ. Вăл Кепе турă мӗн хушнине пурнăçласа çӳрет.



Çăкăрпа,
Тăварпа,
Чăкăтпа,
Пиçнӗ хурпа,
Çырлах!
Çырлах!
Çырлах!
Эй, Пихампар турă!
Ывăл ача пирӗн
Ухăна юмахран тăвакан пултăр,
Хӗç туса, туптаса хăйракан пултăр,
Вăрçăра ӗретрен ӗрете irttӗр,
Вăрçăран хăй урипе утса киле килтӗр.
Пуççапса ыйтатпăр санран,
Тархасласа ыйтатпăр санран:
Çăкăрпа,
Тăварпа,
Чăкăтпа,
Пиçнӗ хурпа,
Çырлах!
Çырлах!
Çырлах!
Плиска чӗпӗ-кайкăра
Амăшне ăшшăн тыттарсан
Çӳç пӗрчине ачанне
Касса илчӗ пусӗнчен.
— Халь ӗнтӗ,— тет Плиска халăха.—
Пуççапмалла Çуткун турра.—
— Эй, Çуткун турă, чăвашран эс,
Пулăш пирӗн пепкене, Ӳлеме.
Ăна санран ял-йышӗпе ыйтатпăр.
Вăл телейлӗ-сывлăхлă пултăр,
Суха сухалакан пултăр,
Кӗтӳ кăларакан пултăр,
Пыл хурч ӗрчетекен пултăр,
Ашшӗпе амăшне пăхакан пултăр.

Пысăк пултăр,
Пирĕнтен тăван ывăл-хĕр малалла ятăр,
Пирĕн пек вата пуличчен, сӳтĕличчен пурăнтăр.
Ватта курсан тетĕç тетĕр,
Çамрăка курсан тăван тетĕр,
Пирĕн ăру ан таталтăр,
Ĕмĕртен ĕмĕре пытăр,
Эпир ваталатпăр, вилетпĕр,
Пирĕн нехил çиттĕр.
Пуççапса ыйтатпăр вĕсене саиран,
Тархасласа ыйтатпăр саиран:
Çăкăрпа,
Тăварпа,
Чăкăтпа,
Пиçнĕ хурпа.
Çырлах!
Çырлах!
Çырлах!
    Чĕркуçленсе кĕлтусан,
Вучах тавра çаврăнсан
Йăла юрри юрларĕç,
Чĕкеç килне хăпарчĕç.
Шурсухалсем кĕрекере,
Хĕрарăмсем тĕпелре.
Çăкăр касса пуçларĕç,
Тăварпала чăкăта,
Пиçнĕ хура вакласа
Плиска пачĕ йĕркипе
Çитермешкĕн халăха.
Сăра пички пуçласан,
Кĕреке юрри юрласан
Парне пама тытăнчĕç.
Сăмахпала хытарчĕç
«Укçа-тенкĕ паракан —
Ылтăнран та хаклă пул,
Çулу-вутчуль паракан —



Вутчулĕнчен çирĕп пул,
Çава-çурла хуракан —
Çĕр ĕçĕнче ĕçчен пул,
Хĕçпе ухă паракан —
Хурçă хĕçрен çирĕп пул,
Чĕреспе пыл паракан —
Чăвашсемшĕн пыл пек пул,
Шур çăмарта хуракан —
Виличченех тăп-тăп пул.
Тулли пултăр пурнăçу»,—
Çапла калать асласу.
    Çав вăхăтрах пӳртĕнче
Яр усăлчĕ чӳрече,
Чĕкеç пĕчĕк ывăлне
Чăмăртарĕ хăй çумне.
Курчĕ ачин ĕнсинче,
Çаврашка пуç тӳпинче
Упасарри çулçине[1],
Тулай енче ӳснине.
Пĕлчĕ тăшман килнине,
Чăваш çĕрне çитнине.
Чĕкеç кайрĕ шуралса,
Хăй ачишĕн хăраса.
Тăшмансенчен хăтарма,
Усалсенчен пытарма
Хăй ачине, Ӳлеме,
Улăп терĕ ял пĕлме.

---

[1] Упасарри — асамлă курăк. Авалхи чăвашсен ĕненĕвĕнче çав курăк çимĕк каçхине (çурхи уяв; хăш вăхăтра иртгерни халь паллă мар) пĕр самантрах çурăлать те, чечекĕ тăканать, çыран пиçет те çавăнтах сухалать. Кам та кам çав çырлана татса çиме ĕлкĕрет, çав çаплă асамçа тухать те тем те тума пултарать. Çулçи те упасаррин асамлă. Ун çулçине çын ӳчĕ çине çыпăçтарсан, вăл куçа курăнми пулать те çынна хавшак-лантарать. Ӳтри çав вырăн хӳтĕлевсĕр пулса юлать, вара çын вăхăтсăр çĕре кĕме пултарать. Çын çинчи упасарри çулçине таса чĕреллĕ, ырă кăмăллă çын анчах курать.



# Виççĕмĕш юрă

## УЛАП АЧАЛАХĔ

*Улăп хăвăрт ÿсет.*

*Вăл уйра суха тăвакана курать, ăна кĕсьене персе чикет, килте амăшне кăтартать. Амăшĕ ывăлне: «Ку çынсем, кайăк мар, эпир вилсе пĕтсен е кунтан кайсан пирĕн вырăна юлаççĕ. Вĕсене ăçта тупрăн çав вырăнах кайса яр»,— тет.*

Çилту çилĕ вăйлантăр
Çулçăсене вĕçтерме.
Юррăмăрсем шăранччăр
Улăп çинчен пĕлтерме.
Улăп выртать сăпкара
Пылтан тутлă ыйăхра.
Амăш сăпка юррине
Савса юрлать каçхине:
— Ала çăлтăр каçхине
Тетте парать тÿперен.
Неннине-пеппине,
Пеппине-неннине.
Тетти хаклă ылтăнран
Эсĕ лăпкă выртнăран.
Пеппине-неннине,
Неннине-пеппине.
Тетте вĕçтĕр çÿлелле,
Сан та сатур ÿсмелле.
Неннине-пеппине,
Пеппине-неннине.



Улăп çыврать, вăранмасть,
Чăрмантармасть ннкама.
Чĕкеç ĕççĕр ларăймасть,
Йăтса кĕрет шур пирне.
Шурçнппелле тĕртнине.
«Виç сÿререн[1] кая мар
Шур пир каять çытака[2]».
Улăп виçĕ талăкран,
Вăрансассăн ыйăхран,
Кашта çинчи çытакне
Тăхăнасшăн хăй çине.
Анчах çытак тăвăртан
Чар! çурăлать çурмаран.
Улăп каллех сăпкара,
Каллех тутлă ыйăхра.
Питĕ хытă çитĕнет,
Унтан амăш тĕлĕнет.
Çичĕ талăк çывăрсан,
Сăпка кашти хуçăлсан
Улăп çĕре ыткăнать,
Ыйăхĕнчен хăтăлать.
Сиксе тăрать, кулкалать,
Ÿкиннчен ним вăтанмасть.
Амăшне те саламлать,
Ыталаса чуптăвать.
Амăш маттур ывăлне
Чĕрçи çинче сиктерет,
Кăкăрне те ĕмтерет,
Хуран кукли çитерет.
Лăпка-лăпка юратать.
Улăп нлет карăнса
Çытак çинчен асăнса.
— Çытак ытла тăвăр-çке.

[1] Сÿре — пир-авăр вăрăмăш виçи, 4 метр патнелле.
[2] Çытак — тĕпсĕр йĕм.

Ҫара кутпа намăс-ҫке.
Урăх сăпка пулманран
Улăпшăн халь урлă сак
Сăпка пулчĕ выртмалли,
Тĕлĕксене курмалли.
Хĕвел пăхать илĕртсе,
Ача ӳсет сехетпе.
Амăш юрлать юррине
Пепке ҫинчен хунине.
— Тăхăр сӳре шурă пир
Улăп йĕмне кайтăр-и,
Вуник сӳре пурҫăн пир
Улăп кĕпи пултăр-и?
Пурҫăн ҫиппе тĕрлесен
Капăрлатăп кĕмĕлпе,
Ылтăн тӳме ҫитмесен
Илемлетĕп мерченпе.
Тăхăр талăк ҫывăрсан,
Сарă хĕвел хăпарсан,
Улăп куҫĕ уҫăлать,
Ыйхинчен вăл вăранать.
Хăйĕн тумне тăхăнать,
Амăшне вăл тав тăвать,
Ҫав вăхăтрах кулкалать,
Каллĕ-маллĕ уткалать.
— Ни шалпар мар, тăвăр мар,
Кун пек тумпа намăс мар.
Улăп ӳсет вунҫич кун,
Килте ларас килмест ун.
Сĕве тăрăх вăл утать,
Икĕ ҫӳллĕ сăрт курать.
Икĕ сăртăн тӳпине
Пусать икĕ урипе.
Чĕркуҫленет чул ҫине
Выляс шухăш килнипе.
Ҫичĕ ҫулхи йĕлмене



Тăпăлтарать кăкĕпе.
Пура тăвать вуллинчен,
Вылять чунĕ канинчен,
Кайранваскать хăй килне,
Ҫитсен выртать сак ҫине.
Ҫитмĕл ҫичĕ талăкран
Хăй тĕллĕнех вăрансан
Виҫĕ хутчен карăнать,
Ват амăшне асăрхать
Аслă тĕпел кукринче
Вутă хутса янине.
Амăш лăпкăн Улăна
Ҫапла калать савăнса:
— Улăп, ҫӳре урамра,
Унта выля лашалла.
Икерчĕсем пĕҫерсен,
Ăна пылпа сĕрсенех
Сана чĕнеп апата.
Унчен ан кай катана.
Сĕм вăрманта кашкăрсем,
Хирте — ҫĕлен-калтасем.
Вĕсем сана тытсассăн,
Эп пĕр-пĕччен юлатăп.
Урамалла тухсанах
Улăп пуҫлать вылямa.
Ҫавра кӳлĕ хĕрринче,
Лăпсăр йăмра айĕнче,
Шап-шур чула асăрхать,
Унăн хытă савăнать.
Кăшт ашкăнас шухăшпа,
Шур чул катмар пулсан та,
Туртсассăн та ик натман,
Алла илет выляса,
Кӳлĕ ҫинче сикмелле
Тытса перет леш енне.
Шур чул сикет четлетсе

Кӳлӗ шывне сирпӗтсе,
Тепӗр енчи йывӑҫа
Хуҫать кутран ҫапӑнса.
  «Ара, эп шар турӑм-ҫке
Шур хурӑна хуҫнипе.
Унта кӗпе ҫапнӑран
Шур чул мӗнле яп-яка!» —
Улӑп шутлать ӑшӗнче.
Пӑшӑрхану кусӗнче.
Чула илет пӗшкӗнсе,
Кайса хурать вырӑнне.
Шур хурӑна сӗтӗрет,
Унтан тӑвать пӗрене.
  Шур пӗрене — «урхамах»,
Хурӑн тӑрри — саламат.
«Урхамахӗ» сиккипе
Урам тӑрӑх чупнипе
Тусан вӗҫет тӳпене.
Кӗтӳ иртет темелле.
Ачасене курать те,
«Урхамахне» чарать те
Улӑп калать вӗсене:
— Сире куртӑм, вӑй вылять,
Мана илӗр ҫак вӑййа!
  Пӗр шӑртламас ушкӑнран
Сӑмах хушрӗ Улӑпа:
— Шӑсиласчӗ хусить туси туна,
Кӑснкӑр сӗснчӗ сансн уснита[1].
Улӑп тӑрать антраса:
«Ку ачасем тулайран».
  Ача-пӑчашӑн савӑнӑҫ,
Сӑлтавӗ пур кулмашкӑн.

[1] Кунта ачасен вӑрттан калаҫӑвӗ. Весем сӑмаха икӗ сыпӑка пайлаççӗ те ҫавсем хушшине, малтанхи уҫӑ сасӑ палли ҫумне «си» е «ра» сыпӑкне хушса ҫӗнӗ сӑмах тӑваççӗ.



Ачасен пуш сӑмахне
Анланчӗ вӑл пурпӗрех,
Хуравларӗ вӗсене
Урӑхларах, хӑйсен пек:
  — Ҫарапаттӑр пураш парараппан,
Анралантӑр-н марана?
  Анланмарӗҫ Улӑпа
Пӗр ачи те ушкӑнран.
— Эпӗ сирӗн халапа
Анкартӑм вӗт ҫав-ҫавах.
Эсир манне... ай-ай-ай,
Анланмарӑр. Аван мар.
«Шӑласчӗ хуть тутуна,
Кӑкӑр сӗчӗ сан унта»,—
Терӗр мана мӑшкӑлла.
Ҫиллевӗм ҫук халь манра.
Илетӗр-н вылямa?
  Хуравлаççӗ ачасем,
Улӑп тавра тӑнисем:
— Илессине илӗпӗр.
Анчах сана пӗлместпӗр.
Тен, эс — хавшак вылямa?
Ун пек пулсан — кирлӗ мар.
Ав ҫавӑнти юпана
Пусӗнчен йӑтса куҫар-ха.
  Улӑп тытать юпана,
Утса ярать аякка.
— Тен, сан куҫу витӗр мар?
Юман ҫинчи кӑмпана
Куратӑн-и ҫакӑнтан?
— Пар-ха мана ҫӗмрене,
Куратӑп-и вӗсене?
  Улӑп перет ҫӗмрене,
Ҫӗмрен вӗҫет хӗмленсе.
Юман ҫинчи кӑмпана
Ыткӑнтарать ҫунтарса.

— Эсир мĕскер хушнине
Пурнăçларăм пурне те.
Сăмах патăр — тытмалла.—
Илĕр мана вылямa.
— Хăюлăхран эс халсăр,
Çавăнпа вăйăа илместпĕр.—
Хурав пулчĕ Улăпа.
— Хăюлăха кăтартма
Манăн мĕскер тумалла? —
Улăп ыйтать вĕсенчен
Хытă выляс килнĕрен.
Çав вăхăтрах аякран
Кĕрленĕ сас çывхарать.
— Çĕлен килет çиçтерсе
Тытса çиме çынсене.
Унăн куçне лекер мар,
Кунтан халех тасалар.—
Терĕ пĕри чĕтресе.
Улăп кайрĕ тĕлĕнсе.
«Хăравçăсем — тантăшсем»,—
Терĕ ăшра тарăхса
Аса илсен мăшкăла.
— Эсир куçран каларăр:
«Манра çук-мĕн хăюлăх».
Хăвăр мĕнле? Куянсем,
Сăмахпа çеç паттăрсем.
Эп — пĕрре те ун пек мар.
Туятăр-и шухăша?
Ача-пăча Улăпа
Пĕр-пĕчченех хăварсан
«Урхамахне» ыталать,
Йăлт сикет те утланать.
Саламачĕ вылянсан
Çулие тăсать уялла.
Пăхать йĕри-тавралла,
Нимле çĕлен курăнмасть,



Курать Улăп пĕр çынна,
Тĕлĕнтерет вăл ăна:
Пĕр кайăкĕ туртара,
Кукрашки те кайăкра.
Кайăк утсан малалла
Касă юлать тăсăлса.
Çĕр çавăнтах хуралать,
Çеçенхирĕ тĕс ярать.
«Эй, мĕн тăрас тĕлĕнсе,
Мĕнле кайăк ку тесе.
Чим-ха, эпĕ вĕсене
Кăтартам-ха аннене».—
Вара Улăп çавсене
Персе чикет кĕсьене.
Сиккипе вăл «лашине»
Ыткăнтарать хăй килне.
Улăп киле çитсенех,
Пÿрте чупса кĕрсенех
Пĕлтерет ват амăшне:
— Уйра тупрăм виççĕшне.
Те пукане, те çĕрхурт.
Ик ураллин пушă пур.
Ак çак вара, пĕчĕкскер,
Каллĕ-маллĕ хутларĕ.
Кукрашкипе кукăрчăк
Çеçенхире хуратрĕ.
Амăш çакна курсанах,
Кăшт шутласа ларсанах
Кăвак пуçне сулларĕ,
Вара çапла каларĕ:
— Ах, ачам, ку кайăк мар,
Пукане мар, çĕрхурт мар,
Çын вăл, ачам, пĕчĕкскер,
Пирĕн енне килнĕскер.
Аçтан тупрăн эс ăна,
Кайса яр çав вырăна.

Пирĕн кун-çул таталсан
Е кайсассăн çакăнтан,
Вĕсем кунта юлĕç те
Пурăнĕç çĕр ĕçĕпе.
Çынна лаши-мĕнĕпе
Улăп чикрĕ кĕсйине,
Йывăр шухăш пуснипе
Хăвăрт утрĕ хир енне.
Çеçенхирте çыннине,
Акапуçпа лашине
Ярсассăнах тĕлĕнсе
Улăп ларчĕ çул хĕрне.
Çав вăхăтрах сăрт енчен,
Хура вăрман хыçĕнчен,
Çĕлен çурн курăнать,
Пĕчĕк çынна тапăнать.
Çынни шари! кăшкăрать,
Улăп хыçне пытанать.
Çĕленĕ те явăнать,
Улăп çине ыткăнать.
— Халех пар эс çав çынна,
Ак çăтатăп сана та,—
Терĕ сĕре вĕçкĕнле
Сĕлехине сирпĕтсе.
— Этем юнне ĕçекен,
Хăйĕн пуçне çиекен,—
Терĕ Улăп тарăхса,
Çĕлен пуçне лапчăтса.
Тăшман сикрĕ çÿлелле,
Унтан Улăп еннелле,
Улăпа вăл çиллипе
Сăхма тăчĕ сăннипе.
— Ха, эс мана сăхасшăн,
Пурнăçăма татасшăн?—
Терĕ Улăп çĕлене,
Чышкисене çĕклесе.



Пĕррех тапать вăл ăна
Хăй умĕнче шунăран,
Лешĕ вара вилмелле
Ыткăнать сăрт хыçнелле.
Анчах та вăл вилмерĕ,
Ĕнтĕ пĕтрĕм темерĕ.
Çÿле вĕçрĕ чашкăрса,
Урлă-пирлĕ явăнса.
Пуклак кукăр хÿрине
Сулчĕ Улăп çинелле.
Улăп тăсрĕ аллине
Тискер çĕлен еннелле.
Çĕлене вăл сисиччен
Ярса тытрĕ хÿринчен.
Çĕлен вĕçет тÿпене
Кăтра пĕлĕт еннелле.
Улăпа вăл çиллесе
Пăрахасшăн çĕр çине.
Анчах та ун ĕç ăнмасть.
Улăпран вăл хăпаймасть.
Çĕлен анчĕ çĕр çине,
Сĕве сăрчĕ тăррине.
Улăп çĕлен çурнне,
Хыт хашкава ернине,
Туртса çапрĕ чул çине
Чунĕ тухса сикмелле.
Кайран утрĕ килелле.



# *Тăваттăмĕш юрă*

## УЛАП ТӲПЕРЕН КУРНА ТĔЛĔНТЕРМĔШСЕМ

*Улăп çĕлен çурипе тӳпере те çапăçать.*
*Чăваш çĕршывĕнче тăшман иртĕхет: асап, мăшкăлу, иртенӳ, киревсĕр ĕçсем... Чăваш патшине те ним вырăнне хумаççĕ. Улăп çавăншăн питĕ тарăхать.*

Тăкăр-такăр такана,
Асан кайăк пуçана.
Шӳрпе çиме каймăпăр,
Хамăр юрра тăсăпăр.
«Чĕре хытă касăлчĕ,
Ах, Улăпа тем пулчĕ»,—
Чĕкеç чупать урама
Хăй ачине шырама.
Çавра кӳлĕ хĕрринче,
Икĕ йăмра хушшинче,
Чĕкеç тупать Улăпа,
Ана вăрçсах вăл калать:
— Кампа эсĕ çапăçнă,
Кăн-кăваках питӳ сан.
Ик аллунта чĕр суран.
— Ах, аннеçĕм, ах, анне,
Эс мана ан çилленсем.
Эпĕ кайрăм ял хирне,
Куртăм çĕлен çурине.
Çĕлен çури пĕр çынна,



Паçăр курнă эс ăна,
Тытса çиме хăтланчĕ,
Вăл мана та тапăнчĕ.
Пуклак вĕçлĕ хӳрипе
Туртса илчĕ хăй енне,
Хĕскĕч майлă аллипе
Тытса вĕçрĕ тӳпене.
Мана унтан, тӳперен,
Çĕре пеме хăтланчĕ.
Анчах вăйĕ çитменрен
Ман айăма хăй пулчĕ.
Эпĕ чăрсăр çĕлене
Туртса çапрăм сăрт çумне.
Унтан вара эп ăна
Вăркăнтартăм вăрмана.
— Ах тур, ачам, ах турах,
Часрах лар-ха юнашар!
Сана çĕлен сăхман-и,
Шăмшаккуна хуçман-и?
Халех васкар вăрмана
Çĕлен курăк шырама.
Унтан имçам тăвăпăр,
Эмелленме пуçлăпăр.
Пурнăç сакки сарлака,
Ĕмĕр кĕске — яланах.
Симлĕх курăк вăрманта,
Паллаштарам вĕсемне.
Вĕсем кирлех пурнăçра
Тăсма кĕске ĕмĕре.
Çĕлен курăк имçамне
Улăп ĕçсен, сăвăнсан,
Выртса хытă тарласан —
Сып-сывах вăл. Путекле
Сиккелет хăй килĕнче.
Çĕнĕ кĕпе тăхăнсан
Амăшĕпе калаçать.

— Анне, эпĕ тӳперен,
Питĕ-питĕ инçетрен,
Пăхрăм йĕрн-тавралла,
Каялла та малалла.
Мĕн курнине тӳперен
Калас пулсан йĕркерен
Темле хурçă чĕре те
Çĕр пĕр татăк пулатех.
Хуласенче, ялсенче
Юрă-кĕвĕ янрамасть.
Ниçта Чăваш çĕрĕнче
Сăрнай кĕвви шăранмасть.
Халăх çӳрет, кулянать,
Вĕрн куççуль юхтарать.
«Мĕншĕн çапла тухрĕ тет,
Чăваш тĕпрен нĕтет тет».
Çĕлен, вуник пуçлăскер,
Туртса сурать хĕрсене,
Кукша çури, чăрсăрскер,
Пĕрĕхтерет вут-хĕмне
Çурт-йĕрсене çунтарма,
Кĕлне çилпе тустарма.
Анне, эпĕ тӳперен
Пĕлĕт айĕн вĕçнĕрен
Ешĕрекен лапамра
Асăрхарăм: çырмарап
Йытă тухрĕ уласа,
Хĕрлĕ шăртне тăратса.
Хĕрлĕ йытă сукмакпа
Чупсассăнах ялалла
Хĕрарăмсем силлесе
Сӳтсе ячĕç çивĕтне.
Пит-куçне, нар[1] пеккине,
Ĕçпе пиçнĕ аллине

[1] Нар — хĕвел, нар пек — тĕлĕнмелле хитре.







Хăрăмпала хуратрĕç,
Акапуçне кўлĕнчĕç.
Пĕр хура хĕр, кĕрнекçкер,
Вунçич çула çитнĕскер,
Акапуçне авринчен
Тытрĕ хапха уçиччен.
Йытă яла çитиччен
Тимĕр карта[1] çавăрма
Сухапуçпе васкаса
Касă усрĕç ял тавра.
Çĕр айĕнчен, пĕр çĕрте,
Хĕç кăларчĕç пĕшкĕнсе.
Хĕçе пачĕç шурпуçа,
Вĕрўç пуль вăл çав ялта?
Вată вĕрўç çав хĕçпе
Măйран сĕрчĕ кашнине.
Унтан пурте ушкăнпа
Утрĕç вăрман хушшине.
Çўллĕ яштак пилешне
Пĕр лапамра тупрĕç те
Тураттине иртрĕçĕ,
Ур[2] еннелле туртрĕçĕ.
Вĕрўç ялти çынсене
Хире-хирĕç тăратрĕ,
Унтан вара вĕсене
Çапла сăмах каларĕ:
«Пилеш йывăç вăйĕнчен
Чир-чĕр кайтăр пирĕнтен!
Çапса илĕр пĕр-пĕрне,
Ан хĕрхенĕр пилешне».

---

[1] Тимĕр карта — ĕлĕк-авал чăвашсем тимĕре асамлă вăй парса хаяр усалсенчен, чир-чĕртен хăталма сухапуçпе е тимĕр таткипе виçĕ хутчен çĕре чĕрсе çавăрнинне «тимĕр карта çавăрнă» тенĕ. Çав карта урлă «нимле усал та, нимле чир-чĕр те каçма пултараймасть» тесе шутланă.

[2] Ур — ăшăх, ансăр çырма.



Вată вĕрўç хушнă пек
Халăх калать виç хутчен:
«Чир-чĕр кайтăр пирĕнтен,
Чир-чĕр кайтăр ку енчен,
Пурнар ватлăх çитиччен».
Хĕрхенмерĕç пилешне,
Çапса илчĕç пĕр-пĕрне.
Те авалхи йĕркепе
Е, тен, шурпуç хушнипе
Иртнĕ пилеш туратне
Хучĕç чўклев купине.
Купи лутра çĕмелтен
Ана хума пĕлнĕрен.
Çавна вĕрўç виç енчен
Чĕртсе ячĕ пĕр-пĕччен.
Кăвайт урлă сикиччен
Сăмах хушрĕç çакăн пек:
«Чир-чĕр кайтăр пирĕнтен,
Чир-чĕр кайтăр ку енчен...»
Тенĕр ялта пĕр пўртрен
Тискер тухрĕ çиçтерсе,
Анчах ăна тўперен
Паллаймарăм инçерен.
Тискер тухнă вырăнтан
Кăшкăрашни илтĕнчĕ:
«Нар пек таса ачана
Нишлентерсе хăварнă.
Улăштарнă чĕппĕме
Вантĕр йăхне пĕтерме.
Мĕнле чăтас ман çавна?
Илсе килтĕр ачана!»
Ленчĕркенĕ ачана
Алкум умне пăрахрĕç,
Çупкă-çапкăпа çавна
Ислентерме пуçларĕç.
«Ху ачуна ху патна

Илсе кайсам васкаса,
Хам чӗппӗме-ачана
Леҫсе парсам паянах»,—
Теҫҫӗ хӑйсем пӗрмаях.
Ачи йӗрет касӑхсах.
Анне, эпӗ тӳперен
Пӗлӗт айӗн вӗҫнӗрен
Куртӑм Атӑл юхӑмне,
Пӳлме[1] шывӗн юппине.
Аслӑ Атӑл Пӳлмене
Чӗнсе илнӗ хӑй енне.
Иккӗшӗ те ҫиҫӗнсе
Юхӑнаҫҫӗ тинӗсе.
Аслӑ Атӑл хӗрринче,
Ҫич тӗмеллӗ сӑрт ҫинче,
Хула ларать сарӑлса,
Сар хӗвел пек ҫуталса.
Хула тулли керменсем,
Урамӗнче йывӑҫсем.
Керменӗсем чӗнтӗрлӗ.
Йывӑҫӗсем чечеклӗ.
Ылтӑн витнӗ керментен
(Ун алӑкӗ кӗмӗлтен)
Ват шурпуҫа хыт тапса
Илсе тухрӗҫ ятлаҫса.
«Нухрат, хӑҫан эс хуна
Леҫсе паран ясакна?[2]
Леҫеймесен эс ҫавна
Ҫухататӑн ыр ятна.
Тӗве пӑхма каятӑн,
Айсарӑмне ҫуллатӑн»,—
Терӗ пӗри ятлаҫса
Кукӑр хӗҫпе хӑмсарса.

[1] Пӳлме — Кама юханшыве.
[2] Ясак — натурӑллӑ хырӑҫ.



Шурсухал куҫ уменче,
Кӳрентерет чӗрене.
Ун ҫӗлӗкӗ ылтӑнран,
Ӗнчи пысӑк улмаран.
Унӑн чаплӑ тамкинче[1]
Курма пулать ҫаксене:
Ылтӑн-кӗмӗл хушшинче
Йӑлтӑртатать ахахӗ,
Ӗнчӗ чулсен хӳттинче
Ҫалтӑрланнӑ мерченӗ.
Хаклӑ чулсем хушшинче
Икӗ чӗре пӗрлешнӗ,
Икӗ чӗре ҫуммипе
Ылтӑн юман ҫитӗннӗ.
Ватӑ ҫынна мӑшкӑлран
Сарӑ пике хӑтарчӗ,
Вара ӑна кӑштахран
Килне кӗртсе хӑварчӗ.
Пӗр касмакӗ[2] — какрашка,
Тимлӗн пӑхсан вӑл — кӑркка,
Хӗре чӗнчӗ вӗҫкӗнле,
Хӗр пӑхмарӗ ун енне.
«Апӑр-тапӑр! Йӗрӗнсе
Мӗншӗн пӑхать ман енне?
Тӑхта! Вӑхӑт ҫитӗ-ха,
Ман урана ҫӑвӑн-ха,
Шывне ӗҫсе ярӑн-ха.
Шур алшӑлли ырӑнне
Чӗлхӳпе ман ӳтӗме
Ҫулла-ҫулла типӗтӗн,
Ура ырӑнне чуптӑвӑн».—
Сӳпӗлтетрӗ катрашка,
Пикене хыт тарӑхса.

[1] Тамка — герб.
[2] Касмак — вӑрӑ-хурах.

Пусма çине хăпарсан,
Касмак енне çаврăнсан
Пике çиллес курăнчĕ:
«Ах, сутăнчăк! Путсĕр çын.
Мĕн калаçать? Ирсĕр йыт!»
Анне, эпĕ тĕлĕнсе
Пăхса илтĕм мал енне.
Унти çĕршыв — чулсенчен,
Ӳсентăран — пăрсенчен.
Чул куписем хушшинче,
Пăрла чăрăш тăррипче,
Ылтăн читлĕх курăнчĕ.
Сар хĕвел пек туйăнчĕ.
Читлĕх çути темскерле
Ӳкрĕ чĕрем çинелле.
Чĕре кайрĕ нĕçерсе
Ун хыçĕнчен хĕмленсе.
Анне, ĕнен мана эс —
Эн сан чĕрӳ татти вĕт!
Читлĕх çиçме тытăнчĕ,
Ман хăрасси çухалчĕ.
Сисмен-кĕтмен вăхăтрах
Ват çын тухрĕ тарăхса.
Ылтăн читлĕх тавралла
Хӳме тытрĕ чулпала.
Ылтăн читлĕх çутине
Çавах куртăм темиçе.
Чăтаймарăм, килентĕм,
«Маттур, читлĕх, эс»,— терĕм.



# Пиллĕкмĕш юрă

## ЧĂВАШ ТĂШМАНĔСЕМ

*Амукай — чăвашра.*
*Айăрхан, Илмебиккер, Эсрел, Вупăр, Ийе, Мур карчăкĕ, Кирĕмет — халăхăн чи хаяр тăшманĕсем. Куйкăрăш — телей кайăкĕ, чăваша пулăшать. Юрекке хĕре патшана лартать, халăха вăл ахăрсаманара та пулăшма пултарать.*

Хурăнварта хур тытрăм,
Мана вăрра ан тытăр.
Сар кайăкла юрларăм,
Актай ассн ан тейĕр.
Амăшĕ ывăлĕпе
Куç хупмарĕç çĕрĕпе.
— Эп тӳперен курнисем
Камсем пулчĕç-ши вĕсем?
— Шурпуç — Нухрат. Вăл — патша,
Хыт хисеплет чăваша,—
Терĕ амăш ачине
Çумма лартсах сак çине.—
Патша хĕрне инçетрен
Эсĕ курнă тӳперен.
Сарине вăл. Кĕçĕнни,
Сут тĕнчен сар чечекки.
Лешсем пурте касмаксем,
Патти хун çăханĕсем.
Тăхăр хырçă ыйтинне
Илтнĕ тĕнче тӳпиччен.

Сутăнчăка — Сĕнтĕре,
Кĕрт йыттине, ирсĕре,
Кăвак пĕлĕт айĕнчен
Курнă эсĕ ун чухне.
Сĕнтĕр мăрса çын-и вăл?
Ĕмĕтĕнче пин мăшкăл:
Сарнепе пурпасшăн,
Хăй еркĕнĕ тăвасшăн.
— Анкарăймап пурне те...
Уçса пар-ха хăш-пĕрне.
Пирĕн енчи тăшмансем —
Аçтан килнĕ-ха çавсем?
— Эс халь — шăхлич кăна-ха.
Çавах анну пулнăран
Вĕсем çинчен ман сана
Каламалла. Вăт ăнкар.
Тахçан авал çак енче,
Аслă Атăл хĕрринче,
Чăваш лăпкăн пурăннă,
Пурнăçĕпе савăннă.
Пӳрен вĕсем, чăвашсем,
Вăй питтири йăвашсем,
Яштак пулнă хурăнран,
Капмар пулнă юманран.
Хуçалăхра мĕн кирли
Вĕсен пулнă чи хитри.
Пулнă выльăх-чĕрлехĕ,
Тĕрлĕ кайăк-кĕшĕкĕ.
Кĕлет тулли тĕштырă,
Нӳхреп тулли симпылĕ.
Пĕр йăвари кайăк пек,
Пĕр пурари сĕлĕ пек,
Чăваш халăх пурăннă,
Кун-çулĕпе савăннă.
Пĕрре Атăл хĕррине,
Йăваш чăваш уй-хирне,



Катек юхха ват хĕрпе
Килсе çитнĕ çур çĕрте.
Ват хĕр пулнă Амукай,
Ашшĕ пулнă ун шуйттан.
Çуралман вăл этемле,
Сăнĕ те ун тискерле.
Пичĕ — хуран тĕпĕ пек,
Çӳçне — пиçен çулçи тек.
Кĕрт йыттин пек ун сăмси,
Хăйне кура лапсăрти.
Майне ялан кашкăрла
Тăсса утнă, хаяр та.
Армак-чармак куçĕпе
Пăхнă çав хĕр сивĕпе.
Вăрман çине пăхсассăн
Вăл вăрмана хăртнă тет,
Çынпа хирĕç пулсассăн
Ун шăмшакне хуçнă тет.
Çав Амукай сĕмсĕртен
Ун сиенлĕ ĕçĕнчен
Чăваш çынни вĕтелнĕ,
Пуканелле çитĕннĕ.
Пĕррехинче Амукай
Екки хĕрсе çитнĕ май
Тухатмăша çывратса
Автан тухнă вăрласа.
Вунвиç çулхи автанне
Тутарнă виç çăмарта.
Вара ват хĕр çавсене
Кайса хунă чăх айне.
Çăмартисем вăрçиинчен,
Шатăртатса шăтниичен
Кăлăк чăххи йăваран
Тарать сехри хăпнăран.
Çĕрле çав чăх йăвинчен
Виç чун тул çутăличчен

Сике-сике анаççĕ,
Виç çĕрелле каяççĕ.
Ахăрьян тет ирсĕрри,
Сĕм вăрмана ыткăнни.
Тепри — çĕлен, Илмейккер,
Вуник пуçшăн хĕпĕртет,
Туçи сăртне ыткăнать,
Унта йăва çавăрать.
Виççĕмĕшĕ — Куйкăраш,
Тĕсрен кăна вăл карăш,
Анчах та вăл карăш мар,
Пўрнескерен пысăкрах.
Куйкăрăш та ялалла
Çĕрле вĕçет васкаса,
Мĕскĕн чăваш пўртĕнче
Ларать малти кĕтесре.
Кăвак хуппи сўниччен
Кайăк çич тĕк вĕçтерет.
Килти вучах сыхлавне[1]
Шăппăн калать çакăн пек:
«Сан пурнăçна эпĕ те
Пĕлтĕм пўрте кĕрсенех.
Халал пултăр ман тĕксем
Йывăрлăхна çĕнтерме.
Тĕксем çиччĕ мĕнпурĕ,
Вис тĕпсаран[2] валли çеç,
Пĕри пултăр пĕр тĕкрен,
Тепри вара — виççĕрен.
Виççĕмĕшĕ — пиллĕкрен.
Хăвна валли тĕксенчен
Тĕпсаран тăван пĕрре çеç.
Юлнисене — çунтаран,
Шывпа юхса кайтаран.

[1] Вучах сыхлавне — кил хуçи арăмне.
[2] Тĕпсаран — управ хăвачĕ, талисман.



Эсĕ тĕксен сăмахне
Итле — ыйăх килсен те.
Тĕксем вĕл-вĕл вĕлкĕшрĕç.
Çапла сăмах каларĕç:
«Манра ăстăн — тĕслĕрен,
Çитмĕл çичче çитет тен».
«Манра — асту, яланах
Çич ăсталăх — хаклисем».
«Çăткăнлăхран хăтăлма
Чуну туртсан ил мана».
«Тĕнчипе паллă пулма
Çичçĕр тĕслĕ мул манра».
«Пĕлў манра сахал мар.
Ўркенменсем валли çеç».
«Кăмăл-сăпат ман тĕкре,
Вĕсем кирлĕ пурне те».
«Йывăр аллă çынсем те
Кирлех çутă тĕнчере».
Вучах хуçи ирхине
Вăрансассăн шуçăмпа
Çичĕ тĕке курсанах
Ик пĕççине çат çапать.
Тĕпсаранлă амăшсем
Ачисене виç çулччен
Кăкăр сĕтне çитерĕ.
Вăй-халлатса хăварнă.
Çавăнпа та чăвашра,
Ятлă-сумлă халăхра.
Асчахсем те сахал мар.
Начар пулман ăстайран.
Нумай пулнă ăстаççем,
Тĕнче пĕлнĕ вĕсене.
Çавах Чăваш çĕрĕнче
Çĕрме пуян йăхĕнчен,
Çăткăн ырлă çынсенчен,
Ăлсем йывăр килниччен

Туслăх хытă шĕвелнĕ,
Уншăн тăшман савăннă,
Чăваша вăл тапăннă,
Айне туса тулană.
    Çĕнтерӳссен пĕр йăла:
Арçынсене тытмалла,
Пуçĕсене касмалла.
Ывăл ача çуралсан
Унтах пуçне çурмалла.
Ирсĕр тăшман вĕшлисем
Персе çитсен ялсене,
Курсан сăпка ачине
Мăшкăлласа ыйтнă тет:
«Ку — ар сан е ама сан?
Часрах кала! Хăвăртрах!
Хурав çиччех пулмасан
Хĕрачасен пуçне те
Касса пана йытсене.
    Йывăр пулнă самана
Амăшсемшĕн Чăвашра.
Çапах та çав йывăрта
Вĕсем пуçне сухатман.
Ял-йышĕпе пĕр пулса
Çăлнă арçын ачана.
    Куйкăрăша тăшман та
Алла илме тăрăшнă.
Сунарçăсем, чаплисем,
Çичĕ ютран килнисем,
Ял-ял тăрăх çӳренĕ,
Куйкăрăша йĕрленĕ.
    Пĕр сунарçă, чеескер,
Сухал касса курманскер,
Хура пӳрте çĕр каçма
Кĕнĕ пулнă каçа май.
Куйкăрăш та çавăнта
Пулнă иккен сăвăппа.



Ана сунарçă, путсĕрскер,
Тапаçланнă тытмашкăн,
Кайран хуна памашкăн.
Куйкăрăшĕ антраса
Сăпканалла ыткăннă.
Сăпка ачи кайăка
Тытса хыпнă çăвăра.
Сунарçă çавна сăпкара
Шырасан та тупайман.
Тарăхнипе ачана
Кăларса пенĕ тулалла.
    Куйкăрăш шăппăн ачана
Калана тет хăлхаран:
«Сан таппару виç тĕкрен,
Чăваша чи кирлĕскер,
Тăшмансене аркатан,
Патшана та ак ларан.
Санра чăваш хӳтлĕхĕ,
Çавăнпа та вилĕмсĕр».
    Сунарçă тухать урама,
Хаяр — урнă кашкăртан.
Куç умĕнчех ӳснĕрен
Ача яштак — хурăн пек.
Пĕлме çук тет тулашран —
Арçын вăл е хĕрача?
    Сунарçă ыйтать ачаран
Мăшкăлласа ак çапла:
«Эс кам вара? Ама сан?»
Ютта хирĕç çав ача
Хуравлана ак çапла:
«Эп сирĕншĕн — Амасан,
Чăвашсемшĕн эп — пике!
Ятран эпĕ — Юрекке!»
    Тытсассăнах сунарçа
Ыткăнтарать тапкăпа
Çавă маттур Юрекке

Питĕ хӳхĕм сар пике.
Алпасти те хăйне май
Амукайла хăтланать.
Хăйĕн кăвак автанне
Çĕрле кашта çинченех
Лăпă айне хăвалать.
Вис çăмарта тутарать.
Алпасти те вĕсене
Чиксессĕнех хăй хĕвне
Хĕрсе чупать ял вĕçне.
Курать кайăк-кĕшĕке.
Шур куракпа туслашать.
Ун йăвипе паллашать.
Шур курака астарать:
«Ĕнтĕ туслă пулăпăр,
Пĕр-пĕрне савăпăр».
Шурă курак ытамра —
Вис çăмарта йăвара.
Вăхăт иртет майĕпе.
Кĕр те çитет ерипе.
Çăмартасем шăтаççĕ.
Висĕ чĕрчун тухаççĕ.
Эсрел пулать пĕринчен.
Чапрас Вупăр тепринчен.
Виççĕмĕшĕ — Ийе-çке.
Çăварĕ çичĕ чавса-çке.
Ийе хура мунчара —
Курăнмасть вăл инкама.
Выртса тăрать кĕтесре
Ялан лапка айĕнче.
Çынна чăмлать урринчен —
Хĕн кăтартать виличчен.
Ийен ачи нишлĕ те —
Ана пачах килĕшмест.
Ярса илет ачине.
Пĕр-пĕр киле вĕçтерет.



Унта хăйĕн чĕппине
Хурать ача сăпкине.
Çыннăн нар пек ачине
Илсе тарать йăвине.
Вупăр тени — темскерле.
Чăрсăртарах темелле:
Хура кушак вăл пулать.
Çын килĕнче чупкалать.
Тӳшек çине хăпарать.
Çынна пăвать, пусмăрлать.
Тепĕр чухне каçхине
Уйăха вăл айккинчен
Кăшламашкăн тытăнать.
Тавралăха сĕм çапать.
Сипнер ятлă усал та.
Асран катăк пулсан та.
Ларма пĕлмест вырăнта.
Сăмах ваклать вăрманта:
«Амукайран кая-и.
Алпастирен ухмах-и?
Манран тĕнче кисрентĕр.
Мĕнпур халăх чĕтретĕр!»
Сипнер хура автанне
Хупса лартать сакайне.
Автан тăвать çăмарта.
Вис çăмарта вис каçра.
Сипнер тĕттĕм каçхине
Тупать çăхан йăвине.
Çăмартисем йăвара.
Чĕм кĕмелли ăшăра.
Вăхăт иртсен çич эрне.
Самай тĕттĕм çур çĕрте.
Пĕр çăмарти усалран
Вăйне илет чăн малтан —
Пукраллă çын вăл пулать.
Карчăкланса хутланать.

Карчăк пуçĕ асам пуç,
Хĕрлĕ-симĕс мăшăр куç,
Шăлне шаккать çич хутчен,
Капан шăлсем ÿсиччен,
Сăмси çĕре лекиччен,
Алли сенĕк пуличчен,
Чĕрни пĕр шит ÿсиччен,
Кĕрт йытти нек вĕриччен.
Унтан халăх пит хăрать,
Мур карчăкĕ ят парать.
Çав Мур çилли тулнипе,
Асам ĕçне пĕлнипе
Халăх сине хĕн ярать,
Çитмĕл тĕслĕ чир сарать.
  Сăмартаран, тепринчен,
Çил-тăвăлла вĕриччен
Ват Эсремет йăшт тухать,
Сăртран тăвать пĕр чукмар.
  Юлашки сăмартинчен
Сусăр тухать йăванса
Ват сăхана ятлаçса.
Чавса тăршшĕ ун пĕвĕ,
Сухаллийĕ — пĕр чалăш,
Ячĕ унăн Кирĕшмет,
Шур туйинчен вăй илет,
Мăн сухалне çĕклесен,
Пуçĕ урлă вĕçтерсен
Курать тĕнчен пĕр вĕçне —
Пÿлĕх амăш кермене.
  Ун чух пÿлĕх амăшĕ
Хăй тĕллĕнех пупленĕ:
«Пур халăх та керменре
Илчĕç хăйсен телейне.
Анчах чăваш килмерĕ,
Хăй телейне илмерĕ».
Çавна илтсен Кирĕшмет,



Чике тăршшĕ, шеремет,
Кулса ярать савăнса,
Чăваш çине кăтартса:
«Хăрах ури салтăннă,
Хăй утса йăлт ывăннă.
Вăл урине сыриччен,
Пÿлĕх патне çитиччен
Кушак çăвăрлать çич хутчен», —
Тет те васкать мал енне —
Пÿлĕх амăш кермене.
  Турă амăш кермене
Персе çитет пашкаса.
Çавах пÿлĕх амăшне
Хуллен калать ак çапла:
«Эпĕ чăваш çĕрĕнчен,
Килтĕм Атăл хĕрринчен.
Параймăр-ши телейне,
Пире — чăваш халăхне?»
«Ай-ай, ытла юлхав-иç,
Ун пек пулма юрать-и?
Телей тени — сак çинче,
Сыру-кĕнеке хушшинче».
  Кирĕшметĕн намăс çук,
Вăл вăтанса тăрас çук.
Чăваш халăх телейне
Персе чикет кĕсьене,
Вара тарать сăрталла,
Унта çаврать мăн йăва.
Сăрт айĕнчи айлăма
Чуллантарать васкаса.
  Çав телейшĕн чăвашсем,
Арăслан пек паттăрсем,
Мĕн чул пуçне хучĕç-ши,
Мĕн чул чăлах пулчĕç-ши?
Аçу анчах, паттăр та,
Арăслантан вăйлă та,

Çав ирĕрпе çапăçрĕ.
Халăха телей тавăрчĕ.
Аçу вилчĕ çапăçса.
Тăшмансене аркатса.
    Телей каллех тăшманра.
Кирĕшметре, усалра.
Инкек-синкек тахçанах
Хĕн кăтартать чăваша.
Туçи чуллă сăртĕнчен.
Илмейккерĕн çăвинчен
Аçтаха тухать çиллипе
Çичĕ пуçне çĕклесе.
Нумай тарçи-тĕрçипе
Чăвашсене çаратать.
Çурчĕсене çунтарать.
    Чăваш пăхать кай енне —
Курать чир-чĕр вĕчĕшне.
Чир чăваша муталать.
Леш тĕнчене ăсатать.
Чăваш пăхать мал енне —
Курать чуллă сăртсене.
Унта хаяр Кирĕшмет
Никама та хĕрхенмест.
Ана ăйăр памасан.
Пăтăпа чўк тумасан
Хаярланса ашкăнать.
Çынна пырса тапăнать.
Нумайăшĕ уи пек чух —
Шалт аптраса çитнĕ чух —
Сĕм вăрмана тараççĕ.
Анчах канлĕх тупмаççĕ.
Кашкăр шăлне лекеççĕ
Е мур кулли пулаççĕ.
Шăмшаккине шуратаççĕ.
Çĕре кĕмен чăвашсем.
Унта-кунта выртнисем.



Арçурисем пулаççĕ.
Çĕр кисретсе çўреççĕ.
    Халăх вĕри куççульпе.
Чунĕ кўтсе çитнипе.
Юрă хывать, кĕвĕлет.
Кайăк туса вĕçтерет.
Ана усрать вăрманта
Тăшман пĕлмен вырăнта.
Кирĕшмечĕ ăна та
Тупса тытать вăрманта.
Илмейккере-сĕлене
Кайса парать хыт вĕçсе.



# *Улттӑмӗш юрӑ*

## ЧӐВАШСЕМ ҪӖНӖ ҪӖРЕ КУҪНИ

***Халӑх Уленке ӗмпӳ хушнипе ҫӗнӗ ҫӗре куҫса килать. Вӑрӑм ҫул. Тӗнче алӑкӗнчен пуҫласа Сӑр сӑрчӗн аркине ҫитеҫҫӗ. Ӑҫти вырӑнта пурӑнмаллине халӑха ҫӑмренпе ухӑ йӗпписем кӑтартаҫҫӗ. Халӑх ӑрачӗн ячӗсем: вирьял, нухрат пӑлхар, хура пӑлхар.***

Тӑрн вӗҫтӗр уй-хирте
Хӑй юррине тӗрлинччен,
Ларӑр сӗтел хушшине
Халап-юмах пуҫличчен.
Улмуҫҫисем хушшинче
Улӑп ларать сак ҫинче.
Ыйту парать амӑшне,
Пытармасӑр шухӑшне.
— Эс каларӑн касхнне:
«Чӑваш килӗ аякран».
Мӗншӗн куҫса килнине
Каламарӑн. Ма хӑран?
Асаттесен уй-хирне
Хӑш вырӑнта выртнине
Пӗлес килет манӑн та.
Анне, кала! Вӑл ӑҫта?
— Ах, ҫав ҫӗршыв аякра,
Унта ҫитме ҫӑмӑл мар.
Вӑт ҫав ҫӗршыв тӗлӗнче
Пулнӑ тӗнче алӑкӗ.



Турӑсене пурне те
Курма пулнӑ ҫавӑнта.
Ҫӳллӗ сӑртсем сахал мар
Унта пулнӑ таврара.
Пӗлӗт юхнӑ аялтан,
Вӑл сӗртӗннӗ пуҫран та.
Ҫав ҫӗр ҫутӑ тӗнчере
Ялан тӑнӑ хисепре.
Шав шавланӑ сӗм вӑрман,
Вӗҫӗ-хӗрри ун пулман.
Унта ӳснӗ пӗр юман,
Снмӗс ҫулҫӑ ун ялан.
Хӗрӗх хӑлаҫ таврашӗ,
Ҫичҫӗр хӑлаҫ ҫӳллӗшӗ.
Кӗҫӗн чӳк чух ун ҫине
Ҫакнӑ вӑкӑр чӗр тирне.
Пӗршерӗн мар, ҫӗршерӗн,
Аслӑ чӳк чух — пиншерӗн.
Вӑрманӗнче чурӑшсем[1]
Пин-пин тӗсли ҫӳренӗ.
Кӑш тирӗнчен кӗрӗксем
Кашни килтех ҫӗленӗ.
Ирӗк пулнӑ ҫӗр енчен,
Кӗтӳ тухнӑ ялсенчен.
Тыр-пул ӳснӗ ҫавӑн пек:
Ҫакланнӑ тет пӗлӗтрен.
Калас пулать ҫакна та:
Тӗнче хӗрри ҫавӑнта.
Хӗвел амӑш ачине
Курма пулнӑ ирхине.
Унта сӑртсем вунсаккӑр,
Пӑхма вара пит капӑр.
Хӑйсем пӗр тан пулманран
Картлашка пек аякран.

[1] Ч у р ӑ ш — тискер кайӑк.

Тĕнчен çичĕ хутĕнчен,
Аслă пӳлĕх суртĕнчен
Картлашкапа çĕр çине
Пур турă та аннă тет.
Çак тĕнчене аннисем,
Ял-ял тăрăх кайнисем
Шуйттансене тапăннă,
Леш тĕнчене ыаăтнă.
Пĕр пӳлĕхçи — Аслати,
Усала чăтайманни,
Вĕчĕленсе кайнăран
Килте ларма юратман.
Кĕмсĕртетсе авăтсан
Пĕлĕт çинчен аннă вăл,
Леш тĕнчене ыткăнсан
Çиçсе-çиçсе илнĕ вăл.
Шатăртатса ярăнсан
Çиçĕмленсе ывтăннă,
Шуйттансене çунтарнă.
Тепĕр чухне, урнипе,
Ытла хĕрсе кайнипе,
Чăвашсене çула май
Пĕтернĕ вăл пит нумай.
Çич ăруран виç ăру
Тăрса юлсан — макăру.
Куççуль юхнă нумайччен,
Çич юханшыв пуличчен.
Пĕтнĕ ăру пуçлăхне,
Тавçа ятлă арçынне,
Турă патне ăсатнă,
Турăпа вăл калаçнă.
Тавçа турă амăшне
Пĕлтернĕ хăй хуйăхне.
— Аслатие чарсамăр,
Пирĕ пĕтме ан парăр.
Эсĕ ăна чармасан



Мĕскер юлĕ чăвашран?
Тур амăшĕ Тавçана
Хуравлана ак çапла:
— Ху пулса пăх пӳлĕхçĕ,
Ун чух сана мĕн теççĕ?
Пĕр самантрах Тавçаран
Турă пулать чăвашран.
Çав вăхăтра Аслати
Мĕн хăтланман çĕр çинче?
Сехре хăппи ун сасси,
Кĕвĕçӳ çеç сăмаххи.
— Уленке, эс çылăхлă,
Чĕлхӳ санăн чарусăр.
Элек пама вĕрентни —
Вут çĕлеипе пыл çини.
Шуйттансене пĕтерин —
Сан чĕрӳне çĕртет-и?
Хура юнлă пулнăран
Эс тухас çук çылăхран.
Çавăнпа сăрт тăррине,
Çак чул сăмсах хĕррине,
Вилĕм тупма асаппа
Тимĕрлетĕп сăнчăрпа.
Уленкери сăнчăрĕ
Çичçĕр патман тайнă тет,
Чăтмалла мар асапĕ
Пин-пин çула çитнĕ тет.
Виç кун хушши чăвашсем
Кĕтнĕ теççĕ ĕмпĕве.
Кайран чаплă турхансем[1]
Ана аран тупнă тет.
Турхансемпе Уленке
Калаçнă тет çĕрĕпе.
— Тĕлĕк куртăм ĕнер эп.

[1] Турхан — кĕнеç.

Тавҫа турра ларнӑ пек.
Вӑл каларӗ тӗлӗкре:
«Ҫылӑхлӑ ҫын тӗнчере
Нумай пулӗ. Чӑвашран
Сан пеккисем пит сахал.
Сана курӗҫ ертӳҫсем,
Виҫ ӑрури ҫариуҫсем.
Каласа пар кашнине
Манран мӗскер илтнине.
Ҫак ҫылӑхлӑ вырӑнтан
Куҫса кайччӑр анӑҫа.
Ҫӗнӗ ҫӗре куҫнӑ май
Хӗн-хур пулӗ пит нумай.
Сӑрт ҫумӗпе каятӑр,
Арамҫи сӑртне[1] тухатӑр.
Сирӗн телей пулсассӑн
Турӑ амӑшне куратӑр.
Турӑ амӑшӗ хисеппе
Калаҫсассӑн сирӗнпе
Ман сӑмаха ан манӑр.
Ҫурҫӗр енне пӑрӑнӑр.
Ҫурҫӗрелле пӑрӑнсан,
Ҫич талӑк ҫул тӑсӑлсан
Тинӗс хӗрне анатӑр,
Ҫырма пуҫне тухатӑр.
Ҫырма анать иҫетрен
Ҫыранӗне хӑратса.
Унта пулсан шыв юххи —
Сирӗншӗн вӑл ҫул юпи.
Ҫитес ҫӗре ҫитмелли.
Куҫ умӗнчех ҫав ҫырма
Аталанса сарӑлать,
Тарӑнланса юсанать.

[1] Арамҫи сӑрчӗ — Кавказ учевӑйӗсем каланӑ тӑрӑх, ҫав сӑрт Кавказра тет.



Шывпа тулӗ ҫав ҫырма,
Мӑнаҫлӑн та кӗрнеклӗ
Шывӗ юхӗ тинӗсе.
Юханшывне ирхине
Аталанса юхинне
Атӑл тесе ят парӑр.
Ҫав ятпа вӑл упрантӑр.
Ҫав юханшыв хӗррипе.
Сӗм вӑрмансем хушшипе
Сӑр ту айне тухмашкӑн
Ҫурҫӗр енне ҫул тӑсӑр.
Темле йывӑр пулсан та
Хӗн-хурсене чӑтсамӑр.
Ҫеҫенхирпе иртнӗ май
Хир ҫынни, тен, тапӑнӗ,
Сӗм вӑрманпа кайнӑ чух
Вӑрман ҫынни шар тӑвӗ.
Хӑравҫӑна тухмасан
Сирӗн ҫул-йӗр татӑлмӗ.
Икӗ ҫырма хушшинче,
Ҫавра кӳлӗ хӗрринче,
Ватӑ хура куратӑр,
Ана тытма тӑрӑшӑр.
Мӗнпур чӑваш пулӗхне
Ятпа чӗнсех чӳк тӑвӑр.
Чӳк кӗллине халӑхпа
Кайран вӗҫлӗр ак ҫапла:
«Эй, Мӑнтурӑ,
Тӗп пуҫлӑхри асаттесем,
Тӗп тӑсисем — асаннесем!
Эпир ӑрӑвӗпе
Сире хисеплесе
Ялан асӑнатпӑр ӑшра.
Хӗрхенӗр пире!
Вӑй-хал парӑр пире!
Сирӗнтен тархасласа

Ыйтатпӑр ҫавсене.
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Эй, Мӑнтурӑ!
Тӗп пуҫлӑхри асаттесем!
Тӗп тӑснисем — асаннесем!
Арӑва ырлӑх кӑтартӑр,
Емӗрлӗхе сывлӑх парӑр.
Ару хунавлӑ пултӑр,
Хӑватсӑра ан тухтӑр.
Пур никекрен,
Пур сиикекрен
Хӑтарӑр пире!
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Эй, Мӑнтурӑ!
Тӗп пуҫлӑхри асаттесем!
Тӗп тӑснисем — асаннесем!
Пур тӑшмансенчен,
Усалсенчен,
Чир-чӗрсенчен,
Вут-кӑвартан,
Выҫлӑхран
Хӑтарӑр пире!
Ан мансамӑр пире!
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Эй, Мӑнтурӑ!
Тӗп пуҫлӑхри асаттесем!
Тӗп тӑснисем — асаннесем!
Эсир пире пулӑшнипе
Ҫӑва тухсан,
Кӗр пулсан,



Тыр-пул тухӑҫлӑ пултӑр,
Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетӗр,
Картиш туллн пултӑр.
Мӗн пуҫланӑ ӗҫсенчен,
Мӗн тума тытӑннинчен,
Шухӑшланӑ шухӑшсенчен
Пысӑк телей тухса пытӑр!
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Ҫырлах!
Халӑх чӳкӗ хыҫҫӑнах
Ҫула тӑсӑр ҫав кунах.
Ӑлри нӳрне пӗр пек мар,
Ертӳҫсем те ҫавнашкал,
Хӑш ертӳҫӗ ӑстайлӑ
Паттӑрлӑхне кӑтартса
Сире вырӑна ҫитерет,
Ӗмпӳ пулать вӑл сирӗн.
Вӑл хушнипе йӑх пуҫсем —
Вӗсем юлӗҫ виҫҫӗ ҫеҫ —
Сӑр ту тӑрне хапарччӑр.
Куҫӗсене ҫыхтарччӑр.
Анраштарма вӗсене
Ҫавӑрмалла йӗке нек.
Ҫав вӑхӑтрах виҫҫӗш те
Ҫӗмренпеле пемелле[1].
Кайран кансан, лӑплансан,
Хул ыратма чарӑнсан
Хӑй ҫӗмренне йӑхӗпе
Шырама кайтӑр ҫав куннех.
Ӑҫта тупать ҫӗмрене,
Ҫавӑнта пурӑнтӑр йӑхӗпе.
Ҫӗн ҫӗр ҫулне уҫиччен

[1] Ҫӗмрен — уха йӗппи мар, уйрӑм вӑрҫӑ хатӗрӗ. Ана туя пек натал ҫине ҫыхнӑ каитрапа ҫаклатса переҫҫӗ.

Ман пуç çинчи пĕлĕте
Çăлтăрсемпе пĕрлешме
Ыткăнтарăр çÿлелле.
Пĕлĕт пулсан тÿпере
Уйăха та хĕвеле
Çăмăл пулĕ ялкăшма.
Кăмăллă пулĕ мана та.
Унччен, кунтан кайиччен,
Пурнăçлама хушнине
Ĕнентерме халь мана
Тупа тытăр ман умра.
Ват юман пек ертÿççем
Тупа тытнă йăлапа
Тăпра çисе алтăрпа.
Вĕсем çула тухиччен,
Çĕнĕ çула кайиччен,
Шур сухаллă пулсан та
Кар тăнă та паттăрла
Ĕмпÿ çинчи пĕлĕте
Вăркăнтарнă тÿпене.
Йытă тыр-пул пучахне
Хыпман пулсан çăварне
Пĕлĕт таçта пулатчĕ,
Çĕре витсе тăмастчĕ.
Çавăншăнах пĕлĕчĕ
Уйăх ытла куляннă.
Çавăншăнах ун сăнĕ
Сенкерленсе кайнă-мĕн.
Тур амăшĕ чăваша
Кĕтсе илнĕ кăмăлсăр.
Çавăнпа пуль чăвашра
Хĕн-хур вăра пуç çÿллĕш.
Вутпа кăвар хушшинче
Вĕсем пулнă çĕр те пĕр.
Мĕн чул шыва кайнине
Шутламан та — кам пĕлтĕр?



Çавах вĕсем çуркунне
Калăм кунĕ[1] ăшшинче
Тухнă тет Сăр ту айне.
Чÿк хиселлĕ пулнăран
Чăваш ĕмпÿ сăрт çине
Ертÿçсемпе[2] хăпарсан
Çапла сăмах калană:
— Эпир кунта тăватсăмăр.
Пурте пулар явапла.
Çавăнпа та сăмаха
Тăрăшсамăр ăнкарма.
Улеике ĕмпÿ хушнă пек
Çак вырăна çитрĕмĕр.
Ару валли çĕн çĕре
Çак сăртранах шырăпăр.
Кашни ярать çĕмренне
Ватă ĕмпÿ хушнă пек.
Аçта тупать вăл ăна —
Ĕмĕрлĕхе пурăнма,
Хăй ăратне вăйлатма
Йăхпах кайтăр çавăнта.
Тетюш ярать çĕмренне
Хăйĕн паттăр вăйĕпе.
Анчах темшĕн çĕмренĕ
Хыт янраса илсен те
Персе ÿкет çывăххах.
Тетюш уншăн хĕпĕртет,
Сăмах хушать ак çапла:
— Çĕмрен тавра вир ÿсет,
Кассăн-кассăн хум иртет.
Вăл пĕлтерет çавна, тен:

[1] Калăм кунĕ — чăваш уявĕ. Çак авалхи уяв хăш вăхăтра пулни паллă мар. Хальхи вăхăтра калăм уявне мункун умĕнхи юнкун пуçласа тепĕр юнкун нĕтерессĕ.
[2] Ертÿç — полководец.

Эпир — Вирьел чăвашĕ,
Çавăнпа та телейлĕ.
    Маматыш ват аллипе
Перет ухă йĕппипе.
Йĕппи вĕçет çил касса,
Тухăçалла хĕм сапса.
Ухă йĕппе шыраса
Маматыш каять тухăçа.
Нухрат шывĕ хĕрринче
Йĕппе тупать раттипе.
Арат пуçлăхĕ çавăнтах
Сăмах хушать кăмăлпа:
— Нухрат шывĕ ман умра.
Çавăнпа пире ӳлĕмрен
Кĕмĕл пăлхар теççех.
    Çĕмрен Ланш аллинче,
Кĕвĕçӳ ун чĕринче.
«Мана хыçа хăварчĕç,
Пайтасăра кăларчĕç.
Тăхта... Эпĕ вĕçене
Ак кăтартăп чĕмере!» —
Тесе шутлать ăшĕнче.
Туртса ярать çĕмрене
Тулса çитнĕ кĕвĕçпе.
Çĕмрен вĕçет тăсталла,
Хăш вырăнта тупмалла?
Ланш ертӳç тарăхать,
Тăрăшсах çĕмрен шырать.
Тан юханшыв хĕрринче
Ăна тупать чул çинче.
Чулĕ тӳпек[1], хуп-хура,
Йăлтăртатать тем тума.
Ланш ларать чул çине,
Сăмах хушать йĕрес пек:

[1] Тӳпек — сăрт тăрри.



— Çак чул пирки вăрçтарма
Ят та парĕç хăртмалла —
Хура пăлхар. Мĕн тăвăн.
Араскалăм ман ... хăрăм.
Асласусен сул-йĕрне
Тăсас марччĕ ĕмĕрте.



## *Çиччĕмĕш юрă*

### УЛĂП АСЛАШШĔ ПАТНЕ КАЙНИ

***Улăп халăх хутне кĕрсе тăшмана хирĕç тухасси, ăна çапса аркатасси çинчен амăшне пĕлтерет. Çавна амăшĕ хирĕçлет. Анчах та мăнле хăй ĕмĕтне пурнăçлама хытă тăнине курса унпа килĕшет те аслашшĕ патне ярать. Аслашшĕ Улăпа çичĕ çул хушшинче хресчен ĕçне те, çурт-йĕр лартма та, вăрçă ĕçне те, пурнăçра мĕнле хăйне тытмаллине те, хăйĕн вăй-халне ӳстерме кукамăш патне кайнă чухне мĕнле кучченеçсем илессине те вĕрентет.***

Картлă-картлă пашалу.
Карчĕ тăрăх çу юхтăр.
Пирĕн юрă-калаçу
Пехилленсе вăй илтĕр.
Улăп каçпа амăшне
Сăмах калать ак çапла:
— Тăшман кунта пуличчен,
Унтан мăшкăл тӳсиччен
Ăна хирĕç тухмалла,
Йăлт аркатса тăкмалла.
— Ун пек сăмах каличчен
Шутла пуçна ватиччен.
Эс халь ача, пит айван,
Санран тăшман хăрамасть.
Тăшман кулли пуличчен,
Пуçна уссăр ватиччен,
Ачам, выля лашалла



Е чышăлла, лапталла.
— Тăшман тарçи пуличчен,
Ĕмĕр куççуль тăкиччен
Ӳксе вилем çапăçса,
Çавра пуçа çухатса.
— Ав çилли пур чăхăн та,
Ун хăрушне кам курнă?
Ир юрлакан кайăка
Кушак тытса тĕп тунă,—
Терĕ Чĕкеç Улăпа
Лăпка-лăпка çурăмран.
— Анне, эпĕ вĕçкĕн мар,
Пĕлетĕп эп — паттăр мар.
Таван халăх хĕн-хурта.
Çавна илсем эс шута.
— Юрать,— терĕ амăшĕ,
Ассăн тухрĕ сывлăшĕ.
Улăпа вăл чуптурĕ,
Çавăнтах вăл ăс пачĕ.—
Вăрçă çулĕ тикĕс мар,
Ача-пăча вăййи мар.
Вăрçă ĕçне вĕренме,
Асна-тăнна ӳстерме
Эп хушнине тăватăн,
Илиска патне каятăн.
Илиска — санăн аслаçу.
Канлĕ пулмĕ пурнăçу.
Ялан вăрçă, çапăçу,
Хакла ларĕ савнăçу.
Улăп çĕнĕ уххине
Илсе çакрĕ хăй çине.
Çĕмренне те манмарĕ.
Хутаççине тултарчĕ.
Улăп ача çул çинче.
Кучченеççем аллинче.
Хуралту сăрт çуммипе.

Çарăмсан шыв хĕррипе
Ват аслашшĕ кив пÿртне
Улăп çитрĕ çуркунне.
Плиска сатур ачана
Лартрĕ хăйпе юнашар.
Улăпăн уç сăмаххи —
Аслашшĕшĕн саваплă.
— Эх, асатте, асатте,
Çитересчĕ ĕмĕте,
Тĕп тăвасчĕ тăшмана,
Ман çăласчĕ халăха.
— Ĕмĕтпе çеç пуякан
Ватăлать вăл пăслансах.
Унтан тăшман хăрамасть.
Вăрçă çулне тăриччен,
Хĕçе сулса яриччен
Асу-тăну ÿсмелле,
Арçын шутне кĕмелле.
Арçын тени çав пулать:
Ака тăвать, сухалать
Хăвел анса лариччен,
Тăварлă тар тухиччен.
Çурт-йĕр çаврать хĕрĕхчен,
Яла илем кÿртиччен.
Выльăх усрать кĕтÿпе,
Шăрттан çиет хăнипе.
— Эс мĕн хушан — пурне те
Пурнăçлатăп ĕмĕрте.
Анчах, хаклă асатте,
Çитересчĕ ĕмĕте.
Ав пуçупа шутла-ха,
Вăхăт каять вăраха!
Хăран кая юласран,
Тăшман кунта пуласран.
— Уншăн эсĕ ан хăра,
Паттăр ĕçсем пурнăçра
Эс тăвăн-ха сахал мар.
Халь кăшт иккĕн пурăнар.
Сĕм-сĕм вăрман хушшинче,
Ват аслашшĕ патĕнче,
Улăн çич çул пурăнать.
Çич çул ăсĕ пухăнать.
Вăл вăрман та кăларать,
Кермен лартма пултарать.
Ака тытса сухалать,
Пÿлме тулли тыр тăвать.
Виç çул çÿрет кĕтÿре,
Пит ăста вăл ку ĕçре.
Выльăх хунать кăткăлла,
Самăрланать упалла.
Хăрах куçне хĕсет те,
Çĕн ухăпа перет те —
Çич сухрăмри пакшанне
Сирпĕнтерет пĕр куçне.
Хир ăйăрне тытать те,
Вăшт! утланса ларать те
Пырать урам хушшипе.
Çил шăхăртса сиккипе.
Пăлат хĕçне кăларать,
Пуçĕ тавра çаврăрать.
Туртса касать хурăна,
Хурăн ÿкет лаш кăна.
Çыру çырать, йăнăшмасть,
Çутçанталăк чĕлхине
Вăл вĕренчĕ тĕппипе.
Ват аслашшĕ Улăпа
Пÿртре лартрĕ юнашар.
Ана ăшра мухтаса
Улăппа вăл калаçать:
— Лаша мĕнле чупасси
Тихаранах палăрать,
Арçын мĕнле пуласси

Ачаранах курăнать.
Панулми йывăççинчен
Пит аякках ÿкмест-мĕн,
Эс, Услати ачи те,
Анах хыврăн пуль ĕнтĕ.
Эс тăнпуçран ача мар,
Вăй-халтан та хавшак мар,
Анчах çакна манар мар:
Така пуçне çимеирен
Айван шутне эс кĕрен.
Халăх хутне кĕмешкĕн
Арăслан пек пулмалла,
Арăслан пек пулмашкăн
Кукамуна курмалла.
Кукаму сан инçетре,
Çĕр айĕнче, çĕр пÿртре.
Ун патне сан çичĕ çул
Утмалла-ха. Çирĕп пул.
Унăн екки çавнашкал,
Пур енчен те вăл кал-кал,
Тÿрĕ çынна хисеплет,
Кукăр çынна сиенлет.
Кучченеçсем ун валли
Пулма кирлĕ ак çапли:
Çăнăх — салма пĕçерме,
Шăрттан — уяв ирттерме.
Виççĕмĕшĕ — çăпата —
Сан пулмалла хутаçра.
Йывăр килĕ тен — йăлтах
Памалла пĕр вăхăтрах.
Çăнăхĕ те ун валли
Пулма кирлĕ ак çапли:
Ни тулă мар, пăрça мар,
Ни сĕлĕ мар, пăри мар.
Хăвах пĕлен: чăвашра
Урăх тĕслĕ тыр ÿсмест,



Урăх тĕсли — тулайра[1].
Кукамуна килĕшмест.
Шăрттан валли вăкăрне
Ÿстермешкĕн пĕлмелле:
Кĕтÿ саран курăкне
Икĕ çĕрте çимелле.
Пĕрн — Ейÿ[2] хĕрринче,
Сарантăвăн айĕнче,
Тепри — унтан кăшт инçе,
Татаймăст[3] йăви патĕнче.
Хаклă парне — çăпата —
Кукамуна памалла,
Шăрçа пусла пулсан та
Вăл çĕр çула чăтмалла.
Ну, калăпăр, пурне те
Эс хатĕрлĕн майĕпе.
Анчах сана вĕсем те
Çĕнĕ инкек тухнипе
Кукамуна тĕл пулма,
Унпа ларса калаçма
Пуláшас çук вăхăтрах.
Пулĕç чăрмавсем татах.
Саран курăк çитерсен
Пусăн выльăх-чĕрлĕх эс.
Хатĕрлетĕн шăрттанна
Типĕтме кăмакара.
Анчах шăрттан типĕтме
Эс чĕртеймĕн кăвайтне.
Вут-кăвара пĕтерме
Вутăш çитнĕ çак енне.
— Темле йывăр пулсан та
Çитетĕпех эп унта! —

[1] Тулайра — ют çĕршывра.
[2] Ейÿ — Урал сарче.
[3] Татаймăст — юмахри çăмпа витĕннĕ ăмăрткайăк.

Тӗрӗ Улăп тытăнăн,
Сиксе тăрсан застарлăн
— Сана хытă шанмăрăп
Урăхла сăмах сапран
Илтме эпӗ шутламан,
Чăн та, эпӗ йăнăшман.
Анчах кунтан кайиччен,
Чаплă ӗçсем тăвиччен
Илтле ват çын сăмахне,
Ан ман эсӗ вӗсене:
Ватă çынсем умӗнче
Хывсе тăрсам калпакна,
Çамрăк çынсем хушшинче
Ан çухатсам ăстăнна.
Ват çынсемпе тӗл пулсан,
Халаплама тапратсан
Итлесе лар пуç тайса,
Сăмахсене йăнкарса.
Ху пӗлмине, илтмине,
Ху куçупа курмине
Персе ан яр пӳртешсе,
Ватă çына эс пӳлсе.
Суйса утăн малалла,
Анчах килен каялла
Йрсӗр суйкăç ятпала.
Тӳрӗ пул та, лăпкă пул,
Никама та шар ан ту.
Çынна ыр ят сарăлать,
Пахалăхӗ чысланать
Çиллине мар, ăсӗнчен,
Хăйне тытма пӗлнинчен.
Çынна сиен тăвакан —
Хăй те çавна куракан.
Кам çумне кайтăн —
Ун юррине юрлатăн.
Хитре тени — вис кукăрăх,



Лайăх тени — ӗмӗрлĕх.
Сӳрен лаша — çул çути.
Хитре арăм — айн курки.
Вӗл нурăйçа салатать.
Кĕлмĕç хутăç çактарать.
Чăн маттура арăма
Хӳме теççӗ халăхра.
Унпа нурăх упранать.
Саваппа та эс ăна
Йатса çӳре алăра.
Тепре мăшăр тупиччен
Шутласа пăх çич хутчен.
Ута лайăх пăхакан
Сурпе хыпать йывăрта.
Ватта лайăх усракан
Вăçă ларнать вилсан та.
Амăшĕ çине вăрекен
Ачăк лекнĕ каймăра.
Ашшĕ ятне çӗртекен
Пуçне çнет хупакра.
Эрех ан ĕç мухтавса.
Черкке тӗпне сутатса.
Унта тулăх йăтайми —
Масартинчен хавеçри.
Тăнмал ларăç тăрсассăн
Çапăç ан тăвиччен.
Йăл çап айра пулсассăн
Ан тив ăна виличчен.
Кĕççĕ питăĕ ан пулсан,
Пĕтле ăна тĕл пулсан.
Улăп тимлĕн итлерĕ,
Асламăшне пӳлмерĕ.
Ана ăшшăн тав турĕ,
Ыталаса чуптурĕ.
Сын пул тесе ал парсан
Ахăрын патне çул тытрĕ.



# *Саккӑрмӗш юрӑ*

## УЛАППА АХӐРЬЯН

***Парне ҫӑпатине тумалли пушӑт Ахӑрьян патӗнче. Ахӑрьян валли тунӑ кермен çунӑ кун хушшинче ишӗлмест. Ишӗлмен керменшӗн ун пуҫӗ турат ҫинче ҫакӑнса тӑрассине пӗлсен Ахӑрьян йӑвинчен тухса тарать.***

Сӗм-сӗм вӑрман варринче
Ҫӗр ытамлӑ юман пур.
Ҫав ват юман хӳттинче
Пин-пин тӗслӗ кайӑк пур.
Ҫав кайӑксем хушшинче
Йӑслав кайӑк патши те.
Сасси килет тӑстанах,
Ятлать улатаккана.
— Ах, эс пачах ӑстансӑр,
Ытла та ҫав намӑссӑр.
Хӑвна тытма пӗлместӗн,
Ҫӗр ҫурасла ҫихретӗн.
Татах ун пек хӑтлансан
Хуса ярап вӑрмантан.
Ман сӑмахран тухатӑн —
Пуҫсӑр тӑрса юлатӑн.
— Аслӑ патша, каҫарсам,
Сӑмах хушма эп чарсам.
Сӑлтавсӑр мар кӑшкӑртӑм,
Чӗппӗмсемшӗн хӑрарӑм.



Паҫӑр эсир хушшинче
Вӗҫрӗм Атӑл хӗррине.
Унта ватӑ чарлансем
Тытаҫҫӗ хӗҫ пулӑсем.
Эп ҫук чухне чӗппӗмсем,
Вӗтӗ-шакӑр та вӗсем,
Тухса ӳкнӗ йӑваран,
Тилӗ курнӑ ҫӑткӑнран.
Чӗпсем хытӑ хӑранӑ,
Тымар айне пытаннӑ.
Чее тилӗ чӗпсене
Тухма хушнӑ илӗртсе.
Ман ҫавсене курсанах
Сехрем хӑпрӗ-ҫке, чӑнах,
Урлӑ-пирлӗ ыткӑнтӑм,
Чакӑлтатма тытӑнтӑм.
Ҫитменнине, Улӑп та
Тӑра парать ҫавӑнта.
Ун кӑмӑлне пӗлменрен
Хыт кӑшкӑртӑм тӳперен.
Тавтапуҫ ҫав Улӑпа!
Вӑл ман умрах хулӑпа
Хӑваларӗ ват тилле
Таҫта ҫитн хирелле.
Вӑт ҫав Улӑп чӗпсене
Илсе чикрӗ хӑй хӗвне,
Юман тӑрне хӑпарчӗ,
Йӑва патнех ҫывхарчӗ.
Кӑтра ҫӳҫне вӑл касрӗ,
Мамӑкларӗ, ӑшӑтрӗ,
Унтан ҫавна йӑвана
Сарчӗ ырӑ кӑмӑлпа.
Аш йӑвана чӗпсене
Тытса ячӗ хӗрхенсе,
Чунтан-вартан ҫавӑнпа
Эп тав турӑм Улӑпа.

— Улăп тетĕн? Вăл, иккен.
Ыр кăмăллă çын, иккен.
Кайăк-кĕшĕке, иккен,
Хĕрхенекен çын, иккен.
Вăл ма кунта? Ай, иккен,
Ахăрьян патне пуль, иккен!
Ай-йай! Йĕкĕт! Вăт, иккен,
Ним хăрамасть. Ну, иккен.
Апла паян Ахăрьян
Уяр тăвать аскăнран.
Вăл Улăпран кулатех,
Чунне илме тăратех.
Эп калатăп ак çапла:
Ырра ырă тумалла!
Çавăнпа та Улăпа
Пулăшмалла манăн та.
Тепĕр майлă шутласан
Пуснил пулать Ахăрьян.
Апла пулсан... Мĕнле-ха...
Вăт шеремет... Итле-ха!
Вĕç-ха Улăп хыçĕнчен
Ана хуса çитиччен.
Хуса çитсен хăв ятпа
Калаç унпа кăмăлпа:
— Эсĕ камне пĕлместпĕр,
Çулна-йĕрне татмастпăр.
Курман-илтмен пулатпăр.
Анчах çапла калатпăр:
Пăхкаласам тавралла
Кунта вичкĕн куçпала.
Вăл ухмах мар, чухлатех,
Туймаллине туятех,
Мĕн кирлине тупатех,
Унпа усă куратех.
    Улатакка явăнса,
Явăнса та савăнса



Вĕçрĕ Улăп хыçĕнчен
Ана хуса çитиччен.
Сĕм вăрманти чăтлăхра
Никам курман вăхăтра
Улатакка Улăпа
Шăппăн калать кăмăлпа:
— Эсĕ камне пĕлместпĕр,
Çулна-йĕрне татмастпăр.
Курман-пĕлмен пулатпăр.
Анчах çакна калатпăр:
Пăхкаласам тавралла
Кунта вичкĕн куçпала.
— Улатакка, çавра куç,
Чĕреренех тавтапуç!
Сана сывлăх пин çуллăх,
Ютăшсене çур кунлăх,—
Терĕ Улăп кайăка
Аш кăмăллă сасăпа.
    Такка вĕçрĕ каялла,
Улăп утрĕ малалла
Сĕм-сĕм вăрман хушшипе
Çăка çулçи çутипе.
    Пĕр ват хурăн хӳттиче,
Шурă чулсем хушшиче
Улăп курать упана,
Сĕм вăрманти усмана.
Упа-усман уткалать,
Пĕртак çĕре чавкалать.
Унтан тытать хурăна,
Пăрса кăклать вăл ăна,
Пĕр çĕрелле сĕтĕрет,
Купа туса сиккелет.
Унтан тухать уçланка,
Кайран утать сукмакпа.
Хирĕç пулать Улăппа,
Сиввĕн пăхать вăл ăна.

Ура ҫине вӑл тӑрать,
Чӗрнисене кӑларать.
Улӑп ҫине ыткӑнать,
Муталама тытӑнать.
— Упа, мӗншӗн улатӑн,
Урсах мана тапӑнтӑн?
Сана вырӑн ҫитмест-и,
Чӑкӑлташу вӗрет-и?
— Ахӑрьян тарҫи пуль тесе
Эп шутларӑм ҫав сана.
Ҫавӑнпа та ҫиллентсе
Татасшӑнччӗ пурнӑҫна.
Ҫак вӑрманта ман тӑшман —
Сӗмсӗр усал Ахӑрьян.
Йӑва тӑвап тӑрӑшса,
Қатмар юман суйласа.
Ахӑрьян кулать шӑл йӗрсе,
Хурт-кӑпшанка ӗскӗртсе.
Лешсем урса каяҫҫӗ,
Юман тавра сырнаҫҫӗ.
Йывӑҫ часах имшӗрет,
Ҫилпе ҫӗре сирпӗнет.
Йӑва юлать ҫап-ҫара,
Хӗл касмашкӑн хӗн вара.
Сивӗ туллать ҫурӑмран,
Тӑм чӗпӗтет хӑлхаран.
— Апла пулсан туслашар,
Утсам манпа юнашар
Ахӑрьян патне ҫитиччен,
Ана Кийӳ кӑтартиччен[1].
Ҫул тӑсӑлать ҫухрӑмпа
Ҫула пӗччен тухсассӑн.
Ҫул кӗскелет юлташпа
Савса пӗрле утсассӑн.

[1] Ана Кийӳ кӑтартиччен — хӑлхинчен йӑтса ҫӗкличчен.



Улӑппала усманӗ
Сӗм вӑрманпа утаҫҫӗ.
Кашлать, шавлать вӑрманӗ.
Ҫил ачисем улаҫҫӗ.
Ҫичӗ вӗҫлӗ ҫырмаран
Ахӑрьян тухать шӑвӑнса.
Хаяр саспа Улӑпран
Ыйтать кутӑн ҫаврӑнса:
— Аҫти ухмах? Мӗн ятлӑ?
Мӗн шӑршласа ҫӳретӗн?
— Кунта эпир ҫул майлӑ,
Ма ун пекех ҫиллентӗн?
Эпир иккӗн — ӑстасем,
Ҫурт-йӗр лартаканнисем.
Сана кирлӗ кермен сем?
Эпир кермен ӑстисем.
Хушсан кермен сан валли
Пулса тӑрӗ чи чапли.
— Чи чапли тен? Вӗҫкӗнсем!
Шаймак[1], анкӑ-минкӗсем!
Куратӑр-и ҫавсене,
Турат ҫинчи пуҫсене?
Унта пуҫсем тем чухлех,
Ҫӗре ҫитмест иккӗ ҫеҫ.
Сире валли ик турат,
Ик пуҫ валли вӗсем халь.
Иксӗре те ӗҫ пуртан
Кермен лартма тытатӑп.
Анчах ҫакна калатӑп:
Кермен тӗтӗм кӑларсан
Ан ишӗлтӗр вун кунтан.
Тӳнсессӗнех пуҫусем —
Илтетӗр-и, тунтуксем? —
Турат ҫинче пулаҫҫӗ.

[1] Шаймак — кахал.

Çумăрсемпе шураççĕ.
— Юрать. Кермен лартиччен
Ыйтасшăн-ха ак çакна,
Анкарса ил эс ăна.
Кермен тÿнсе каймасан,
Йăлтăртатса çеç ларсан
Пуçу пулать çавăнта,
Турат çинче, вăрманта.
Ку анчах мар, эс уиччен
Хăвах паран ыйтнă пек
Тимĕр йывăç пушăтне
Çăпаталăх сыхăпа.
Улăп ĕçе пуçличчен,
Çĕн пурттине хăйриччен,
Улатакка сăмахне
Аса илчĕ хайхине.
«Çак айлăмри çуртсенчен
Тĕленстĕп пур енчен:
Тÿннĕ шĕкĕ çинĕрен,
Хăш-пĕрисем — çĕрнĕрен.
Ай-уй, унти пĕрени
Çурт тăрриичен ÿкмен-и?
Сухăрланса кайнăран
Йăлтăртатать аякран.
Пире туман шур тăмран,
Ан хапсăнсам, Ахăрьян!
Туйрăм ирсĕр вăй-хална,
Улталаймăн эс мана».
Улăп хăйрать пурттине,
Упи — мăка чĕрнине.
Йывăççене касаççĕ,
Суйла-суйла чутлаççĕ.
Пĕренисем яп-яка.
Куç тулли те ялтăркка.
Ылтăн тейĕн сарăран,
Сухăрланса ларнăран.



Юманĕсем — пин çулхи,
Сĕм вăрманта — чи çÿлли.
Сăвай шутне кĕреççĕ.
Никĕс пулма ÿкеççĕ.
Ик эрнерен кермене
Чĕнтĕрлерĕç пур енчен.
Пăхсан кермен тăррине
Çĕлĕк ÿкет çĕр çине.
Карнис çинче, ик енче,
Çурт умĕнче, хыçĕнче,
Тем чул кайăк-кĕшĕксем,
Пыл хурчĕсем, чечексем.
Такки илет таккаса,
Чĕкеç вĕçет ярăнса.
Пыл хурчĕсем вĕçеççĕ.
Чечекрен пыл илеççĕ.
Ахăрьян хăй йăвиичен,
Çичĕ вĕçлĕ çырминчен,
Пăхать Улăп еннелле
Сике-сике çÿлелле.
«Керменÿ сан — хĕвел пек.
Ĕмĕр кунта ларас пек.
Ман еккĕмпе керменрен
Кĕрпе пулать эрнерен».
Хĕвел анса ларичен
Ахăрьян тухать йăвинчен,
Çичĕ хутчен тилçенет:
— Çут тĕнчери шĕкĕсем
Хурт-кăпшанкă тарçăсем.
Улăп енне ыткăнăр.
Çĕн кермене сырăнăр!
Кĕрпе тăвăр керментен,
Çилпеле йăлт вĕçмелле.
Улăп пуçне çимелле.
Упа тирне сĕвмелле.
Çут тĕнчери шĕкĕсем.

Ахăрьянăн тарçисем,
Улăп патне ыткăнчĕç.
Çĕн кермене сыранчĕç.
Çĕн кермене кăшласшăн,
Унтан кĕрпе тăвасшăн.
Пĕренисем сухăртан,
Шăл витмест те, мĕн тăван?
Аптранипе шĕкĕсем,
Шăлĕсене хуçнисем,
Ахăрьян патне ыткăнчĕç,
Тархаслама тытăнчĕç:
— Каçар нире пурне те,
Тĕпретме çук кермене.
Пĕренисем сухăрлă,
Çампа хăнт та тумаççĕ.
Халь вĕсене чăн малтан
Тасатмалла сухăртан.
Ним сухăрсăр пĕрене —
Пире çиме пĕр эрне.
Ахăрьян виççĕ карăнчĕ,
Вĕри сывлăш каплачĕ.
Хуса ячĕ вĕсене
Айлăмалла çурт еннe.
Сухăр тумлать пĕренерен,
Вутчулĕ пек ку кермен.
Ахăрьян улать тĕмсĕрле
Хура пĕлĕте ĕшкĕртсе.
Çумăр çăвать чалăшла,
Шыв тултарать айлăма.
Шыв айĕнчи сăвайсем,
Шывран çӳлте никĕс те.
Çумăр çума чарăнать,
Кермен тавра шыв чакать.
Кермен ларать — çилту пек,
Йăлтăртатать хĕвел пек.
Ахăрьян каять шуралса.



Манаçлăхне çухатса,
Сăмах хушать Улăпа
Пайкăшакан сасăпа:
— Эп малашне çакăнта
Хуçа пулмăп нихçан та.
Чăваш пӳртлĕ пулатех,
Çĕр пӳртсене манатех.
Ахăрьян тарать таркăнла,
Чĕри сикет куянла.
Упа тăрать ташласа,
Сĕм вăрмана култарса.
Тимĕр пушăт кирлĕ те —
Улăп касать йывăçне.
Кайран сĕвет хуппине
Çичĕ ĕмĕр ӳснине.
— Йывăç хуппи касăлать,
Пăх-ха, кирлĕ пушăтах! —
Улăп чунтан савăнса
Тăвать чаплă çăпата.
Çĕн çăпати нуçĕнче
Ала çăлтăр ялкăшать,
Явса тунă кантринче
Çурхи çиçĕм ялтăрать.



# *Тӑххӑрмӗш юрӑ*

## УЛӐП ЫРАШ ТУПНИ

***Улӑп кучченеҫ валли***
***темиҫе ыраш пӗрчи тупать те кӑткӑ патши чирлине пӗлсен вӗсене патшине сыватма кӑткӑсене парать. Улӑп кӑткӑ патши патенче. Вӑл хушнипе кӑткӑсем Улӑпа 77 пӗрчӗ ыраш тупса параҫҫӗ. Улӑп ҫавсенчен темиҫе ҫултан пӗр кӗрман тырӑ тӑвать.***

Ҫирӗк ҫулҫи ҫиле май,
Юррӑмӑрсем хамӑр май.
Ҫӑлтӑр витӗр ҫул выртать,
Улӑп йӗрне кӑтартать.
Хуласенче, ялсенче,
Вӑрмансенче, уйсенче
Улӑп ӗнтӗ уйӑхпе
Шырать салма ҫӑнӑхне.
Ват ҫынсене курать те,
Ырлӑх-сывлӑх сунать те
Пурнӑҫлама ӗмӗтне
Ыйту парать вӗсене:
— Эсир чылай пурӑннӑ,
Ҫампа нумай пӗлетӗр.
Ҫӗнӗ йышши тыр-пула
Хӑш вырӑнта тупмалла?
Хуравлаҫҫӗ ваттисем,
Нумай ҫӗрте пулнисем:
— Ҫӗнӗ йышши тыр-пула
Тупма пулать тулайра.



Улӑп ҫӳрет уй-хирте,
Ҫуртри ӳсет пӗр ҫӗрте,
Кассӑн-кассӑн хумханса,
Тинӗс пекех сарӑлса,
Ерхипварӗ[1] вӗҫӗнче,
Ансӑр ана пуҫӗнче.
Улӑп утма чарӑнчӗ,
Пӑшӑрханма тытӑнчӗ:
«Ҫумкуракӗ ай мӗн чул,
Тӑлӑх-турат ани пуль,
Вӑй ҫитмест пуль, ҫавӑнпа
Ани ҫапла хӑрӑнать.
Ҫакӑнтах ҫӗр касас-ха,
Уиччен ҫумне ҫумлас-ха.
Ҫӑленӗ чух вӑхӑт ман
Сисмесӗрех иртӗ ак».
Улӑп уйра ҫум ҫумлать,
Ҫумран купа купалать.
Ҫумкуракӗсем шанаҫҫӗ,
Пӗр-пӗрипе пуплеҫҫӗ:
— Мӗншӗн пире таврара,
Ҫпе писнӗ халӑхра,
Ним вырӑнне хумаҫҫӗ,
Пӗрехмаях ҫумлаҫҫӗ?
Пин сыпӑкри пӗр тӑшман
Темшӗн пире курайман,
Хисепсӗре хӑварнӑ,
Ҫумкуракне каларнӑ.
Пирӗн ӑру элемне[2],
Улӑп ӳнми хӗлхемне
Ҫич пучахра хӑварнӑ,
Тӗнче тарӑх салатнӑ.

---

[1] Ерхипварӗ — сырма ячӗ.
[2] Элем — пахалӑх, пуянлӑх.

Ыр аш курак[1] сăмахне
Пит хурланса калать те,
Улăп тимлĕн тăнларĕ,
Унтан ăшра каларĕ:
«Ах, вĕсене тупасчĕ,
Пĕр хуйăх ман пĕтетчĕ,
Тĕрĕслем-ха кашнине,
Хам аллăмпа татнине».
Улăп ыр аш куракне
Тытса суйлать пĕрерĕн,
Алли ылтăн тенĕ пек,
Тупрĕ ыр аш пĕрчине.
Вăл çав пĕрче сыхланса,
Çухатасран шикленсе,
Шур тутăрпа чĕркесе
Хĕвне чикрĕ вăр-варах.
— Ыр аш тĕшне — пирĕнне —
Улăп чикрĕ хăй хĕвне.
Ĕнтĕ мĕскер тумалла? —
Пуш алăпах чупмалла!
Ыр аш пĕрчи селĕмне,
Унăн имлĕх-симлĕхне
Эпир анчах пĕлетпĕр.
Çавăнпа та йĕретпĕр.
Эх, ыр ашсăр пĕтетпĕр,
Халь ним тума пĕлместпĕр.
Анне чирпе аптăрать,
Ăна кам халь сыватать?
Çав пĕр пĕрче аннене
Çитерсенех имлесе

[1] Ыр аш — мрашăн авалхи ячĕ. Н. А. Андреев (Наум Урхи) тĕнчевçĕ мраш сăмаха урăх халăх сăмахĕнчен кĕнĕ тенипе килĕшмест. Вăл калана тăрăх, мраш тыр-пул ячĕ «ыр аш» сăмахран тухнă. Мĕншĕн тесен Пăлхар хулине тăшман аркатсан чăваш халăхĕн ик-виç пайĕ вăрмана тарнă. Вĕсем унта чи паха апачĕ аш пулнă та, чи паха апата ашпа танлаштарнă.



Чир-чĕр унран тарĕччĕ,
Арат сÿнсе ларĕччĕ.
— Ан кулянăр, кăткăсем,
Çĕр çинче чи ĕçченсем,
Сире парăп çав пĕрче,
Сыватăрах аннĕре.
Пурăнатăр аякра,
Тен, пĕр пысăк купара?
Вăхăт каять вăраха,
Ман паталла утăр-ха!
Халь ман çине хăпарăр,
Сар çÿç айне пытанăр.
Хăш еннелле каймалла,
Хăш çулпала утмалла?
Улăп çинчи кăткăсем —
Савăнăçлă халь вĕсем —
Канлĕн ларса пыраççĕ,
Çул кăтартса пыраççĕ.
Пĕри — асли пулмалла —
Ашшăн, çепĕç саспала
Улăпа хыт тав тăвать,
Кайран çапла вăл калать:
— Эпир киле çитрĕмĕр,
Кăштах тăр-ха çаканта,
Ан кайсам эс нисăта та.
Çĕр кисренни сисĕнсен,
Кассăн-кассăн çил вĕрсен
Вăт юмансем хумханчĕç,
Кăткăсем те çухалчĕç.
Улăп хăй те сисмерĕ
Çĕре мĕнле путнине,
Çутă енне вăл утрĕ,
Курчĕ кермен çутнне.
Кермен умне çитсенех
Кĕмĕл алăк уçăлчĕ,
Керменелле кĕрсенех

Кĕмĕл алăк хупăнчĕ.
Çавра пÿлĕм варринче,
Йксĕр чечек хушшинче,
Курчĕ ылтăн пукана,
Пукан çинчи ват кăтка.
— «Кевен, кевен, кевен ут,
Кевен ут та çÿрен ут»*.
Улăп, иртсем малалла,
Калаçмалла санпала.
Эс хĕрхентĕн пире те,
Çавăнпа эс керменте.
Сисрĕн пуль-ха. Эп — патша.
Тав тăватăп хам сана.
«Пилĕк, пилĕк, пилĕк ут,
Сула пулса вилми ут»*.
Ыр аш пĕрчи кайран та
Кирлĕ пуль-ха вал сана?
Аратăма пĕтерме
Мана чир-чĕр сыпăçрĕ.
Пуç вĕçĕнчи вилĕме
Ыр аш пĕрчи çĕнтерчĕ.
«Кантăк, кантăк, кантăклă,
Çăпати пуç сыпăклă»*.
Эсĕ пултăн сăпайлă,
Пирĕншĕн те кăмăллă.
Хура-шура туятăн,
Ирсĕр ĕçсем тумастăн.
Авалтанпах йăла ку:
Ĕçне кура хисеп ту.
Çавăнпа та эпĕ те
Пулатăпах сан некех.
Симлĕ ыр аш пĕрчине
Шыраттарăп тĕнчипе.
«Кантавай та кăтăклă,

* Сутмалли юмахсем. Тупсăмĕ: кăтка.



Мăй шăмми те шăтăкла»*.
Сире пĕр ĕç хушатăп,
Çĕр касиччен нурнăçлăр,
Тĕнче тăрăх саланар.
Пулман çĕрте пулсамăр,
Ыр аш курăк пĕрчине
Тупса килĕр пиçнине.
Мĕнпур кăтка йăвинчен
Ала çăлтăр тухиччен
Пĕр самантрах çухалчĕç,
Тĕнче тăрăх саланчĕç.
Ыр аш курăк пĕрчине,
Улт пучахра ÿснине,
Тупрĕç Йĕкĕт çырминче,
Сар чечексем хушшинче.
Автан виç хут авăтсан,
Шурăмпуç та ăрансан
Ултă ыр аш пĕрчипе
Вĕсем чупрĕç йăвине.
Пĕрчи йывăр кăткинчен.
Çавах тул çутăличчен
Çитрĕç хăйсен йăвине,
Пĕрчĕсене, хаклине,
Пачĕç кăтка патшине.
— Улăп, ыр аш пĕрчисем —
Çитмĕл çиччĕ ун шучĕ,
Уншăн хыта сарантăм
Çав пĕрчĕсем пурĕш те
Парне пулччăр ман енчен.
Эпĕ сана вĕсене
Чĕреренех савăнса
Тыттарасшăн кăмăлпа.
Телей пулсан — унтан та
Тыр-пул пулĕ кăрманпа,—

* Сутмалли юмах. — Кăтка.

Терĕ патша Улăп.
Пăхса ăшă кăмăлпа.—
Ун чух вара чăваш та —
Ененетĕп эп ăна —
Хăнисемпе савăнса
Салма çиĕ пухăнса.
Улăп хуллен пуç тайса
Хуравларĕ патшана:
— Тав тăватăп чĕререн
Кăмăл тулса çитнĕрен.
Сывалсамăр хăвăртрах.
Халь килелле утам-ха.
Хĕл те çитрĕ васкаса
Çил-тăманпа ахăрса.
Çур та çитрĕ вĕçтерсе
Хĕл хăватне çĕнтерсе.
Улăп ирех акара.
Акапуçĕ алăра.
Суха тăвать, сÿрелет,
Уй-хир ĕçне вăл пĕлет.
«Тем те пулĕ пуриăçра.
Тăшман урнă вăхăтра
Сыхланакан кайăка
Тытман теççĕ хурчăка».—
Улăп шутлать ăшĕнче.
Акман ани вĕçĕнче.
Мĕнпур ыр аш пĕрчине
Пайланă чух ирхине
Вăл пĕр пайне аллине
Лартрĕ сĕлĕ акиччен.
Тепĕр пайне каçхине
Лартрĕ çырла пиçиччен.
Виççĕмĕшне — кĕр килсен
Çĕре шур тăм ÿкиччен.
Чăн малтанах акнине
Часах вăйлă пăр çапрĕ.

Ун хыçĕнчен акнине
Уир шăрăх çунтарчĕ.
Виççĕмĕшĕ калча çеç.
Çумкурăкĕ евĕр çеç.
«Калча юрпа витĕнчĕ.
Тен, вăл ăна хÿтĕлĕ».—
Улăп шутлать ăшĕнче.
Шикленÿ ун куçĕнче.
— Ан кулянсам калчашăн.
Шăнмĕ телей пулсассăн.—
Пиcка калать Улăпа
Ыталаса, лăпкаса.
Кун хыçĕнчен каç иртет.
Хĕл хыçĕнчен çу çитет.
Улăп тупать аннне.
Курать ыр аш пиçнине.
Ыр аш курăк хăмăш пек.
Пăлтăртатать ылтăн пек.
Пучахĕсем партас пек.
Кашни пĕрчи йĕкел пек.
— Çичçĕр пĕрчĕ тыррăм пур.
Ана акма çĕрĕм пур.
Çич çул иртсен — вăхăт пур.
Ана чăтма вăйăм пур.
Кÿлĕ тулмасть çăлкуççăр.
Патман тулмасть пĕрчĕсĕр.
Çичĕ султан çич патман
Ыр аш пĕрчи пулать ман.
Ун чух вара салмалăх
Çăнăх пулать пит лайăх.—
Улăп тăрать савăнса.
Ĕмĕчĕпе çуталса.



# *Вуннăмӗш юрă*

## УЛĂП АЛПАСТИПЕ ÇАПĂÇНИ

***Улăп саран ӳсекен вырăна çитет.***
***Çав çӗр Алпастин. Улăппа малтан Акар йытти çапăçать, кайран — Алпасти. Кӗтӳри выльăхсем Улăпа Алпастие çӗнтерме пулăшаççӗ.***

Хура пӗкӗ тăррине
Мăшăр шăнкрав çакрăмăр.
Ватă карчăк йăррине
Ял варринчех куртăмăр.
Улăп-кӗтӳç лайăх-çке.
Выльăх пăхма ăста-çке.
Хӗвел тухма шутличчен
Ял кӗтӗвне пуçтарать.
Çеçенхире кăларать.
Хӗвел анать — таврăнать.
Кӗтӳ киле саланать.
Çавна кура ӗнесем.
Пăлан çӳллӗш ӳснисем.
Сӗт параççӗ витрипе.
Чӳлмекпеле хăймипе.
Турăх ярса уçлатăн —
Сар çу кăна пухатăн.
Чăкăт туса çиетӗн —
Пыл-çу çирӗм теетӗн.
Пăрушсене кӗркунне
Юпах тиха темелле.



Пăру тейӗн сурăхне —
Тӗлӗнмелле самăр-çке.
— Ĕçне кура Улăна
Ма сайлас мар анатпа? —
Тесе карчăк уялла
Васкать шăрăх кăнтăрла.
Карчăк ватă пулсан та
Уççăн утать савăнса.
Улăппа вăл айлăмра
Анатлăхать сулхăнра.
Улăп анат çисессӗн.
Шерпет тытса ĕçсессӗн
Пăхса тăрать нумайччен
Тухăçалла тӗлӗнсе.
— Эй, кинеми, кам екки
Картран тухнă çавăнта?
Чӗтренет пек тăвайкки
Çине-çинех... Ав татах!
Пулман çӗрте пулмаллах,
Шăй-шăйне те пӗлмеллех,—
Тет те Улăп кӗтӗвне
Хăваласшăн шав енне.
Карчăк каять хăраса,
Калать юр пек шуралса:
— Эс унталла ан пăхсам.
Сăмахăма ăнкарсам.
Унта кайсан — пӗтетӗн,
Çамрăк пуçна çиетӗн.
Тухăçа мар, анăçа
Хăваласам выльăхна.
— Çук, кинеми, апла мар.
Çавăнта ман пулмаллах.
Кам çӗрӗ вăл хăрама?
Карчăк ăна хуравлать:
— Эп çич çулхи ачаччӗ,
Атте ун чух калатчӗ:

«Ҫавӑнти ҫӗр пит паха,
Чӑваш ҫӗрӗ вӑл пулса.
Ҫав ҫӗршыв халь Алпастин,
Ҫӑткӑн шуйттан хӑраххин».
Эс унталла ан пӑхсам,
Ҫула тытар каялла.
Ик юханшыв хушшипе
Ҫав ҫӗр выртать сарӑлса.
Унта ҫитсе курнисем
Вилӗм тупнӑ яланах.
Халь ҫуркунне. Ҫавӑнпа
Кӗтӳ валли кунта та
Курӑк нумай пахнсем.
Пилӗк таран ӳснисем.
Улӑп хирӗҫ хуравлать:
— Ҫук, кинемн, унта ман
Тем пулсан та пулмалла,
Унтн ҫула уҫмалла.
Вӑл юханшыв еннелле
Хуса каять кӗтӗвне.
Юханшывӗ шавласа
Юхать хумсем кӑларса.
Мӑн ҫӗмел пек шур чула
Улӑп перет шывалла.
Юханшывӗ ӑна та
Юхӑнтарать турпасла.
Улӑп ҫавна курать те
Ҫапла шутлать ӑшӗнче:
«Ах, кӗпер ҫук. Ман мӗнле
Пулмалла-ха леш енче?»
Улӑп хывать тумтирне,
Вырнаҫтарать пуҫ ҫине,
Вӑкӑрпала ӗнене
Хул хушшине хӗстерет.
Шыва кӗрет. Шыв кӗрлет,
Аслатн пек ҫӗмӗрлет.



Хум кӑларать авӑрса,
Ҫырансемпе ҫапӑҫса.
Ҫавах Улӑп паранмасть,
Юханшывран хӑрамасть.
Мекӗрленсе, вӑй хурса,
Тӗреклеисе, ҫул уҫса
Улӑп каҫать шыв урлӑ,
Ҫамрӑк чӗрн хаваслӑ.
Хул хушшинчи выльӑхне,
Ӗнепеле вӑкӑрне,
Улӑп ярать ҫӗр ҫине.
Саран курӑк хушшине.
Саран курӑк чечекне,
Ҫиҫекенне ҫӗр тӗспе,
Тата-тата нуҫтарать,
Ҫыран хӗрне ҫывхарать.
— Эй, юханшыв, ма авран,
Хумсем хыҫҫӑн хум яран?
Кӑнӑклатса вӗҫтерен,
Сӑртран ҫӳле ҫитерен.
Саншӑн тинӗс хумӗсем,
Сана хирӗҫ пулнисем,
Амаҫурн пулчӗҫ-им,
Ҫыранусем кукша-им?
Юханшывӑм, лӑплансам,
Манран парне йышӑнсам!
Чечекле эс ҫыранна
Сӑпайланса юхӑнма.
Улӑп чечек сыххине
Вӑркӑнтарать шыв ҫине.
Чечек сыххи ҫич ҫӗрте
Таврана илем кӗртет.
Хумсем часах чакрӗҫӗ,
Тӳлекленсе пӗтрӗҫӗ,
Капӑкӗсем сӳнчӗҫӗ,
Ахах шӑрҫи пулчӗҫӗ.

Аварсем те пĕтрĕçĕ,
Канаçлăха тухрĕçĕ.
Улăп сăрнай калarать,
Сарнай кĕввн янарать.
Кĕтÿ каçать шыв урлă,
Курăк çнет савнăçлă.
Алпастин куç арнашать,
Çилли вĕрет, туллашать,
Акар йыттине вĕçертет,
Улăп енне вĕслетет.
— Çав чăваша, ухмаха,—
Ун сехрине хăптар-ха,—
Тамашасем кăтартса
Леш тĕнчене ăсат-ха!
Акар йыттăн пĕр ĕç çеç,
Хĕн-хур сарма вăл нĕлет.
Çавăнпа вăл шăртланать,
Улăп çине ыткăнать:
— Эс нумая хапсăнан,
Унишăн пуçна çухатан.
Халех мĕнпур выльăхна
Хуçа патне хăвала!
Итлемесен — пĕтетĕн,
Тăмсай, пуçна çиетĕн.
Часрах! Васка! Хăвăртрах!
Атту çурап вăр-варах!
— Асаттесен кунти çĕр,
Эп каймастăп ку енчен!
Хăрамастăп эп санран,
Кунтан тасал хăвăртрах!
Акар йытти йăпшăнать,
Улăн çине ыткăнать.
Çыртма тăрать пырĕнчен,
Питĕнчен те пуçĕнчен.
Анчах Улăп акара
Çыртма тăнă вăхăтра







Ярса тытать майӗнчен,
Пӑвать чунӗ тухиччен.
— Эсӗ ытла ирсӗр-çке,
Тарçӑн чунне ма илтӗн?—
Хаяр сасӑ янӑрать,
Алпасти хӑй курӑнать.
Шӑртлӑ çӳçӗ лапӑркка,
Çӑварӗ ун — кӑмака.
Асав шӑлӗ ик енче,
Капан шӑлсем хыçӗнче.
Çӑварӗнчи шӑлӗсем
Кивӗ сӳре пӑти пек.
Юнлӑ кармак куçӗсем —
Пысӑк арман чулӗ пек.
— Чӑрсӑрлӑхна ирлатӑп,
Анчах çакна калатӑп:
Эс акара çӗнтертӗн,
Хаклӑ тарçа пӗтертӗн.
Халь эс акар йытӑлла
Пурӑнӑн ман патӑмра.
Кӗтӳ пӑхӑн кунӗпе,
Хурал тӑрӑн çӗрӗпе.
— Чура пулма çуралман,
Чура пулса пурӑнман.
Чӑваш çӗрӗ ман тавра! —
Терӗ Улӑп усала.
Алпасти кайрӗ тарӑхса,
Кӑвакарса, карӑнса,
Карсакланса, пӑвӑнса,
Юнлӑ куçне çавӑрса.
— Юханшывам, авӑрса,
Сӑрт пек хумсем кӑларсам,
Çав чӑваша, чӑрсӑра,
Хӑйӑр айне путарсам!
Юханшывӗ авӑрмасть,
Улӑпа вӑл тапӑнмасть.



— Эсӗ маншӑн, Алпасти,
Ыр ӗç туман нихçан та.
Улӑп каçна-каçманах
Чечек пачӗ ытампа.
— Ман таврари чечексем,—
Тет Алпасти çиллене,—
Улӑп пуçне анратӑр,
Суккӑр туса хӑварӑр!
Чечексем — çӗр тӗслисем,
Улӑппа тӗл пулнисем,
Усала пуç таймаççӗ,
Çапла кӑна калаççӗ:
— Эс пирӗншӗн çакӑнта
Ыр ӗç туман нихçан та.
Улӑп килчӗ ку енне,
Курчӗ пирӗн илеме.
Сан сӑмахран тухатпӑр,
Улӑпа хур тумастпӑр.
Усал карать çӑварне
Шак шаккаса асавне.
Улӑпа вӑл тапӑнать,
Ая тума хӑтланать.
Улӑп — çӑка, ача çеç,
Алпасти — ватӑ юман.
Çавӑнпа та Улӑпа
Йывӑр килет тӑшманран.
Ватӑ вӑкӑр мӗкӗрет,
Пур кӗтӗве пӗлтерет:
— Пирӗн Улӑп никекре,
Пулӑшмалла пурни те!

# Вунпĕрмĕш юрă

## УЛĂП ХĔВЕЛ АМĂШĔ ПАТĔНЧЕ

***Чăваш Вутăш пирки вут-кăвайтсăр юлать. Вутăша Чăвашран мĕнле хуса ярассине Леркке кăна пĕлет. Улăп Леркке патĕнче. Ун кăмăлне çавăрать те, Леркке ăна Хĕвел амăшĕ патне ярать. Хĕвел амăшĕ Вутăша хăваласа яма хĕвел таткине парса ярать. Хĕвел татки Вутăша Чăвашран хăваласа ярать.***

Амнарăшки ярăшки,
Кулса выртать упăшки,
Икçĕр утмăл вĕт кайăк,
Теменĕнче пĕр кайăк[1].
Пирĕн юрă кăмăлран,
Юрлама чун туртнăран.
Юрра юрлар янратса,
Улăп ĕçне сутатса.
Пĕтĕм кĕтӳ Улăпа
Пулăшсанах пур вăйпа,
Улăп хăйĕн тăшманне
Ыткăнтарчĕ инçете.
Улăп киле таврăнсан,
Мунча хутса çăвăнсан
Ват амăшне ыталать,
Унтан ăшшăн вăл ыйтать:
— Анне, мĕнле пурăнан,

[1] Сутмалли юмахсем. — Хĕвел, уйăх, çăлтăрсем.



Çĕн хынарсем пур-и сан?
Хаш-хаш сывлать амăшĕ,
Çапла тухать сăмахĕ:
— Ывлăм, санпа пур ялта
Сăмах хушĕç ак çапла:
Пурăнатпăр — чиперех,
Курăнатпăр витĕрех.
Сар пикесем, инкесем,
Пар юхтарса тăписем,
Вутăш юта савмарĕç,
Ун еркĕнĕ пулмарĕç.
Çавăнпа та халь пире
Вутăш памасть вут чĕртме.
Чăвашсене пĕтерме
Пурăнать вăл кӳлĕре.
Кăнар çук та Чăвашра —
Кăвайт çунмасть вучахра,
Инçĕ анат çакăнта
Тупăймастăн инçта та.
Ана никам çĕнеймест,
Çавăнпа ют шикленмест.
Çӳрет пуçне каçăртса,
Чăвашсене хăратса.
Çавăнпа та Чăвашра
Юрлав шăпчăк кайăк та
Ян янратса юрламасть.
Пирĕн яшă-кĕрĕмсем
Хутшăнмаççĕ вăййа та.
Манатпăр пуль малашне
Сăрнай, кĕсле кĕввине.
Темшĕн вара Чăвашра. —
Суя-и вăл, тĕрĕс-и,
Эс ун çинчен илтмен-и? —
Пур тет шурпуç тĕнчере,
Леркке теççĕ ирсĕре.
Чĕлхи вăрăм пулнăран

Вутăш хăрать çаваптан.
— Тĕтĕм тухмасть кăвайтсăр,
Сăмах вĕçмест сăлтавсăр.—
Тесен Улăп амăшне
Пĕлтерет хăй ĕмĕтне:
— Килтен часах кайнишĕн
Анне, каçар, тархасшăн.
Леркккене ман тупмалла,
Унпа сăмах хушмалла.
Улăп çакать кутамкка,
Çулне тытать аякка.
Утать, çитет пĕр çере,
Ешерекен тĕмене.
Унта ватă пăлансем,
Вĕсем çинче кайăксем.
Пурте йăва çаврăнă,
Чĕпсем пусса кăларнă.
Улăп утать малалла,
Курать хыткан чарлана,
Хăй вăл пулă тытасшăн,
Апатланса ларасшăн.
Анчах умри пулăсем,
Вăлча сапма кайнисем,
Ват чарланран тараççĕ,
Хӳре çапсах кулаççĕ.
Чарлан сывлать хуйхăрса,
Выçăпала хăрăнса,
Улăп енне çаврăнса
Сăмах хушать йынăшса:
— Улăп, мана итлесем,
Кирлĕ пулăп эп сана,
Кутамккунти апатна
Ума хурса çитерсем.
Улăп хăй те иртенпе,
Апат çимен чĕпкĕм те,
Çапах та вăл чарлана
Апат парать васкаса.
— Улăп, хăвна ил мана,
Кирлĕ пулăп эп сана,—
Терĕ чарлан Улăпа.
Улăп утрĕ чарланпа.
Пуракĕнчи шерпетне
Улăп ĕçме тытăнсан
Сас илтĕнчĕ айлăмран:
— Шыв ĕçтер-ха хĕрхенсе.
Улăп умне арăслан
Шуса тухрĕ вăйсăртан.
Çанталăкĕ шăрăх та —
Сывлать кăна пашкаса.
— Çак пушхире янăран
Çавар хытă типнĕ ман,
Шывна ĕçсе çăвăнсан
Çул кĕскелĕ манпа сан.
Шыв ĕçсенех арăслан,
Виçĕ хутчен йăвансан,
Ылтăнларĕ çилхине,
Çивĕчлетрĕ чĕрнине.
— Лар эс ман çине часрах!
Кунтан каяр хăвартрах,—
Тет арăслан Улăпа
Аслати пек сасăпа.
Арăслан куп чупнине
Этем кайĕ пĕр эрне.
Çапах та ун çул вĕçне
Çитеймĕ вăл çуррине.
Вĕсем курчĕç тĕмере
Наркăмăшлă çĕлене.
Çав çĕленĕн куçĕнчен
Пурнăç сӳнет пит хуллен.
Улăп чукмар çĕклерĕ:
«Çапса вататăп!» — терĕ.
Çĕлен сиксе чĕтрерĕ.

Унтан çапла каларĕ:
— Кирлĕ пулăп пурнăçра
Хăвна йывăр вăхăтра.
Вĕлериччен шăрттанна
Касса пар-ха эс мана.
Улăп касать шăрттание.
Хурса парать çĕлене.
Çĕлен çăтать тип аша
Чăмламасăр ăкклатса.
Улăп тавра шăвăнса
Çĕлен илет чашкăрса.
Хура пуçне касăртса
Сăмах хушать лăпланса:
— Хура ту çав. Ав леш енче
Леркке пурнать хăй килĕнче.
Эсĕ ăна килĕшсессĕн
Мĕн ыйтнине йăлтах парĕ.
Санран кăмăлсăр юлсассăн
Сăнна тискерлетсе ярĕ.
Выçăхтарса чунна илĕ.
Çанçурăмна хуçса силлĕ.
Юрас тесен ват асамçа
Сан пулмалла унта çапла:
Çарамас мар, тумпа та мар,
Çуран та мар, утпа та мар.
Парнепеле, парнесĕрех.
Япалапа, нимĕнсĕрех.
Çав çын екки, пĕр сăмахпа,
Ни унталла, ни кунталла.
Çав ватсупнă, шурă пуçа,
Вилме маннă кукша пуçа,
Килĕшмешкĕн ăстăн кирлĕ,
Халап-сăмах пултăр вирлĕ.
Леркке пире йăлт пĕтерчĕ,
Эх, мĕн чул вăл тертлентерчĕ!
Кам çармăсчĕ — кунта чарлан,
Мăкшаччĕ çав — халь арăслан.
Пушкăртчĕ эп — кунта çĕлен.
Эпир камне ĕнтĕ пĕлен.
Улăп, эс пирĕнтен ăслă,
Асамçăран хăтарсамăр.
— Ват Леркерен хăтăлма
Пĕр туртара пулмалла.
Çавăнпа та паянтан
Ăн тухăр ман сăмахран.
Эс, арăслан, карăнса
Леркке патне утатăн.
Çĕлен, пĕр май явăнса
Ун çумĕнче шăватăн.
Улăп часах саланчĕ,
Тумтиррине пуçтарчĕ.
Çĕлен тирне, киввине,
Çакса ячĕ хăй çине.
Çĕлен çине выртрĕ те,
Урисене тăсрĕ те
Арăслан урлă хуçлатрĕ,
Леркке патне çул тытрĕ.
Ват чарланĕ аллинче,
Тумтирĕсем пуç çинче.
Телĕнмелле кашниччен
Пĕр туртара пулиниччен.
Улăп Леркке пÿртĕнче,
Хуçи шутлать ăшĕнче:
«Ăçтан тухрĕ çак ача?
Килĕшет пек вăл мана.
Ни çарамас, ни тумпа,
Ни çуран мар, ни утпа.
Парнипе вăл çунатех,
Ашак пулса куратех».
— Леркке мучи, каçарăр,
Мана парне паратăр.—
Терĕ Улăп.— Вăт сана.

Парне — ак ҫак. Тыт ăна!
Улăп Леркке умĕнче
Чарлана вăш вĕҫтерчĕ.
Чарлан пĕлĕт айĕнче
Ана тытма май ҫуккă.
— Ай-ай,— терĕ Улăпа
Ватă Леркке.— Лар манпа.
Иккĕн хĕвел аниччен
Сăмах ҫапар ывниччен.
Анчах ун чух сăмахху,
Тĕлĕнмелле юмахху
Вăрăм пултăр Аталран,
Кĕске пултăр ункăран.
Хытаратăп: ан мансам,
Шыв пек юхтăр юмах сан.
Пĕр чăн сăмах ан кала,
Пултарăн-ши эс ҫавна?
Эп хушнн пек ҫаптарсан —
Юратнă ҫын эсĕ ман.
Ун чух манран мĕн ыйтан,
Ҫавна илен эс манран.
Пултармасан — ан хурлан,
Тнха-ашак эс пулан.
Пиҫен ҫнсе ҫӳретĕн,
Ун тутнне пĕлместĕн.
— Янă чухне юмаха
Эс, мучи, мана ан пӳл.
Кăшт пӳлсен те эс мана
Мĕн ыйтнине панă пул.
Мана нтле ăнкарсах,
Ним чĕнмесĕр, шăл ҫыртсах.
Лаша ҫине выртрăм та,
Алла пуртă тытрăм та
Кайрăм эпĕ вăрмана...
Итлетĕн-и эс мана?
— Итлеп, ачам, итлетĕп,
Ҫапла пулнă, пĕлетĕп.
— Пăхап ҫĕре тинкерсе,
Куҫа-пуҫа ҫиҫтерсе:
Лашан кайри урине
Турат касса татнă та,
Ура выртать вăрманта.
Лаша ҫинчен антăм та,
Ват ҫăкана касрăм та
Вĕрен яврăм вуллинчен.
Ҫĕлен ҫипрен кăшт ҫиҫе.
Лашан кайри урине
Туртса ҫыхрăм ҫав ҫиппе.
Утлансанах ут ҫине
Яра патăм сиккипе.
Ҫитрĕм эпĕ пĕр ҫĕре —
Пулать-ҫке ҫав тĕнчере:
Хĕвел пăхать ҫич енчен,
Анса ларать кĕтесрен.
Вăт ҫавăнта, чăнах та,
Леркке мучи, пĕр ялта
Куртăм сана. Тăхта-ха...
Итлетĕн-и эс мана?
— Итлеп, ачам, итлетĕп.
Унта сана курнă эп.
— Ялта сана ак ҫапла
Ярса илнĕ сухалран,
Унталла та кунталла
Сĕтĕреҫҫĕ вуннăн тан.
Ашак теҫҫĕ вĕт сана!
Кӳлчĕҫ сана туртана.
Тислĕк хунă ҫунана
Эс туртатăн ахлатса.
Чăнах та ҫав, ашаклах
Эс ĕҫлерĕн ҫав ялта.
Сысна айăм-сарăмне
Эс ҫулларăн кушак пек.

— Суятăн эс! Нихçан та
Эпĕ пулман çав ялта.
Мана кӳлмен ашакла.
Ма суятăн касмакла?!
— Эпир сăмах тытнăччĕ...
Эсĕ картран тухнăран.
Ман сăмаха татнăран
Халап-юмах вĕçленчĕ.
Сăмах патăн — пурнăçла.
Çивĕчлет ман ăстăна.
Эпĕ килнĕ Чăвашран.
Эп сан çумра пит айван.
Астăн ыйтап çавăнпа.
Вутăша тĕп тумашкăн
Пулăшсамăр, тархасшăн.
Ун пиркнех Чăвашра
Кăвайт çунмасть нисçта та.
— Саккăр сăвать чее куç.
Сан çавра пуç — тилĕ пуç,—
Терĕ Лĕркке лăплансан.
Кавир çипе вырнаççан.—
Килĕшетĕн эс мана,
Ăс памаллах ман сана.
Вутăш манран ватăрах.
Асамлăхпа вăйлăрах.
Эп мĕн хушап — тумалла.
Темен[1] патне тухмалла.
Темен çичĕ тăраллă.
Унта кермен вунултăă.
Хĕвел пурнать керменре
Ялан пĕрле амăшпе.
Эсĕ Хĕвел амăшне
Юрасанах керменте
Хăех хĕвел татăкне

[1] Темен — вырăн, тăвралăх.



Сана парать теменре.
Сарă хĕвел таткипех
Чăваш çĕрне çитсенех.
Хĕвел вăйне сиссенех
Вутăш тарать раттинех.
Мĕн пĕлнине каларăм.
Пĕччен утма çул вăрăм.
Юлташусем çын пулччăр.
Санпа пĕрле çул тытчăр.
Улăп каллех çул çинче.
Лерккe вĕрентсе янинче.
Юлташĕсем — йĕкĕтсем,
Сăрт тăрринчи пĕркĕтсем.
Вис хут шыва путрĕçĕ,
Çич хут вутра çунчĕçĕ.
Вĕсем кĕчĕç кермене.
Курчĕç Хĕвел амăшне.
Улăп чăваш хуйхине
Йăлт пĕлтерчĕ йĕркипе.
— «Эпĕ килтĕм Чăвашран.
Унта кăвайт юлманран»,—
Терĕн эсĕ чĕререн.
Килнĕ эсĕ инçетрен.
Вутăш чăваш вуттине,
Авалтанпах çуннине,
Ним айăпсăр сӳнтермен.
Çапла мар-и, йĕкĕтсем?
«Хĕрарăмсем айăплă»,—
Терĕç мана анăçра.
Вĕсен чĕлхи тем майлă
Хĕрсен касать — чăт кăна.
— Хĕвел амăш, ăнлансам,
Çанла пултăр сăмах ман:
Суйсан — мана çĕр çăттăр.
Хĕрарăмсем айăпсăр.
Пур çĕрте те тĕнчере

Вĕсем пурте хисепре.
Вĕсем пекки, чăнах та,
Хакли çуккă туршăн та.
Майне-мĕнне пĕлеççĕ.
Вĕсем пурнăç параççĕ.
Вĕсем сĕм-сĕм авалра
Тырă акма чухланă,
Вĕсем çăкăр-тăвара
Пĕçермешкĕн пултарнă.
Вĕсем ăшă-сивĕрен
Пуранма çуртсем ларттарнă.
Вĕсем намăс-симĕсрен
Тумланмашкăн ăс панă.
Тискер кайăк-кĕшĕкне
Вĕсем алла ӳкернĕ.
Картишĕнче вĕсене
Усă пама вĕрентнĕ.
Самай йывăр хушăра
Çухатмаççĕ тăнпуçа,
Самай савăк пурнăçра
Ним манмаççĕ хĕн-хура.
Вăт халь вĕсем Чăвашра
Ача чирлĕ вăхăтра
Вутăш патне каяççĕ
Ун мăшкăлне тӳсеççĕ.
Кăшт кăвайтшăн намăс кур.
Хĕрарăмра айăп çук!
Суйсан мана çĕр çăттăр.
Хĕрарăмсем айăпсăр!
Эп — хĕрарăм ачийĕ,
Мана анне суратнă.
Унăн йывăр хуйхийĕ
Ман чĕрене амантнă.
Хĕвел амăш, Вутăша,
Вилме маннă ютăша,
Хуса яма пулăшсам.



Мана кăвайт партарсам.
— Улăп, эсĕ, чăнах та,
Хĕрарăмран çуралнă,
Çулран ача пулсан та
Ун хуйхине ăнланнă.—
Хĕвел амăш Улăпа
Хуравларĕ кăмăлпа.—
Сарă хĕвел татăкне
Партаратăп хамăнне.
Çав татăкна Вутăша,
Асран кайнă ютăша,
Хуса ярăн самантрах,
Вара кашни вучахра
Кăвайт çунĕ, ан хăра.



# *Вуниккĕмĕш юрă*

## ШĂПАТАН СУЯ УЛĂП ПУЛНИ

***Тухатмăшсен увеĕ.***
***Улăпа вĕлерме кавар тăваççĕ. Шăпатан Улăп аллĕнче — суя Улăп.***
***Вăл Улăпа ялтан хăваласа яма ял халăхне хĕтĕртет.***

Чĕмпĕр[1] çинче чен вылять,
Хĕр умĕнче яш ташлать,
Сĕм вăрманта ма шăй-шăй?
Çĕр кисреннĕн туйăнать.
Тухатмăшсен увеĕ
Унта пырать çур çĕрччен.
Асампала тĕшмĕшĕ
Унта çитмĕл тĕсли тет.
Вуткăнайпа Алпасти
Çын шăммишĕн вăрçаççĕ,
Ахăрьян пек усалли
Шăлне йĕрсе тăраççĕ.
Кирĕшметне Вутăшĕ
Имçам ĕçсе кÿпеççĕ,
Унтан вара иккĕшĕ
Пĕр-пĕрине тĕртеççĕ.
Кирĕшмечĕ Вутăша

[1] Чĕмпĕр — Атăлçи патшалăхĕнчи пысăк хуласенчен пĕри. Тутар-монголсен çарĕ çав хулана кĕллентерсе хăварнă хыççăн вăл урăх ура çине тăрайман. Çав хула Симбирск хулинчен 20 çухрăм аякра пулнă.



Пÿлсе калать мухтанса:
— Эпĕ кăна чăваша
Алра тытап хăратса.
Вутăш кулать тусĕнчен,
Тĕртсе калать кусĕнчен.
— Хам та çапла шутлатăп,
Эп вĕсемшĕн — чăн тамăк.
Çавăнпа та Чăвашра
Санран «хытă хăраса»
Киреметсен йăвине,
Сан йăхăнтан юлнине,
Сухалаççĕ çăвĕпе
Тустармашкăн çĕрĕпе.
Ĕçĕ пĕтĕ çавнашкал:
Сĕм вăрмана кăкласа,
Сухаласа тыр акса,
Çапса çурма тăмпуçна
Сухаç çитĕ йăвуна.
Эсĕ унщăн ан кулян.
Эсĕ маншăн чăн тăван.
Ун пек мар-тăк — тусу сан.
Ӳтне çĕрме памастăп.
Тăварласа лартатăп.
Хурана та лекетĕн,
Шÿрпе пулма вĕретĕн.
Шÿрпе пиçсен мĕн пулать?
Çак вăрманта туй пулать.
Качча тухĕ Шăпатан,
Еркĕн пулĕ кайран ман,
Унччен ĕçер, ташлăпăр,
Тимĕр тылла юсăпăр.
Шăпатана çав сăмах
Чунне касать самаях,
Çавăнпа та тарăхса
Пÿлсе калать Вутăша:
— Эсĕ — тăмсай ачаран.

Йыт каяшĕ миму сан.
Эсĕ тухран кăмăлтан.
Сан еркĕнӳ нихçан та
Эп пулмастăп, тунката!
Шăлна йĕрсе лариччен
Кăшт шутлама вĕрен эс.
Хĕвел амăш кермене
Улăп кайни виç эрне.
Паллах, унта çитиччен
Вăл каяс çук сăлтавсăр.
Хĕвел амăш килĕччен
Тухас çук вăл пуш алпа.
Сарă хĕвел катăкĕ
Ун аллине лексессĕн
Мĕнпур чăваш халăхĕ
Кăвайт чĕртĕ ĕмĕрлĕх.
Ват Кирĕшмет, сусăрскер,
Шăпатана ĕненмест.
Пуçĕ урлă вĕчĕхсех
Йĕк мăйăхне вĕçтерет.
Курать хĕвел кермене.
Унтан Улăп тухнине.
Ун аллинчи кушеле,
Савăнăçлă кулнине.
Тухатмăшсем, шуйттансем,
Кирĕшмет пек усалсем
Улăп çиичен пĕлсенех
Шăлĕсене шаккаççĕ.
Çăварĕсене караççĕ.
Хĕрсен вут-хĕм сапаççĕ.
Пĕр-пĕрине пуплеççĕ:
— Улăп пирĕн чăн тăшман.
Пирĕнпе вăл пит халай.
Чăваш çĕрне çитиччен
Вĕлермелле сисиччен.
Вĕлермешкĕн ун умне



Тӳшек пулса выртăпăр.
Ыйăннипе ун çине
Выртсан — чунне илĕпĕр.
Тепри калать: — Ĕç тухмасть.
Мĕншĕн? Улăп тăмсай мар.
Ĕçе тавар ăслайла.
Мĕнле тетĕр? Ак çапла:
Улăп утас çул çинче,
Пĕр-пĕр кӳлĕ хĕрринче,
Улăх пулса выртăпăр,
Хĕрсем пулса выльăпăр.
Улăп пире куратех,
Ун чух сăмах хушатех.
Эпир ăна вăйăра
Астарапăр ăмăртса.
Ку тараиччен пикерен,
Сар чечек пек хитререн,
Пĕр йĕкĕт те нихăçан
Айккалла пăрăнман.
Вăхăт кайĕ каçалла,
Вара вăйăа татмалла.
Ун чух пыра якатма
Хупах çулне тăсмалла.
— Çитет,— терĕ хĕм куçли.—
Сирĕн сĕнӳ — ял кулли!
Мĕн чул сире вĕрентен,
Ыр сĕнӳ çук сирĕнтен.
Хĕвел амăш патĕнчен
Улăп килет пĕр-пĕччен.
Çавна асра тытăпăр,
Ăна кĕтсе тăрăпăр.
Мĕнле кĕтсе илмелле?
Чухлатăр-и, тăмпуçсем?
Пурте ларăр йĕркипе.
Хупланман-и хăлхăрсем?
Вăл — чăвашăн юратмăш.

Ачасене — вылятмăш.
Çавăнпа та шăп ларăр.
Хăлхăрсене чăнк! тытăр.
Савăнăр пурте! Шухăш пур.
Çĕклентерет мана мур.
Ес пуçлăпăр çакăнтан:
Суя Улăп — чн малтан!
Улăп сăнне паянах
Йышăнайтăр Шăпатан.
Улăп ялне вăл каять,
Ачасемпе паллашать.
Вăйă вылять алхасса,
Чăрсăрланса, çапăçса.
Ачасене вăйăра
Кăларать вăл чăлаха.
Уншăн вара Улăпа
Тарăхатех халăх та.
Ăна алăк кăтартса
Хуса ярĕ тулая.
Улăп ун пек намăсран
Тăнне-пуçне çухатĕ.
Чунне сутĕ шуйттана.
Чунсăр этем яланах
Хăй халăхне час манать.
Мантăр кăна чăваша —
Улăп пулать алăра.
    Çав вăхăтрах Шăпатан
Улăп пулчĕ суялла.
Ача пекех аскăнать.
Вăйă вылять харкашса.
Кирĕшмечĕ савăнать,
Тухатмăша халавлать.
— Эй, Шăпатан, яра пар,
Сăнчăр парăп. Ташша яр!
Сăнчăрпа чăн Улăпа
Тыллаттаран халăха.



Унтан тапкă-çупкăпа
Хăвалатăн йытăпа.
    Кĕтмен-чĕнмен хушăрах
Шурăмпуç тухма пуçларĕ,
Автан виç хут авăтрĕ.
Мĕнпур усал таврашсем
Вăхăт хĕссе пынăран,—
Йĕкехўре пек вĕсем,—
Час çухалчĕç вăрмантан.
    Суя Улăп чăрсăрла
Кĕрет яла кăнтăрла.
Ял ачнсем уннала
Вылясшăн мар лапталла.
— Эп çур тăлăх, ма манран
Йĕрĕнетĕр яланах?
Вылямастăр, таратăр,
Элек парса ларатăр!
Эпĕ сирĕ çавăншăн
Хăлха чикки паратăп.
    Ачасене хупăрлать,
Чышкăлама тытăнать.
Çĕрме пуян ачиние
Пăрса хуçать аллине.
Мăрсан пĕчĕк тĕнкĕчне —
Суккăрлатать пĕр куçне.
    Суя Улăп вăйăпичен
Ялта вилĕм улт-çиччех.
Ял вĕрўçĕ — тухатмăш,
Вилесене чăмламăш,
Халăх пуçне çавăрма
Пуçлать çапла калама:
— Эп тем тума пултарап!
Вилесене çĕр каça
Ура çине тăратап.
Çавăнпа та вĕсене
Хурăр ман çĕи кĕлете.

Çăткăн мăрса тарçисем,
Çĕрме пуян мăшрисем,
«Улăп» тавра тăраççĕ,
Çапла сăмах калаççĕ:
— Ун амăшĕ ним арсăр
Ача турĕ. Намăссăр!
Çавăнпа та ун ачи
Пулнă этем каяшши.
Ват амăшне хĕрхенсе
Пурăнасчĕ килĕнче.
Ун вырăнне алхасса
Таçта çӳрет çил касса.
Касмаксемпе çӳресе,
Вĕсен ĕçне вĕренсе
Вăрра тухать пурпĕрех.
Унччен Чăваш çĕрĕнчен
Çав Улăпа, касмака,
Хуса ярар тулая!
Хăш-пĕрисем çавăнтах
Ас параççĕ кăшкăрса:
— Вăрра тухса кайиччен,
Унтан инкек куриччен
Ик аллине хуçмалла,
Куçне йытта памалла.
«Алсăр-куçсăр юличчен
Тухса тарас сиччен»,—
Суя Улăп сехрере,
Чĕри — чĕрне вĕçĕнче.
Хăранине куянла
Тапса сикет уялла.
Вĕрӳç сисет: ĕç ăнмасть.
Шăпатанпа ăна та
Тăр шыв çине кăларсан
Иккĕшĕнчен кĕл юлать.
Ял халăхне хăратма,
Анкă-минке кăларма



Вĕрӳç ларать кукленсе,
Аллисене çĕклесе.
— Эй, аслисем, илтсемĕр,
Халăха ăс кĕртсемĕр!
Вĕсем паян тем тăвĕç,
Çылăх айне пулайĕç.
Каласшăнччĕ хĕрхенсе,
Мĕскер кĕтет вĕсене.
Сир!
Сир!
Сир!
Вĕрӳç чĕлхи çĕçĕ пек
Касать халăх чĕрине.
Ял халăхĕ хăраса
Вĕрӳç тавра пухăнать.
Ял халăхне аптратма
Вĕрӳç пуçлать юмлама.
Çĕре ӳкет ӳпĕнсе,
Сурчăккине сирпĕтсе.
Тăрать, сикет çӳлелле
Çуртсем урлă каçас пек.
Унтан пуçлать хăрушла
Куçне-пуçне вылятма.
— Эпĕ юмăç. Çӳлтисем,
Мана вăй-хал парисем,
Тытамака кăларса
Каларĕçĕ ак çапла:
«Кĕтмен-илтмен вăхăтра
Инкек пулать халăха».
Камран тетĕр? Каласан —
Ĕненместĕр... Улăпран!
Вăл ют çĕрте аскăннă,
Калай хунпа тĕл пулнă,
Чунне сутнă юххана,
Вил аш çиет унтанпа.
Хуйăх! Хуйăх! Халь пире

Пулăшсамăр, аслисем!
Улăп ӳсе ҫитсенех
Юхха пулать ҫиёнчех.
Ун чух сынна ҫиетех,
Чăваш тĕппе пĕтетех.
Ҫăлăнма ҫак асапран
Ан тухăр ман сăмахран.
Хуса ярăр Улăпа,
Ан пурăнтăр Чăвашра!
    Халăх шавлать, хăйкăшать,
Ҫав вăхăтрах хăтрашать.
Мĕнле пулса тухрĕ тет.
Ват амăшне хуйăх тет.
— Йывăр тесе амăшне
Чăтмалла-и ывăлне!
    Кăшкăраҫҫĕ ялтисем.
Вĕрӳҫ хыҫҫăн кайнисем.
    Тухатмăшсем вăрманта
Ял хушшинчи шăв-шавран
Шикленеҫҫĕ хăрасах.
«Ял халăхĕ хĕрӳре.
Итлемеҫҫĕ вĕрӳсе.
Шеллет суя Улăпа.
Амăшне те ҫавăнтах».
    Виҫ асамҫă васкаса
Пулса тăчĕҫ виҫ лаша,
Уранана кӳлĕнчĕҫ.
Ӳхлемешкĕн тытăнчĕҫ.
«Турхан» пулчĕ Ахăрьян.
Хăйне мăнна хунăран
Шуйттан ларчĕ ямшăка,
Сухаллине касăртса,
Яла ҫитрĕҫ шăнкравпа
Ял халăхне хăратса.
Ахăрьян «турхан» кăшкăрать,
Ял халăхне пăскăртать.



— Мĕншĕн эсир кăнтăрлах
Пĕтĕм ĕҫе пăрахсах
Хăтрашатăр, шавлатăр.
Темĕн те пĕр калатăр!
Сире кунта мĕн ҫитмест?
Харкашатăр йытă пек!
Мĕн-мĕн тетĕр? Ан шавлăр!..
Вĕрӳҫ кăна калатăр.
— Улăп пулнă тулайра,
Тухнă теҫҫĕ юххана.
— Улăп-юхха?!. Ай-ай-ай!
Ялта юхха! Ял пĕтет,
Ял хыҫҫăн ăрат пĕтет.
Ҫав юххана паянах
Хуса ярăр тулая!
Амăшне те хăвалăр.
Унта пуҫне вăл ҫитĕр! —
«Турхан» урать кашкăрла.
Сивĕ куҫне ҫавăрса,
Ҫав вăхăтрах ямшăкĕ
Чĕн пушшине ҫĕклерĕ.
Унтан ҫапла каларĕ:
— Эпир ҫакна куртăмăр:
Улăп сире тарăхса
Уй-хирсене ҫырмалать.
Кирĕшмете ĕшкĕртсе
Ҫиллентерсе ярать те
Пăрлă ҫумăр ҫутарать.
Ҫырмасене шыв тулать,
Унтан ейӳ пуҫланать.
Шывра тыр-пул путлансан
Выҫлăх кĕрĕ алăкран.
    Вată Чĕкеҫ халăха
Хирĕҫ калать тарăхса.
— Мĕншĕн эсир ачана
Хыт хăртатăр сăмахпа.

Ывăлăм ман ниxçан та,
Темле йывăр пулсан та,
Тăшмансене сутăнмасть,
Чăваш ятне вăл ямасть.
Чĕре сиксе. Шанатăп.
Хура пĕлĕт салантăр —
Тĕл пулатăп Улăппа,
Хамăн савнă ывăлпа.
Хура пĕлĕт салансан,
Çумăр çума чарăнсан,
Ял вĕçĕнчи алăкран
Ик çын кĕчĕ харкашса.
Пĕр-пĕрне тем каласа.
Иккĕшĕ те пĕр сăнлă,
Пĕр сăнлă та пĕр тумлă,
Çӳллĕшĕ те пĕр танах,
Калаççĕ пĕр саспах.
Халăх тăрать тĕлĕнсе.
Мĕн амакĕ ку вара?..
Иккĕшĕ те Улăп! Ма?!
Пĕр Улăпĕ макăрать,
Вĕçерĕнмешкĕн тăрăшать.
Тепри ăна паркалать,
Халăхпа вăл калаçать:
— Вăт çак, ман пек сăнлăскер,—
Мĕнле пулма пĕлнĕскер,—
Уй айлăмпе çӳрет те,
Сăнчăрĕпе çапать те
Çырма тăвать айлăмра,
Çумăр шывне пăтратса.
Тепре çумăр çусанах
Ейӳ каять таврана.
Шыв айĕнче тыр çĕрсен
Выçлăх пире пĕтерет.
«Турханпала» вĕрӳçĕ
Кăшкăраççĕ хĕрӳллĕ:



— Сирĕн умра ик Улăп.
Хăшĕ чăнни? Калатпăр:
Янкаканĕ — тухатмăш,
Çын шăммине кăшламăш,
Улăп каять тарăхса,
Халăх тăрать хăраса.
— Апла эпĕ тухатмăш,
Çын шăммине кăшламăш?
Ĕненместĕр пулсассăн,
Тен, çакăнтан туятăр?
Улăп сăхман кĕсйинчен
Йăшт! кăларать çут татăк,
Çав ялтăрса тăнинчен
Уяртать пек çанталăк.
Пĕр Улăпĕ çавăнтах
Пулса тăчĕ Шăпатан,
«Турхан» пулчĕ Ахăрьян,
Сехри хăпать Улăпран.
Тапса сикет вăл ялтан.
Шăпатанĕ — сар сăпса,
Вĕççе каять нăрласа.
Вата Чĕкеç Улăпа
Ыталаса чуптăвать,
Савса лăпкать çурăмран,
Шăппăн калать хăлхаран:
— Сана хăртрĕç сăмахпа,
Санпа пĕрле мана та,
Çавах эсĕ халăха
Сивĕ сăмах ан кала.
— Юрать,— терĕ ывăлĕ
Хăй амăшне кăмăллăн.
Ейӳ урса килнине
Улăп курчĕ çийĕнчех.
Ирсĕр усал сăнчăрне
Туртса тăсать — кирлĕ те.
Сăнчăр пулать пĕр çăмха,

Улӑп калать халӑха:
— Сӗм-сӗм вӑрман çумӗнчен,
Çӗн çырмасем пуçӗнчен,
Çавал хӗрне тухиччен
Çӑмха кустӑр ерипен.
Çӑмха кусса пынӑ май
Çырма пуçӗсем татлаççӗ.
Унти шывсем шарласах
Юханшывла юхаççӗ.
Улӑп тути йӑл кулать,
Çапла çӑмах вӑл калать:
— Сӑнчӑр тӑрать ункӑран.
Çӗр касӑлчӗ çӑмхаран,
Юханшывне çавӑнпа
Ункӑ[1] тейӗр кӑмӑлпа.
Сарӑ хӗвел таткинчен,
Хӗвел амӑш паниччен,
Вутӑшпала ун йӑхӗ
Хир таки пек тарчӗççӗ.
Аслӑ Чӑваш çӗрӗнче
Кӑвайт сунчӗ пур çӗрте.
Тавах Чӗкеç ачине,
Улӑп тесе чӗннине.

[1] Ункӑ — Чӑваш Республикинчи Аслӑ Çавала юхса кӗрекен юханшыв.



# *Вунвиççӗмӗш юрӑ*

## УЛӐП КУКАМАШӖ ПАТӖНЧЕ

***Чӗкеç мӑйлӗн ӗмӗтне пурнӑçлама хӑй пурнӑçне хӗрхенмест, вӑл вилет. Улӑп çӑмха хыççӑн çӗр айӗнче пурӑнакан кукамӑшӗ патне каять. Унта вӑл вӑй кӳртекен имçам ӗçет, ашшӗн кӗпе-тумтирне илет. Кукамӑшӗ ӑна ӑсатса янӑ чухне Çӗрпӳ паттӑрпа Сикпӑрçана хӗн-хуртан хӑтарма сӗнет.***

Ай-хай терӗç, мӗн терӗç.
Кӗрекене лар терӗç,
Алла курка тыт терӗç,
Шӑрттан касса çи терӗç.
Эй, ял-йышсем, тав сире!
Ирӗк парӑр-ха пире
Иртнӗ пурӑнӑç çинчен
Юрлама чун каниччен.
Улӑп киле таврӑнсан,
Апат çисе тӑрансан
Калаçнӑ тет хурланса,
Аслашшӗне асӑнса.
— Асатте хӑй килӗнчен
Вӑрӑм çула яриччен
Мана çапла каларӗ:
«Кукамуна кур терӗ».
Кукамай ман пурнать-ши?
Кукамая курасчӗ,
Кучченеçсем парасчӗ.

Шăрттан та пур, çăнăх та,
Шăрçа пуçлă çăпата.
Эп пĕлетĕп: ватлăхра
Ман сана халь пăхмалла.
Анчах тăшман таврара,
Ана ман тĕп тумалла.
Каçар, анне, ывăлна.
Пиллĕхне пар эс мана.
Эсĕ мана пиллесен,
Эпĕ пулăп пин çуллăх.
Санран пиллĕх илмесен —
Манра кун-çул çур çуллăх.
Кукамая курасчĕ,
Унпа самах хушасчĕ.
Карчăк йывăр сывларĕ,
Унтан çапла каларĕ:
— Чĕре татти пулсан та
Йывăр сана пулăшма.
Аçу пекех халăха
Юрататăн чунтанах.
Эп те çавах. Аçуна,
Турă хĕрĕ пулсан та,
Тăн çухатсах юратрăм.
Унăн хĕн-хур кураттăм,
Намăс кĕпе тăхнаттăм.
Юрать, аçу хĕрхенчĕ,
Маншăн турĕ ырă ĕç.
Качча илчĕ вăл мана,
Пурăнтăмăр юратса.
Сан кукаму ăстине,
Хăш вырăнта пурăннине
Пĕлекенни эпĕ çеç.
Татăлтăрах кун-çулăм,
Анне патне çитерĕп.
Пиллĕх сана, ывăлăм,
Чĕре татти — Улăпăм.



Манăн паян вилмелле,
Вилсен çĕре кĕмелле.
Уиччен сана ыр сунса
Хăварас-ха ĕç хушса.
Халех мана çăвăнма,
Кирĕксене кăларма
Мунча хут-ха васкаса.
Мунча кĕрсе тасалсан,
Шур пир кĕпи тăхăнсан,
Кĕмĕл çÿçе турасан,
Аллăмсене ласт сулсан
Пит аякран, инçетрен,
Çут çеçенхир леш енчен
Асар-писер çилпеле
Кĕмĕл тупăк килмелле.
Ман çавăнта выртмалла,
Çĕр айнелле путмалла.
Эпĕ путнă вырăнта
Тимĕр карта çавăр та,
Хурал ларсам çавăнта.
Темле хăруш пулсан та
Тимĕр карта ăшĕнчен
Ан кай висĕ талăкчен.
Висĕ талăк иртсессĕн,
Шăпчăк сасси илтсессĕн,
Эсĕ мана хăварсам,
Кÿлĕ енне уттарсам.
Унта сан пит çумалла,
Ман пата та пымалла.
Улăп кайрĕ хурланса,
Вĕри куççуль юхтарса
Пуçне тытрĕ аллипе
Хуйăх пусса илинпе.
Кайран чуние пусарса,
Чупа-чупа, васкаса
Муклашкасем пуçтарчĕ.

Мунча хутса çунтарчĕ.
Çитмĕл çичĕ хурăнтан
Милĕк çыхрĕ чăн малтан.
Кайран утрĕ васкаса
Алтăр илме мăн лаççа.
Мăн алтăрĕ пĕр хăех
Çирĕм патман таятех.
Такаин те пĕчĕк мар,
Тĕлĕнмелле пит катмар.
Çав такана шывĕнче
Ишме пулать кимĕпе.
Карчăк кайрĕ мунчана,
Ак пуçларĕ çапăнма,
Милĕкпеле пĕр кана
Вăл кантарчĕ ват шăмма.
Киленмелле çăвăнчĕ,
Алшăллипе шăлăнчĕ,
Кĕмĕл тура вăл илчĕ,
Çÿç турама тытăнчĕ.
Шурă кĕпе тăхăнчĕ,
Сар хĕвеле пуç тайрĕ,
Аллипеле лăст сулчĕ
Пăхса йĕри-тавралла.
Шăнкăр кăнтăр кунĕнчех
Хĕвел хăвăрт пытанчĕ.
Уяр тăнă çĕртенех
Çиçĕм çиçме тытăнчĕ.
Кĕр-кĕр кĕрлет аслати,
Пĕтĕм тĕнче кисренет.
Улăпсен мăн килкарти
Çил-тăвăлпа кисренет.
Ват юмансем авнаççĕ,
Çĕре пырса çапнаççĕ.
Таçтан, сăртсем хыçĕнчен,
Шăпăр сасси хутшăнчĕ.
Çиçĕм çиçрĕ ик енчен —



Кĕмĕл тупăк курăнчĕ.
Карчăк тĕлне çитрĕ те
Тупăк анчĕ çĕр çине.
Карчăк кĕрсе выртрĕ те,
Тупăк путрĕ çĕр айне.
Улăп сакăн хыççăнах
Хĕвеле хирĕç çаврăнать,
Ута-ута хуйхăрать,
Вĕри куççуль юхтарать,
Çапла сăмах вăл каласть:
— Тăван анне, тăван анне,
Халăхшăнах çĕре кĕтĕн,
Тăван анне, тăван анне,
Эс хушнă пек кунтан каятăп.
Кунта юлан эс пĕчченех.
Пÿминкесĕр. Каçарсамăр.
Анне, тăпру çăмăл пултăр,
Çăмăллăх мана санран килтĕр.
Шурăмпуç килсен тула тухăп,
Анчах унта сан сăну çук.
Вăрман хĕрринче куккук авăтĕ,
Анчах унта сан сассу çук.
Хура чĕкеç килĕ чĕвĕлтетсе,
Санăн чĕлхÿ унта та çук.
Хĕвел тухĕ хĕрелсе те,
Ун ăшшиниче сан ăшшу çук.
Улăп тимĕр туяпа
Тупăк путнă вырăна
Виç хут çĕре чĕрейрĕ,
Тимĕр карта çавăрчĕ.
Унăн вĕри куççулĕ
Юхрĕ ĕнтĕ тем чухлĕ.
Сылтăм куçран юхнисем —
Аслă Çавал пулчĕçĕ,
Сулахайран юхнисем —
Кĕçĕн Çавал ят илчĕç.

Тăлăх-турат хуйхине
Ниměнпе те виçме çук.
Çĕре путнă амăшне
Ним туса та чĕртме çук.
Е шуйттан, е эсремет
Хытă улать кашкăртан.
Тăлăх-турат сехрине
Кăларасшăн сассипе,
Тимĕр карта хăватне
Пĕтересшĕн вăл тем пек.
Анчах карта парăнмасть,
Усалсене çывхартмасть.
Арçурипе ват шуйттан
Хаярланса çитнипе
Ыткăнаççĕ мăн çăлтан
Ватă юман хушшипе.
Юмансене кăклаççĕ,
Пĕлĕт çине переççĕ,
Çил-тăвăллă пулаççĕ,
Кӳлĕ çийĕн вĕçеççĕ.
Асамăçĕ пĕр енче
Тиясĕ пулма ĕлкĕрчĕ.
Тимĕр карта умĕнче
Шавламашкăн тытăнчĕ.
Тинĕс хумсем кăларса
Çĕре çапса ватĕччĕ.
Картана йăлт салатса
Карчăк ӳтне çăтĕччĕ.
Тимĕр карта патĕнче
Тĕнче тăрать кĕрлесе,
Тимĕр карта варринче
Улăп ларать тĕлĕнсе.
Кун иртет те каç килет,
Виçĕ талăк та çитет.
Таçтан питĕ аякран
Автан сасси илтĕнет.



Часах тимĕр картаран
Мĕнпур усал сирĕлет.
Ылтăн хĕвел çутатса
Ашăтмашкăн тытăнчĕ.
Кайăк-кĕшĕк янратса
Юрламашкăн пуçларĕ.
Пирĕн Улăп та часах
Кил еннелле талпăнчĕ.
Килне çитсен çавăнтах
Çĕнĕ тумтир тăхăнчĕ.
Çăпатипе шăрттанне,
Пур пек салма çăнăхне
Кутамккана чикрĕ те,
Алла туя тытрĕ те
Улăп тухрĕ çул çине,
Анчĕ кӳлĕ хĕррине.
Кĕпер çине куклеичĕ,
Умри шывран тĕлĕнчĕ:
Кӳлĕ шывĕ чӳхенет,
Кассăн-кассăн çиçĕнет.
Алă çине юхăнать,
Улăп питне хăй çавать.
Кĕсле кĕвви янрасан,
Шур алшăлли кăларсан,
Улăп унпа шăлăнсан
Чиper каччă вăл пулать.
Çурхи сарă хĕвелле
Сăнĕ-пичĕ курнать-çке,
Çӳлти кăвак нĕлĕтле
Кăвак куçĕ сунать-çке.
Хирти кăлкан евĕрлех
Мамăкланчĕç çӳçĕсем,
Яштак хурăн вуллиллех
Курăнаççĕ аллисем.
«Ак çак аннен вилтăпри,
Тăпри çăмăл пултăр-и»,—



10 Улып

Тере Улăп ăшĕнче
Вут пек мăкăнь умĕнче.
Мăкăнь чечек сарăлчĕ,
Ылтăн арча курăнчĕ.
Улăп кăштах тĕкĕнчĕ.
Ылтăн арча уçăлчĕ.
Улăп пăхать арчана,
Курать пурçăн çăмхана.
Илме тăрать вăл ăна,
Çăмхи кусать вăрмана.
Пурçăн çăмха йĕрĕпе
Улăп утрĕ вăрмана.
Çăмха пырать сиккипе.—
Ăçтан тытан халь ăна?!
Вată юман кутĕнче
Çăмха тăпах чарăнчĕ.
Темле шăтăк умĕнче
Иккĕ-виççĕ çаврăнчĕ.
Шăтăкалла кĕриччен
Çиçĕнчĕ вăл çиçĕм пек.
Çăмха хыççăн Улăп та
Кĕрсе кайрĕ çавăнта.
Çĕр айĕнчи çулпала
Улăп утрĕ малалла.
Кайсан-кайсан пĕр çĕрте —
Çĕрпӳрт унăн умĕнче.
Шак шаккасан алăкран
Уçăлать вăл сассăрах.
Пӳрчĕ таса, тĕттĕм мар.
Пĕренисем ылтăнран.
Пӳлĕм урлă касрĕ те,
Сас илтĕнчĕ тĕпелте.
Улăп усрĕ алăкне,
Ват юманран тунине.
Çут пӳлĕме кĕчĕ те,
Çара пуçăн тăчĕ те



Курах кайрĕ: сак çинче,
Хаклă чулран тунниче,
Ларать карчăк, ватăскер,
Юр пек шурă çӳçлĕскер.
— Мĕнле, ăçтан, мĕн майпа
Эсĕ килтĕн ман пата? —
Карчăк ыйтрĕ ват саспа.—
Çын килменни, чăнах та,
Иртрĕ пуль-ха пин çулах.
Улăп карчăк умĕнче
Шăппăн-шăппăн пуç таять.
Унтан карчăк умĕнче
Çапла сăмах вăл вакласть:
— Çĕре кĕчĕ ман анне,
Йывăр мана пĕччене.
Ун вилтăпри купиччен
Кĕске вăхăт хушшинче
Мăкăнь чечек çитĕнчĕ,
Тĕлĕнмелле çурăлчĕ.
Çавă чечек ăшĕнче
Ылтăн арча курăнчĕ.
Эпĕ пăхрăм арчана —
Курах кайрăм çăмхана.
Илме тăтăм та ăна —
Çăмха тарчĕ вăрмана.
Çăмха хыççăн килтĕм те
Çитсе кĕтĕм çак пӳрте
Кукамайпа тĕл пулма.
Ана курман пулсан та
Унпа ларса калаçма
Мана хушрĕ асатте.
Вăл пит вată халь ĕнтĕ,
Çутă вара ăстăнран.
Плиска ятлă, ват ăсчах.
— Сан асласу Плиска-и?
Чăн та эс ман кăкран-и? —

Карчăк ӳкрĕ хыпăнса,
Улăп кайрĕ савăнса.
— Ах, кукамай, кукамай!
Кунта лайăх çитнĕ май
Кучченеçе эс тыт-ха.
Акă шăрттан, çăпата,
Салма валли çăнăх та.
Улăп сисрĕ: кучченеç
Кукамăшне кăмăллă.
Унпа ĕнтĕ сăпайлă
Калаçмалли юлчĕ çеç.
Кукамăшĕ кăшт тăрсан,
Шур çĕлĕкне тăхăнсан
Кушаккине йыхăрчĕ,
Арча илсе тухтарчĕ.
Арчи ларать çуталса
Çурхи сарă хĕвелле.
Улăп тăрать хумханса
Çул хĕрринчи чечекле.
Ылтăн арча уçăлать
Кĕмĕл кĕсле кĕввипе,
Карчăк тути йăл кулать
Арча уçă тăнипе.
— Аннӳпе сан аçуна
Пулăшнă эп яланах.
Ах, сана та, ах, ачам,
Йывăр килсен манас мар.
Вара тепĕр самантран
Чаплă ылтăн арчаран
Ылтăн уçă кăларать.
Кайран, темĕн калаçсан,
Улăп патне çывхарсан,
Хăй шухăшне вăл калать:
— Эп çакăнта, çĕрпӳртре,
Пин-пин çулсем пурăнан,
Çĕр айĕнчи тĕнчере







Ятлă-сумлă шутланап.
Хура халăх куççульне,
Чăтма йывăр хĕн-хурне,
Тумлам-тумлам пуçтартăм,
Çĕр кăшăллă пичкене
Яра-яра тултартăм.
Унтан вара вĕсене
Çĕр çул хушши пăтратрăм,
Вăй илмешкĕн çавсене
Нумай çĕр çул кирлĕччĕ,
Йўççе çитсен ĕçтерме
Кирлĕ çынна кĕтнĕччĕ.
Куççуль сиксе йўçнччен
Пысăк нўхреп чавтартăм,
Тăшман тавраш сиснччен
Ылтăн çăра тутартăм.
Куççульпеле хуйăхне
Йўççен ырă ĕмĕтпе
Лартрăм вăрттăн нўхрепе,
Унтан нўхреп алăкне
Вăт çак ват çын аллипе
Питĕртĕм эп уççипе,
Унăн ылтăн уççине,
Уйăх çурă тунине,
Пытартăм çак арчана.
Питĕрнĕ чух чунтанах
Сăмахпала хытарсах
Каларăм эп ак çапла:
«Ылтăн арча, хуçа пул,
Ан уçăлсам тăшманшăн.
Эс сыхлакан — хаклă мул
Питĕ кирлĕ чăвашшăн».
Чăваш халăх куççулĕ,
Чăтма йывăр хĕн-хурĕ,
Йўççе вăйне илсенех,
Ĕçме вăхăт çитсенех



Ĕçтересшĕн эп ăна
Хам суйланă çамрăка.
Çав куççуле ĕçекен,
Ялан ăспа çўрекен
Тўрĕ чунлă пулмалла,
Чĕри тапмн пуличчен,
Таса куçĕ сўниччен
Ун халăхшăн тăмалла.
Ана ĕçсен çавăнтах
Туймалла çав самантрах
Хура халăх хуйхине,
Вăйĕ пин хут ўснине.
Эсĕ ун пек пулассн
Кучченеçрен курăнчĕ.
Илсем, ачам, çăраççи,
Вăл сан енне пăрăнчĕ.
Ятлă нўхреп пулсан та,
Ăна кайса уçар-ха.
Сан вăйлă çын пулмаллах,
Ĕçтерем çав имçама.
Йўçек куççуль-имçама
Улăп ăсрĕ чĕрепе.
Ăна ĕçрĕ ерипе.
Сывламасăр, тĕппипе.
- Юнăм кайрĕ вĕресе,
Ашăм килчĕ пĕçерсе.
Чĕремре тем уçăлчĕ,
Тăнăм-пуçăм çуталчĕ.
Çав пуçăмри çутăпа
Куççăрах эп курмалла,
Туйăмпа та, ăсăмпа
Хăватлантăм пулмалла.
— Ĕç-ха тепре тĕппипе,
Хам алăпа ăснине! —
Терĕ карчăк Улăпа
Аш кăмăлпа лăпкаса.

Кукамӑшӗ паннне
Улӑп ӗҫет тӗппипе.
— Ака́,— тет вӑл кӑшт тӑрсан,
Икӗ хулне вылятсан,—
Вай хутшӑнать вӗҫӗмсе́р.
Халь шуйттана ҫӗнтерен.
— Ӗҫ-ха эсӗ ҫакна та,—
Карчӑк калать Улӑпа.
Тепӗр чӗрес тултарса
Ӗҫрӗ Улӑп имҫама.
Ӗҫсенех вӑл ӳт хушса
Ак пуҫларӗ саралма.
— Халь эп ӗнтӗ, кукамай,
Калатӑп-ха сӑмах май,
Аркататӑн сӑртсене,
Вуник пуҫлӑ ҫӗлене.
Кукама́шӗ Улӑпа
Пӳлчӗ ырӑ сӑмахпа:
— Ҫитӗ, урӑх кирлӗ мар,
Ӳсетӗн-ха, ӳсетӗн,
Пулӑн вӑйлӑ та патвар,
Ват юманран иртетӗн.
Ӗҫӳ-тӑну ӗмӗрлӗх
Пултӑр мӗнпур халахшӑн,
Паттӑр ва́ю вӗҫе́мсӗр
Ӑултӑр тӑван ҫӗршывшӑн.
Пиллӗх сана ыр курма,
Ыр ӗҫ туса пура́нма.
— Ах, кукамай, тавтапуҫ,
Халӑхшӑн ман ҫавра пуҫ,—
Терӗ Улӑп хумханса,
Туна тытса сӑмахпа.
Ылтӑн сарна пӳлӗмрен,
Ман капан пек ҫӳпҫерен
Карчӑк пачӗ Улӑпа
Тӗрленӗ шур сӑхманпа
Шӑрҫа пуҫлӑ ҫӑпата
Мерчен ҫиҫет ҫаванта.
— Ку сӑхманна ҫӑпата
Каяҫҫӗ-и кӑмӑла?
Весем аҫун. Тахҫанах.
Эс ҫуралман вӑхӑтрах.
Вӑл хӑварчӗ ҫакӑнта
Упрамашкӑн ман пата.
«Кирлӗ ҫынна пар»,— терӗ,
Сана парап вӗсене.
Ӑывӑр чухне иккӗш те
Сана сыхлӗҫ пур енчен.
Улӑп тухса кайиччен
Кукамӑшӗ шур ҫӳҫне
Кассанах пуҫ тӳпиччен
Ал лаппине хучӗ те
Кашни ҫӳҫне шутларӗ,
Унка́ласа майларӗ.
Унтан пӗчӗк хутаҫа
Персе чиксен вӗҫене
Ҫакрӗ Улӑп мӑйӗнчен.
Пӗрле ларчӗҫ юнашар
Ҫапла сӑмах каличчен:
— Ҫулу пулать тикӗс мар,
Хӗн-хур куран пит нумай.
Ҫӳҫ пӗрчисем хутаҫра
Ҫитмӗл ҫиччӗ, ан мансам.
Вӑю пӗтсе ҫитсенех
Ҫунтар пӗрне хутаҫран.
Ҫав ҫӳҫ ҫунса пӗтсенех,
Эс пулсассӑн таҫта та,
Ҫӳҫ пӗрчийӗ асамран
Вӗҫсе ҫитет аякран.
«Ват кукамай, пулӑшсам,
Хура халӑх, ан мансам»,—
Тесе чӗн те эс мана,

Хăвăрт пулăшăп сана.
Халăхпала пĕр пулсан
Никам айне лекместĕн.
Ман пиллĕхрен тухмасан
Ялан сывă çӳретĕн.
Çунмăн эсĕ вутра та,
Путмăн эсĕ шывра та.
Чăваш халăх хушшинчен
Виçĕ паттăр тухмалла,
Çав виç паттăр шутĕнчен
Эс чи вăйли пулмалла.
Çĕрпӳ паттăр тыткăнра,
Ăна сан халь çăлмалла.
Сикпăрça нит аякра,
Сан ăна та тупмалла.
Çĕрпӳ паттăр тамăкра,
Туçи сăрчĕ айĕнче.
Нумай пин çын асапра
Халĕ çав сăрт айĕнче.
Çав сăмахпа Улăпа
Карчăк ячĕ ăсатса.
Пысăк вăрăм утаспа
Улăп утрĕ ярăнса.



# *Вунтăваттăмĕш юрă*

## УЛĂП ÇĔРПӲ ПАТТĂРА ÇĂЛНИ

***Улăп Туçи сăрчĕ айĕнче виçĕ пуçлă çĕленпе çапăçса ăна аркатать. Çĕрпӳ паттăр сăнчăрта виçĕ ĕмĕр хĕн курать. Ăна Улăп сăнчăртан хăтарать. Иккĕшĕ Туçи сăртне йăлантараççĕ, унти халăха тыткăнран хăтараççĕ.***

Караппăлсем Капкасран[1],
Çӳллĕ çăртсем тăрринчен,
Эпир килнĕ Актайран,
Аслă Çавал хĕрринчен.
Унта, çавра лапамра,
Ӳсет лапсăр хурама
Паха чăваш çĕрĕнче.
Хулисенче, ялсенче,
Вăрманĕнче, уйĕнче,
Пин-пин çырма-çатринче
Ун пек йывăç халь çук та...
Ват хурама пин çулта,
Пĕччен ларать вăл уйра.
Аякранах курăнать,
Çын пырсассăн савăнать.
Нумай тӳснĕ пурнăçра,
Курнă Улăп паттăра
Çĕр тĕпĕнчен тухнине.

[1] Капкас — Кавказ.

Тухсан мĕскер тунине.
Улăп тухсан çĕр çине
Савăнăçлăн çиçнĕ те
Ват хурама умĕнче
Тĕрĕслене хăй вăйне.
Çĕр çул ӳснĕ юмана
Тăпăлтарнă вăшт! кăна.
Тураттинчен тасатсан
Тукшан тунă çавăнтан.
Йăтса çапать тукшана —
Аври кăна алăра.
Хăй те кĕтмен хушăрах
Ӳссе каять шутсăрах:
Сĕм вăрмантан çӳллĕрех,
Калай сăртран пĕчĕкрех.
Уй тӳпине çитсенех,
Тумланас шут килсенех,
Шур чул çине ларать те
Асăнать вăл амăшне,
Çăпатине кăларсан
Ура сырать васкасах.
Çăпати ун — сар чĕнреп.
Пуçĕсене тул сичен
Шăрçалана мерчене.
Илемлетнĕ кĕмĕлпе.
Сăхманне вăл тăхăнсан
Йăл-йăл кулса савăнать.
Çав сăхмана хулара
Çитмĕл çĕвĕç çĕленĕ.
Сар пикесем улахра
Пурçăн çиппе тĕрленĕ.
Тĕлĕнмелле тĕррипчен:
Аслă Атăл хум ярать,
Вĕт пулăсем çавăнтах
Вăй выляççĕ савăнсах.
Сахман умне, пĕр тĕле,



Пин-пин тĕслĕ çиппеле
Эрешленĕ хир сăнне,
Чăваш ялĕн илемне.
Унта хĕвел тухнă чух
Сарă автан автать-çке,
Кĕтӳ иртсе пынă чух
Пике кулса тăрать-çке.
Шурă сăхман аркинче
Чĕмпĕр хули курнать-çке,
Кермен лавкка хӳттинче
Хĕрпе каччă тăрать-çке.
Яштак каччă аллинче
Пурçăн тутăр вĕçет-çке.
Пар пек пике чĕринче
Савнăç кĕрлет тинĕс пек.
Çĕрпӳ паттăр тыткăнра
Сисет Улăп утнине,
Ал-уринчи сăнчăра,
Аллă патман туртнине,
Турта-турта татасшăн,
Сăрт айĕнчен тухасшăн.
Анчах сăнчăр парăнмасть,
Татăлма та шутламасть.
Çĕрпӳ паттăр кăшкăрса
Чĕнет сăлма тыткăнран,
Улăп çавна тăиласа
Хăпарать пĕр лапамран.
Улăп каллех юмана —
Пин çулхи утамана —
Тăпăлтарчĕ ним те мар.
Тукшан турĕ çавăнтан.
Тĕрĕслерĕ — пит аван!
«Тукшан пулчĕ алă май», —
Тесе утрĕ сăрталла.
Улăп тăвать пĕр утăм,
Хыçа юлать çич çухрăм.

Персе çнтет сăрт патне,
Анмалла ун сăрт айне.
Анчах шăтăк курăнмасть,
Алăк-хапха палăрмасть.
Улăп тарăн шухăшра
Ларать пысăк чул çине.
Чулĕ путать йывăрпа,
Шăтăк пулать хайхине.
Сăрт айĕнчен чашкарса,
Виçĕ пусне касăртса
Тухать çĕлен виркĕнсе,
Вут-çулăма сирпĕтсе.
Вăл тухсанах Улăпа
Çунтармашкăн ыткăнать,
Чанкăр-чанкăр сăнчăрпа
Яваклама тытăнать.
Пусĕсене сулкалать,
Шăлĕсемпе шак шаккать,
Шăхăрать те ахăрать,
Улăпа вăл кăшкăрать:
— Сана никам йыхăрман,
Ма килтĕн-ха эс, тăмсай?
Эс кунта ним çухатман,
Мĕн çӳретĕн шăршласа?
Çĕлен çӳрет чашкăрса
Улăпа кĕç çăтасла,
Вут-хĕм сапать алхасса
Пурте çунса каясла.
Анчах çав вут-çулăмран
Улăп ним те шикленмест,
Кукамăш пил панăран
Шур сăхмана вут тивмест.
Çапать çĕлен Улăпа
Çитмĕл хăлаç хӳрипе,
Улăп ăна тарăхса
Сирсе ярать аллипе.





Тукшанĕ ват юманран,
Вăшт çĕкленет аванран.
Тукшан анать шăхăрса,
Çĕлен пусне лапчăтса.
Улăп вилнĕ тăшмана
Сирсе ярать аякка,
Кĕрсе кайма сăрталла
Час тасатать шăтăка.
Сăрт тĕпнелле аннă чух
Хĕрĕх алăк уçăлать.
Тĕпне анса çитнĕ чух
Хĕрĕх алăк хупăнать.
Аялта, сăрт кукринче,
Симĕс çулăм варринче
Çĕрпӳ паттăр йынăшать.
Çавах паттăр мăн сăрта
Йăтса тăрать çурăмпа.
Ялкăшакан çулăма
Сӳнтересшĕн тар такса.
Çĕрпӳ паттăр Улăпа
Кĕтсе илет сăмахна:
— Ялкăшакан çулăма
Хăватăм çук сӳнтерме.
Çурăм çинчи сăртăма
Вăйăм çитмест тӳнтерме.
Ан тив-ха вут-кăвара,
Аркатмашкăн тăхта-ха.
Ялкăшакан кăварсем —
Вĕсем пурте этемсем.
Мана çăлма çакăнта
Вĕсем килнĕ çак сăрта.
Тимĕр тылă кашнинне
Сӳслентернĕ ӳт-пĕвне.
Халĕ вĕсем çунаççĕ.
Анчах çунса пĕтмеççĕ.
Ман пек асап кураççĕ.

Тăшман тарçи пулмаççĕ.
Мана çăлас тесессĕн
Çак сăнчăра татсамччĕ.
Ана татса персессĕн
Сăрта тĕртсе ярсамччĕ.
Улăп паттăр ик алпа
Ярса илчĕ сăнчăра,
Ана мĕнпур вăй-халпа
Вăл татасшăн туххăмра.
Анчах сăнчăр таталмасть,
Çип пек пулса тăсăлать,
Улăп ăна пăрахмасть,
Турта-турта çăмхалать.
— Эх, халь хачă тупасчĕ,
Касасчĕ те татасчĕ,—
Терĕ Улăп аптраса,
Çăмхана хыт тарăхса.
— Хачă кирлĕ пулсассăн
Чавсам çĕре аллупа,
Пĕр ик-виç шит чавсассăн
Курăн ăна куçупа.—
Таçтан сасă илтĕнчĕ,
Çĕр кисреннĕн туйăнчĕ.
Улăп сасă илтсенех
Хăй умнелле пĕшкĕнчĕ.
Умри çӳппе сирсенех
Çĕрпӳ паттăр кăшкăрчĕ:
— Сасă сана улталать,
Вăл халь санран мăшкăллать!
Унта хачă тупаймăн,
Тимĕр тылла курайăн.
— Хачă ăçта выртнине
Эп пĕлетĕп халь тинех,—
Терĕ Улăп вăшт тăрса,
Сасă енне çаврăнса.
Вăл аптраса тăнăран



Такам кулма тытăнчĕ,
Тусан вĕçсен шăтăкран
Вată Тиврс курăнчĕ.
Тиврс ларать çĕр çинче
Капмар шур чул хушшинче,
Хӳрипе тек пăркалать,
Çавра çилсем кăларать.
Улăп çĕре чавас пек
Хăй умнелле пĕшкĕнет,
Тиврс кĕçех ташлас пек
Хуçкаланма пикенет.
Тылă çине утланать,
Шăлне йĕрме тытăнать,
Улăн патне çывхарать,
Ана хулран çакăнать.
Улăп вată Тиврене
Ярса илет хулĕнчен,
Çăмхаланă çиппине
Сӳтет кирлĕ таранччен.
Чăркать çиппе Тиврене
Унтан çăмха тăвасла,
Тиврс сикет çӳлелле
Чулран хăйăр пуласла.
— Айта çĕр чав! Чавмасан
Пуçна çурап тукшанпа,
Халех хачă тупмасан,
Тытса тыллан тылăпа.
Тиврс чавнă çĕр çинче
Улăп курать пит чипер
Вăрăм хачă выртнине,
Ана илет аллипе.
Çĕрпӳ çинчи сăнчăра
Улăп касать хачăпа,
Тиврене хыт тарăхса
Ыткăнтарать тапкăпа.
Тылă патне вăлваскать,

Ана çапса аркатать,
Туçи сăрчĕ çавăнтах
Икĕ пая уйрăлать.
Çĕрпӳ паттăр пĕр пайне
Йăвантарать пĕр енне,
Улăп паттăр теприне
Сирет айлăм хĕррине.
Туçи сăрчĕ йăвансан
Сӳнет тамăк вучĕ те,
Çĕрпӳ паттăр сас парсан
Вутран çынсем пулчĕç-çке.
Улăп Çĕрпӳ паттăрпа
Хăпарчĕçĕ сăрталла,
Кайран уçă сасăпа
Вăл каларĕ ак çапла:
— Туçи сăрчĕ тĕпĕнчен,
Çунакан вут вырăнчен
Чул пуçтартăм — пĕр ывăç,
Вăтăр иккĕ, ан манăр.
Вĕсем чунлă. Тавтапуç!
Çуннă-çуннă нумай çул —
Пулса выртнă катăк чул.
Мĕн чул асап чăтнă пуль!
Пурте курăр çавсене,
Ывăтатăп кай енне.
Çак вăрманлă çĕр çине
Улăп печĕ чулсене
Сĕм-сĕм вăрман хушшине
Сапаланма вăрманта.
Улăп тăчĕ шутласа,
Чулсем çинчен пулмалла.
Сăмах тăсрĕ ак çапла:
— Чулсем ырă чунлă та
Хăйсем ӳкнĕ вырăнта
Çăлкуç пулĕç юхăнма.
Çав та пултăр малашне:



Тăр шыв хĕре килĕштĕр,
Унтан выртса шыв ĕçтĕр,
Çав вырăнтах çĕр кастăр,
Вăл каччăпа тĕл пултăр,
Пĕр-пĕрне юратчăр,
Çав вырăна ял лартчăр,
Çĕнĕ ăрат çитĕнтĕр,
Паттăр ялсем ку теччĕр.



# *Вунпиллĕкмĕш юрă*

## УЛĂП СИКПĂРÇАНА АСАМЛĂХРАН ХĂТАРНИ

***Кăвак хуппи çиçет.***

***Улăп кăвак хуппинчен Сикпăрçана тупса пама ыйтать. Акăш кӳлле чăмать, ун хыçĕнчен караппăл та тинĕс кайăк пулса ыткăнать. Улăп тинĕс кайăкне чупма персе вĕлерет, акăша хулпуççи урлă перет, укран пике пулать. Пике Улăпа Сикпăрçана тупма пулăшать, таврари ялсене, хулана, çынсене асамлăхран хăтарать.***

Путĕр, путĕр путене
Ясмăк ани вĕçĕнче.
Теньел ялĕ пуçĕнче
Улăп ларать пĕчченех.
Улăп ларнă вырăнта
Паллă юлать пусăрнса.
Кут вырăнне лапам тен,
Пĕç вырăнсем — сырмасем.
Ай, тупере мĕн пулчĕ?
Кăвак хуппи çиçĕнчĕ!
— Кăвак хуппи, илтсемччĕ,
Сикпăрçана тупасчĕ! —
Улăп ыйтрĕ çиййĕнчех
Йăлтăртатса сӳниччен.
Кăвак хуппи хыçĕнчен
Хĕвел тухма тытăнчĕ,
Хасар тăвĕ хыçĕнчен
Пĕр хуракăш курăнчĕ.



Кайран, кăштах ярăнсан,
Кӳлĕ çине лашт ларчĕ,
Кӳлли хумсем кăларса
Кăпăкланма тытăнчĕ.
Çав вăхăтрах инçетре
Караппăл çил кастарать,
Хĕм кусĕпе тӳперен
Кӳлĕ çинче тем шырать.
Сисмен-кĕтмен хушăрах
Караппăлĕ вăштăрах
Кӳлĕ çине ыткăнать,
Хуракăша тапăнать.
Хуракăшĕ ыткăнса
Чăмать кӳлĕ тĕпнелле,
Шыв айĕпе ярăнса
Ишет хăмăш патнелле.
Караппăлĕ самантрах
Пулчĕ тинĕс кайăкĕ,
Акăш хыççăн васкаса
Кӳлĕ тĕпне ыткăнчĕ,
Акăш çулне татрĕ те
Калать сăхса пуçĕнчен:
— Хăвна пусса сутарсан,
Кирĕшметпе çывăрсан,
Ун еркĕнĕ эс пулсан
Асаплăхран хăтălan.
— Кунни валли кунĕ çук,
Киревсĕре вилĕм çук,—
Тет те Улăп çилленсе
Шур чул илет пĕшкĕнсе.
Вăркăнтарать шур чулне
Киревсĕре тĕллесе.
Тинĕс кайăкĕн пуçне
Çав чул татать çиçкĕнсе.
Хуракăшĕ тĕлĕнсе
Пăхать Улăп еннелле,

Унтан йăр-йăр ишет те
Васкать каччă еннелле.
— Ыр çын тăвать ырлăхне,
Усал ярать шырлăхне.
Мана çăлтăн вилĕмрен,
Тавах сана чĕререн!
Пуçу урлă, тархасшăн,
Мана пер-ха çĕрелле.
Эпĕ сана çавăншăн
Ĕмĕр усрăп чĕрере,—
Терĕ Акăш Улăпа
Кĕçех йĕрсе ярасла.
Хуракăша пуç урлă
Улăп печĕ хăй майлă,
Унтан пăхрĕ çаврăнса,
Хуракăша шыраса.
Умра тăрать пĕр пике,
Сăнран пăхма пит хитре:
Пăхать — сарă хĕвел тен,
Пуплет çурхи чĕкеç пек,
Ылтăн çĕлĕк пуçĕнче
Çунать сарă чечекле.
Пилĕк таран çивĕчĕ,
Тытса пăхас килмелле.
— Кам хĕрĕ эс, хăш енчен,
Акăшчĕ эс — ма ун пек? —
Ыйтрĕ Улăп сар хĕртен
Паллашасси килнĕрен.
— Патша тетчĕç аттене.
Арпат хĕрĕ, йĕкĕт, эп.
Халь вăл пĕтĕм йăхĕпех
Шыв тĕпĕнче чулланнă,
Унта выртса пĕтĕмпех
Шит хулăнăш мăкланнă.
Илтнĕ пуль эс: çĕр çинче
Чуллă сăртсем хушшинче



Пурнать ирсĕр Кирĕшмет.
Чавса тăршшĕ ÿсĕнскер!
Вăт çав мана аисăртран
Хыт юратса пăрахать,
Юратупа анрашсан
Мăшăрланма хапсăнать.
Пĕррехинче уявра,
Ĕскĕ пынă вăхăтра,
Кирĕшмете як çапла
Эп каларăм мăшкăлла:
«Акăш сĕтне ĕçтерсен,
Темтепĕрсем çитерсен
Сана качча тухатăн,
Манпа савнăç куратăн».
«Юрать»,— терĕ кăшкăрса,
Сив куçĕпе шăтарса.
Симĕс куçĕ ман чуна
Пăрлантарчĕ çавăн чух.
Тăсрĕ ирсĕр аллине,
Чĕнсе илчĕ аттене:
«Хĕрне мана парсассăн
Пыл-çу çинче пурнатăн,
Килĕшместĕн пулсассăн
Ĕмĕр хĕн-хур куратăн».
Атте хăйĕн чĕппине,
Хаклă чĕре таттине,
Кирĕшмете памарĕ,
Ун хуньăшĕ пулмарĕ.
Вара виçĕ кунтанах
Ана качча тухмантан
Ват Кирĕшмет аттене
Чуллантарнă йăхĕпе.
Эп ун çинчен пĕлтĕм те
Питрен чаврăм ирсĕре,
Унтан суртăм куçĕнчен
Пĕр куçне шур иличчен.

«Мана кача тухманшăн,
Кусран хăйса сурнăшăн
Çавра кӳлĕ туличчен.
Ху хуракăш пуличчен
Пăрлă çумăр ислеттĕр,
Сивчир куллен чĕтреттĕр», —
Терĕ мана юнаса
Ват Кирĕшмет тулашса.
Унтан урнă анрашка
Вирхĕнтерчĕ малалла.
Яманак мăн кӳллине[1],
Тăрна куç пек тасине.
Пăрлă çурçĕр тинĕспе
Пĕрлештерчĕ тĕшмĕшпе.
Пăрлă çумăр пĕлĕтне
Хуса килчĕ çак енне.
Кӳлĕ тавра çак сăрта
Вырнаçтарчĕ çурçĕрте.
«Кӳлĕри шыв çакăнта
Типмĕ, — терĕ, — ĕмĕрте».
Вăхăт нумай иртсен те —
Куç умĕнчех Кирĕшмет.
Ун асамлă туйи те
Куçа çиет — сирĕлмест.
Халь те янрать хăлхара
Ун сăмаххи: «Пурнăçра
Çурçĕр енчи мăн сăрта
Куçараймĕ никам та.
Çавăнпа та эс кунта,
Хуракăшĕ пулан та,
Пин çул ишĕн хĕн курса,
Вĕри куççуль юхтарса.

[1] Яманак кӳлли — Чăваш Республикин Красноармейски районĕнчи Яманак ялĕ патĕнчи кӳлĕ. Энĕ ача чухне пăрлă çумăр çусан, çав çумăра Яманак кӳлличчен тухнă тетчĕç.



Мĕншĕн тесен çĕр çинче.
Этем йăхĕ хушшинче,
Сăрт куçармăш çуралман.
Анлантăн-и эс çавна?
Çуралсан та ним те мар.
Маншăн халь вăл — тьху анчах!
Мĕншĕн тесен çак сăртран
Ним палăрман алăкран
Çитмĕл тĕслĕ чир тухать,
Чиртен паттăр антăхать.
Кайран кунта мур пулать,
Çав паттăртан шăм юлать».
— Ан макăр-ха кулянсах.
Сар хĕвелĕ пире те
Ашăтĕ-ха ăшшипе, —
Терĕ Улăп пикене
Утнă чухне сăрт енне.
Сăрт айнелле тухсанах,
Ейӳ урлă каçсанах
Çурçĕр енчи мăн сăртран
Ним палăрман алăкран
Çитмĕл тĕслĕ чир тухать,
Чир Улăпа хыт туллать.
Амăш пилĕ Улăпра
Пин çуллăха. Çавăнпа
Чир-чĕр ăна аваймасть,
Ун кун-çулне хуçаймасть.
Тарăхнипе алхасса,
Тăман пулса капланса,
Мур карчăкне шыраса
Чирсем вĕçрĕç ярăнса.
Улăп çуллĕ мăн сăрта
Хулпуççипе тĕкĕнет.
Тĕртсен-тĕртсен вăл ăна
Хăй вырăнчен сиктерет.
Кӳлĕ тĕпĕ типиччен

Каштах ларса вăл канать.
Кÿлĕ тĕпĕ тнпсенех
Хĕрлĕ йытă куранать.
Улăп умне çитсенех
Вăл Улăпа тапăнать.
Улăп йытта ĕнсинчен
Ярса тытать сисиччен.
Йытă снкет хăтăлма,
Шăпăр чĕлхи[1] калама.
Улăп пнтĕ тарăхать.
Йытта лайăх паркалать.
Пилеше Улăп кăклать,
Унпа йытта хăмăтлать.
Йыттн пилеш-хăмăта
Хывса пеме хăтланать.
Пилеш вăйлă карчăкран.
Йыт тĕшмĕшне чакарать.
Хĕрлĕ йытă хĕмленет,
Вут-хĕм унтан сирпĕнет,
Йăваланать, улшăнать.
Карчăк пулать йытăран.
Карчăкăн куç харшисем —
Çип çĕленсем — саррисем.
Тимĕр сенĕк — чĕрнисем,
Чармакланса кайнисем.
Пиçен тейĕн çивĕтне.
Хăлхи вара — хулах пек.
Çип çĕленсем Улăпа
Пит-куçĕнчен сăхасшăн,
Касăрăлса, явăнса
Ана майран йăвасшăн.
Анчах Улăп усала
Янклаттарать хăлхинчен
Анкă-минке тухиччен.

[1] Шăпăр чĕлхи — юмăçсен чир-чĕр сармалли вĕрÿ-суру чĕлхи.



— Кала! Кунта, юшкăнра,
Çĕртен мĕнле паттăра?
Мур карчăкĕ хăраса
Çапла калать Улăпа:
— Кунта выртать Сикпăрçа.
Кирĕшмет ăна тахçанах
Чуллантарнă тарăхса.
Çав паттăртан çухрăмра
Выртать Арпат патша та.
Унпа нĕрле йăхĕ те.
Калам сана çакна та:
Сикпăрçана Кирĕшмет
Асамлана вăрттăнла.
Çавăнпа та паттăра
Халь никам та тупаймасть.
Мĕнле тетĕн? Ак çапла.
Ятарласа ун валли
Пăталаса лартмалли
Хатĕрленĕ... Мĕнрен тен?
Асам пиçен йĕппинчен.
Сикпăрçана Кирĕшмет
Пăталанă çавсемпе.
Çичĕ хутчен. Хăй. Пĕччен!
Сикпăрçана юшкăнра
Мĕнпур пиçен йĕппинчен
Кам тасатма пултарать?
Пулас та çук Чăвашра
Ун пек ăста, ман шутпа.
Арпатпа ун халăхне
Çăлас тесен пурне те
Хуракăшран нике ту.
Ун пек тума сан вăй çук.
Ана хăв та чухлан-ха.
Пике пулмасть кайăкран.
Сикпăрçана çăлмашкăн,
Кунтан унпа каймашкăн

Чĕре кирлĕ чăн пахи —
Ват патшаран кăларни.
Ун пек чĕре сапра çук.
Патша чĕри ăçта тен?
Ман çумра вăл. Тĕшмĕшре!
Унпа усă кураймăн.
Улăп вăр-вар усалран
Туртса илет чĕрене,
Арпат хĕрне чатăртан
Улăп чĕнет хăй патне.
Пике ашшĕ чĕрине
Тытса перет чул çине.
Шурă чулсем кусрĕçĕ,
Çынсем пулса тăчĕçĕ.
Кăвак чулсем хускалчĕç,
Айлăмĕпе пăсланчĕç,
Çăра тĕтре хăпарчĕ,
Чаплă хула курăнчĕ.
Ватă патша кăмăлтан
Улăпа хыт тав тăвать.
— Эсĕ Улăп — Чăвашран.
Чăваш ялан кăмăллă.
Пĕр-пĕрипе юнашар
Пурăннă чух ман халăх
Чăвашсемпе хутшăннă,
Хăналанса пурăннă.
Эсĕ хывнă халăхна,
Ман та сан пек пулмалла.
Ман йăхăма, мачара,
Эсĕ çăлтăн тăванла.
Çавăнпа та манăн та
Сикпăрçана çăлмалла.
Ман çумра пур тĕпсаран,
Анчах хăвачĕ ун сахал.
Ман ăратăм çавăнпа
Усă курман авалран.



Çав япала вăрттăнлă,
Ана ют куç ан куртăр.
Пурте утăр сăрт енне
Мур карчăка сĕтĕрсе.
Туртса çакăр сăмсахран
Çав карчăка — усала.
Ана хаватне чакарма
Пилеш кăвайтне пăрахар.
Уйчен çав мур карчăкран
Куç ан илĕр хăраса.
Сирĕнтен пĕри çакăнта
Куç илсенех карчăкран
Çын куçĕнчен çухалать,
Курăнми пулса асаплать.
Тахăш пĕри çынсенчен
Пулнă иккен тимсĕрскер,
Мур карчăкĕ çавăнпа
Курăнмасăр чир сарать.
Сăрт та кайрĕ тĕпренсе
Çавраçилне вĕçĕнме.
Шăл айĕнчи шăрçана
Арпат туртса кăларчĕ.
Пăшăлтатса каларĕ:
— Çутă шăрçа, пулăш-ха,
Сикпăрçана тупса пар.
Шăрçа çиçрĕ çич хутчен,
Шур чул сикрĕ ваннччен.
Сĕрĕм тухрĕ пур енчен,
Çавраçилпе вĕçĕнчĕ,
Сикпăрçа та курăнчĕ.



# Вунулттăмĕш юрă

## УЛАППА НУХРАТ ПАТША ХĔРĔ САРИНЕ

*Ял халăхĕ патша хĕрĕ Сарине Илмейккер апаче пулма кайнишĕн йĕрет. Чăваш юррипе Улăппа Илмейккер хушшинче çапăçу пулса иртет. Улăп Илмейккере çĕнтерет. Чăваш юррипе Саринене вилĕмрен çăлать. Сарине ăна вилĕмрен çăлнăшăн ятлă çĕрĕ тăхăнтартать.*

Шикли шиклех шикленет,
Кĕрĕкпеле пĕркенет,
Хăраманни хайлашать,
Пур ĕçе те пултарать.
Улăп утать айлăмпа,
Çитсе кĕрет пĕр яла.
Ялти халăх кулянать,
Вĕри куççуль юхтарать.
Ял хушшинчи ушкăна
Улăп утса çитсенех
Пуçне усса карчăка
Ыйту парать çакăн пек:
— Кунта çынсем тем чухлех,
Йăх пухăвĕ пырать, тен?
Мĕншĕн пурте йĕреççĕ,
Вĕри куççуль тăкаççĕ?
Ватă карчăк Улăпа
Ларма хушрĕ хăй çумне,
Вара йывăр хуйăхпа
Вăл пуçларĕ пуплеме:
— Эх, çав, ачам, пурнăçра
Куççуль юхмасть пĕр нимсĕр.
Телей-сыру тăшманра,
Çавăнпа чăваш телейсĕр.
Чăваш чунне пусарма,
Асаплăхне чакарма
Вăрттăн, тăшман снсиччен,
Юнлă, йӳçĕ куççультен
Чăваш юрă ӳстерне,
Сĕм вăрмана вĕçтерне.
Халăх тăшман снсиччен
Сĕм-сĕм вăрман хушшинчен
Юрра чĕнсе илтетчĕ,
Юрламашкăн ыйтатчĕ.
Халăхăн хăй юррнчен,
Çĕр пин юрă кĕввинчен
Чĕри лăштах пулатчĕ,
Вăй-хăвачĕ хушăнатчĕ.
Чăваш юрри кайăкчĕ,
Саркайăкран хаклăччĕ.
Халь вăл ирсĕр çĕленре,
Хĕн-хур тӳсет инçетре.
Çăткăн çĕлен чăвашран
Ыйтать пике кунсерен:
«Хĕр памасан юрăран
Ним юлмасть,— тет,— çурçĕрччен».
Кашни касах çак ялта
Пуху пырать мăн касра.
Кашни пуху хушнипе
Шăпа тытать куççульпе.
Ĕнер вилĕм шăпине
Патша хĕрĕ тытрĕ-ске.
Патша хĕрĕ, Сарине,
Çĕлен патне утрĕ-ске.
Патшан кĕçĕн хĕрĕшĕн,

Сар чечек пек пикешӗн,
Халӑх выртса хыт йӗрет.
Мӗншӗн тетӗн? Пӗлтерем.
Вӑл ӗç пулнӑ тахçанах,
Пӗр пин çул пуль каярах.
Чӑваш лекнӗ чурана.
Тӑшман хунӗ çав терн
Пулнӑ теççӗ чуниллн.
Вӑл хушнипе Чӑвашра
Арçын ача çуралсан,
Вӑрттӑнлӑхра пулмасан,
Йыт апачӗ пулнӑ тет,
Арсем пӗтсе пынӑ тет.
Çав хӑрушӑ вӑхӑтра
Çуралнӑ тет пӗр ялта
Чипер пике Юрекке.
Пике ӳссе çитсенех
Чаплӑ çарпуç пулать тет.
Ун çарӗнче хӗр кӑна.
Кашнин пулнӑ урхамах.
Çав çар кӗске вӑхӑтрах
Тӑшмансене аркатса
Вӑтам çӗр тинӗс хӗррипе
Çӗр кӑвапине куриччен,
Çӗр юнине[1] куриччен
Çулне тӑснӑ анаçа.
Чӑваш патши Юрекке —
Чаплӑ патша тӗнчере.
Ун тӗп хули Шир-Пӑлхар
Ялан пулнӑ хисепре.
Юрекке патша ватӑлсан
Хули путать çӗр айне.
Вӑл унтан та чӑваша
Ку таранччен пулӑшать.

[1] Çӗр юни — Гибралтар патӗнчи тинӗс пырӗнчи сӑрт.



Хӑй вырӑнне хӑварма,
Хӑй пек пире пулӑшма
Юрекке патша вӑрттӑнра
Никам курман вӑхӑтра
Хӑй çӗррине, хаклине,
Куйкӑрӑшран илнине,
Панӑ пулнӑ пӗр хӗре.
Вӑт çав хӗре çак ялта
Шӑпа тытнӑ вӑхӑтра
Халӑх пӗлчӗ ӑнсӑртран:
Куçлӑ çӗрӗн хуçнийӗ
Патша хӗрӗ Сарине.
Шурӑ ылтӑн ун çӗрри —
Асамлӑхпа çыхӑнни.
Çавӑнпа çӗрри йӑлт! çиçрӗ,
Кам пулнине пӗлтерчӗ.
Çӗрӗ çиçнине курсанах
Ватӑ çынсем çавантах
Аса илчӗç сийӗнчех
Чӑваш патши çуртӗнче
Пулса иртнӗ пӗр ӗçе.
Пулнӑ ӗçе ӑнкарма
Пике çиичен калам-ха.
Çав хӗр ашшӗ — ват Нухрат —
Чӑваш патши тахçанах.
Пӑрчкан ятлӑ амӑшӗ,
Вӑл кӑмӑлран тасаччӗ.
Çуратсанах ачине
Вилчӗ хӗне кайнипе.
Амӑрткайӑк сӗчӗпе
Хӗре чӑпал тунӑ чух
Сӗчӗ юхрӗ пахчана,
Тем тусан та чарма çук.
Курӑк çиичче сӗт çунсан
Вутра чечек çуралчӗ,
Сас илтӗнсен, çил тухсан

Вата карчак куранчĕ.
Чăпăл ачи уи патне
Яр! яранчĕ чĕкеç пек.
Сарă чечек ялкăшсан
Иккĕшĕ те çавăнтах
Çухалчĕçĕ самантрах.
Ирпе, автан авăтсан,
Сарă хĕвел хăпарсан,
Чечек каллех çуралчĕ,
Патша хĕрĕ куранчĕ.
Вăл яранчĕ акăшла,
Ыталарĕ патшана.
Ылтăн çĕрри пўрнинче
Хыванмарĕ нимле те.
Çавна кура ваттисем,
Патшаран та аслисем,
Хăруш тăшман халхине
Çитмелле мар пуплерĕç:
«Ку ылтăн çĕр — хаклă çĕр.
Юрекке патшан пиллĕхĕ.
Патша хĕрĕ — пиллĕ хĕр,
Çепĕç — сарă чепченрен[1].
Чипер — сарă чечекрен».
Сарине ят çавăнпа
Ана пачĕç савăнса.
Çав Сарине питĕнче
Çурхи хĕвел вылятчĕ.
Сарă пурçăн çўçĕнче
Çамрăк уйăх ташлатчĕ.
Хĕвел ăшши çитмесен
Ăшăтатчĕ пичĕпе,
Уйăх çути ўкмесен
Çўçĕ çутă яратчĕ.
Куçĕ — çутă тĕнчеччĕ,

[1] Чепченрен — шăпчăкран.



Чие çырли тутиччĕ.
Ун пек хĕре кураймăн,
Çут тĕнчере тупаймăн.
Ўтти — акăш нишиччĕ,
Сасси — кĕсле кĕввиччĕ,
Юрри — шăпчăк юрриччĕ.
Тĕлĕнетчĕ çут тĕнче.
Калаçсассăн çав хĕрпе —
Сар çупа пыл çирĕм тен,
Чечексем — чи хитрисем,
Çĕр сĕткенне илнисем,
Тĕлĕннипе çав хĕртен
Пуç таятчĕç именсех.
Нухрат патша çиллине
Çил пек сирсе яратчĕ.
Турхансемпе мăрсине
Иртĕхмешкĕн памастчĕ.
Чăвашсен тĕп хулинчен
Хыпар килчĕ ирхине.
Вăт çав хыпар пирĕнне
Туртса сурать чĕрене.
Нухрат патша çынсене
Чĕннĕ теççĕ кермене.
Каланă тет хурланса
Сăмаххине ак çапла:
— Илмейккертен, çĕленрен,
Çăлакана хĕрĕме
Кĕрў тăвăп эрнерен
Патша пулма ўлĕмрен.
Илмейккерпе çапăçма,
Вуник пуçне аркатма
Тимĕр кăвак ăйрипе
Мăрса кайнă çиçтерсе.
Мăрса камне пĕлетпĕр,
Унтан ырлăх кĕтместпĕр.
Вăл халăха сутатех,

Çĕлен майлă пулатех.
Сăмах çÿрет ак çапла,
Эс те илтнĕ пулмалла.
Çуралнă тет пĕр паттăр,
Çавна хытă шанатпăр.
Чăваш халăх юррине
Çав паттăр çеç çăлать тет.
Халăх хăйĕн телейне,
Кĕнеке сăнне илнине,
Çав паттăртан илет тет.
Мĕншĕн пуçра сурпан-ши,
Мĕншĕн арçын пулман-ши?
Пуçра калпак пулнă-тăк
Алла чукмар тытăттăм,
Çĕленпе тĕл пулăттăм,
Сарниене çăлăттăм.
Улăп карчăк сăмахне
Хускалмасăр тăнларĕ,
Çĕклерĕ те тукшанне
Ăна çапла каларĕ:
— Эп, кинемей, ан çиллен,
Кунти Çавал хĕрринчен,
Сирĕн хуйăх — ман пултăр,
Çав тăшман та тĕп пултăр!
Сывă юлăр. Утмалла,
Илмейккере курмалла.
Улăп кÿлĕ еннелле
Вăрман урлах вĕçтерчĕ,
Яштак вăрăм хырсене
Тăпăлтарчĕ, тустарчĕ.
Улăп утнă вырăнта
Мăн çул юлать тăсăлса,
Пар лашапа çавăнта
Чупма пулать савăнса.
Çавра кÿлĕ хĕррине
Улăп анчĕ васкаса.



Унта ларать пĕр пике,
Сăмах хушрĕ пуç тайса.
— Ун пекех ма макратăн,
Вĕри куççуль тăкатăн?
Кунта куççуль тăкиччен
Тухса ут-ха килелле,
Хĕвел анса лариччен
Санăн киле çитмелле.
— Йĕкĕт, ятна пĕлместĕп,
Санран çакна ыйтатăп:
Эс çак кÿлĕ хĕрринче
Мана хăвар пĕчченех.
Юлсан — çĕлен аллине
Манпа пĕрле лекенех.
— Ан тархасла, Сарние,
Сансăр кайма эп килмен.
Ирсĕр çĕлен аллине
Сана памăп. Эс ĕнен.
Ват Илмейккер киличчен,
Унпала тĕл пуличчен
Вырăн туса хурас-ха,
Выртса канас çавăнта.
Сана çĕлен курăнсан
Вăрат мана хăвăртрах,—
Терĕ Улăп. Чукмарне
Паттăр хучĕ пуç айне.
Патша хĕрĕ пĕшкĕнсе
Ларать Улăп пуç вĕçне,
Пусармашкăн чĕрине
Йĕрсе юрлать юррине:
«Атте-анне пахчинче
Хурлăхан çнсе ÿсрĕм пуль,
Çавра кÿлĕ хĕрринче
Çавăнпа эп пĕтеп пуль.
Улма пахчинче утнă чух
Саркайăксем юрлатчĕç.

Урам тăрăх иртнĕ чух
Çут тенкĕсем вылятчĕç.
Ӳсрĕ пуль шур хурăнĕ
Шăпчăксене çу касма.
Çитĕнчĕ пуль ман пĕвĕм
Сар чечекле вĕлкĕшме.
Сив тăм ӳкрĕ улăха,
Чечек шанчĕ çав тăмран,
Эп те юлтăм хурлăха,
Çĕлен çиĕ çакăнта».
Сас илтĕнчĕ инçетрен,
Шарт! сиктерчĕ вăл хĕре.
Таçтан сăртсем хушшинчен,
Пĕр юханшыв хĕрринчен,
Вĕри çĕлен шăвăнать,
Пĕлĕт çине ыткăнать.
Сĕм вăрмана чăмать те
Йывăççене çунтарать.
Çӳлелле вăл сывлать те
Çăлтăрсене куçарать.
Вут çĕлене курсанах
Пике сăнĕ шуралчĕ.
Вăл Улăпа хăвăртрах
Вăратмашкăн хăтланчĕ.
Анчах Улăп мăш тумасть,
Силлесен те вăранмасть,
Харлаттарса çывăрать,
Сăмсинчен çил шăхăрать.
Çĕлен виç хут явăнать,
Унтан çич хут ярăнать,
Çĕре ларать чăрсăрла,
Çут тĕнчене çурасла.
Вуник мăшăр куçĕнче
Тамăк вутти çунать пуль.
Тĕпсĕр çăл пек пырĕнчен
Вут-хĕм кăна тухать ун.







Çурăм çинчи шăрчĕсем
Чăнк тăраççĕ пăрăс пек.
Качамаклă урисем —
Кашни юман кăкĕ пек.
Сариене курсанах
Ахăлтатма хăтланчĕ,
Çĕре чаврĕ çавăнтах,
Сăнинсене кăларчĕ.
Сарă пике Сарине
Силлет, лăскать Улăпа.
Анчах Улăп ыйхине
Хĕр татаймасть вăйсăртан.
Çĕлен пуçне касăртать,
Сывракана асăрхать,
Сичĕ хутчен шăхăрать,
Ситмĕл сич хут чашкăрать.
— Иккĕн, иккĕн! Ха-ха-ха!
Хĕрпе каччă? Ха-ха-ха!
Нухрат епле хисеплет,
Мĕн хушнине йăлт итлет.
Апла пулсан?.. Виç кунтан...
Виç кунтан мар, ыранах
Вăт çак кÿлĕ сăмсахне
Ик çын ятăр малашне.
Тăсрĕ вăл вунник пуçне,
Йăтса çапрĕ хÿрипе,
Пуçне чикрĕ Сарине,
Пат тумлатрĕ куççульне.
Вĕри куççуль Улăпа
Çат! çунтарчĕ кăвайтла.
Ыйхă тарать паттăртан
Куççульпе пит çуннăран.
— Питĕм темшĕн пĕçерчĕ,—
Терĕ Улăп вăранса.
Куçĕсене сăтăрса.
Йĕри-тавра тинкерчĕ.



Курать: умрах вут çĕлен —
Çулăм тăкать пур енчен.
Улăп тăрать васкаса.
Ярса илет чукмара.
Çĕлен ярать ахăрса,
Вунник пуçне касăртса.
Шăшипе ват кушакла
Вылясшăн вăл Улăппа.
Çĕр çурасла ÿхĕрет,
Вут-хĕмне те пĕрĕхет.
Анчах Улăп тумтирне,
Кукамăшĕ паннине,
Вут-хĕм ним те тăваймасть,
Вăйĕ чаксан — пăшлатать.
— Сиввĕн ан пăх ман çине,
Пĕлместĕн-и эп камне?
Эп — Илмейккер! Çĕр çинче
Çĕлен патши малашне.
Мĕн тăратăн эс унта?
Тух хăвăртрах ман ума!
Улăп хирĕç чĕнмерĕ,
Вырăнтан та сикмерĕ.
Хай шутларĕ ăшĕнне:
«Ах, юрă хăш пуçĕнче?
Вăтам пуçĕ вылянмасть,
Унтан вут-хĕм ыткăнмасть,
Апла юрă çавăнта,
Вăтам пуçри çăварта».
— Эс апатăм пулмалла,
Ман умра сан выртмалла.
Килех тетĕп хăвăртрах,
Хырăм выçнă пасăрах.
— Саншăн ӯсмен шăмшаксем,
Пырна лармĕç-ши çавсем? —
Терĕ Улăп çĕлене
Мăн чукмарне çĕклесе.

Çĕлен ячĕ уласа,
Вуннĕр пуçне вылятса,
Улăп сикрĕ сылтăма
Илмейккере тапăнма.
Вăтам пуçне ютăнне
Пăрса хучĕ çĕр çине,
Унтан ирсĕр çăварне
Туртса çурчĕ хайхинне.
Чăваш халăх юррине,
Вилес патне çитнине,
Илмейккертен хăтарчĕ,
Вăрманалла вĕçтерчĕ.
«Чăваш юрри пит хитре,
Ялан пултăр ирĕкре»,—
Терĕ Улăп ăшĕнче,
Ирсĕр пуççем хушшинче.
— Уй ухмаххи! Тунката!
Чухлатăн-и эс çавна?
Ма çĕклерĕн аллуна?
Хăвах çирĕн тăм пуçна!
Çĕлен шăвать, чашкăрать,
Вут-хĕм сапса кăшкăрать,
Шăлĕсене шак! шаккать,
Пур шăлĕ те хăйранать.
Виç сухрăмлă хÿрине
Тăсса хучĕ çĕр çине,
Унтан мĕнпур вăй-халпа
Туртса çапрĕ Улăпа.
Çĕлен пĕрре çапсанах
Тĕнче кайрĕ тайăлса,
Улăп çĕре путсанах
Сиксе илчĕ туртăнса.
Улăп каллех ирĕкре,
Вĕри çĕлен умĕнче.
Йĕпетрĕ ал тупанне,
Çĕклерĕ вăл чукмарне.



Туртса çапрĕ ирсĕре.
Тĕнче хăйĕн вырăнне
Каллех ларчĕ темелле.
Пухрĕ Улăп вăй-халне,
Тепре çапрĕ çĕлене.
Илмейккерĕн виç пуçĕ
Татăлчĕç те кусрĕçĕ.
Анчах çĕлен вĕçене
Туртса илчĕ çиçтерсе.
Виç пуçĕ те сыпăнсан,
Мăйĕсемпе çыпăçсан
Виçĕ мăшăр кусĕнчен
Çисĕм çиçрĕ çич хутчен.
Çĕлен шăвать чашкăрса
Çут тĕнчене çурасла,
Улăпа вăл уласа
Пуçран çапать авăнса.
Пилĕк таран Улăпа
Путарчĕ çĕр ăшнелле,
Улăп часах талпăнса
Сиксе тухрĕ çÿлелле.
Улăп каллех ирĕкре,
Вĕри çĕлен, халь чĕтре!
Илмейккерĕ явăнать,
Урапалла кусăнать.
Вĕри çĕлен хÿрине
Çавра-çавра çĕкличчен
Улăп сулчĕ тукшанне
Мĕнпур çитнĕ вăй-халпа.
Çĕлен кайрĕ антăхса,
Аран сывлать пашкаса,
Ултă пуçĕ харăсах
Ыткăнчĕçĕ аякка.
Вăл çапах та самаях
Антăхсан та вăр-варах
Туртса илчĕ кашнине,

Унтан вĕçрĕ йăвине.
Анчĕ таран нÿхрепне,
Тупрĕ кирлĕ пичкине,
Унтан ĕçрĕ вăй шывне,
Калай хунран илнине.
Вуник хутчен карăнса
Хасар сăртне çапăнать.
Сăрчĕ кайсан йăванса
Чăвашалла ыткăнать.
Вĕçн тăрать вĕресе,
Вуник пусне ĕшкĕртсе.
Вĕçет Улăп патнелле,
Çавра кÿлĕ еннелле.
Çĕлен вĕçсе иртнĕ чух
Ишĕлессĕ çурт-йĕрсем,
Вăрман урлă сикнĕ чух
Йăванассĕ юмансем.
Тинĕс урлă каçнă чух
Чул пек путрĕç карапсем.
Пĕлĕт айĕн вĕçнĕ чух
Чĕтренессĕ çăлтăрсем.
Çĕлен вĕçет ĕрешкен,
Хĕрсе çитсен виркĕнет,
Улăп çине ыткăнать,
Майĕ тавра явăнать.
Ана пăвать туртăнса,
Паттăр каять аптраса.
Аран-аран хĕвĕнчен
Урмăшланса ÿкиччен
Кăларать çÿç пĕрчине,
Кукамăшĕ панине.
Çÿç пĕрчине çунтарать,
Çапла сăмах вăл калать:
— Эй, кукамай, итлесем,
Эсĕ мана хĕрхенсем,
Хăватлăхна кăтартсам,
Ал-урана вăй парсам.
Илтсем, халăх, ывăлна,
Ан пăрахсам, ан мансам,
Хăвăн хаяр тăшманна
Çапса ватма вăй парсам!
Улăп çапла каласан
Сисет вăй-хал кĕнине.
Вик хутчен карăнсан,
Улăп сывлăш çавăрсан
Йăтса перет çĕлене.
Вăшт! çĕклет те чукмарне
Туртса çапать тăшманне.
Илмейккерĕн пуçĕсем
Пурте харăс татăлчĕç.
Çĕре ÿкрĕç те вĕсем
Вуник çĕре ыткăнчĕç.
Улăп çĕлен чĕлхине
Пĕр пусĕнчен кăклать те
Хурать капмар чул айне,
Кайран утать хĕр патне.
— Пике, каях килелле,
Каçчен киле çитмелле.
Килте аçу хуйхăрать,
Тикĕс пултăр сан çулу,
Анса пытăр пурнăçу,—
Терĕ Улăп пикене
Ашшăн пăхса ун çине.
— Мана çăлтăн вилĕмрен,
Аса илсем ÿлĕмрен.
Çĕррĕм пултăр сан алра,—
Терĕ сар хĕр паттăра.
Улăп çĕрре тăхăнать,
Саринерен уйăрлать.



# Вунçиччĕмĕш юрă

## НУХРАТ ПАТША

*Сĕнтĕр хăрса чапра.*

*Ана патша хĕрне çалакане тесе мухтаççĕ. Нухрат патша Сарине Сĕнтĕр хăрсана качча параççине пĕлтерет. Сарине ашшĕне татăклăн калать: кам мана çĕррĕме хаклă таварпа парать, кам На-мейккерĕн пĕр чĕлхине хам ума кунта пăрахса парать — вăл çавна качча тухатăп.*

Йăмра ӳстĕр урамра,  
Çирĕк тени — çырмара,  
Эсир çӳрĕр хулара,  
Эпир пурнар Актайра.  
Актай виççĕ таврара,  
Пăлхар пĕрре Чăвашра.  
Çунать сарă хĕвелле,  
Атăл Пăлхар хӳттинче  
Йăлтăртатать кĕмĕлле.  
Çитмĕл пасар Пăлхарта,  
Йывăç ӳсет таçта та.  
Урамĕсем тап-такăр,  
Пăхăр сарнă темелле,  
Керменĕсем пит капăр,  
Çăлтăрсенчен иртмелле.  
Ун пек хула ăçта пур,  
Шырасан та тупас çук!  
Пăлхар чаплă пулнăран  
Курнать çитмĕл çухрăмран.



Çавах кайăк-кĕшĕксем —  
Кашнин пин-пин кĕвĕсем —  
Савăнтарма халăха  
Юрламаççĕ ăмăртса.  
Вĕсем йывăç тăррисчен,  
Шур керменсем хушшинчен  
Урам тăрăх пăхаççĕ,  
Ак çаксене кураççĕ:  
Унта, патша патĕнче,  
Çӳллĕ пукан хысĕнче  
Чăваш тамки ялтăрать.  
Çич çухрăмран курăнать.  
Икĕ чĕре тамкинче.  
Çав чĕресем хушшинче  
Ылтăн юман ситĕнет,  
Уншăн чăваш киленет.  
Пĕр чĕрн вăл пĕлтерет  
Нухрат енчи чăваша,  
Тепĕр чĕри систерет  
Вирьял енчи йăваша.  
Юман тăрри тĕксĕм пек,  
Ана кăшт тăм çапнă пек.  
Пĕлтерет пуль Лайăша,  
Кĕвĕç ернĕ ăрăвне.  
Икĕ чĕре яланах  
Халăх вăйне кăтартнă,  
Тăшман тавраш пĕрмаях  
Ăна хăртма тăрăшнă.  
Патшан кăвак куçĕсем  
Пит салхуллăн пăхаççĕ,  
Кăвакарнă çӳçĕсем  
Лĕм-лĕм çилпе выляççĕ.  
Нухрат патшан çипуçĕ  
Шутласассăн пин çурă.  
Чăваш патшин тумтирри  
Таса теççĕ çав тери.

Шурă — кăрлач юрĕнчен,
Таса — тăрна кусĕнчен.
Тумĕ çинчи шевлисем —
Сар хĕвелтен илнисем —
Саркайăкла вĕçеççĕ,
Çиçĕмле те çиçеççĕ.
  Паяк йывăр патшана,
Шутласан, тен, намăс та —
Чĕре татти Сарние
Каясшăн мар Сĕнтĕре.
— Эх, мăнтарăн, Сарние,
Çунтаран ман ăшчике.
Калаçмастăн никампа,
Макăратăн пĕрмаях.
Эп те сан пек, Сĕнтĕре,
Кĕрт йытти пек сĕмсĕре,
Çăткăн пырлă кашкăра,
Кураймастăп ăшăмра.
Мĕн тăвас тен, ăнлансам,
Саншăн чĕре çунсан ман
Йыхрав ятăм, ан çиллен,
Аслă Пăлхар хулинчен:
«Кĕçĕн хĕре çĕлентен,
Илмейккер йĕк аллинчен
Кӳл хĕрринче кам çăлать,
Манăн кĕрӳ çав пулать.
Çур патшалăх çав кунах
Халаллатăп кĕрĕве,
Вилес умĕн эп ăна
Патша туса хăварăп».
  Нухрат ылтăн туйипе
Виç хут таккать çĕрелле.
Шăлса илсен сухалне
Çапла тăсать сăмахне:
— Ентĕ эрне шавлатăр,
Пĕр-пĕрине тĕртетĕр,



Намăс мĕнне пĕлместĕр.
Хуравăм ман çакăн пек:
Панă сăмах — хурçă пек.
Çил-тăвăлпа вĕçĕнмест,
Хакĕ нихçан йӳнелмест.
Сĕнтĕр мăрса пĕр-пĕччен
Хĕре çăлчĕ çĕлентен.
Çавăнпа вăл паянтан
Маншăн хаклă тăвантан.
Сĕнтĕр, хăпар ман пата,
Ларсам манпа юнашар!
Кайран эсĕ... тăхтасам.
Ак хĕрĕмпе калаçсан...
Имен, васка кермене,
Çавра кĕрен пӳлĕме
Саринене ман ятпа
Чĕнсе килсем вăйпала.
  Нухрат хĕрĕ Сарние
Курсассăнах Имене
Ыталаса мăйĕнчен
Хыт чуптурĕ питĕнчен.
Куççульне хăй чараймасть,
Çапах унпа калаçать:
— Имен мучи, ăс парсам,
Йывăрлăхра пулăшсам.
Çав Сĕнтĕртен, мăрсаран,
Ăçтиçукран, анраран,
Мĕнле майпа хăтăлас,
Аттемĕре мĕн калас?
Вăл çĕлене курăнман,
Илмейккерпе çапăçман.
Мана çăлчĕ пĕр каччă,
Анчах пĕлмеп мĕн ятлă.
  Имен пăхрĕ хĕр çине,
Туйса илчĕ çавăнтах:
Çĕр илемĕ Сарине

Пĕкĕте хыт юрататЬ.
Çавăнпа та сăмахĕ
Унран тухрĕ çакăн пек:
— Мĕн тăвас тен, пурнăçра
Курмаллине курмаллах.
Чăтмаллине чăтмаллах.
Итле мана, мучуна.
Усал шухăш çук унра,
Ан лар килте хурланса.
Вĕри куççуль юхтарса.
Атăл урлă каçасси
Чечек татса килни мар.
Ирсĕр çынпа пурнасси
Юр çине пир сарни мар.
Эпĕ, хĕрĕм, пурнăçра
Юратупа çуннăскер.
Пĕлĕт мар вăл юрату,
Çил вĕрнипе саланмасть.
Эс çавсене хыт асту.
Юрату вăл тураран
Амалăхпа арлăхшăн.
Çавра кĕрен керментен
Иккĕн тухрĕç. Пĕрине,
Саринене, пикене,
Уйăрма çук хĕвелтен.
Хĕвел пекех ăшăтать,
Ашăтать те çутатать.
Тепĕр çынни — ват Имен,
Ячĕ янрать тĕнчере.
Виççĕр султан иртнĕ те,
Шур юр пекех çÿçĕ те.
Нухрат патша хăй хĕрне
Халăх умне тăратрĕ,
Енчĕленĕ чукмарне
Сылтăм алла вăл тытрĕ.
Çут тĕнчене сарăлма



Сăмахларĕ пуç тайса:
— Кĕçĕн хĕре, Саринене, пурте пĕлетĕр,
Илмейккерен кам çăлнине — пурте пĕлетĕр,
Сĕнтĕр мăрса ăна çăлнă — пурте пĕлетĕр,
Вăл паянтан маншăн хакли — çавна пĕлсемĕр!
Малашне вăл, итле, халăх, кашнин пĕлмелле,
Кĕрÿ пулать чăн-чăн хакли — кашнин пĕлмелле,
Кĕçĕн хĕрĕм, çак Сарине — кашнин пĕлмелле,
Ун арăмĕ ĕнтĕ пулать — кашнин пĕлмелле!
Туй тусанах эп Сĕнтĕре — итлĕр, чăвашсем,
Çур патшалăх ăна паратăп — итлĕр, чăвашсем,
Эп вилсессĕн вăл çакăнта — итлĕр, чăвашсем,
Патша пулать. Чăваш патши! — итлĕр, чăвашсем.
Халь эс, Сĕнтĕр, Саринене, пулас арăмна,
Чăпăрккапа висĕ хутчен, пулас арăмна,
Çапса ил-ха йăлапала, пулас арăмна,
Кĕçĕн хĕре, Саринене, пулас арăмна.
Уншăн вара эсĕ, хĕрĕм, Сĕнтĕр мăрсана,
Алтăрпала симпыл тытса, Сĕнтĕр мăрсана
Тав туса ĕç. Упăшкам те Сĕнтĕр мăрсана.
Хунямана хисеплетĕп тесем Сĕнтĕр мăрсана.
— Атте, мана ан чарсам,
Сăмах хушма ирĕк пар.—
Терĕ хуллен Сарине
Ват ашшĕне кăшт хирсе.—
Сан сăмахран тухмастăп,
Эс хушнă пек тăватăп.
Çапах та эп халь сана
Каласшăн-ха ак çакна:
Качча тухап çав çынна —
Паттăрлăхне кăтартма
Ятлă çĕрре каялла
Паракана Пăлхарта.
Илмейккерĕн чĕлхине,
Вуниккĕрен пĕрне,
Парахакана ман ума.



## *Вунсаккăрмĕш юрă*

### УЛАП КАТРА ПИНПУÇ ХАЛĂХНЕ АСАПРАН ХĂТАРНИ

***Кăтра пинпуç кÿренĕлĕ.***
***Пĕр ушкăн вирьял çынни çĕнĕ çĕре куçса каять. Вĕсем çул çинче Шăпатан кулли пулаççĕ, чăтма çук йывăр хĕн кураççĕ. Улăп çумăр пĕлĕтне пăрса çумăр çутарать. Шăпатана шыва юхтарса яртарать, пушхиртен каллех çеçенхир тăвать, халăха хĕн-хуртан хăтарать, хăйран хăй урлă çĕн çĕре каякансене тĕпсĕр çырма урлă каçарать.***

Ака турăм автанпа,
Чунăм канчĕ ĕнтĕ ман.
Улăп çинчен хайлава
Каллех тăсар малалла.
Кăтра пĕлĕт Улăпшăн
Тÿшек пулчĕ кăпăшшăн.
Пĕлĕт шăвать малалла,
Паттăр пăхать каялла.
Курать хысри пушхире.
Пушхир вĕçне куç çитмест.
Унта çĕлен купипе,
Ÿсентăран тип-типех.
— Мĕнле вырăн пулчĕ ку,
Мĕнле халăх вара ку? —
Улăп ыйтрĕ пĕлĕтрен
Тĕплĕн пĕлес килнĕрен.
— Çав çĕршыв-и? Асамлă,
Çавăнпа та ылханлă,—
Терĕ пĕлĕт Улăпа
Пушхиртен час уйăрлса.—
Унта çумăр çич çулта
Пĕрре çăвать, чăнах та.
Кунта Шăпатан тухатмăш,
Вил аш шăмне кăшламăш,
Сĕмсĕрленсе кайнăран
Вăл халь хуçа çакăнта.
Асар-писер кăтартма
Аста вара куç пăвма.
Пуш хырăмĕ эрнипе
Ана хĕссе пынипе
Тухăçалла ĕрĕхсе
Шăпатан тăснă сăмсине.
Чăвашсене курсанах
Тăшша янă савăнса,
Пушхиртен вăл çеçенхир
Туса хунă самантрах.
Пушхир ĕнтĕ «мăн кавир» —
Тинĕс пекех хумханнă,
Каякансем çĕн çĕре
Çеçенхиршĕн савăннă.
Мĕнле асап шăрăхран —
Хăвах куран çакăнтан.
Шывсăр пурнăç тамăк çав,
Ним тума çук ăш хыпсан.
Апран кайнă чăвашсем.
(Вĕсем пурте вирьялсем.)
Эс Пăлхарта пулманран
Тĕлĕнтĕн ман хыпартан.
Мĕншĕн вĕсем çавăнта —
Сана парăп каласа.
Ватă çынсен сăмахне
Илтнĕ пуль-ха эсĕ те.
«Çурла кассан пÿрнене —

Тӳрленет вӑл эрнерен.
Сӑмах татсан чӗрене —
Суран юлать ӗмӗре».
Пуҫ мимийӗ патшан та
Шӗвелет пуль ватлӑхра.
Чӑн сӑмаха ҫавӑнпа
Манса кайнӑ пулмалла.
Ним сӑлтавсӑр Пӑлхарта
Кӳрентернӗ Кӑтрана.
Мӗнле тетӗр? Ҫимӗкре
Мӗнпур халӑх умӗнче
Вӑл калана пинпуҫа:
«Кӑтра пинпуҫ, эс паянран
Ман куҫӑмра куян кӑна.
Сӗнтӗр мӑрса — чӑн арӑслан.
Вуник пуҫлӑ Илмейккере
Тӗп тунӑ вӑл пӗр-пӗчченех!
Хӗре ҫӑлчӗ — эсӗ мар, мӑрса!
Хуйха-суйха, эсӗ мар, мӑрса,
Сирчӗ манне, эсӗ мар, мӑрса!
Эпӗ вилсен, итле, куян,
Ҫӗлӗкӗм ман ӑна юлать.
Чӑваш патши — мӑрса пулать.
Сӗнтӗр — кӗрӳ! Вӑл арӑслан,
Ун умӗнче эсӗ — куян!»
Аҫтан тури чӑвашсем,
Кӑтра ҫӳҫлӗ вирьялсем,
Чӑтӗҫ патша куллине,
«Кӑтра куян» тенине.
Вӗсемшӗн Кӑтра — ҫар чапӗ,
Турас мучӗш ывӑлӗ,
Аслӑ ӑру пуҫлӑхӗ,
Вирьял ырӑ кӑмӑлӗ.
Ҫавӑнпа та чӑвашсем,
Кӑмӑлӗнчен йӑвашсем,
Кӑтра тавра сырӑнчӗҫ,



Унтан ҫапла каларӗҫ:
«Ҫитмӗл суран ун ҫинче,
Вӑл вӑрҫӑра арӑслан,
Куян пулма ҫуралман,
Чаплӑ сын вӑл тӗнчере!
Нухрат патша мӑшкӑлне,
«Куян» тенӗ сӑмахне,
Хамӑр ҫине илетпӗр,
Уншӑн ӳксе вилместпӗр.
Тухса каяр ҫӗн ҫӗре».
Ҫӗн ҫӗрӗ тет инҫетре,
Унта пурнӑҫ лайӑх тет,
Акмасӑр тыр пулать тет,
Авӑн хӑех ҫапнать тет,
Халӑх куҫҫуль юхтарсан
Ҫилсӗр арман авӑрать тет.
Кӑтра пинпуҫ, ырӑ чун,
Хӑйне хисеп тунӑ чух
Аратӗнчен юлать-и,
Пӗччен ҫулне тӑсать-и?
Вӑл килӗшет йӑхӗпе,
Вирьял енчен килнипе.
Анӑҫалла вӑлваскать,
Ҫӗн ҫӗршыва ҫул тӑсать.
Кӑтран лаши юставлӑ[1],
Хӑй те вара пуставлӑ[2].
Йӗнерӗ ун ӗнчӗллӗ,
Ҫӗн йӗвенӗ кӗмӗллӗ.
Хӗҫне тунӑ Ахпӳртре
Ҫирӗп пӑлат хурӑҫран,
Сапарпа[3] вӑл, купепе[4].
Уххи вара, мӗн калӑн,

[1] Юставлӑ — юртӑ лаша, урхамах.
[2] Пуставлӑ — пуян, капӑр тумланнӑ.
[3] Сапар — ҫар ҫынни шлемӗ.
[4] Купе — кольчуга.

Ун пеккине тупаймăн.
Чăнах ват çын сăмаххи,
Хакран — ылтăн хăраххи.
Çĕн çĕр çинчен калани —
Сăмса çине картмалли:
«Çĕн çĕр сулĕ тикĕс мар,
Хуньăм патне кайни мар.
Çĕн çĕр çулĕ хĕн сармаш,
Вĕри куççуль юхтармăш».
Çĕн çĕр çулĕ Кăтрана,
Арăслан пек пулсан та,
Амаçурин туйăнчĕ,
Тапă пекех курăнчĕ.
Çул татăлчĕ çав сăртран
Хыр пек чăнкă тăнăран.
Лайăх шурлăх сылтăмра,
Сулахайра — сĕм вăрман.
Вăл сăрт урлă лавсемпе
Мĕнпур выльăх-чĕрлĕхпе
Арăслан пек пулсан та
Каçма пулмасть май çукран.
Шурлăх тени шурлăхах,
Хăйне тытать чăрсăрлах,
Хыпать тĕпсĕр çăварла,
Пăрăнтармасть нисталла.
Юрать шурпус, Çуланçи,
Çул-йĕрсенĕн пўлĕхçи,
Кăтра йăхне шелленĕ,
Вĕсен енне çул тытнă.
Хăй вăл ватă, кукăрскер,
Шурă çўçлĕ, ырăскер.
Пин çултан та иртнĕрен
Кăтра çўçĕ пилĕкрен
Кăштах иртнĕ темелле.
Сухалĕ те сарлака,
Кĕмĕлленнĕ укалла.



Кăтраланнă пулсан та,
Чĕркуççирен иртнĕ çав.
Кĕпи-йĕмĕ шур пиртен,
Çăлкуçран та тап-таса.
Çĕнĕ атти — сар чĕнтен,
Шурлăхра та шыв ямасть.
Чăвашсене курсанах
Вăл пуçларĕ ятлама.
— Эсир тухнă çĕн çĕре
Пĕлмесĕрех çул-йĕрне,
Çăмăлттайла, айванла.
Патак кирлĕ Кăтрана.
Курман-пĕлмен çĕршыва
Малтан кайса курмалла.
Кайса курсан тин вара
Унталла çул уçмалла.
Сирĕн унта, айвансем,
Пур-и шанчăк, тăвансем?
Çук вĕт? Пинпў, тĕрĕс-и?
Хăв айăпна сисрĕн-и?
Çĕн çĕр — çĕнĕ тўшек мар,
Янтă еткер арчи мар.
Çĕн çĕр тăван аннĕр мар,
Кăкăр сĕтне сыптармасть.
Вăл йышăнать çавсене —
Ырми-канми çынсене,
Кăткăран та ĕçчене,
Турхансенчен ăслине,
Тилĕрен те чейине,
Пăлат-хурăç пеккине,
Ĕмпўсем пек арсене,
Тавçăракан çынсене,
Ватă-вĕтĕ хушшинче
Сирĕн пур-и ăсчахсем?
Çуккă пулсан... Ку енче
Йăху пĕтет тĕпĕпех.

Кăтра ним те калаймасть,
Хăй айăпне вăл туять.
Куçпа пăхать çĕрелле,
Çулансирен имсене.
Çуланçи каллех калать:
— Мана парăр уйăрса
Ватă сынпа ачана.
Ырă сунса иккĕшне
Ĕç хушатăп кашнине.
Ватти хăпартăр сăрт тăрне
Чăнкă тĕлтен пĕр-пĕччен
Эрнипе мар, çĕр каçа,
Темле йывăр пулсан та.
Унта мĕскер курнине
Тата мĕскер илтнине
Ман кăмăла уçмашкăн
Сăртран ансан калатăр.
Ача пултăр — йăрăрах.
Ана суйлăр шăпапа.
Ав çавăнта, шурлăхра,
Курнать чўлмек тăр шывра.
Хытаратăп: çав чўлмек
Сире кирлĕ сывлăш пек.
Чўлмек пулсан алăра
Çул уçăлать çакăнтах.
Шăпа тухрĕ ак çапла:
Кăлармалла шурлăхран
Чўлмеке пĕчĕк ачан.
Ачан ячĕ Сĕлескер.
Хурăнвартан килнĕскер.
Тăлăх турат Сĕлескер.
Вунпĕр çула кайнăскер.
Вăл пурне те ăнкармасть.
Ял-йышĕнчен уйрăлса
Чўлмек выртнă вырăна
Ача утрĕ сукмакпа.



Сукмак икĕ енĕпе
Шурлăх выртать чĕтресе.
Кăшт тĕрĕс мар пуссанах
Çăтса хыпать хаваспах.
Чўлмек выртнă вырăнта
Шурлăх шывĕ «тап-таса».
Ун çут куçĕ темелле.
Ача çўллĕш «тарăнăш».
Тĕпĕ те ун «йăлмасăр».
Астарать вăл ачана
Шыва сикме васкаса.
Тăлăх ача, Сĕлескер.
Тимлĕн сăнать шурлăха.
Аса илет çавăнтах
Ватă çынсен сăмахне,
Ял хушшинче илтнине.
«Шывăнни пек шурлăхăн
Туратти çук тытмашкăн».
«Кашни ĕçĕн майĕ пур,
Ĕç пуçличчен çавна туп».
«Васкавлă ĕç — ик хут ĕç,
Ун пек ĕçрен ял кулĕ».
«Ял-йыш хушать — пурнăçла,
Пуссăр тăрса юлсан та».
Вăл халь тăрать шутласа,
Ĕçĕн майне шыраса.
Йăваш çилĕ тапранчĕ,
Йывăç тăрри хумханчĕ,
Шыври чўлмек шăвăнчĕ,
Çил вĕрмешкĕн пăрахсан
Чўлмек каллех вырăнта.
Ял вĕçĕнчи Ункăна,
Ун хĕрринчи йăмрана,
Унти кайăк йăвине
Аса илчĕ Сĕлескер
Хĕпĕртесех чĕререн.

«Йӑмра тӑрри ҫил тухсан
Каллӗ-маллӗ сулланать,
Шыври чӳлмек ҫавӑнтах
Хӑй вырӑнчен тапранать.
Чӳлмек выртать — шывра мар,
Унӑн мӗлки шурлӑхра,
Чӳлмек йывӑҫ тӑрриче,
Ана хӑпарса илмелле».
Тӑлӑх турат сыхланса
Йывӑҫ тӑрне улӑхать...
    Мӗн хушнине тусассӑн
Ырӑ сӑмах илтрӗ вӑл
Ҫуланҫирен, халӑхран.
    Ҫуланҫи мӗн хушиинчен
Кӑтра каять тӗлӗнсе,
Ӗнсе хыҫсах ерипен
Сӑмах ваклать ҫакӑн пек:
— Хӗвел анать, каҫ пулать,
Сӑртри каҫсем, ай-ай-ай!
Куҫран пырса чиксен те
Кураймастӑн нимӗн те.
Сӑрчӗ — чӑнкӑ, сӑмсахсӑр,
Утса хӑпарма — ним майсӑр.
Типпӗ мӑкпа витӗннӗ,
Унтан тытса хӑпармӑн.
Сӑрт айӗ те киревсӗр,
Унта хӑрӑк нисен ҫеҫ.
Утас ярса пусатӑн,
Йӗппи чикет — чӑтаймӑн.
Ах, Ҫуланҫи, турӑ пул,
Пирӗнтен ҫак тарас сук.
Эс хушнине ыран та
Пурнӑҫлатӑп васкасах.
— Пуҫсем пушӑ пулмасан
Тӗттӗмре те йӗп тупнать,—
Татса хучӗ сӑмахпа



Ват Ҫуланҫи тарӑхса.—
Кӑтра, тӑну ҫитмест-им,
Пуҫна ватас килмест-им?
Сан ват ҫынсем сахал-им,
Астӑнсенчен катӑк-им?
Арату ухмах пулсассӑн
Анӑҫа ҫул ан тытчӑр.
Сирӗнсӗр те ухмахсем
Ҫителӗклӗ вӑл енче.
Ратту унта пӗтиччен
Ҫак вырӑнтах тӗплентӗр.
    Ватӑ Плиска Кӑтрапа
Сӑмах ваклать ак ҫапла:
— Эпир кунта ват ҫынсем,
Виҫҫӗр ҫултан иртнисем,
Ларсах канаш турӑмӑр,
Ҫапла шухӑш тытрӑмӑр.
Вутӑ вырӑнне тип пиҫен
Лайӑх ҫунать — вут пекех.
Кунта вутчуль тем чухлех,
Авӑ ҫукки пӗтерет.
Чӑрмавӗ ҫук вӑл енчен.
Ун вырӑнне — мамӑксем,
Кукшапуҫсен, пиҫенсен
Мамӑкӗсем тем чухлех —
Авӑ вырӑнне каяҫҫӗ,
Вӗсем вутта чӗртеҫҫӗ.
    Ватӑ Плиска тӗттӗмччен
Капмар шур чул ҫумӗнче
Чӗртсе ячӗ кӑвайтне.
Кӑвайт ҫунать кӗрлесе,
Шурпуҫ каять тӗлӗнсе.
Сӑрт хӑй енне тӗтӗме
Туртасшӑн пек пиксе.
Ват ҫын кӑвайт вырӑнне
Унта-кунта куҫарать.

Тинех тупрĕ: пĕр çĕрте,
Çич çын пĕвĕ çӳллĕшре,
Тĕтĕм сăрта туртăнать,
Анчах шăтăк палăрмасть.
Тĕтĕм таçта çухалать,
Куç умĕнчех типет пек.
Каç та çитрĕ вĕçтерсе.
Сĕм-сĕм тĕттĕм таврара,
Икĕ куçран чиксен те
Курăймастăн нимĕн те.
Ак тамаша! Мĕн ара
Тухса тарать йăвaран?
Уйăх тухать сарăлса
Çут тĕнчене çутатма.
Ват Плиска та хытваскать,
Сăрт тăррине çул уçать.
Юнĕçенĕн йăвинчен
Ик çул выртать тăсăлса,
Пĕрн тăслать явăнса
Сăрт тăррине тухиччен.
Тепри — пĕрмай кукăрлса
Сăрт аркине çитиччен.
Шурпуç Плиска сăрт тăрне
Хăпарчĕ те тĕттĕмре
Унта курчĕ шур юра.
Ним те ӳсмест таврара,
Пĕр чĕрчун та курăнмасть.
Çуланçи ват чăвашран
Чанкă сăртран аисанах
Хыттăн ыйтрĕ уç саспа,
Халăх кайре хăраса.
— Сăрт тăррине çитрĕн-и,
Мĕн те пулса куртăн-и?
— Мĕн,— терĕ вăл,— кам пулчĕ?
Мĕн,— терĕ вăл,— çав,— терĕ.—
Çӳлтен антăм эп хĕлле.



Пултăм сăртăн çиттийĕ.
Çулла юхăп ерипен
Тинĕс вăйне ӳстерме.
— Чее эсĕ. Ну, Плиска,
Килĕшрĕн вĕт эс мана!
Хуравларăн ытарлă.
Шур юр унта, чăнах та.
Çĕн вырăнти халăхпа,
Тĕл пулсассăн çула май,
Хĕçсемпе мар, кăмăлпа,
Чуна кĕрсе юлмалла
Сăмахсемпе калаçма
Пултаратăр, чăнах та.
Сире валли кунтанах
Çĕн çĕр çулне уçмалла.
Çуланçи тăм чӳлмеке
Вăркăнтарчĕ сăрт енне.
Чӳлмек пулчĕ çĕр татăк.
Чанкă сăртра — мăн алăк.
Пысăк алăк уçăлать,
Тутăхнăран йынăшать.
Сăрта çавă килĕшмест,
Кăтартасшăн вĕчĕхне.
Кĕрлет, шавлать темскерле,
Тӳнесшĕн пек ик енне.
Ват Çуланçи хумханса
Çапла калать сăмаха:
— Пин çул хушши алăка
Никам уçма хăяйман.
Эсир ăна уçтартăр,
Çавăнпа сăрт кăмăлсăр.
Хăрамастăр пулсассăн
Сăрт витĕр çул тăсатăр.
Телей çук-тăк пĕтетĕр,
Сăрт айĕнче çĕретĕр.
Чанкă сăрчĕ чăваша

Кăтартмарĕ тамаша.
Анчах Шăпатан асамла
Улталарĕ халăха.
Çăлас пулсан пурне те
Шăвармалла пушхире
Чашлав çумăр çутарса,
Шăпатана юхтарса.
Ун пек çăван пĕлĕте
Куратăн-и? Ав лере!
Çав пĕлĕт те шикленсе
Пăраннă-мĕн пушхиртен.
— Апла эппин? Ну, юрать,
Унăн кунта пулмалла!
Пĕлĕт инçе пулин те,
Улăп сиксе ун çине.
Çĕрелле хыт тайăлсан
Пĕлĕт каять хăраса.
Улăпран вăл хăтласшăн,
Хăй çулĕпех шăвасшăн.
Анчах Улăп пĕлĕте
Шума памасть пĕрре те.
Ярса илет сĕтĕрме,
Пушхир тĕлне çитерме.
Сĕтĕрнĕ чух вăл ăна
Çапла калать тархаса:
— Çулна тăсан хушнă пек,
Çумăру пултăр — витререн!
Пĕлĕт ăна хирĕçлет:
— Улăп, мĕскер эсĕ,— тет,—
Куç ан куртăр çав çĕре,
Ун пек çĕр çук тĕнчере.
Ана турă маннăран
Ылханлă вăл авалран.
Ун еннелле шутарса
Мана ан кĕрт çылăха.
— Апла эппин. Ну, юрать! —



Улăп сасси ян янрать.
Вăл пĕлĕте тустарать,
Пушхирелле шутарать.
Пушхир çинче пĕлĕте
Вирĕ хутчен карт туртать,
Пăрать кĕпе пăрна пек,
Явать кантра явнă пек.
Пĕлĕт шавлать, ашкăнать,
Çумăр пулса тăкăнать.
Пушхир лайăх исленет,
Ылханĕнчен тасалать.
Тухатмăша çавăнтах
Çырма тăрăх юхтарать.
Шăрăх тарать тарçталла,
Пушхир сывлать каранса,
Ешĕл тумпа витĕнме,
Чăваша вăй кĕртмелле.
Ват аслашшĕ те унтах,
Вăл Кăтрапа юнашар.
Улăп ăна асăрхать,
Ыталаса чуптăвать.
— Эс те кунта, асатте,
Çулна тăсан çĕн çĕре?
Таран çырма кĕперсĕр,
Мĕнле урлă каçатăр?
Ан кулянăр уншăнах,
Алла усса тăрар мар.
Çырма урлă выртатăп,
Хам тăрăхах каçарăп.
Улăп выртать ал тăсса
Çырма урлă тăсăлса.
Халăх каçать лавсемпе
Улăп тăрăх леш енне.



# Вунтăххăрмĕш юрă

## СĔНТĔР МĂРСА САРИНЕНЕ КАЧЧА ИЛМЕ ТАЛПĂННИ

*Çĕр çухрамран илтекен Серккене Улăп.*
*Пăлхар хулинче шăй-шай. Серкке Улăпа Пăлхара кайма сĕнет. Улăп ват юман тăррипчи халăх юррипе — кайăкпа — Пăлхар хулинче Чăваш юрри — кайăк — Саринене вилĕмрен çăлать. Сарине Улăпа курсан: «Мана Илмейккертен çăлакан паттăр çакă»,— тет.*

Йĕтĕр, йĕтĕр ерепи,
Йĕтĕр тăрри шерепи[1].
Шереписем сарличчен,
Шерпет пулма пиçиччен
Юррăмăра тăсăпăр,
Улăппа тĕл пулăпăр.
Улăп ларать шурпуçпа,
Çĕр-çĕр султан иртнипе.
Хыт кăмăлсăр пулнипе
Ват çын туртать хăлхине.
Улăп калать шурпуçа
Хĕрхеннипе пуç усса:
— Сăрт тăррипчен пăхрăм та
Сана куртăм аякран.
Чăтаймарăм, ан çиллен,
Çула тăсрăм кунта эп.

[1] Сутмалли юмах.— Сăлă.



Шуçса ӳксе шăмшакна
Амантрăн пуль самаях?
Ал-уруна кантарма,
Уç сывлăшпа сывлама
Вырăн тăвам сан валли
Çĕр касниччен выртмалли.
Шур сухалĕ Улăпа
Пӳлсе хучĕ тарăхса.
— Ман çиччен ним пĕлмесĕр
Ма çĕр çиччен çĕклерĕн?
Эпĕ Сĕркке, сисекен,
Çĕр çухрăмран илтекен.
Ман пеккисем тĕнчере
Мĕнпурĕ те... эп пĕччен.
Хура халăх сăмахне,
Пăлхар хули шăй-шайне
Хăлхана чăнк тăратса
Итлеттĕмччĕ эп выртса.
Унта йăслав вăйлансан
Кĕрлет Хура тинĕсле.
Шăй-шай йăлтах лăплансан
Пăлхар пĕтнĕ темелле.
Сана хăш-пĕр шăй-шайне,
Ман хăлхана кĕнине,
Кăштах парам каласа.
Итле ăна ăнкарса.
«Сĕнтĕр çĕнчĕ çĕлене,
Тĕлĕнтерчĕ тĕнчене!
Ун пекки çук Чăвашра,
Тепĕр тесен — ниçта та!
Саринене, айвана,
Ăна качча памалла».
«Сĕнтĕр мăрса мухтавра,
Ун патшара лармалла!»
«Сĕнтĕре халь чыс тăвар,
Парне парар кăмăлран;

Пухар ылтăн-кĕмĕлне
Лартма чаплă керменне».
Сĕнтĕр мăрса сăмахне.
Пуçсăрланса çапнине,
Итленĕ чух эс мана
Чăрмантартăн. Эх, сана!
Вăл ним намăс-симĕсĕр,
Çавăнпа вăл киревсĕр.
Чĕлхипе тем кастарать,
Халăха та хыт хăртать.
Чухлатăн-и, вăл мĕн тет?
«Çил-тăвăл ман чĕрере!
Ĕçчен ĕçшĕн хапсăнать,
Кахал юрра юратать.
Çамрăк пуçăм çутă та —
Ман патшара лармалла.
Эп патшана ларсанах
Юрра чăтмăп Пăлхарта».
Халăх Сĕнтĕр мăрсана
Вăрçса питлет тарăхса:
«Сăмсуна хуть шăласчĕ
Е чĕлхӳне чарасчĕ.
Вăл сар хĕре çăличчен
Хăйне сутĕ çич хутчен.
Илмейккерпе тĕл пулман.
Саринене вăл çăлман.
Пикен ятлă çĕррине
Вăл кăтарттăр пӳрнинче.
Унсăр Сĕнтĕр сăмаххи
Хуртлă курак каяшши».
Пăлхарти пек тавлашу,
Ним вĕçĕмсĕр харкашу
Килĕшмест-ха сана та,
Çавах кай-ха хулана.
Ыран, кăнтăр тĕлĕнче,
Мĕнпур халăх умĕнче



Курăн патшан пĕр хĕрне,
Саринене — пикене,
Ылтăн çĕррӳ, пӳрнерн,
Питĕ хитре çав тери,
Юрах кайĕ пикене,
Патша пулăн эсĕ те.
Шурсухал та çухалчĕ,
Улăп унтан тĕлĕнчĕ.
— Эпĕ аслă Пăлхара
Каймăп пушă алăпа,—
Тет те Улăп васкаса
Çулне тытать айлăмпа.
Сĕм-сĕм вăрман хушшинче,
Çырма-çатра хĕрринче
Курчĕ ватă юмана,
Ун тăрринче — йăвана.
Юман çинчи йăваран,
Ана тунă мамăкран,
Хитре кайăк пăр! вĕçрĕ,
Чăтлăхалла ярăнчĕ.
Кайăк Улăп паттăра
Палласанах чăтлăхран
Таврăнчĕ хăй йăвине,
Çĕр-çĕр тĕслĕ кĕвĕпе,
Темнçе пин юрăпа
Вăл пуçларĕ савăнса
Тав тумашкăн Улăпа.
— Мана çăлтăн вилĕмрен,
Тав тăватăп чĕререн.
Каяр мар-и Пăлхара
Тĕл пулмашкăн халăхпа?
Йывăр ăна юрăсăр.
— Тĕрĕс сăмах. Пăлхара
Пирĕн çитсе курмалла!
Йăву пултăр хулара
Ват юманпа яланах,—

Тет те Улăп юмана
Тытса кăкларь курăкла.
Вата ăвăс айĕнче,
Ҫатмар шур чул патĕнче,
Улăп тăрать чарăнса,
Унти йĕре сăнаса.
— Кам-ши пулнă ҫакăнта,
Мĕн шыранă-ха вара?
Ана юрă хуравлать:
— Сĕнтĕр мăрсан ĕҫĕ ҫав.
Вăл ҫак шур чул айĕнчен
Вăр-хурахла ҫут ҫĕрте
Илмейккерĕн чĕлхине
Илме тăчĕ пĕринче.
Анчах мăрса вăйсăртан,
Ҫын каяшши пулнăран
Чул айĕнчен чĕлхене
Илеймерĕ нимле те.
Сĕнтĕр мăрса аптраса
Шăрт пек ҫӳҫне тăратсан,
Вата ăвăс хыҫĕнчен
Шăпатан тухрĕ сĕтĕрнсе.
— Сĕнтĕр,— терĕ Шăпатан,—
Лар ман ҫума юнашар.
Эсĕ мĕншĕн ҫакăнта,
Пĕлстĕп-ҫке, юмăҫ та.
Илмейккерĕн чĕлхине,
Шур чул айне хунине,
Илейместĕп эпĕ те.
Тимĕр карта пĕтерет.
Пулăшатăп эп сана
Чĕреренех, хаваспа.
Уншăн мана — сăмах пар.
Ман сĕнĕве паянтан
Пурнăҫлатăн кăмăлпа.
Килĕшетĕн? Пит аван.







Çăварна кар лайăхрах.
Вăт чунна та сутрăн халь.
Пўрнўнте çĕрĕ пулать
Ахаллн мар, асамлн.
Çынсен чунне кăлармаллн.
Нухрат пурнăçне... ним те мар.
Сана панă çĕрĕ татать.
Кирлĕ сана пиçен те.
Пиçен шăтсан умăнта
Кăкла ăна хăвăртрах.
Пике пуçне çавăрма
Чăрка упасаррнпе.
Чĕлхе пулать вăл кайран
Пике умне пăрахма.
Унпа эсĕ тарăхса
Çапан пулас арăмна,—
Тет те карчăк кускалать.
Çав вăхăтрах çухалать.
Улăп, маттур паттăр та,
Чула йăтса пăрахать.
Илет çĕлен чĕлхине.
Персе чикет кĕсйине.
Ват юмана кăклать те
Васкать Пăлхар хулине.
Пăлхар хули айлăмра.
Тĕме тăслать ун тавра.
Тĕме паха карманпа[1].
Хула чапĕ халăхпа.
Питĕ хўхĕм керментен,
Ару çурчĕ тенинчен.
Патша хĕрĕ Сарине
Утса тухать хайхнне.
Нухрат патша ячĕпе
Пур чăваша пĕлтерме

[1] Карманпа — крепостьпе.



Пĕлтерўçĕ хăпарса
Çапла калать кăшкăрса:
— Нухрат патшан çут йыхравне — пĕлет çут тĕнче!
Нухрат патшан сăмах çирĕп — пĕлет çут тĕнче!
Саринене ятлă çĕрре паракана — итле, çут тĕнче!
Илмейккерĕн йўс чĕлхине — итле, çут тĕнче!
Пике умне хураканне — итле, çут тĕнче!
Нухрат патша кĕçĕн хĕрне — итле, çут тĕнче!
Качча парать кĕрў теме — итле, çут тĕнче!
Çур патшалăх халех парать — итле, çут тĕнче!
Патша вилсен ун кĕрўшĕ — итле, çут тĕнче!
Патша пулать, чăваш патши — итле, çут тĕнче!
Тулайрисем — тăшмансем,
Вăр-хурахпа пуйнисем,
Нухрат патша умĕнче,
Вĕсемпеле Сĕнтĕр те.
Кăш çĕлĕкпе пулнăран
Мăн кăмăллă патшаран.
Халăх Сĕнтĕр мăрсана
Хытă хăртать сăмахпа:
— Пăх-ха паян ун çине,
Каçăртнă йĕк сăмсине.
Хўрине ват кăркка пек
Сарса янă хĕрелсе.
Йăлапала Сĕнтĕре
Кăвайт урлă сиктерме.
Патша умне çитерме
Виç хут пачĕç кутĕнчен.
«Çĕрре паман Сĕнтĕре,
Аçтан тупнă ман çĕрре? —
Шутлать пике ăшĕнче,
Йывăр хуйхă кусĕнче.—
Илмейккерĕн чĕлхине
Çĕре печĕ çитменне.
Тăхăнмаллах çĕррĕме.
Телейсĕр эп тĕнчере».

Вĕри куççуль юхтарса,
Çăлакана асăнса
Пике тăсрĕ пÿрнине
Тăхăнтарма çĕррине.
Çав вăхăтрах сасартăк
Вĕççе анчĕ пĕр кайăк,
Саринене хăлхинчен
Каларĕ ют сиеччен:
— Илсем çакна, турата,
Сана кирлĕ вăл кунта.
Çеклĕленнĕ пилешне
Алла тытсан Сарине,
Çав самантрах çĕрĕрен
Пулса тăчĕ пĕр çĕлен.
Унтах пилеш хăватĕнчен
Илмейккерĕн «чĕлхинчен»
Сывла-сывла хаш та хаш
Пулса ларчĕ Шăпатан.
Çĕлен юплĕ сăннипе
Сăхма тăрсан пикене,
Çĕрпÿ паттăр вăр-варах
Çирĕм çулхи каччăлла
Ярса тытать çĕлене,
Пăвса перет çĕрелле.
Кайран Сĕнтĕр мăрсана,
Каçăрăлнă сăмсана,
Суеç чăпти пулнăран
Шаклаттарать çамкаран.
Ирсĕр Сĕнтĕр антăхать,
Кутăн-пуçăн ыткăнать.
Халăх кĕрлет, тарăхать,
Шăпатан тавра сырăнать.
— Каллех, ирсĕр, эс кунта?
Ун çунмалла халь вутра!
Шăпатан пулать ват сăпса,
Вĕççе тарать нăрласа



Сĕм вăрмана, чăтлăха,
Ура пусман вырăна.
Çынсем, юнпа пуйнисем,
Тулайран та килнисем,
Сĕнтĕр хыççăн кайнисем,
Тухрĕç карма çăвара,
Кăшкăраççĕ урамра.
— Сарние хăй тухатмăш,
Çавăнпа çĕрри улшăнчĕ.
Патша тытмасть сăмахне,
Çĕртет чăваш ыр ятне!
Çавăнпа та мăрсана
Халех лартар патшана!
— Чарнăр, карма çăварсем,
Намăссăрсем, касмаксем! —
Аслати пек янравлăн
Сас илтĕнчĕ хаяррăн.
Халăх пăхать çаврăнса,
Курах каять Улăпа.
Унтан хула тĕлĕнет.
Ват юман ун аллинче —
Чечек çыххи пек кăна!
Юрă мĕнле савăнса
Юрра ярать? Чеченлĕх!
Йăви те ун мамăкран —
Пур халăхшăн савăнăç.
Патша хĕрĕ Сарине
Курсассăнах Улăпа
Чупса анать савăнса.
— Вăт çак паттăр пĕр-пĕччен
Мана çăлчĕ вилĕмрен.
Пăхăр, пăхăр ун çине!
Ман çĕррĕм ун аллинче!
Эпĕ панă çĕррĕм вăл,
Эпĕ кĕтнĕ йĕкĕт вăл!



# Çирĕммĕш юрă

## УЛАП ЭШКЕЛ ÇЫННИСЕНЕ ПУЛАШНИ

*Улăп сĕм вăрманта хĕн куракан тапăрпа тĕл пулать. Ял халăхĕ ниме тăвать. Улăп халăхпа перле вăрман кăларать, уă тăвать, çурт-йĕр çавăрать. Çĕн пÿрт ĕçки. Эшкел халăхĕ мĕнпур чăваш ячĕпе Улăпа хапал, парне парать.*

Кăçатăн çĕввн çук тесе
Шывсем çинче ан çÿрĕр:
Пĕрре кăçат иcленет,
Тепре ура йĕпенет.
Çуйăн тайман пуç тесе
Ун Улăпне ан хурлăр:
Пĕрре чунăм хурланать,
Тепре халăх юрланать[1].
Тепĕр тесен мĕн ара,
Юррăм, юррăм, ян янра!
Кĕвĕçекен тăшмана
Ура айне тумалла.
Улăп çÿрет вăрманта,
Юманлăх çав вырăнта.
Усланкă çук ниçта та,
Çĕр-çĕр çухрăм кайсан та.
Тÿлек çавра айлăмра,
Кашкăр чупман чăтлăхра

[1] Юрланать — кĕлмĕçленет.



Улăп курать тапăра.
Унта — пурте хуйхăра.
Урапнсен хÿттинче,
Çĕтĕк-çатăксем çинче
Халăх йĕрет уласах,
Варсăр çын пек йăвансах.
— Мĕншĕн эсир çакăнта,
Пурте çĕтĕк-çатăкра?
Мĕншĕн пурте йĕретĕр,
Вĕри куççуль тăкатăр?
Мĕншĕн эсир çакăнта
Ялĕпелех — пурсăр та?
Тăшмансем-и Эшкелте?
Çĕр хĕсĕр-и вăл енче?
Ар пуçлăхĕ Ментелей
Унпа пĕрле Сентелей
Хуравларĕç Улăпа,
Çумма ларсах хуйхăрса.
— Çĕр çул ĕнтĕ ăрата
Усал ерчĕ тем майпа.
Хăтăлма çук усалтан,
Çĕр çăтайман Майрусран.
Майрусăн пур шывармань,
Çав армана эс курман.
Тыр авăрмасть çавăнта,
Аврать кăна çăмарта.
Çăмарташăн ăрата
Çĕр çул хушши чунсăртан
Майрус йăлтах пĕтерет,
Вĕлтрен пусса виттерет.
Çав Майрусран хăтăлма,
Юлнă йăха упрама
Эпир килнĕ çак енне.
Ĕмĕт ăнмасть нимĕн те.
Килти выльăх-чĕрлĕхсем
Ӳксе вилчĕç чир-чĕрпе.

Çнчĕ лаша пĕтĕмпе,
Кĕсенлĕ-çке вĕсем те.
— Эй, тантăшсем, тăвансем,
Пуçа усса ан ларăр.
Хĕн-хур кулли пулмăпăр,—
Улăп вĕсене хуравлать.—
Алла-аллăн тытăнар,
Пĕр-пĕрине пулăшар.
Çанăсене таврар та
Çурт-йĕр çаврар хăвăртрах.
Чăрăшлăхран вăрмане
Кăларăпăр çак енне.
Пĕренесенчен хăмине
Çурĕç ара çитнисем.
Кашни çемье пӳртĕнчен
Тĕтĕм тухтăр яланах.
Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетчĕр
Картиш тулли тулмалăх.
Кайăк-кĕшĕк те кашнин
Ялан пултăр ун çур пин.
Тыр-пул пултăр çавăн пек —
Кĕлет каштн авниччен.
Улăп вăрман хушшинче,
Ик вăрăм çул хушшинче.
Çанăсене тавăрса
Ĕçе пуçлать халăхпа.
Çĕр-çĕр çулхи хырсене
Тытса кăклать йĕтĕнле.
Кун иртет те каç килет,
Вăрман ĕçĕ вĕçленет.
Сĕм вăрманта аслă хир.
Эшкелте халь çурхи ир.
Хир лаптакĕ вăрăм-и,
Сарлакăшĕ ансăр-и?
Тăршшĕ вун-вун çухрăм пур,
Сарлакăш те çавах пуль.



Улăп ăстаç пулнăран
Çĕн пӳртсене сарăран
Кермен сăнне вăйлатма
Чĕнтĕрлере пур енчен.
Ялти çурт-йĕр çавăн пек —
Пăхсан çĕлĕк ӳкмелле.
Салакайăк çавăнтан
Урлă вĕçсе каçаймасть.
Çĕнĕ яла ял-йышпа
Эшкел тесе ят пачĕç.
Хура хĕрсем ун тавра
Тимĕр карта çавăрчĕç.
«Усал-тĕсел кĕрес çук»,—
Терĕ халăх савăнса
Тимĕр карта çавăрсан.
Кайран Улăп пил илет,
Акапуçне кӳлĕнет.
Суха тăвать, тыр акать,
Халăхпа пĕрле савăнать.
Тыр-пул туса пуçтарсан,
Автан яшки пуçлансан
Ват Ментелей Улăпа
Кил хуçипĕ пулнăран
Чĕнсе илет урамран
Çĕнĕ пӳрте хăнана.
Çĕн пӳрт ĕçкн ялĕпе,
Шурсухалсем кĕрекере,
Хĕрарăмсем —тĕпелте.
Кĕрекере пуш вырăн.
Улăп валли ĕнтĕ вăл.
Апат-çимĕç тĕслĕрен,
Сĕтел ури тайлнччен.
Улăп ларать кĕрекере.
Чаплă хăна Эшкелре.
Çĕнĕ пичке пуçласан,
Витре тулли сăрана

Сӗтел ҫине лартсанах,
Ват Ментелей кӗлтуса
Кӗреш мӑн ҫӑкӑрне
Касрӗ виҫ чӗл ҫаврӑса.
Кашни чӗлре йӑла май
Чӗпкӗм тӑвар, вӗтӗскер,
Чӑкӑт, шӑрттан татӑксем.
Ҫӑкӑр чӗлне, виҫҫӗшне,
Хуҫса ҫиме кашниччен
Ретӗн-ретӗн ячӗҫӗ.
Сас илтӗнчӗ хуҫаран:
— Ҫӑкӑр ҫитрӗ-и кашнине?
Ҫитмен пулсан пурне те —
Кил хуҫийӗн татах пур.
Сас илтӗнет халӑхран:
— Ҫитет! Кашни валли пур.
Тавах хура халӑхран!
Кӗреке юрри пуҫланать.
«Алран кайми аки-сухи,
Асран каймн атти-анни.
Аки-сухиччен уйрӑлас мар,
Атти-аннине ай манас мар.
Мӗншӗн асӑнас пирӗн аттене?
Мӗншӗн асӑнас пирӗн аттене?
Пӗчӗкрен пысӑк ай тунӑшӑн.
Пӗчӗкрен пысӑк ай тунӑшӑн.
Мӗншӗн асӑнас пирӗн аннене?
Мӗншӗн асӑнас пирӗн аннене?
Пире ҫуратса ӳстернӗшӗн,
Кӑкӑр сӗтне ҫитернӗшӗн.
Унчче карти питӗ пулинччӗ,
Униче карти питӗ пулинччӗ.
Хура халӑхран сӑмах килминччӗ,
Хура халӑхран сӑмах килминччӗ.
Ял-йыш, пускил пӗр пулинччӗ,
Ял-йыш, пускил пӗр пулинччӗ.



Ёҫме-ҫиме лайӑх пулинччӗ,
Ёҫме-ҫиме лайӑх пулинччӗ.
Мӑйӑр катас, ай тӗш тӑвас.
Мӑйӑр катас, ай тӗш тӑвас.
Тӗшшине пӗрле ай ҫиер-и.
Тӗшшине пӗрле ай ҫиер-и.
Хуппине сапса ай ярар-и.
Хуппине сапса ай ярар-и.
Ёмӗр пӗрле ай пурнар-и,
Ёмӗр пӗрле ай пурнар-и.
Вилессе уйрӑм ай вилер-и.
Вилессе уйрӑм ай вилер-и.
Акнӑ тырри кӗр пулинччӗ,
Акнӑ тырри кӗр пулинччӗ.
Хура халӑха ҫӑмӑл пулинччӗ,
Хура халӑха ҫӑмӑл пулинччӗ.
Асран каймн пӗлӗш-тантӑш,
Асран каймн пӗлӗш-тантӑш.
Пуриччен ытла пускил, ял-йыш.
Ай ӗҫер-и, ай ҫиер-и,
Виличчен пӗрле ай пурнар-и,
Виличчен пӗрле ай пурнар-и».
Кӗреке юрри вӗҫленчӗ,
Сӑра пички пуҫланчӗ.
Хӑнисене Ментелей
Ҫапла калать чӳкпуҫ пек:
— Халал парар паттӑра,
Ытарайми Улӑпа.—
Улӑп сӗтел айӗнче
Чӗркуҫленнӗ ача пек.—
— Халал сана, Улӑп паттӑр,
Эс пирӗншӗн хамӑр ывӑл.
Сурпан ҫыхнӑ хӗрарӑмсем —
Пурте пулӗҫ саншӑн аннӳ.
Така пуҫне ҫинӗ арсем —
Пурте пулӗҫ саншӑн аҫу.

Ху çулăнти яшă-хĕрсем —
Йамăкупа шăлну пулĕç.
Аçу-аннӳ сана пиллет:
Çирĕп сывлăх — ялан сана,
Вăй-хал, ывлăм,—ялан сана.
Хĕн-хур сана ан çыпăçтăр,
Телей санран ан уйрăлтăр.
Тăшман тенн — айра пултăр,
Туслăх тенн — çумра пултăр.
Çăкăр-тăвар кĕлмĕççенне
Çисе ан кур — ĕмĕрте те.
Çăкăр пулсан — пурте пулать.
Çăкăр-тăвар хăвăп пултăр.
Аçу-аннӳн çăпати пуçне
Тытрăн кăна аллупа эс,
Хыткукарла хăтланмарăн.
Халăх хăй те çакна туйрĕ:
Санра ирсĕр çăткăнлăх çук.
Ун вырăнне сăпайлăх пур.
Таса чĕреллĕ — пирĕшти пек.
Майрус патне çул тытас тен,
Çав ирсĕре тĕп тăвас тен.
Каяс çулу такăр пултăр,
Пирĕн пил те çирĕп пултăр.
Сана халал çавах пулать.
Ана сана халăх парать
Шур алшăлли — арат реликне[1].
Сĕм авалран упранине
Сыпăкран сыпăка арпуç ăна
Парса пынă халалласа.
Эс халăхшăн тăрăшатăн,
Çак алшăлли санра пултăр.
Вăл хăватлă. Тинĕсе те
Çĕнтерет вăл вăй-халĕпе.

[1] Реликке — аратăн авалхи саманасенчен юлнă асамлă япали



Унтан ыйтан çулна тăсма,
Тинĕсре те вăл çул уçать.
Анчах эсĕ ан ман çавна:
Ун вăй-халĕ шутра вара.
Виç хут кăна вăл çул уçать.
Кайран вара вăйсăрланать.
Майрус патне çул тытатăн,
Йăс шывĕпе тĕл пулатăн.
Эс ун урлă каççассăнах
Çĕр пӳрт тĕлне тухмалла сан.
Унта виçĕ арçын пурăнать,
Виççĕшĕ те чăлах вара.
Калаçтарсан эс вĕсене
Анланмалла пĕр-пĕрине
Пĕлен Маçик ăçтине те.
Çав Майруспа çапăçмашкăн
Ахплат паттăр кунтан кайрĕ.
Таварнмарĕ. Ăçтан пĕлен,
Майрус кулли пулчĕ, тен?
  Халал илсен халăхран,
Халăхпа сывпуллашсан,
Ана тарăн пуç тайсан,
Улăп каллех çул çинче.
Майрус патне çитмелле.



## *Çирĕм пĕрремĕш юрă*

### УЛĂП МАЙРУС АСАМЛĂХНЕ СИРСЕ ЯНИ

*Майрус Маçик ăстаçа ăна чăваш ĕмĕтне ламаншăн тĕрмере усрать. Вăл ăçта ларнине виçĕ çын кăна пĕлет. Çавăншăн Майрус вĕсене асамласа чăлаха кăларать, вĕсем пĕр-пĕрине ăнланмаççĕ. Улăп юрă юрлать. Ун юрри пулăшнипе чăлах сем пĕр-пĕрине ăнлана пуçлаççĕ, калаçаççĕ.*

Хура вăрман хÿххине
Суйларăмăр пахине,
Хайлавсене чаплине.
Улăп çинчен хунине,
Савăшлашсах пухрăмăр,
Çĕнĕ юрра кĕртрĕмĕр.
Улăп паттăр инçетре,
Пĕлме май çук, хăш енче?
Пач татмашкăн ун çулне
Куç хываççĕ темле те.
Хĕвел тухать çурçĕртен,
Уйăх анать виç тĕлтен.
Ала çăлтăр хÿттинчен
Шуçăм иртет ерипен,
Уксах така утнă пек,
Пĕр хутчен мар, çич хутчен.
Улăпăн пуç çаврăнмасть,
Пăтравлăхран хăрамасть.
Сĕм-сĕм вăрман хĕррипе,



Турнвыла лаппипе
Улăп утать малалла
Хăй пĕлнĕ пек çулпала.
Тĕл пулать шур пĕлĕте,
Шăвăнмасть вăл инмĕн те.
Улăпа вăл çул памасть,
Хăй урлă та каçармасть.
Улăп калать пĕлĕте:
— Чăрмантарма юратан
Эсĕ иккен. Уншăн ак
Лекен сенкер тÿпене.
Тĕртет ăна çÿлелле.
Пĕлĕт вĕçет тÿпене
Хĕвелпе тан пуличчен.
Сарă хĕвел хĕртиинчен
Пăсланать вăл тиличчен.
— Шур çиттине, пĕлĕте,
Кам ывăтрĕ тÿпене?—
Сас илтĕнчĕ хÿтĕре,
Аслати пек кĕрлесе.—
Каллех Улăп? Чарусăр!
Хăйне аскăн тытать вăл.
Çĕнĕ пĕлĕт çиттине,
Кăмăла хыт кайнине,
Ывăтнăшăн тÿпене
Чунне илеп унăнне.—
Ĕрлешет çеç çил ашшĕ,
Ирсĕрленет ĕмĕчĕ.
Тапăнничен Улăпа
Çапăнать вăл ман сăрта.
Сăрчĕ каять йăванса
Уй лаппине хупласа.
Сăрт тÿнишĕн хĕпĕртет.
Çапла шутлать шеремет:
«Вăл ман умран иртетех,
Ун чух пуçне çиетех».

Çилĕн çиллес çук пекех,
Чăмăртанать чĕрĕп пек.
Çапла Улăп паттăра
Улталасшăн — шутлăр-ха!
Улăп çулне тăснă чух,
Уп умĕнчен иртнĕ чух
Вăл ĕшкĕнсех тилĕрет
Паттăра хыт иирретме.
Кăкăрĕнчен çапăнать,
Хăй аякка ыткăнать.
Анчах та ун талпăнĕ
Хир качаки тапкăвĕ,
Хăй çулĕнчен шит чакмасть,
Çулне тăсать çав-çавах...
Çил ашшĕ ним лăпланмасть,
Ирсĕр ĕçне пăрахмасть.
Çĕр-çĕр патман хăйăрпа
Куçран сапать Улăпа.
Куçне шăлса тасатсан
Паттăр çапах суккăр мар.
Ват çил каять пăвăнса,
Кайран йĕрет ахлатса,
Куççульне, пăр пеккине,
Юхтарать вăл тинĕсе.
Çав вăхăтрах çиçĕнсе,
Тинĕс хумĕн капланса,
Çĕр çуммипе йăванса,
Умлă-хыçлă явăнса,
Вут-хĕм килет талкăшса.
Часах хыпать Улăпа
Çунтарасшăн çулăмпа.
Анчах Улăп çипуçне,
Нар пек çунан пит-куçне,
Кукамăш пек çирĕп те,
Ним тăваймасть вут-хĕм те.
Утсан-утсан малалла—



Кĕлленнĕ хир хыçалта.
Улăп тухать шыв хĕрне,
Пăхма хăруш ун енне.
Икĕ çыран хушшипе,
Кăварланса кайнипе,
Йăс шыв юхать хум ярса,
Çыранĕпе харкашса,
Улмури пек тĕмсĕрсем
Йăс шыв тăрăх ишеççĕ,
Пĕрене пек шăлĕсем
Çырансене чĕреççĕ.
Хăш-пĕрине, тĕмсĕрне,
Çиллес юхха темелле.
Юхха шутне кĕмесен —
Леш тĕнчери чун ку тен.
Вĕçес пулсан тӳпене —
Хуплатех пуль тĕнчене.
Хăранипе çавсенчен
Теприн чĕри çурлатех.
Улăп тăрать шутласа:
«Ман леш енне каçмалла,
Çĕрпӳртре те пулмалла.
Анчах шывĕ сарлака,
Сиксех вĕрет, чăрсăркка.
Умри, чăн та, тамаша,
Ман кунта мĕн тумалла?
Парнеленĕ алшăлли
Çул уçатех ман валли.
Пулăшăвĕ пит сахал,
Виç хут кăна. Васкас мар».
Улăп утать малалла,
Шыва хирĕç тăвалла,
Пĕр кун çеç мар, пĕр эрне.
Çапах тухмасть ун вĕçне.
Тĕл пулать вăл кĕпере.
Кĕпер пăхма чиперкке,

Çапах ăна тĕрĕслет.
«Урлă каçма пулать»,— тет.
Кĕпер урлă каçсанах,
Утма çулпа утсанах,
Хăрнă юман хўттиниче
Курать çĕрпўрт ларнине.
Улăп кĕрет çĕрпўрте.
— Саламлатăп пурне те!—
Тесе хыттăн вăл калать,
Çĕре çити пуç таять.
Унта виç çын. Виççĕш те
Чăлахсем пек хĕнлĕхре,
Тухнă этем шутĕнчен.
Куçĕ шăтса юхнăран
Шурпуçĕ сĕм-суккăрах.
Тепри вара кукăрскер,
Сăнран çирĕм çулхискер.
Ун чĕлхине татнă пуль?
Çăварĕнче чĕлхи çук.
Сăмахне те çавраймасть,
Халап-юмах çапаймасть.
Виççĕмĕшĕ — каска пек,
Вăй-халран та маттур тен.
Анчах темшĕн хăлхасăр,
Çынна пăхать кăмăлсăр.
Паллах, вĕсем пĕр-пĕрне
Анланмаççĕ нимĕн те.
Улăп шутлать ăшĕнче:
«Ăнланмарĕç мана та,
Вĕсемпе мĕнле калаçас?
Юрра кашни юратать,
Ăнкармашкăн тăрăшать,
Пуç мимине тасатать,
Çăралатса хăварать.
Хаярлăх та юрăран
Лăпланать тет кайранрах.



Хăш-пĕр юрă чĕрене
Ларса юлать чи тĕпне.
Хумханмалла юрласан,
Тен, ăнланĕç мана та.
Малтан юрлас çак юрра:
«Хура пике, çĕмĕрт куçăм,
Çурхи чĕкеç, эс асăмра.
Ял-ял тăрăх ал ĕç туса,
Сăмах тухрĕ сана савса.
Кук-кук, кук-кук,
Чăпар кайăк,
Çурхи чĕкеç савмасть мана.
Çырă пике, кăвак куçăм,
Шăпчăк кайăк, эс кăмăлра.
Ял-ял тăрăх ал ĕç туса,
Сăмах кайрĕ сана савса.
Кук-кук, кук-кук,
Чăпар кайăк,
Шăпчăк кайăк савмасть мана.
Сарă пике, мерчен куçăм,
Саркайăкăм, эс чĕрере.
Ял-ял тăрăх ал ĕç туса,
Чапа тухрăм сана савса.
Кук-кук, кук-кук,
Чăпар кайăк,
Саркайăк та савмасть мана».
Виç чăлаха тинкерсе
Улăп пăхать хĕрхенсе.
Анчах вĕсем çав-çавах,
Хăнк туни те палăрмасть.
Улăп тăсать юррине,
Паттăрсенчен илтнине:
«Эпир ĕлĕк ача чухне
Утланайман ут çине,
Халĕ эпир çитĕнтĕмĕр,
Парăнмастпăр ютсене.

Иксĕр çурăм йĕтĕн пур,
Сире лама шухăш пур,
Арлăр, тĕртĕр шур çип пирне,
Касса çĕлĕр кĕпесем.
Туран анать шурă кимĕ
Шур явлавне вĕçтерсе,
Тухăр пăхăр, ваттисем,
Ĕмĕр иртмест тетĕр-им?»
Виçĕ паттăр ыйхăран
Вăраннă пек туйăнать.
Çамрăк чăлах аллипе
Шăлса илчĕ çук куçне.
Тепри вăра чышкине
Чăмăртарĕ иккĕшне.
Шурпуç кайрĕ улшăнса,
Çур ĕмĕрне чакарса.
Тарать халь вăл юманла,
Кĕçех вăрçса каясла.
Улăп каллех юр юрлать,
Сасси тухать савмалла.
Иккам манмасть амăшне
Кăкăр сĕтне çинĕрен.
Вĕсем ĕнтĕ ача мар,
Юрлас мар-и çапла ман?
«Анне мана çуратнă,
Кăкăр сĕтне çитернĕ,
Сарă хĕвел хăй пулса
Ĕмĕрлĕхе ăшăтнă.
Анне мана пийленĕ,
Чĕрçи çинче сиктернĕ.
Тулли уйăх хăй пулса
Кун-çулăма сыхланă.
Анне мана ӳстернĕ,
Лăпка-лăпка юратнă,
Кĕмĕл çăлтăр хăй пулса
Пурнăç тытма вĕрентнĕ.



Анне мана ӳстернĕ,
Ӳссе çитсен каланă:
Амăрткайăк пулсамăр,
Сăртсем çинче вĕçсемĕр.
Амăрткайăк пулаймарăм,
Сăртсем çинче вĕçеймерĕм.
Шăпчăк кайăк пулайăп-ши,
Эп халăха юрайăп-ши?»
Чăлахсем халь — паттăрсем,
Уй варринчи юмансем!
Улăпа чуптăваççĕ,
Улăпа тав тăваççĕ.
Улăп вĕсемпе савăнать,
Çав вăхăтрах калаçать:
— Эпĕ килтĕм çак енне
Аслă Атăл хĕрринчен.
Çак енне çул тăсиччен,
Сĕм вăрмантан тухиччен
Эп тĕл пултăм шурпуçпа,
Сăмахларăм эп унпа.
Вăл каларĕ: «Çынсене
Усал Майрус пĕтерет.
Кайса çăл-ха вĕсене.
Чăн малтан çăл пикене,
Нар питлĕ Элпинене,
Сар тĕнчерен килнине.
Маçик ăстаç ăстине
Çав хĕр кăна пĕлет тет».
Унччен манăн çула май
Виç чăлаха çăлмалла.
Çав чăлахсем... Эсир вĕт?
Пĕлес килет сирĕнтен:
Майрус Маçик ăстаçа
Ма курайман çав таран?
Чăлах пулнă çынсенчен
Пĕри калать ерипе:

— Маçик ăстаç патĕнче
Эпир пулнă хăнара.
Ун чух пире сăмах май
Вăл пĕлтерчĕ çакна та:
«Эп илтсеччĕ ĕлĕкрех
Асаннерен виличчен —
Тин çеç тунă кĕслепе,
Кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек,
Çĕр те пĕр пин кĕвĕ тет
Каласассăн канмасăр,
Çĕр те пĕр пин юрă тет
Юрласассăн кĕслеç тет.
Аслă Чăваш çĕрĕнчен
Никек тухса тарать тет.
Чăвашсене никекрен
Хăтарас тенĕ ĕмĕтпе
Маçик ăстаç киленнĕ,
Ĕçе хастар тытăннă.
Çитмĕл çичĕ çĕрте вăл
Хатĕрленĕ чăрăшсем,
Çитмĕл çичĕ çĕткен вăл
Хĕрсе пухнă витрепе.
Çитмĕл çич хут йывăçне
Ислетнĕ вăл çĕткенре.
Çитмĕл çич кун хушшинче
Ăна Маçик типĕтнĕ.
Çавна Майрус пĕлнĕ те
Кураймасăр вилесле
Шыранă вăл ăстаçа,
Шап-шур пуçлă чăваша.
Ашкăнса, хĕн кăтартса
Хуçасшăн пулнă Маçике.
Çавна ăстаç пĕлнĕ те
Тарма тухнă инçете.
Инçе çула пире те
Маçик чĕнчĕ хăйпеле.



Килĕшрĕмĕр Маçикпе
Çула пĕрле тăсмашкăн.
Çав вăхăтрах ирхине
Пикене тĕл пултăмăр.
«Çĕр айĕнчи тĕнчерен,
Патша хĕрĕ Элпине», —
Терĕ пире сарпике,
Çав вăхăтрах çухалчĕ.
Амăрткайăк вăл пулчĕ,
Сарса ячĕ çунатне,
Ларăр терĕ пурне те.
Виççĕмĕр те Маçикпе
Ларасшăнччĕ ун çине.
Вĕçсе кайма нулмарĕ,
Майрус çитрĕ вĕçтерсе.
Этем сăнне илменрен
Амăрткайăк пикене
Асамлăхпа çĕнтерчĕ.
Куçне-пуçне çиçтерчĕ,
Ятламашкăн тытăнчĕ.
«Манне чуна кăларасшăн,
Саркаланса пурнасшăн?
Маçик патне, ун çĕрпÿртне,
Эсир кĕнĕ виççĕр пĕрле.
Тавăрмалла ман та сире.
Ирсĕр ĕçе тытăннишĕн
Ман тавăру — вăт çакăн пек:
Выльăхсем пек ĕмĕр пурнăр,
Пĕри — куçтăр чĕлхесĕре,
Тепри вара — хăлхасăра,
Виççĕмĕшĕ — сĕм-суккăра.
Кил ăстине ĕмĕрлĕхе манăр.
Сăмах çапса ларсассăн та
Пĕр-пĕрне ан ăнланăр.
Кĕлре пăрçа пуçтарса
Асапланăр виççĕр те.

Кĕпер урлă çын каçсан,
Эсир ăна ăнлансан,
Ыталаса чуптусан,
Ман асамлăх сирĕнтен
Çав кунтан тин сирĕлет.
Ун пек çын халь çуралман,
Çуралма та пултарман».
Çак çĕрпӳртре виççĕр çул
Хĕн куртăмăр — чăтма çук.
— Маçик пирки кала-ха,
Ăна ăçта тупмалла? —
Пӳлчĕ Улăп йĕкĕте.
— Эсĕ мана ан пӳл-ха,
Пар-ха сăмах ваклама.—
Майрус Маçик мучине
Татса хучĕ ихĕрсе:
«Эсĕ, Маçик, ман тăшман.
Сан пек тăшман ман пулман.
Санра чăваш ĕмĕчĕ.
Çав ĕмĕте ирĕкпе
Пăмасассăн... тĕрмере
Çĕрсе выртан ĕмĕрех.
Унта выçса хăрăнсан,
Сывлăшсăр хыт аптрасан,
Чăваш халăх ĕмĕтне
Эс парăн-ха ирĕкпех.
Ыттисем пек эсĕ те
Кĕтен пуль-ха йӳтеççе
Пĕр-пĕр çĕрте, Чăвашра,
Çураласса паттăра
Кĕтех, кĕтех эс ăна,
Унччен кăнан ман патра.
Паянтан çак çăлкуçран
Вут-хĕм сапма пуçласан,
Çичĕ çухрăм сарăлса
Йăс шыв юхĕ шарласа.



Хаярланать йăс шывĕ,
Тĕмсĕрсемпе вăл тулĕ,
Ман сăмахран вăл тухмĕ.
Пĕвелетĕп эп ăна
Шыварманне аварма.
Вăл тыр-пулсем авăртмасть,
Унта çу та çапăнмасть,
Çăм та унта таптанмасть.
Эпĕ лартнă арманта
Авăртăнать çăмарта.
Çăмартасем Чăвашра
Çителĕклĕ — мăй таран.
Çăмартасăр юлсассăн,
Халăх пĕтет тĕпрен вăл.
Тĕпрен пĕтнĕ халăхра
Аçтан паттăр çуралать?»
Каларăм мĕн пĕлнине,
Урăх ним те пĕлместĕп.
Пикепеле Маçике
Çăлсан питĕ аванччĕ.



# *Çирĕм иккĕмĕш юрă*

## УЛĂП МАÇИК МУЧĔШНЕ ТĔРМЕРЕН ХĂТАРНИ

***Улăппа Ахплат паттăр.***
***Вĕсем Майрус арман пĕвине, арманне йĕлĕнтерессĕ, Элпинене çăлассĕ***

Улмуççи айне çул турăм,
Çулçишĕн мар, улмишĕн,
Çĕр-çĕр ялта эп пултăм,
Хамшăн мар эп, халăхшăн.
Хайлавсене, хаклине,
Улăп çиничен хывнине,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтартăм,
Мерченлетме якатрăм.
Мерчен-юррăм, ян янра
Улăп ĕçне çутатса!
Улăп кĕпер патĕнче,
Ятсăр мăн сăрт айĕнче.
Ун пуканĕ — тунката.
Пуçне ватать шутласа:
«Мĕн тумалла кĕперпе,
Мĕнле тупас пикене?!»
Хăй çине хăй тарăхса
Сăрта çапать аптраса.
Сăрт çурăлсан çурмаран —
Çичĕ татăк пулать çав.
Пĕр татăкĕ — сар пичке,



Кăшăлĕсем пит хитре.
Пички туртать çĕр патман,
Çўллĕ вată юманран.
Сар пичкенне пĕр тĕпне
Улăп çапса çĕмĕрет.
Унта ластак, хураскер,
Пăхма питĕ тискерскер.
Çапах ăна уçать те
Курать серте курăкне.
Серти йўçнĕ пăнчăхса,
Кăвакарнă ытла та,
Çурать сăмса шăтăкне,
Чăтма май çук нимле те,
Улăп капмар пичкене
Пересшĕн йăс шывалла.
Пичке каять чĕтресе,
Ун хыçĕнчен шавласа,
Çав вăхăтрах ластакĕ
Вут-хĕмпеле хыпăнчĕ,
Маттур каччă курăнчĕ.
Сар пичкерен тухсанах
Вăл пуçларĕ калаçма:
— Эпĕ Ахплат, Чăвашран,
Аслă Çавал енĕнчен,
Çўлти Кăнаш ялĕнчен.
Персе çитрĕм çак енне
Çăлма халăх ĕмĕтне.
Эсĕ вара кала-ха,
Кам пулатăн? Кунти мар?
Улăп тетĕн? Илтмен ят.
Паллашрăмăр сăмах май.
Эсĕ мана çăлман-тăк —
Çак пичкерех çĕреттĕм.
Мана Майрус асамла
Тытсассăнах çакăнта,
Чăваш халăх ĕмĕтне

Вăйпа çăлма килнĕшĕн
Муталарĕ эрнеччен.
Майрус ютра пулмалла.
Çавăнпа усă курмалла.
Вăл каялла киличчен,
Асамласа яриччен
Кĕпер урлă каçмалла.
— Анчах пире каялла
Вăл каçарма шутламасть.
Кĕпер çинчи кавирĕ
Чăн та вара эсреллĕ.
Чунăмсене илмешкĕн —
Пире шыва утасшăн,—
Терĕ Улăп Ахплата.
Ахплат хирĕç хуравлать:
— Кавир çӳппе хупланнă,
Илемлĕхне çухатнă.
Çав çӳп-çапра асамлăх,
Майрусăн çĕн пăявĕ.
Кĕпер мĕншĕн каçарать
Вăл хăй урлă чăн малтан?
Каçакансем хĕрхенсе
Ана çӳпрен хăтарĕç
Тесе шутлать ялан вăл.
Каçакансем ун çинчен
Шутламаççĕ нимĕн те.
Кавир çавăншăн тарăхса
Каçакана аякка
Шыва тĕртме тăрăшать.
Кавир çинчи çӳп-çапа
Ак çак йӳçек хăйпăтать.
Кайран ăна хывăхпа
Тасатмалла васкаса.
Хăй хăварнă вырăнчех
Ахплат тупрĕ хывăхне.
Хăйпе илчĕ пурне те.



Темле шăршлă пулсан та,
Хăсăк чуна çурсан та
Улăп йăтрĕ пичкене,
Пăнчăхланса кайнине.
Утрĕç кĕпер еннелле.
Кавир курсан вĕсене
Авкаланма пуçларĕ,
Ик вĕçĕпе çĕкленсе
Çатăлтатма тытăнчĕ.
Улăп ĕçре ӳркенмест.
Кĕпер çинчи кавире,
Урса кайнă пулсан та,
Çăвать серте йӳççипе.
Тĕлĕнмелле кавиртен:
Çунă вĕçĕ ĕлккенрен
Лăпкă çурхи каççенчен,
Çепĕç çеçпĕл чечекрен.
Çуман вĕçĕ еккинчен
Чăрсăр вĕри çĕленрен,
Урать сĕмсĕр путсĕрле,
Утма май çук нимле те.
Ахплат сапать хывăхне
Çунă кавир тăршшипе.
Кĕпер урлă каçсанах
Пăхрĕç кавир еннелле.
Вăл вырăнтан тапранман,
Выртать кăна йынăшса.
Ахплат илчĕ сывласа,
Кăкри тулчĕ сывлăшпа.
Кайран вĕрчĕ тăвăлла
Кавир тĕсĕ кĕриччен.
Кавир çинче пин чечек.
Чечекĕсем тĕслĕрен —
Хăш улăхра ӳснĕ тен.
Кавир выртать тăсăлса,
Сар хĕвел пек ялкăшса.

— Мĕншĕн шыва иккĕшне
Ывăтмарăн вĕсене?
Кĕпер хăртать чĕлхипе
Ялтăракан кавире.
Кавир ăна хирĕçлет:
— Итле мана тимлесе.
Майрус хĕртен хăраса
Ма тивмелле вĕсене?
Ун та шалчи тулать ак,
Унтан чăваш хăтăлать.
Улăп килчĕ çак енне.
Хаклă кавир эпĕ те.
Çук халь манра хаярлăх
Çынна сиен тумалăх.
Шывĕ çавна илтсенех
Хум кăларать тинĕсле.
Анчах кавир тĕркере,
Йăс шывĕнчен инçетре.
Тĕрке пулчĕ пысăк кăк,
Ун хысĕнчен çăмкайăк,
Сарса ячĕ çунатне —
Икçĕр хăлаç пулать тен.
— Ларăр! Инçе вĕçмелле,—
Терĕ кайăк пурне те.
Кайăк вĕçет тӳпере
Айра сăрта куриччен.
Кайăк анчĕ çĕр çине,
Кĕçех таçта çухалчĕ.
Сарă пике курăнчĕ.
Пикен сарă çӳçĕсем —
Чĕмпĕр енчи кăлкансем,
Куçне сенкер тӳпе тен.
Куç харшисем çавăн пек,—
Сарă хĕвел шевлисем.
Пĕвĕ — яштак хурăнран,
Тути — пиçнĕ çырларан.



Сасси — çитмĕл кĕвĕрен,
Кĕслесенчен илнĕ тен.
— Кунта вĕçсе çитнĕрен
Ларма лекрĕ çĕр çине.
Мĕншĕн тесен çакăнтан
Чару чикки пуçланать.
Çав чаруран каçсанах
Вăй-хал пĕтет самантрах,—
Терĕ пике кӳренсе.—
Юхан йăс шыв хумĕсем,
Куç умĕнчех урнисем,
Майруспа тĕл пулаççех,
Мĕн курнине калаççех.
Вăл çакăнтан иртет-ха,
Тĕл пулмалла унпа ман.
Вăхăт та пур калаçма.
Пĕр-пĕринпе паллашар.
Патша хĕрĕ. Элпине —
Сарă тĕнче тенинчен.
Маçик мучи килĕнче
Кĕсле кĕвви янратчĕ.
Ун пек кĕвве ман енче
Каламаççĕ темелле.
Пĕрре, тĕттĕм каçхине,
Сар тĕнчерен улăхсан
Мучин кĕсле кĕввине
Илтеймерĕм аякран.
«Мĕскер пулнă ват çынна,
Курас килет ман ăна»,—
Терĕм те эп хайхине
Кĕтĕм вара ун килне.
Пĕлтĕм унăн хуйăхне,
Майрус усал ĕмĕтне,
Ана пĕтерес теннне.
Эп çăмкайăк пултăм та
Ларма хушрăм хам çине.

Эпĕ кайăк пулсанах,
Майрус мана тапăнчĕ,
Асамлăхпа пĕтерчĕ.
Эпир — камсем пулнине,
Мĕнле асап тӳснине
Куртăн хăвăн куçупа,
Каламастăп çавăнпа.
Эпĕ кунтан кайиччен
Тархаслатăп чĕререн:
Маçике те çăлсамăр,
Ана кун-çул парсамăр.
Вăл халь Майрус çĕрĕнче,
Çĕр айĕнчи тĕрмере.
Çăмарта пек ун тĕрми,
Есмелли шыв унта çук,
Çимелли те пĕтрĕ пуль.
Çав Майруса çĕнтерме,
Ун тĕшмĕшне пĕтерме
Май-меслетне пĕлмелле.
Майрус чее, усал та,
Сулахайран асамлать.
Сылтăм енчен — вăл айван,
Нишлĕ çын пек вăл унтан.
Çавăнпа та усала
Йăс шыв çинчи арманта
Тытсам ялан сылтăмра,
Куçран ан яр эс ăна.
Çав вăхăтрах аякран
Вут-хĕм килет капланса,
Çавна пике курсанах
Çапла калать васкаса:
— Майрус килет кунталла
Асамланса хĕм сапса.
Ахплат, хăпар сăрт тăрне,
Эсĕ Улăп — сăрт хыçне.
Пике чакать ерипен



Чару чикки умĕнчен.
Вут-хĕм ăна хăвалать,
Хуса çитсен сăмахлать:
— Ман сăмахран ма тухрăн,
Ик чăваша ма çăлтăн? —
Майрус ятлать пикене
Шăнăçайман çиллĕхпе.—
Çавăншăн эп халь сана
Çунтаратăп çакăнтах! —
Сулахая ыткăнать.
Сылтăм енчех юлнăран
Кӳлĕ пулать Элпине
Урлă-пирлĕ хум ярса.
Вут-хĕм пулать мăн пулă,
Кĕлеткерен — Сăрту тен.
Çăварне карать янкăшса.
Шыва ĕçет тарăхса.
Анчах шывĕ сăртланать,
Сăрт çăварта вырнаçмасть.
Пулă каять антăхса,
Кайран çурлать шартлатса.
Сылтăм енче тăнăран,
Хыпкан мăнтăр пулнăран
Майрус каллех хĕр пулать.
Сехри хытă хăпнăран
Тарать вăл халь хăраса
Хăй йăвине çухăрса.
Ирсĕр Майрус усалшăн
Чару чикки — çăлăнăç.
— Тытаймарăм ирсĕре,—
Терĕ пике Элпине,
Вара Улăп паттăра
Астăн парать васкаса:
— Тухатмăшсен туйĕнче
Майрус пулсан çур çĕрте
Асамлăхне ӳстерет.

Уи чух сана ҫĕнтерет.
Ҫавăнпа та кунтанах
Халех васка армана.
Эх, вăхăтăм кĕскерех,
Пулăшаймăп ҫавăнпа.
Сар тĕнчене вĕҫмелле.
Улăп калать юлташне:
— Ахплат, ăсат пикене.
Майрус килне аркатма
Кайран васка ман пата.
Уйчен эпĕ арманта
Сăмах хушăп Майруспа.
Пире пĕрле вăл курсан
Шикленсе хыт сыхланать.
Ҫавăнпа пĕрле утар мар.
Улăпраскать армана.
Шывармаиче вăл пулать.
Мĕн курниичен арманта
«Тĕлĕкре-и эпĕ?» тет.
Пилĕк пĕрне речĕпех —
Пурте тулли тупĕрен.
Ҫăмартисем тĕрлĕрен:
Ҫынсен, выльăх-чĕрлĕхсен,
Тискер кайăк-кĕшĕксен.
Улăп пĕрне чашкине,
Чĕн кантрапа ҫыхнине,
Туртса ҫыхрĕ кашнине.
«Сивĕ ҫапать хыҫалтан,
Тен, ҫав ирсĕр усалтан?»—
Улăп шутлать ăшĕнче.
Юрн калать ҫакăн пек:
— Хуҫи ҫук та, ĕҫ ăнмасть.
Ĕҫе кĕме май пулмасть.
Майрус ҫавна илтсенех
Уҫать арман алăкне,
Улăп патне ҫитсенех



Хĕр ҫаптарать сăмахне.
— Арман хуҫи эпĕ-ха,
Майрус теҫҫĕ-ха мана.
Эсĕ ĕҫе кĕресшĕн?
Мелник мана кирлĕ-ха.
Таса, ăшă кăмăлпа
Ĕҫсем пирки калаҫар.
Эс халь лар-ха ҫавăнта.
Сылтăм енче лайăхрах.
— Сулахайра уҫăрах,—
Терĕ Улăп Майруса.
— Эп пĕчченех пурнатăп,
Кичем мана, чăнахах.
Чăваш халăх ҫĕрĕнчен
Килтĕм тетĕн. Ман енчен —
Кăмăл кăна. Паянтан
Мелник пулан ĕнтĕ ман.
Кайран, ах, тен — чун туртсан...
— Сӳпĕлтетсе лармашкăн
Ман вăхăт ҫук, чăнах та.
Эс хĕрарăм, ҫапах та
Ыйтасшăн-ха эп ҫакна.
Ҫак арманта ҫич пĕрне,
Ҫăмартасем ҫавăнта.
Ҫав ҫăмарта хушшинче
Ҫын ҫăмарти сахал мар.
«Кун пек паттăр Чăвашра
Ҫуралнă хăш вăхăтра? —
Майрус шутлать хăраса,
Саппунĕпе тар шăлса.—
Мана тытать сылтăмра.
Асамлаймăп эп ăна.
Вăл йĕкĕт-ха, айван-ха,
Улталăпах ҫак яша».
Майрус тăсать хăйĕннех
Илĕртмешкĕн йĕкĕте:

— Тип ҫаварпа вăхăт та
Час иртмест-ха ҫакăнта,
Мелник пулса ĕҫличчен
Хăна пулсам ман патра.
Кайран сана шанниппе...
Кайăпăр-ха пĕр ҫĕре!
Аҫта тетĕн? Тĕрмене.
Шывармань мăн пӳртĕнче.
Унта тăшман ларать ман.
Шăлман тĕпел кукринче
Улăп вайпах Майруса
Сылтăм енчен уттарать.
Утасшăн мар вăл енчен.
Майрус усал кĕвĕҫет.
Униăн Улăп кăшкăрать:
«Утмалла сан сылтăмра!»
Сас илтĕнчĕ пĕр тĕлте —
Сакайĕнчен тухать пек:
— Ҫын пар! Питĕ выҫнăран
Хырăм хытă касăлать!
«Ахальтен мар вăл мана
Йĕр еннелле хĕстерет».—
Улăп шутлать ăшĕнче.
Хĕре тĕртет йĕр ҫине.
Майрус ӳкет, йĕр пĕтет,
Сакайнелле хĕр вĕҫет.
Унта йăс шыв ахăрать,
Майрус ҫунать, ҫухăрать.
— Кун пек арман кирлĕ мар,
Унтан часрах хăтăлас,—
Терĕ Улăп Ахплата
Курсассăнах юнашар.
Ярса илет армана,
Вăркăнтарать шывалла.
Хĕвел анать пулсан та,
Икĕ паттăр васкаса







Пĕве айне тухиччен
Çĕр чаваççĕ хыпăнса.
Улăп арман пĕвине
Ўпĕнтерет хайхине.
Анчах Йăсшыв иртĕхсе
Çаплах юхать кĕрлесе.
    Çăмарта тĕрме вырăнтах,
Алăксăрах, хăямат,
Ашне кĕрсе кураймăн.
Çăмарта тĕрме ытамра,
Унпа Улăп вăрманта.
«Мĕнле уçас?» — тет ăна.
— Улăп,— терĕ пирĕшти[1],—
Ан пăшăрхан пĕрре те.
Çăмарта пек тĕрмене
Уçма пĕлеп эпĕ те.
    Пăшăлтатать, тем калать,
Ана Улăп ăнланмасть.
Тĕрме ванма тытăнать,
Маçик мучи курăнать.
Шурпуç пăхать Улăпа,
Нихçан курман çамрăка.
Ыйту парать çакăн пек:
— Эсĕ ăçтан? Хăш енчен?
Кăку камран? Пĕлтерсем!
— Кăк тымарĕ — пĕр енчен —
Ват Услати пулать ман.
Тепĕр енчен — Чĕкеçрен,
Анне пулать-ха вăл ман.
Вĕсем вилнĕ тахçанах.
Çавра кўлĕ хĕрринче
Пурăнаттăм пĕчченех.
Паллакансем — пурĕш те

[1] Пирĕшти — çынна сыхлакан турă. Вăл çын хулпуççи çинче ларать.



Улăп тесе чĕнеççĕ.
— Улăп тетĕн? Пит аван,
Ўксе юлман аçуран.
Пурнăçăм ман пит кĕске,
Куç та курмасть нимĕн те.
Çак кĕслене виличчен
Мĕнле туса пĕтерес?
Чĕре çунать çавăнпа.
Ĕмĕтĕм ман çаплаччĕ,
Мĕн пурĕ те пĕрреччĕ.
Çĕн кĕслепе пĕчченех
Çĕр пин те пĕр кĕвĕсем
Калаттарса талăкпе,
Çĕр пин те пĕр юррăм ман
Ун кĕввипе сăвлашсан,
Аскăнакан Йăсшыва
Йăвашлатса юхтарса,
Аслă чăваш икекне
Пĕтересшĕнччĕ пĕтĕмпе.
— Мучи, уншăн ан кулян,
Сăмах хушма ирĕк пар.
Эсĕ мана ăс парса
Тума майне кăтартсан,
Çĕнĕ кĕсле ман алра
Янратех-ха шăпчăкла.
Ĕçе халех тытăнар.
    Куççăр Маçик мучĕшпе
Улăп тăвать çĕн кĕсле,
Карать ăна хĕлĕхпе.
Çичĕ хĕлĕх çитмест-çке!
Маçик калать Улăпа:
    — Ан кулянсам уншăнах.
Ун вырăнне çўçĕме
Татса карсам çиччĕшне.
Çавсем хаклă темрен те.
Вĕсем — чăваш ĕмĕчĕ!

Кăвак çÿçĕм хушшинче
Упранчĕç ку тарниччен.
Çĕн кĕслепе утсамăр
Йăсшыв хĕрне çирĕппĕн.
Çĕр пин те пĕр кĕввине
Калаттар çав кĕслене.
Çĕр пин те пĕр юрăпа
Эсĕ ăна хăватла.
Ун чул кĕсле каласан,
Ун чул юрă юрласан —
Чăваш ĕмĕчĕ вăй-халра,
Чăваш инкекĕ çÿп-çапра.
Йăсшывĕ те лăпланĕ,
Унпа халăх ыр курĕ.
Улăп Маçик пусĕнчен
Ĕмĕтсене татсанах,
Маçик каять йăванса,
Чунĕ вĕçет Чăваша.
Чăваш халăх йăлипе
Çĕре парать Маçике.
Чăваш халăх ĕмĕтне
Карать çĕнĕ кĕслене.
Йывăр хуйăхпа кайран
Улăп тухать шыв хĕрне,
Ларать кĕсле калама,
Юрлать кĕвве вăйлатма.
Кĕсле янрать таврара,
Маçик чапĕ те унта,
Таш кĕвви те çавăнта.
«Мĕнле калать кĕслине,
Çепĕç юрлать юррине?
Кун пеккине çакăнта
Эпир илтмен нихçан та»,—
Теççĕ пурте таврара —
Саркайăк та, шăпчăк та.
Юханшыв та шавлăхне
Тĕлĕннипе пусарать.
Улăп паттăр юрри те
Мăн хумсене салатать.
Йăс юханшыв вырăнне
Юхать тăр шыв. Чаплă-çке!
Улăп чунтан савăнать.
Кĕсле çинчен куç ямасть.
Çĕр пин кĕвĕ шăрансан,
Çĕнĕ кĕсле йынăшать.
Çав вăхăтрах ĕретĕн
Хĕлĕхĕсем татăлчĕç.
Юлчĕ кăна çич хĕлĕх,
Чăваш халăх ĕмĕчĕ.
— Пин-пин кĕвĕ каларăм,
Çĕр пин юрă юрларăм,
Юлчĕ кăна пĕр кĕвĕ.
Юрламалли ман ĕнтĕ
Юлчĕ кăна пĕр юрă.
Тата кĕсле каласан,
Тепĕр юрă юрласан
Татлĕç ĕмĕт хĕлĕхсем.
Халăх юлĕ ĕмĕтсĕр.
Инкек юлчĕ Чăвашра.
Çавăнпа эп айăпра,—
Тет те Улăп кулянса
Кĕсле парать Ахплата.
— Хаклă кĕсле ак çакă.
Унта халăх ĕмĕчĕ.
Ăна усра ăстăнпа.
Улăп йывăр шухăшпа
Çулне тăсрĕ сукмакпа.



# *Çирӗм виççӗмӗш юрă*

## АСАМАТ УЛĂП ВАЛЛИ ХĂРТПА АЙПĂЛТИ ТУНИ

***Улăп тамăк хуçине туртана кӳлсен Тимӗр тăва Асамат тимӗрçӗ лаççине леçет. Тимӗр тăва тупăтасан халтан унтан укçа тăкакан кушелкке, вуçене пӗлмен çурла, чӗрчунсене вӗлерсе çӳрекен сăнă тухать. Çавсем Улăпа пӗри те килӗшмеççӗ, вӗсене пурне те аутта перет. Хăртпа айпăлтине çеç илет вăл.***

Йӗлтӗр турăм йӗлмерен
Тусем çинче ярăнма,
Туя касрăм вӗçӗнчен
Çӗн туяпа çул тăсма.
Ыйăх чăптн пуличчен,
Ялта ята кӗриччен
Каяр мар-и тимӗрçе
Асаматпа пуплеме?
Асамат хăй лаççинчех
Чаплăн ларать сак çинче.
Унăн паян чаплă кун,
Ун лаççинче хăна пур.
Хăни Улăп, хаклăскер,
Пит инçетрен килнӗскер.
Савса пăхать Улăпа,
Сăмах ваклать кăмăлпа.
— Эп тем курнă пулсан та,



Тӗлӗнтертӗн эс мана.
Манман-и эс çав куна?
Илетчӗ вăл ман чуна.
Хӗвел тухса сарăлсан,
Çав кун утрăм лаççăма.
Вучахăма чӗртрӗм те
Хӗртме хутăм тимӗре.
Çав вăхăтрах тем пулчӗ,
Çӗр кисреннӗн туйăнчӗ.
Арамçи сăрт, чаплăскер,
Пин çул лăпкă ларнăскер,
Çав кун сивчир ернӗ пек
Хыт чӗтресен вис сехет,
Çиçӗм çиçрӗ ялтăртса
Çунтарасла тӗнчене.
Аса çапрӗ шартлатса,
Çуй пусланчӗ темелле.
Çумăрӗ те чашлатса
Ун чух çурӗ юхтарса.
Ун пеккине, чăнах та,
Эпӗ курман нихçан та.
Сăртри тарăн кӳлӗсем,
Юханшывсем, çăлкуçсем
Анаталла юхнă май
Чул йăтăнчӗ пит нумай.
Сăрт айӗнчи уй-хирсем,
Шыва кайрӗç акнисем.
Эх, шыв таппи хăпарать!
Йăлтах ăнран кăларать
Йӗкӗте вăл. Кӗтӗве
Шыва ярать — пӗччен те.
Эсӗ, Улăп, ăстăнна
Çухатмарăн. Вылья̆хна
Йăта-йăта тип çӗре
Пуçтартăн эс пӗчченех,
Маттур пултăн, Улăпăм,

Сана пăхса савăнтăм.
Лăш усмарăн аллуна.
Тĕлентертĕн мучуна.
— Эс ун чухне тăрăшса
Пулăшман-тăк вăхăтра,
Çур кĕтӳпе юлаттăм,
Халăха шар тăваттăм.
Хăв ыввăннă пулсан та
Темле йĕпе-сапара
Лаçран тухрăн васкаса
Кĕпер хывма лапамра.
Арамçнрен пуçласа
Сăр шыв хĕрне тухмалла.
Асталăхна кăтартрăн.
Кĕпер тума ĕлкĕртĕн.
Çав кĕперпе выльăха
Хуса кайрăм тăвалла.
Выльăх-чĕрлĕх, чăнах та,
Çухалмарĕ ниçта та.
— Тăвас тесех кĕперне
Хыт тăрăшрăм ун чухне.
Халь вăл уйăх çĕрĕнче,
Кĕмĕл кермен умĕнче.
Кун-çулăм ман кĕскелет.
Кăнттамланать ал çавăрнĕш
Чĕре тапмĕ хальхи пек.
Куç вăйĕ те ман чакĕ.
Эх, юлать ман пĕр ĕмĕт,
Пурнăçланмĕ вăл ĕнтĕ.
Ĕмĕтĕм ман çакăн пек:
Виличчен эп тăвасшăн
Тимĕр туран япала.
Ĕлек ăна хам лаçра
Сĕтĕрме ăс çитмерĕ.
Вăт çав мана, ăстаçа,
Кӳрентерет тем тĕрлĕ.



Тимĕр тăва яш чухне
Илме кайрăм çуркунне.
Ытла айван пулнăран
Пит хĕрелчĕ намăсран.
Манăн йăла ак çапла:
Ĕçе пĕр хут тумалла.
Çавăнпа та çав енче
Урăх пулман пĕрре те.
Сăмах çӳрет халăхра:
Пĕр-пĕр кун тет Чăвашра
Çуралмалла нĕр пепке.
Вăл пулмасть тет лемшеркке.
Пепке ӳсет сехетпе
Чаплă паттăр пулма тет.
Ун пекки тет ĕмĕрте
Çуралать тет пĕрре çеç.
Вăт çав пепке çитĕнсен,
Çĕре тытсан кăвапинчен
Пусĕ тавра виç хутчен
Çавăрать тет пĕр-пĕччен.
Вилĕм çитет манăн та,
Кураймăп çав паттăра.
Курас пулсан эп ăна
Ыйтаттăмччĕ ак çакна:
Пит аякран-аякран,
Тимĕр тăва тухăçран
Илсе килччĕ ман лаçça.
Курас çук пуль эп ăна,
Ĕмĕт каять ман сая.
Çавăншăн хыт кулянап,
Чĕре хытă сурать ман.
— Эй, мучи, эс ан кулян,
Сăмахăма ăнлансам.
Тухăçра ман пулмаллах,
Тимĕр тăва тупмаллах.
Унта сан мĕн? Сăнчăр-и?

Ана мана памăн-ши?
Улăп илет сăнчăра
Пĕлĕт çине ывăтма.
Паттăр çумăр пĕлĕтне
Арканласан сăнчăрпа
Аякранах илтмелле
Касса хурать сăмахпа:
— Санра çумăр туллиех,
Çавах шу эс хушнă пек.
Çитер мана тухăçа!
Тимĕр ту пур çавăнта.
Мĕшĕлтетсе шăватăн,
Çичçĕр татăк пулатăн.
Çиле хыçа хăварсан
Часах киле таврăнан.
Пĕлĕт шăвать тухăçа
Çиле хыçа хăварса.
Улăп утать ун çинче
Каллĕ-маллĕ кунĕпе.
Улăп ытла йывăр та —
Пĕлĕт авнать шавласа.
«Аçа çапать тухăçра».—
Сăмах тухрĕ Чăвашра.
Çумăр çăвать чашлатса
Пушхирсене шăварса.
Çитмĕл çичĕ сăрт урлă
Вĕсем каçрĕç çул майлă.
Çитмĕл çичĕ тинĕс те
Пĕлĕт хыçĕ пулчĕ-çке.
Улăп тăрать тĕлĕнсе
Тимĕрлĕ ту умĕнче.
— Çак-и вара Тимĕр ту?
Кун пеккине тап та ут!
Ватсупнăлла чап-чалăш,
Çÿллĕшĕ те çĕр чалăш.
Улăп тăва майласа



Ик аллипе ытамлать.
Лăкать, туртать, пăркалать,
Çавах та вăл туртăнмасть.
Тăва çапать тăрринчен —
Ту çĕрелле путать пек.
Улăп шалтах тĕлĕнет.
«Манран шуйттан кулать, тен?
Апла пулсан мĕн латти!
Эп мăшкăла чăтап-и?!
Эпĕ ун пек этем мар,
Шуйттан кулли пулас мар.
Темле йывăр пулсан та
Çак ту пулать ман алра».—
Улăп шутлать ăшĕнче
Аллисене йĕпетсе.
Каллех тăва ытамлать,
Çĕклемешкĕн талпăнать.
Тăва туртса кăларсан
Алпа тĕпне хыпашлать.
Ак тамаша! Ай тур-тур,
Ту тĕпĕнче сăнчăр пур.
Улăп туртать тĕлĕнсе
Тимĕр тăва сĕтĕрсе,
Сăнчăр тăва турттармасть,
Татăласси палăрмасть.
Ту каялла шăвăнать.
Хăй вырăннех ларасшăн.
Сăнчăр тăрăх сас килет,
Сасса Улăп та илтет:
— Этем тамăк хуранне
Хăпартасшăн хăй патне.
Эпир çав пĕр этеме
Тĕп тумастпăр-ши вара?
Ана кунта антарма
Тăва туртар каялла.
Ту каялла шунăран

Улăп хытă тарăхать.
— Эй, шуйттансем, сăнчăра
Татса ярăр хăвăртрах!
Татмастăр-и? Эп сире
Хăлха чикки кашнине
Тăхăнтартап ансанах!
Илтрĕр-и ман сăмаха?
Пĕр шуйттанĕ, ватăскер,—
Вăл пуçлăхра çӳрет, тен,—
Хĕрсех калать темскер те.
— Вăл, иккен, ял ухмаххи.
Çавна кура сăмаххи.
Пире кунта тамăкра
Хăратасшăн пăспала.
Сăнчăр тăрăх антăрах,
Ӳксе пуçне çуртăрах.
Ана валли тамăкра
Вырăн та пур — пит пахи.
Ун пек мăшкăл сăмаха
Улăп ăçтан чăттăр-ха?
Улăп ватă шуйттана
Ыйту парать ак çапла:
— Вырăн пур тен ман валли,
Тамăкра хĕн курмалли?
Ак çак пур-и сан унта,
Чысран тухнă хуранта?
Янклаттарать хăлхинчен
Ват шуйттана ик енчен.
Шуйттан каять анраса
Ыткăнсассăн аякка.
— Кала, асар-писеркки,
Эсĕ тăва мĕн пирки
Çӳлти халăх сисиччен
Сăнчăрларăн айĕнчен?
Тимĕр тăва кунталла
Антаран мĕн сăлтавпа?



Хур тума-и ашкăнса?
Каçару çук суйкăна!
Йĕнлĕ çăмах çитерсен,
Шăратнă йĕс ĕçтерсен
Тамăк куран эс хăв та.
Сăмалу сан хуранта
Сиксе вĕрет пулмалла?
Ялтăртатса тăмашкăн
Унта мунча кĕретĕн.
Тамăка тĕп тăвасран,
Хăй сăвăр пек курнасран
Пуçлăх сĕрет пыл-çупа
Хăй чĕлхипе ыр пулма.
— Тимĕр тăвăшăн, тархасшăн,
Каçар пире айваншăн.
Мĕн ыйтатăн — паратпăр,
Тĕнче патши тăватпăр.
Мĕн чул халăх тĕнчере —
Пулать уру айĕнче.
Уншăн тăва кунталла
Антарттаран каялла.
Тамăк хуранĕ тĕпĕнче
Ялан шăтăк вис çĕртен,
Çавна эпир сапласа
Тухатпăр пуль ухмаха.
Вăл анчах мар: ун тĕпне
Тасатнăран кунсерен
Вут хуракан шуйттансен
Пур алли те купташка.
Вут чăтăмлăх — çак сăртра,
Пит чăтăмлă сапăкра.
Хурана çат çыпăçать.
Уншăн çуй та ним те мар.
Хуран тĕпне çавăнпа
Сапламашкăн пулăш-ха!
Хăв та пĕлен: тамăксăр

Тĕнче тени — пим мансар
Çынсем пулсан хăраксăр
Сăвапăрен тухаççĕ.
Нимĕссĕра кусаççĕ.
Пĕр-пĕрине ал парар,
Черкке тĕпне çутатар.
Тĕрĕссипе каласан,
Пирĕн ĕçсем пĕр тыттар.
Эп çылăхлă çынсене
Тамăк тĕпне турттарап.
Сăмалара витерсе
Суйăччĕнех хĕн кĕтартап.
Çылăх çынсем ĕçтан тени:
Эс аркатнă çынсеннчен.
— Виçелĕхлĕ сÿпĕлтет.
Аттту пуçна тем килет.
Ирсĕр ĕçÿ мин ĕçне
Тан пулать-и, юплешке!
Этем ачи çуралать
Тĕрмă куç пин тăп тата
Хĕн курма мар, ыр курма.
Ирĕклĕхре пурăнма.
Эсир, çылăх пăлĕтем,
Усал сывлăш таврашĕнчен,
Курайманстăр ырăлăх,
Хатĕр уяна çапăçма.
Этемлĕхе тарăхса
Хунăрлатăр асапна.
Çав вăхăтран çылăха
Кĕртме хатĕр алаках.
Унччен, кунтан кайиччен.
Эсĕ, этем хавăл тe,
Чăтаймастăн вĕсене,
Кăмак куçăм хупиччен,
Çĕре кĕрсе выртиччен
Çапăçатăн вĕсемпе.







Ырлăх ҫнеле тухатех!
Тытăп панă сăмаха,
Калле илмĕп эп ăна.
Ҫавăнпа та тамăка
Тустармастăп чăнах та.
Мана ушшăн ирхине
Кăларатăр ҫĕр ҫине.
Эпĕ каима выртиччен
Вĕҫертĕр-ха чăн малтан
Тимĕр тăва сăнчăртан.
Кайран вара ирхине
Утлантаран ху ҫине.
Ҫӳлти ҫутă тĕнчене
Кăларан эп хушнă пек.
Тамăк хуҫи тăнкăрпа
Утлантарсан Улăпа
Ҫут тĕнчене хăпарчĕ,
Ҫапла сăмах пуҫларĕ:
— Тимĕр тăва сăнчăрпа
Тамăкалла антарин
Мĕн тунн вăл? Вăрлани!
Эсĕ кĕнĕ айăпа.
Пирĕн енчи йăлапа
Мĕн вăрланă ҫавăнпа
Ҫӳреттерес ял тăрăх
Тир сӳтерме кантралăх.
Эй, вырнаҫ-ха туртана
Тимĕр тăва турттарма,—
Терĕ Улăп ҫиллепсе,
Ват шуйттана пĕҫертсе.
Тимĕрҫелле кайнă чух
Ват шуйттана хĕнеҫҫĕ.
Вăрă тесе ятлаҫҫĕ.
Тимĕр тушăн Асамат
Савăнчĕ-ҫке ăчалла.
Улăпа вăл тукшанпа



Тáва ҫапса ваттарать,
Тултарттарать вучаха.
Асаматра мăлатук,
Сунтал ҫинче тук та тук!
Вĕркĕҫ тени пит аван,
Туртатех пуль ҫĕр патман.
Ҫитмĕл ҫич тир шур чĕнтен
Вĕркĕҫ тунă Асамат.
Сунталĕ те хăй пĕччен
Туртатех пуль пин патман.
Виҫ талăкран кушелкке
Ҫиҫсе тухать вучахран.
Ăна туртса уҫсанах
Укҫа тăкнать михĕпе.
Улăп калать тимĕрҫе:
— Ҫак киревсĕр, ним те мар,
Ҫăткăн тăвать айвана,
Вăтанмасăр халăха
Ĕмме хушать ашкăнса.
Ай, ун пекки мĕн тума
Мана кирлĕ? Чун сутма?
Тытса перет вучаха
Кушелккене хурласа.
Вĕркĕҫ вĕрет тăвălла,
Кăмрăк ҫунать пушарла.
Ҫичĕ кунтан вучахран
Ҫурла тухать ярăнса.
Виҫе-мĕне ним пĕлмест,
Ҫын тыррине хĕрхенмест.
Вырать, ҫыхать, купалать,
Итем туса ҫаптарать,
Тыррисене сăвăрать,
Мăйăхсене тултарать.
— Ак ку тĕнче халăхне
Персе чиксе хăй айне
Кĕлмĕҫ хутаҫ ҫактарать.

Вĕри куççуль юхтарать.
    Улăп хуçать çурлана,
Вăркăнтарать вучаха.
Ярса илет вĕркĕçе,
Ана пусать çĕрелле.
Вĕркĕç вĕрет темскерле,
Тинĕс хумне çĕнмелле.
Тăхăр кунтан вучахран
Сăнă тухать ярăнса.
Сăна вĕçет вĕчĕхсе
Чĕрчунсене вĕлерсе.
Ватта-вĕтте хĕрхенмест,
Çамрăксене шеллемест.
Улăп сăнна хăвалать,
Тытсан ăна шарт! хуçать.
Пенĕ чухне вучаха
Улăп калать ак çапла:
— Сăнă тĕнче касмакки,
Халăх пуçне касмалли.
Унтан çутă тĕнчере,
Мал енче те кай енче,
Халăх выртса макăрĕ.
    Вĕркĕç вĕрет сар хĕрле,
Кăмрăк çунать йĕкĕтле.
Ăнчах хурăç пăлат мар,
Унтан вутхĕç пулаймасть.
— Унтан тăвар айпăлти[1],
Юлашкинчен — хăрт[2], чаплн.—
Улăп хушать тимĕрçе.
Вуник талăк хушшинче,
Каçпа хăйă çутинче
Айпăлтипе мăн хăрта
Вăл туптарĕ савăшса.

[1] Айпăлти — вăрçă пуртти.
[2] Хăрт — хĕç майлă вăрçă хатĕрĕ.



Ват Асамат Улăпа
Кăштах тытса ытамра
Ăшшăн пăхса каларĕ:
— Калас сăмах çак,— терĕ,—
Эсĕ илсем вĕсене
Иккĕшне те парне пек.
Тăван çĕршыв çул-йĕрне
Ан таптаттар ютсене.



# Çирĕм тăваттăмĕш юрă

## УЛĂП АЛТĂРКУÇА ТĔП ТУНИ

***Улăп Шавла тинĕс енчен***

***Сĕве хĕррине таврăнать, тумтирне тусантан тасатать, таврари çĕре хуратать. Пуçа сăрчĕ тавра Сĕве юханшывне кукăрлатать, ӳсен вăрмана пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартать, мăйç тăпрапа тăшмана çĕр айне тăвать. Алтăркуç Улăпа тăшкăллама кĕтӳç пулма сĕнет. Улăп ăна вăрăм пуçăпа ăшалать.***

Сад пахчинче пултăр-и,
Хăмла çырли çирĕр-и?
Сĕве хĕрне антăр-и,
Улăп ĕçне куртăр-и?
Улăп килнĕ инçетрен,
Шавла тинĕс хĕрринчен.
Çулĕ вăрăм пулнăран
Тусанланнă ытла та.
Сĕве енне ансанах
Асăрхать вăл юмана.
Шаккамашкăн тумтирне
Çакса ярать ун çине.
Шаккамалли патакки —
Хурăн вулли яштакки.
Тусан вĕçет çапнă май,
Пĕр сăмахпа, пит нумай.
Тытса силлет тумтирне.
Тăвăла кĕç тухмалла,
Çил вăй илет шавласа.

Пĕр аллипе Атăлран
Ал лаппипе шыв ăсать.
Çанçурăмне çăвать те:
«Ӳтĕм-пĕвĕм канчĕ тет».
Сĕве Атăл шывĕнчен,
Ал лаппипе ăсинчен,
Çыранĕнчен тухиччен
Тулса пырать васкаса.
Ейӳ выртать сарăлса
Çич çухрăмран курăнса,
Иртен-çӳрен халăха
Хумхантарать — тарăн та.
Хĕвел анать хĕрелсе,
Каç та çитет вĕçтерсе.
Улăпăн та канмалла,
Ирпе çулне тăсмалла.
Анчах типçĕр курăнмасть,
Унсăр канма май пулмасть.
Улăп пăхать таврана
Типĕ вырăн шыраса.
Пуçа тăва асăрхать,
Ту тăррине хăпарать.
Унта тĕрлĕ йывăççем,
Чи çӳллисем — чăрăшсем.
Пăхать ăмăрткайăкла
Вирьел çĕрне тавралла.
Куçĕ çивĕч — çамрăк та,
Асăрхать вăл ак çакна:
Ик юханшыв хушшинче,
Атăл-Сĕве ятличе,
Ейӳ çитмен вырăнта
Лапам выртать сарăлса.
Типĕ çĕрте, лаптакра,
Вăрман ӳсет кашласа.
Ыйăх килет пулсан та,
Улăп тăрать шутласа.

«Вăрман ӳсет вăрахăн,
Чăн та хяклă халăхшăн.
Эпĕ выртсан çавăнта
Вăрман пулать çатрака.
Пущă тăвĕ леш енче
Çеçенхир çеç ешерет,
Вăрмана çав вырăна
Куçарам-ха хăвăртрах».
Йывăççене хĕрхенсе
Улăп каклать пĕшкĕнсе,
Кайран Пущă леш енне
Кайса лартать вĕсене.
«Вырăн лайăх сывăрма,
Сывлăш усă сывлама.
Анчах та çак хăратать:
Сĕве шывĕ ашкăнать.
Эп сывăрса кайсассăн,
Пĕр-пĕр кăлтăк тухсассăн,
Сĕве шывĕ ăнсăртран
Юхма пуçлĕ ман айран.
Чим-ха, ăна ак çапла
Майлаштарса ямалла».
Ейӳ урлă, шыв урлă
Сĕве хĕрне вăл васкать,
Юханшыва, Сĕвене,
Ярса илет çĕклесе.
Пущă тăвĕ çумĕпе
Кукăрлатать сĕтĕрсе.
Улăп выртать саланса
Ал-урине кантарса.
Уç сывлăшăн усси пур,
Унта ыйхă — пыл та çу.
Улăп сыврать ик эрне,
Сисмен Сĕве чаккине.
Çавăнпа вăл вăрансан,
Çӳçне-пуçне турасан



Пĕççе çапса тĕлĕнет.
— Çĕрĕн тĕсĕ — урăх тĕс,
Хĕрлĕ тăмччĕ çавăнта!
Пăх-ха, унта хура çĕр,
Сухаççемшĕн савăнăç!
Тин ăнлантăм: вăл манран,
Сăхман çинчи тусанран,
Çăпатари тăпраран
Çĕр хуралнă, хăямат.
Улăп выртать тăсăлса,
Каллех тутлă ыйхăра,
Таврара мĕн пулнине
Паттăр сисмест нимĕн те.
— Улăп, Улăп, ма сыран?
Çич ют килнĕ аякран
Чăвашсене тĕп тума,
Ун пурлăхне тустарма.
Çич ют ячĕ — Алтăркуç,
Çамки çинче ун пĕр куç.
Куç арманла авăрсан,
Чăн та, калăн вут-кăвар.
Сăнран — армак-чармаклă,
Эллес-меллес хапаллă,
Чурăс чунлă, пит куштан,
Таçтине те куракан.
Ун çĕршывĕ Аламан,
Аста вара шăрш яма.
Çĕршывĕнче вăл патша,
Пурăнать хĕн-хур сарса.
Унти халăх чурара.
Юнлă куççуль юхтарать.
Мăшкăлĕ те пуç таран.
Алтăркуçăн хырăмĕ
Шампаланса кайнă-мĕн.
Çичçĕр çула яхăнах
Кирлĕ пулать ăна халь

Выльăх-чĕрлĕх, самăрри,
Шерпет тени — чи шăрşи.
Апатланать ирхине
Çитмĕл çичĕ ĕнепе.
Шерпет ĕçет çич пичке,
Тумлам юлмасть тĕпĕнче.
Каçпа çăтать — сахал мар,
Çитмĕл ăйăр тыххăмрах.
Апат çисе тултарсан,
Шерпет ĕçсе кӳпĕнсен
Чĕнтерет вăл хăй патне
Пикене чи чаплине,
Вунçич сула кайнине,
Нар пек çиçекеннине.
Витĕнмесĕр кăнтăрччен
Сыврать пике умĕнче,
Ăна шăна вăратсан
Пикен хĕн-хур пуçланать.
Алтăркуç çав пикене
Сĕтĕрет хăй пӳлĕмне,
Туртса çурсан тумтирне
Ĕмет пике мимине.
Унтан вара хĕр пуçне
Персе парать пурсуйне[1].
Тепĕр чухне кутăнран
Е анрашса выртнăран,
Ури кăштах тарласан,
Çавна пике туймасан,
Хĕре тапать хырăмран,
Ун хырăмĕ çурăлать.
Пĕр-пĕр пике йăрăран
Ун еккине юрасан
Чĕнсе илет кермене,
Ларма хушать кукленсе.

[1] Пурсуй — вĕшле йытă.



Çиме хушать вăкăрне,
Кăлармасăр ун ăшне.
Йĕрĕнмесĕр вăкăра
Çимесессĕн савăнса,
Пике пырне какая
Чыхса ларать ятласса.
Алтăркуç халь Чăвашра.
Пăхать йĕри-тавралла.
Сĕве шывĕ хĕрринче
Курнă сана выртнине.
Вăл савăнать, шухăшлать,
Çапла сăмах халь калать:
«Ыйăх чăпти сывăрать,
Ун патне ман ма каяс?
Унта манăн тĕкĕрçсем,
Чи йăррисем — пур енчен.
Тĕкĕрçсем ак паттăра
Сывăрнă чух тапăнса
Халь мансăрах майлĕç-ха.
Халăх юлсан паттăрсăр,—
Çавна эпĕ шанатăп,—
Чăваш пĕтĕ тĕпĕпе,
Вĕлтрен пусĕ ун çĕрне».
Чăнахах çар сынписем,
Аламанран килнисем,
Ӳпресем пек сырăнса
Тапăнассĕ паттăра.
Улăп тутлă ыйăхра,
Вилнĕ пекех сывăрать,
Унтан-кунтан чикнине
Туймасть вара нимĕн те.
Хăш чух ыйăх тĕлĕшпе
Е, тен, тĕлĕк курнипе
Питне шăлсан аллипе
Нӳкĕрç пĕтет çĕрĕшпе.
Ӳсĕрнĕ чух теприсем,

Алтăркуçăн тарçисем,
Пуçă тăвне çитиччен
Ыткăнаççĕ вăркăнса.
Улăп выртсан çаврăнса
Айне тăвать тăшмана.
    «Кунта вырăн тасаччĕ,
Çӳп-çапĕ те çуккăччĕ.
Ăçтан питри шăрпăксем?
Пурте ухă йĕппи пек.
Камсем вара ман пуçра
Чупакансем кăткă пек?» —
Улăп шутлать ăшĕнче
Выртса ыйăх тĕлĕшпе.
    Çӳçне пилĕк пӳрнепе
Турамашкăн тытăнчĕ.
Çӳçри харсăр нӳкĕрçсем
Тăкăнчĕçĕ лĕкĕ пек.
Ыйăхĕнчен вăрансан
Тытăнать вăл карăнма.
Аламанри касмаксем,
Ик уралла кашкăрсем,
Карта кĕме пĕлмеççĕ,
Улăп çинче сикеççĕ.
— Эй, мур, тилçе ӳприччен
Çывраймарăм канмччен, —
Тет те сулать аллине
Улăп паттăр темиçе.
Тăшманăн пĕр ушкăнĕ
Сĕве тĕпне сирпĕнет.
Тата тепĕр ушкăнĕ
Каçса кайсах ĕрлешет.
Сĕмсĕрленсе Улăпа
Тĕп тăвасшăн талпăнать.
Паттăр каять тарăхса,
Сиксе тăрать васкаса.
Ывăç тулли тăприне



Йăтса перет ют çине.
Улăп сапнă тăпраран
Тĕме пулать самантрах.
Тăшман тĕме айĕнче
Тек ашкăнмасть кашкăр пек.
Аламанри Алтăркуç,
Армак-чармак юнлă куç,
Ик чуллă сăрт хушшинчен
Пăхса шутлать çакăн пек:
«Унта вырăн тикĕсчĕ,
Мĕншĕн халь вăл тĕмеллĕ?
Ах, тин анчах ăнлантăм:
Улăп наттăр вилли вăл!
Маттур манăн тĕкĕрçсем!
Пурăнатпăр саваăнса,
Çарататпăр чăваша».
    Тулайра çав вăхăтра
Кĕтӳ тухать аулран.
Çеçенхирте ӳснĕрен,
Апат лайăх çинĕрен
Самăр кĕрхи упаран.
Тавар каять пайталла,
Нумай манит хутаçра.
Чăн та кĕтӳç-йĕкĕтсен
Тутлă ĕмĕт пуçсенче:
«Пирĕн хуçа-усламçă
Çитсессĕнех Пăлхара
Манит парать пасарта.
Çур манитлăх çсетпĕр,
Кăрлай[1] пулса тухатпăр,
Кайран киле çитетпĕр,
Тавар сутса çӳретпĕр;
Сум çумне сум хушатпăр,
Унтан пуйса каятпăр.

[1] К а р л а й — вак-тĕвек таварсемпе суту-илӳ тăвакан çын.

Миршаппа[1] тан пулатпăр.
Виç арăмпа пурнатпăр».
Ĕмĕт тутлă пулнăран,
Çунатланса кайнăран
Алтăркуçа курмарĕç.—
Сăрт хушшинче халь вĕсем.
Ура çинче Алтăркуç.
Вăл хыркăн чун, вут-хĕм куç.
Пĕç хушшипе кĕтĕве
Кăларасшăн пĕтĕмпе.
Кĕтӳ утмасть малалла.
Тарма тăрать каялла.
Кĕтӳçсем те, хуçи те
Чарайманçĕ кĕтĕве.
Карма çăвар Алтăркуç.
Аламанри ирсĕр чун.
Пĕр выльăхсăр юласран
Хăрать шурса каяслах.
Пуçлать хытă кăшкăрма.
Умлă-хыçлă вăйланса
Сасси янрать таврара.
Выльăхĕсем сасăран
Хăраннипе самантрах
Тайкаланма пуçлаççĕ.
Çĕре персе анаççĕ.
Усламçăпа кĕтӳçсем —
Сехри хăпнă та вĕсен —
Ним тума та пĕлмеççĕ.
Кускаласа çӳреççĕ.
Алтăркуçа мĕн кирлĕ?
Алтăркуçа çав кирлĕ:
Анкă-минке тухнисем.
Йăваланса кайнисем.
Çавăнпала хăрушшăн

[1] Миршап — полицейски



Улать тĕнче çурасла.
Çав вăхăтрах выльăха
Тытса йăтать ывăçпа—
Вун ĕнерен сахал мар.
Сăрт хушшинчи айлăмра
Вĕсем ĕнтĕ тапăрта.
Ик пуçĕнчен айлăма
Питĕрет вăл чулпала.
Çăтса ярать кӳпĕнме
Сахалтан та çĕр ĕне.
Сывламашкăн йывăртан
Какриш тухать ун пĕрмай.
Кăркăс лаши кĕтĕвне
Ятрармасть вăл Пăлхара.
Тĕпсĕр пырне тултарма
Туртса илет пурне те.
Çавăнпа та Пăлхара
Тавар çитмест тулайран.
Аслă Пăлхар çĕрĕнче.
Мал енче те кай енче.
Вĕри куççуль тăкмалла
Сăмах çӳрет ак çапла:
Аламанран Алтăркуç
Килнĕ теççĕ. вилмен чун.
Выльăхсемпе киленет.
Чăвашсене тилçетет.
Пĕр çулталăк хушшинче
Чăваш пĕтет тĕппипе.
Хуласене. ялсене
Вĕлтрен пусать — пур çĕрте
Хура халăх пуплевне
Улăп илтет туссенчен
Тĕл пулнă чух килĕнче.
Пăшăрханса чĕререн
Çапла калать вĕсене:
— Атте пур чух Чăваша

Тăшман килме хăяйман,
Килсен — пуçне усрайман.
Атте çĕре кĕрсенех —
Тăшман Чăваш çĕрĕнче.
Ашкăнаççĕ кашкăр пек.
Вĕсем хыççăн çĕршывра
Тăрса юлать кĕл кăна.
Эпир хальхи вăхăтра
Вĕтелтĕмĕр-ши вара?
Алтăркуçпа çапăçма
Чăн малтан кам каять-ха? —
Улăп ыйтать туссенчен
Хĕвел анса лариччен.
    Алтăркуçпа çапăçма,
Ана çапса аркатма
Сĕвек пăхăр сăрт тавра
Тухса утать Сикпăрçа.
Çав паттăра Алтăркуç
Какришленсе кайсан та
Кĕтсе илет, юнлă пуç.
    — Кĕтÿç пулма килтĕн-и
Е çапăçма ситрĕн-и?
    — Кĕтÿç пулма çуралман,
Çапăçмалла манпа сан.
Тух-ха, тух-ха ман пата
Лапчăнтарма тăм пуçна!
    Выльăх нумай çăтнăран
Алтăркуç хыт чыхăнать.
Сикпăрçа хĕç кăларса
Пуçĕ тавра вылятать.
Алтăркуçа хĕçĕпе
Вирлĕ касать çиейĕнчех.
Анчах ăна хĕç витмест,
Çавăнпа вăл шăл йĕрет.
    Сикпăрçана Алтăркуç,
Чапрас, чармак, тĕмсĕр куç,



Çичçĕр саспа мĕкĕрсе
Катмар чулпа хыт перет.
Катмар чулĕ сахалтан
Таять-тĕр хĕрĕх патман.
Çапах ăна Сикпăрçа
Алтăркуçа, çич юта,
Аламанри юн куçа,
Йăтса перет çав чулпах.
Кахал апачĕ[1] ситеспе
Вăркăнать сăрт тăрри те.
Ирсĕр тăшман хырăм те
Лач! лапчăнать кашнинче,
Ун хыçĕнчен мечĕкле
Çав чул вĕçет кĕрлесе.
Пакăртатсан хырăмра
Тăшман пуçлать карăнма,
Йăва пекех вăл пулать,
Кÿпĕнчĕкпе мухтанать.
    — Куратăн-и эп камне?
Вăй-хăватăм çавăн пек
Кĕрлесессĕн хырăмра
Вăй капланать карласа.
Çавăнпа та инхçан та
Хăрамастăп никамран.
    Ик чавсипе ик енне
Хирет çумри сăртсене,
Ик сăрчĕ те çавăнтах
Тапранаççĕ вырăнтан.
    — Ан та çыпăç манпала,
Кĕтÿç пулан паянах!
    Сикпăрçана, паттăра,
Ун пек сăмах самантра
Касса чикнĕн туйăнать,
Çич ют енне хăвалать.

[1] Кахал апачĕ — кăнтăр вăхăчĕпе каçхи апат хушшинче çинĕ апат.

Пуçран парать хĕçĕпе
Тăшмана хыт тарăхса,
Пуçĕ путать хырăмне,
Каллех тухать шартлатса.
Паттăр тепре йĕксĕке
Касма тăрсан хĕçĕпе
Алтăркуçран шăрш тухать,
Сывлама çук, хăстарать.
Аран-аран Сикпăрçа
Сывламасăр ыткăнса
Сăрт хушшинчен тухсанах
Хăсма пуçлать вар тытсах.
Киле çитсен Сикпăрçа
Ĕнсе хыçса, аптраса
Калать çапла Улăпа:
— Тĕл пултăм эн шăшлайпа,
Алтăркуçпа, ирсĕрпе,
Чарак тытма пĕлменпе.
Пĕрех касрăм эп ăна
Пăлат хĕçпе тарăхса.
Чун тухатчĕ хăсăкпа
Ун шăршинчен, чăнах та.
Питĕм çунать намăсран,
Тăшман сывă юлнăран.
Алтăркуçпа çапăçма
Çуллĕ кĕмĕл сăрт тавра
Çĕрпӳ паттăр çул уçрĕ,
Çеçенхире вăл тухрĕ.
Татах утсан сăрт курчĕ,
Алтăркуçпа тĕл пулчĕ.
Çич ют çăтнă кĕтĕве,
Унтан ĕçнĕ шерпетне.
Лашасем ун хырăмра
Çĕр те иккĕ таранах,
Çăвар карнă çавăнпа,
Аран сывлать пашкаса.



Çĕрпӳ паттăра çавах
Тăшман калать ак çапла:
— Хăш вырăнтан эс килтĕн,
Çапăçма е парăнма?
Хисеплесе ватлăхна
Сана калап: кунтан кай!
Кăшт вĕриннчен арканан,
Çĕтĕк çăпата — ман кĕтӳç...
Тĕнче кулли! Чăтма çук...
Тăшман кулать каçăхсах
Хăй хырăмне кăшт тытса.
— Ку тарнинчен пур енче
Çĕрпӳ паттăр умĕнче
Шăла йĕрме иккам та
Хăйăман вĕт, тункатаǃ —
Паттăр каять хуралса
Шăнăçайми тарăхпа.
Алтăркуçа хĕçĕпе
Пуçран касать урнă пек.
Тăшман ларать кукленсе,
Сиксе тăрать шăл йĕрсе.
— Мана хĕçпе касиччен
Пĕлес пулать эп камне.
Эпĕ паттăр! Алтăркуç!
Ман пек вăйли инçта çук!
Çавăнпа та манпала
Калаçмалла чуралла.
Чăваш манпа хирĕçет?!
Анла пулсан эпĕ те
Чăваш çĕрне тарăхса
Урлă-пирлĕ каçатăп,
Хуласенчен, ялсенчен
Кĕл тăватăп — пур çĕрте.
Чăваш пĕттĕр тĕпренех,
Маян пустăр ун çĕрне!
— Чăвашсем сан пеккине,—

Вĕсемпеле эпĕ те,—
Тăн кӳртессĕ хăлхаран,
Кирлĕ пулсан кутран та!
Çĕрпӳ паттăр çич юта
Янклаттарать хăлхаран.
Çав вăхăтрах хырăмран
Виç хут тапать тарăхса.
Çич ют каять антăхса,
Кайран ларать хуçланса.
Пакăртатсан хырăмĕ
Шăрш сарăлать хăватлă.
Шăрша паттăр чăтаймасть,
Ютта хĕçпе касаймасть
Сăрт хушшинчен ыткăнать,
Хирте хăсма тытăнать.
Улăппа вăл тĕл пулсан
Çапла калать тарăхса:
— Алтăркуçа çапрăм та,
Ай шăрш ячĕ — чăтма çук.
Аш пăтранать халь те, мур.
— Ана кĕтӳç кирлĕ тен?
Кĕтӳç пулать — кĕтни пек,—
Тет те Улăп ирхине
Çулне тăсать хайхине
Тăр юханшыв хĕррипе,
Ылтăн мăн сăрт çуммипе.
Алтăркуç, мур, иртенпе
Тĕпсĕр шампа хырăмне
Тултарнă пур ăйăрне
Çĕр хĕрĕхе çитиччен.
Ун халь екки çавăн пек:
Сăртран çӳле сикмелле.
Пакăртатать хырăмĕ
Аякранах илтмелле.
Улăпа вăл курсанах
Сăмах хушать тĕлĕнсе:



— Улăп паттăр хăй кунта.
Тĕлĕнмелле! Тамаша!
Вилнĕ терĕç вĕт сана?
Мирлешме е çапăçма
Эсĕ килтĕн ман пата?
— Килĕшме е çапăçма
Эп килмен-ха çакăнта.
Сана кĕтӳç кирлĕ тет,
Эп кĕтӳçе кĕресшĕн.
Ман кăмăла каякан
Вăрăм пушă пур-и сан?
Ун пекки сан пур пулсан —
Эп сан кĕтӳç паянах.
Ну, вăл ăçта? Кăтарт-ха!
— Пушă пулать сан валли!
Улăп кĕтӳç пулнăшăн
Ун куçĕнче савăнăç.
Çĕн чĕн пушша мăнаçлăн
Тыттарнă чух паттăра —
Ирсĕр алли Улăпра.
Алтăркуçа сĕтĕрет,
Уй варрине çитерет.
— Кунти уй-хир хĕсĕк мар,
Пире валли пит аван,
Эсĕ тăрсам çакăнта,
Эпĕ вара çавăнта.
Тĕрĕслĕпĕр чĕн пушша.
Пушă Улăп аллинче
Авкаланать çĕлен пек,
Туртса çапсан шартлатать,
Алтăркуçа сунтарать.
Йĕк шывĕпе тăшмана
Хыт шăварнă пулсан та,
Тирĕ çурлать шартлатса.
Хăй те сухрать шуйттанла:
— Аламана çитмелĕх

Чуна хавар, тархасшăн.
Эп Чăваша ĕмĕрте
Урăх килмĕп малашне.
— Ай-ай, ун пек юрамасть,
Пушă хакне паман-ха! —
Улăп каллех тăшмана
Ислентерет пушăпа.
— Эй, чăтăмсăр пушă сан,
Çич татăкран тăрать халь.
Аврн кăна алăра,
Вăл та кайрĕ хуçăлса.
Мухтанатăн çĕр çуллăх,
Сан чĕн пушшу пит япăх.
Санне кĕту пăхас çук,
Тăшмансенчен хăрас çук,
Ун куçĕнчен пăхас çук,
Кут тиверетсе тарас çук!
— Хуçăк пушă аврипе,
Ват юманран тунипе,
Улăп чикет тăшмана
Кăвапиинчен виç хут та.
Пăшăл тухать тем чухлĕ.
Шăршн вара — ах турă...
Çав пăшăлчăк сывлăшĕ
Алтăркуçăн вăйĕ вăл.
Улăп пĕрех усала
Ыткăнтарать аякка.

## *Çирĕм пиллĕкмĕш юрă*

### МЕНТЕЛЕЙПЕ СЕНТЕЛЕЙ УЛĂПА АШШĔН ВУТХĔÇĔПЕ ÇИЛÇУНАТА ШЫРАМА СЕННИ

*Ментелейпе Сентелей.*
*Улăп пĕсенчен ашшĕ хăй ўстерне Çилçунат урхамах пулнине, Асамат туса панă вутхĕç çинчен пĕлет. Çавсене иккĕшне те ăна вĕсем тупма сĕнеççĕ.*

Услам кайăк шыв ĕçет.
Ик текерлĕк вăй вылять[1].
Çĕнĕ кĕсле мĕн калать? —
Çилту енне халь вĕçтер.
Вăт çав енче, пĕр тĕлте,
Юманлăхра, хўшĕре
Улăп ларать сак çинче
Икĕ ват çын хушшинче.
Сылтăм енчи — Ментелей,
Сулахайри — Сентелей.
Аслăраххи Улăпа
Астăн парать сăвапла:
— Хĕрĕ хывтăр амăшне,
Ывăл ачи — ашшĕне.
Çирĕп пулсан тымарри
Патвар пулать пур ачи.
Сан тымару — пĕр енчен —
Хаклама çук ват аннў.

[1] Сутмалли юмах. — Лаша.

Тепĕр енчен — çут тĕнчен
Паттăрлăхĕ — сан аçу.
Пĕр çулхи мар аçупа,
Унтан кĕçĕн пулсан та,
Ик хăлхуна тăратсах
Итле мана ăнкарса.
Чăваш чаплă ĕçре те,
Вăрçăра та йĕркере.
Хурах ĕçне ырламасть,
Касмакланса çил касмасть.
Çавăнпа пуль чăвашăн,
Аш кăмăллă йăвашăн,
Тăшманĕсем пит нумай,
Кашни урать хăйне май.
Ку таранччен тăшмана,
Вĕсем сĕмсĕр пулсан та,
Ашкăнмашкăн памарăн,
Çапа-çапа аркатрăн.
Çапах тăшман ашкăнчăк,
Паттăрĕпе мухтанчăк.
Сан умăнта — айванчăк.
Сан алăра мĕнпурĕ
Айпăлтипе хăрт кăна.
Темле паттăр пулсан та
Тăшман айне лекен ак.
Мĕншĕн тетĕн? Тăшмансен
Кукăр хĕççи пăлатран,
Лашисем те урхамах.
Сан урхамах çуккă та,
Кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек
Эс çуретĕн çуранах.
— Çавăн пирки хамăн та
Шухăш ялан пуçăмра.
Урхамахсем, çич ютсен,
Ман аллăма лекинсем,
Утлансанах чĕтреççĕ,



Пилĕксĕре тухаççĕ.
Хĕççисем те чăтăмсăр.
Туртса кассан — çич татăк.
Урхамахĕ, чăтăмли,
Пăлат хĕç те ман валли
Хăш вырăнта упранать?
Вутлă хĕçе тăвакан
Хăш вырăнта пурăнать?
Йывăрлăхран хăрас çук,
Чăтăмлăх та манра пур.
Çулне-йĕрне кăтартсан
Çав çулпала кайăттăм.
Ватă çынсем иксĕр те,
Тем те курнă темелле.
Астăн парăр айвана,
Аçта вĕсем, хăш енче?
— Майрус кулли пулнăран
Ниçта тухса курман çав.
Хăвах пĕлен, ун пек чух
Çĕн хыпарсем илтме çук,—
Терĕ шăппăн Ментелей,
Ун хыçĕнчен Сентелей:
— Аçун пурччĕ тур лаша,
Çилçунатлă урхамах.
Ик чĕреллĕ пулнăран
Вăл нихçан та ывăнман.
— Никамран та ун çинчен
Ку таранччен эп илтмен.
Мана тĕпĕ-йĕрĕпе
Каламăр-ши ун çинчен?
— Юрать,— терĕ Ментелей,
Ун хыçĕнчен Сентелей:
— Асăрхан-и: аслаçу
Халь те ĕçре пит маттур.
Ун аллинче пур ĕç те
Çунать кăна темелле.

Çамрăк чухне тулайра
Вăл нуранна хулара.
Çич çул хушши ăстайшăн
Вăл ĕçленĕ çич тавшăн.
Çав вăхăтрах асаннÿ
Çĕре кĕрет çуркунне.
Пĕччен юлать сан аçу
Çăкăр çиме куççульпе.
Ăна, хÿтсĕр ачана,
Вуник çулта пулсан та
Турхан илет хулаша[1]
Кĕтÿ пăхма çу каçа.
Пĕрре турхан вăрçнипе
Аçу çимĕк каçхине
Кÿлĕ хĕрне тĕттĕмре
Хăвалать лаша кĕтĕвне.
Асам курăк чечекрен
Хăтăлнă чух кÿлĕрен
Айăр тухать вĕçтерсе
Ниш тихана çĕклесе.
Тиха çÿрет кĕтÿре
Пит хуйăхлă кĕçенсе.
Кĕсре татать ун çулне
Ăна чĕчĕ çитерме.
Тиха кĕсре чĕччине
Ĕмет юна кайиччен.
Кĕсре каять йăванса.
Часах вилет ахлатса.
Ирхи апат тĕлĕнче
Кÿлĕ хĕрне сĕтĕрĕнсе
Турхан анать киленсе.
Курать вилнĕ кĕсрене,
Каять шутсăр çилленсе.
Кĕтÿçе вăл тем калать.

---

[1] Хулаш, хула ту — тăшмансенчен сыхланмалли хÿтлĕх [illegible]



Ăна мăйран чут пăвмасть.
— Ах, эс, вилмен йыт асси,
Тĕнчен ирсĕр хăйпашки.
Кĕлмĕç йăххи! Ашак май
Ачаранах эс кахал.
Эс çыврăрнă çĕр каçа,
Лашасене пăхман та,
Ман чи хаклă кĕсрене
Çавăнпа ернĕ имшеркке.
Чаплă кĕсре ирсĕртен
Вилнĕ пĕрмай ĕмнĕрен.
Çапла мар-и? Хуравла!
Ма чĕнместĕн? Тунката!
Ун пек кĕтÿç кирлĕ мар.
Çав кахалпа мĕн тăвас?
Çыхăр ăна пушăпа
Юман кутне. Хăвăртрах!
Ўпре-пăван апачĕ
Пултăр хаклă кĕсрешĕн.
Куç ан куртăр тихине,
Унччен хĕнер имшерне
Мими çĕре юхиччен.
Хĕрсех имшер тихана
Ислетеççĕ туяпа.
Тихан çамки çурăлсан,
Пуç мимийĕ сăрхăнсан,
Ик урниччен ятлаçса
Ярса илсе тихана
Хĕрлĕ кăткă тĕмине
Пăрахаççĕ çиллипе.
Мĕнпур кăткă тихана
Çыртса кăшлать таçтан та.
Тиха тăван амăшне
Чĕнет пĕрмай кĕçенсе,
Амăш сасне илтменрен
Тăрса тарма пикенет.

Ура ҫине тăраймасть.
Ҫĕр амăшĕн хĕрачи,
Чĕкеҫ ятлн, ачашшн,
Асăрхасан ҫавсене
Амăш патне вĕҫтерет.
— Анне, пăх-ха ҫаврăнса,
Чунсăр ҫынсем вăрманта!
Юман ҫумне ачана
Сыхса лартрĕҫ ватсанах.
Ача хĕнлĕх курнăран
Сиксе тухать чĕре ман.
Халех каяп вăрмана,
Салтса ярап ачана.
— Эс каймастăн ниҫта та!
Ача енче кам унта?
Эс-и унта, чăмăрчăк,
Ула мăйлă купăрчăк?[1]
Куратăн-и чăтлăхра
Ват юмана, кукăрта?
Ачана вăт ҫавăнта
Сыхса хăварнă пушăпа.
Чĕн пушăна хăпарса
Татса ярсам кăшласа.
Ачи айван, суранлă,
Тен, кил ҫулне вăл маннă.
Ҫавăнпа та эс ăна
Килне леҫсе хăварсам.
Ҫĕр амăш мĕн хушнине
Хĕрлĕ арлан итлет те
Юман ҫине хăпарать,
Чĕн пушăна час татать.
Унтан ҫурма тăлăха
Вăрттăн тӳрĕ ҫулпала
Килне леҫсе ярасшăн,

[1] Сутмалли юмах.— Арлан.



Кайран выртса канасшăн.
Ача ăна нтлемест.
Килне кайма килĕшмест.
«Мĕнле ҫăлас тихана?» —
Ун ĕмĕчĕ ҫав анчах.
Сикет кăткă тĕмине
Ҫăлас тесе тихине.
Пин-пин кăткă сырăнать
Пĕр самантрах ачана.
Ăна хĕрсех ҫыртаҫҫĕ,
Ӳтне туртса ҫураҫҫĕ.
Ҫĕр амăшĕ аҫунтан
Тĕлĕнннпе чунтанах
Хĕрне калать ак ҫапла:
— Мĕнле ҫăлчĕ тихана?!
Кăмăлĕ те ун ҫемҫе.
Чăваш чапне ӳстерме
Паттăр пултăр ҫав ача!
Ир пулать те кун иртет,
Кун иртет те каҫ ҫитет.
Ҫăлнă тиха кунсерен
Урхамахла ҫитĕнет.
Пуҫне ӳхлет. Кĕҫенсен
Ҫӳллĕ кермен чĕтренет.
Чупнă чухне сăмсинчен
Ҫил шăхăрать ик енчен.
— Савăнтартăн эс мана,
Лайăх пăхнă тихана,—
Терĕ Плиска ачине
Таврăнсанах хăй килне.—
Упа ашне типĕтсе
Ҫак тихана ҫитерсен
Вăл урхамах пулать, тен.
Пăх-ха мĕнле кукалет!
Услати сĕм вăрманта
Тихипеле кун каҫа

Упасене йĕрлесе
Çӳрерĕ çĕр кисретсе.
Каçхи апат тĕлĕнче —
Иксĕр упа килĕнче.
Типĕтнĕ аш вĕсенчен
Пĕччен турĕ ик эрне.
Çав ашсене кунсерен
Уйăх хушши çитерсен
Тихи — айăр. Чаплăскер.
Сăмсинчен хĕм пĕрхĕнет.
Ашшĕ калать ачине:
— Урхамаха ят парсам.
Янравлине, чаплине.
Çилçунат тен? Пит аван!
Айăрне ят парсанах
Аçу васкать кӳл хĕрне.
Шыва кĕртет вăл ăна,
Айри пуçлать калаçма:
— Чăн та, чĕрӳ ырă сан.
Çăлтăн мана вилĕмрен.
Тăрантартăн, шăвартăн,
Ура çине тăратрăн.
Кăмăл туса килнĕрен
Тав тăватăп чĕререн.
Пулас тесен манпала
Эп хушни пек тăлпан-ха.
Хăлха витĕр сиксе пăх.
Унтан сиксе тухатăн —
Кун-çулна эс тăсатăн.
Тухаймасан пĕтетĕн.
Хăлха витĕр тухсанах,
Кăштах сывлăш çавăрсан,
Услатирен, ачаран,
Йĕкĕт пулчĕ кĕрнеклĕ,
Пăхса илчĕ паттăррăн.
Яштак — шурă хурăнтан.



Патвар — вată юманран,
Сăн-сăпачĕ ашшĕннех.
Астăнĕнчен — амăш пек.
Сăхманĕ те пит чаплă,
Капăрлатнă çĕр тĕслĕ.
Чăваш халăх ĕмĕтне
Вырнаçтарнă пĕр çĕре.
Йăтса пуссан урипе
Кисрентерет çĕр сийне.
Сулсассăнах алăпа
Лĕп çил куçать тăвăла.
Кăлкан çӳçлĕ Услати
Килте ĕççĕр ларать-и?
Алла илет шур чĕнне,
Касса çĕлет йĕвенне.
Патман туртсан чĕлпĕрĕ,
Çăварлăхĕ мĕн чухлĕ?
Çăварлăхĕ çич патман,
Хурăçран мар, ылтăнран.
Айри çнне Услати
Ут ыранта тăрать-и?
Тапса сикет тăвалла,
Тăвăл тухать таврара,
Çулăм тухать сăмсинчен,
Пĕр енчен мар, ик енчен.
Çĕн йĕвенĕ кĕлленет,
Çурхи çилпе вĕçĕнет.
— Çилçунатăм, кунтанах
Çулна тăс-ха ялалла.
Эс йĕвенсĕр, чĕлпĕрсĕр,
Çул çӳреме илемсĕр.
Çилçунат хăй хуçнне
Çитерсенех хăй килне
Чупса кĕрет витене.
Хуçи васкать пӳлĕмне.
Услати час саланать.

Тӳшек çине вырнаçать,
Тăсма пуçлать ыйхине,
Çывăрнă май — тĕлĕкне.
   Çывăрать пек курменте.
Кĕсле кĕвви — пур енче.
Акă алăк уçăлать,
Чипер пике курăнать.
Пике чаплă çав тери,
Çăлтăр çути — çӳç хĕрри.
Хĕвел тейĕн кăмăлне,
Кевер чул[1] тен ун шăлне.
Утать акăш ишшипе,
Юрлать шăпчăк сассипе.
Çири кĕпи пурçăнран,
Çичçĕр тĕспе ялкăшать.
Услатие пуçĕнчен
Ачашлать пек киленсех.
Ереветлĕ чĕкеçле
Сăмах хушать хĕрелсе:
— Хам ĕмĕрте яланах
Пуласшăн-ха эп санпа.
Пĕр сывлăшпа сывласшăн,
Пĕр чашăкран çиесшĕн.
   Тĕлĕк хыççăн Услати
Вырăн çинче выртать-и?
Вырăн çинче выртмасть вăл,
Урхамахпа пуплет вăл.
— Эй, Çилçунат, кам сана
Капăрлатнă çĕр каçа?
Йĕнерӳ сан сар чĕнтен,
Пускăчĕсем — кĕмĕлрен.
Йĕвен çинчи ункине,
Шур ылтăнран тунине,
Чаплă ăстаç тунă та,

[1] Кевер чул — хаклă йышши чул.



Уйăрма çук çăлтăртан.
— Кунта пулчĕ пĕр пике,
Сар чечекрен вăл хитре.
Капăрлатрĕ вăл мана.—
Терĕ ăйăр сар качча.
Услати те ăйăра
Шăппăн калать савăнса:
— Эп те паян тĕлĕкре
Куртăм пуль çав пикене.
   Типĕтнĕ аш çитерсен
Тытса тухать лашине,
Çилту сăрчĕ çуммине
Çулне тăсать тимĕрçе.
Çилçунатăн чупиничен,
Чăнк тăракан хăлхиничен
Çил шăхăрать шайлатса,
Сĕм вăрмана хумхатса.
— Эй, мучиçĕм, Асамат,—
Сăмах хушать аçу сан.—
Чĕрененех тархаслап,
Мăлатукна выляттар.
Тăшмансене аркатма
Туса пар-ха хĕç мана.
Хĕççи пултăр кăмăлран,
Çирĕп пултăр пăлатран.
— Ах, Услати, халĕ те
Эсĕ виç хĕç илтĕн те
Мĕскер турăн вĕсенчен?
Мана намăс çынсенчен!
Сулса касрăн пĕрнипе,
Хĕрĕх патман туртнипе,
Хĕç çивĕчĕш таврăнчĕ,
Пăрахăçра вăл ĕнтĕ.
Теприне, чи чаплине,
Çитмĕл патман туртнине,
Авса хуçрăн сурмаран,

Халь ман темскер тумалла?
Тăхта! Тата тепĕр хĕç
Тăвап сана валли çеç.
Ана валли çĕн вĕркĕç
Майлас пулать. Нумай ĕç.
Çĕнĕ кăмрăк кирлĕ-ха.
Хурăçне те урăхла
Шăратмалла ун валли.
Ĕçсем — пуçа ватмалли.
Ĕçе тытнать Асамат.
Канма пĕлмест. Тăрмашать.
Çитмĕл çичĕ кун ĕнтĕ
Хурăçне вăл шăрататъ.
Шăратнă чух хурăçне
Виçсе ярать çаксене:
Çитмĕл çичĕ тĕслнне
Курман тимĕр-тăмăра.
Çитмĕл çичĕ вырăнтан
Тупса ярать нм-çама.
Çитмĕл çич тĕс йывăça
Вăл çунтарать ăслайла.
Çавăнпа ун кăмрăкĕ
Çунать çитмĕл çич тĕслĕ.
Вĕркĕç тума шур чĕнтен
Пусать çитмĕл çич вăкăр.
Чĕнне тусан, кассассăн,
Вĕркĕç çĕлет — Çилту тен.
Çитмĕл çич кун хурăça
Туптать ялан юрласа.
Хурăçран мăн хĕç пулсан
Астай тути йăл кулать.
Шывне илет çăлкуçран,
Çитмĕл çичĕ вырăнтан.
Какăр сĕтве хĕр парсан
Хĕçе пуçлать шăварма.
Çитмĕл çич кун шăварсан



Çĕн хĕç пулать пит аван.
Услати çав çĕн хĕçе
Ава-ава тĕрĕслет.
Вата юман, пин çулхи,
Çилту сăрчĕ пек çўлли,
Хĕçпе кассан кĕлленет,
Çил-тăвăлпа вĕçенет.
Унтах пĕр сăрт, паллăскер,
Вутчульсенчен тăнăскер,
Хĕçпе кассан — кисренет,
Хăйăр пулса ишĕлет.
Пуç тавра çĕнĕ хĕçе
Çавăрсассăн çĕклесе
Çисĕм çисет таврара
Хăватлăхне кăтартса.
Ун пек чухне Услати
Тунката пек тăрать-и?
Асамата виç хутчен
Чуптăвать вăл тутинчен.
— Тавтапуç,— тет шурпуça
Çĕре çити пуç тайса,—
Ку хĕç пулчĕ ман валли
Чăнахах та чи чапли!
— Кăкăр сĕтне ун чухне
Аннў панă хĕр пуçпе.
Хĕр сĕтĕнче çĕр вăйĕ,
Хĕç çавăнпа хăватлă.
Улăп, ан ман эс çавна:
Темле йывăр пулсан та
Тĕнчен енчĕкĕ — сыхлавлă,
Унтан ним те çухалмĕ.
Çилçунатпа çав вутхĕç
Ку таранччен упраннах,
Шырасассăн тупанах.



# *Çирĕм улттăмĕш юрă*

## ТУПТУЛ УЛАПА АШШĔПЕ АМĂШĔ ÇИНЧЕН КАЛАСА КĂТАРТНИ

*Услати Çĕр амăшĕн кĕçĕн хĕрне çын уйĕнче чуптунăшăн палăс кĕпе тăхăнтарассинчен хăтăлма пĕр ĕç тăвать: тĕнче алăкне туптан кĕле ярать, пухас ахăр самахана сирсе ярать. Тăтамас хĕвеле хупăрлать, çĕре çутă çитмест. Услати Тăтамаса çапса аркатать. Атăх паттăр атне илет.*

Тилли, тилли тилĕ пур,
Йĕр йĕрлекен кайăк пур.
Тилĕ хыççăн чупмăпăр,
Улăп патне утăпăр.
Улăп Шетмĕ хĕрринче
Ялти кайри касĕнче,
Çĕнĕ пӳртре, кĕрекере,
Туптул шурпуç патĕнче.
Туптул калать Улăпа:
— Пĕрле ӳснĕ аçупа,
Пĕр çăварти çăкăра
Пĕрле çинĕ ачаран.
Аçу çинчен калас-тăк —
Калас пулать çĕр талăк.
Тыр пустарса кĕнĕ чух
Кунта ун чул ларас çук.
Çавăнпа та халь сана
Каласшăн-ха ак çакна:



Аçу пулнă чăн паттăр.
Чапĕ те ун сӳнĕмсĕр.
Урхамахĕ — аййăрччĕ,
Хура турă тĕслĕччĕ;
Ик чĕреллĕ, чаплăччĕ.
Кайăк пекех вĕçетчĕ.
Пĕрре аçу каçхине
Ансан Шетмĕ хĕррине
Курать ял хыç çеремне,
Унта — çамрăк-кĕрĕме.
Каччăсемпе пикесем,
Вунçиччĕрен иртнисем,
Алла-аллăн тытăнса
Çӳренĕ-мĕн юрласа.
Унтах, Шетмĕ хĕрринче,
Ларакансем чул çинче
Тахçантанпах тун-тунла[1]
Выляма тус тупмалла.
Мăшăрсăр хĕр, ĕлккенни,
Тун-тун пулса çӳрени,
Ĕмĕчĕпе савмашкăн
Аçу çумне ларасшăн.
— Тун-тун! Тун-тун! Мĕн ятлă?
— Сан яту-и? Санталă!
— Тĕрĕс! Кил, лар ман çума,
Эпĕ Тун-тун халь кунта.
Ĕлккен хĕр пуш вырăна, —
Кам шутлатăр-ха ăна, —
Ларма тăрсан савăнса
Ют хĕр ларать сарăлса.

[1] Тун-тун — вăйă ячĕ. Ана ак çапла выляççĕ. Çамрăксем ретĕн-ретĕн каска çинче лараççĕ. Пĕри, вăйă пуçлăхĕ, каска çинче ларакансене шăппăн вăрттăнла ят парса тухать. Тепри — Тун-тун. Вăйă пуçлăвĕнче Тун-тун хушшинче çапла калаçу пырать: «Тун-тун! Мĕн ятли?» «Кăмака!» — Выляканссем хушшинче Кăмака пулсан, вăл хăй вырăнĕнчен тухать, Тун-тун ун вырăнне ларать.

«Ак тамаша?! Мĕн, ара,
Çак ял хĕрех-ши вара?
Кун пек хитре пикене
Эпĕ курман ку енче.
Тен, хăна хĕр? Хăш ялтан?
Калаçмалла ман унпа»,—
Аçу шутлать ăшĕнче,
Сарă пике умĕнче.
Аçун юнне вылятма
Ют хĕр юри калаçать:
— Услатие, пĕркĕте,
Ют çĕршывран килнĕрен
Хăна тесе шутлăпăр,
Уншăн тăрса юрлатăр,
Шетмĕ шывне хумхаттăр.
Мах парать-и Услати,
Вăл юнтарса тăрать-и,
Пикесене хумхатма
Юрă пуçлать савăнса:
— Шăпчăк кайăк пуласчĕ,
Йăмралăхра юрласчĕ,
Саркайăка-пикене
Куçран пăхса ларасчĕ.
Сарă хĕвел пуласчĕ,
Тĕнчене ăш ярасчĕ,
Саркайăка-пикене
Ыталаса ларасчĕ.
Тулли уйăх пуласчĕ,
Каçа çутă парасчĕ,
Саркайăка-пикене
Чĕрçи çине лартасчĕ.
Пике аçу юрринчен,
Ашă куçпа пăхнинчен
Малтан каять вăтанса,
Кайран каять савăнса.
Савăнăçне пытарма,



Каччăн чунне çунтарма
Сиксе тăрать акăшла,
Юрă юрлать турткăшла:
— Аçта каян, чĕкеç, çумăр витĕр,
Аçта каян, чĕкеç, çумăр витĕр,
Ик çунатту тăрăх шыв юхтарса?
Аçта каян, савни, каçа хирĕç,
Аçта каян, савни, каçа хирĕç,
Ик куçунтан куççуль ай юхтарса?
Хура чĕкеç чĕппи ай пулам-и,
Хура чĕкеç чĕппи ай пулам-и,
Карлăк çине ларса ай юрлам-и?
Савни, эп сан тусу ай пулам-и,
Савни, эп сан тусу ай пулам-и,
Хирĕç тăрса санпа ай юрлам-и?
Çав вăхăтрах ернпе
Шир-Пăлхар аттипеле
Йăпăрт-йăпăрт шăвăнать,
Тапăртатса кăтартать.
Ял хĕрĕсем, каччăсем,
Пике тавра тăнисем,
Тытăнаççĕ ал çупма,
Ал çупнă май юрлама.
— Кĕслеç, кала кĕслўне,
Ташлаттарма сар хĕре,
Йăпăрт-йăпăрт шутарса
Атă тĕпне якатма.
— Эс юрларăн чĕкеç пек,
Ташлан турхан хĕрĕ пек,
Çавăнпа та кĕçĕртен
Яш чĕрине ўкрĕн эс.
Пикен хушпу тенкине,
Ташланă май çиçнине,
Уйăрма çук çăлтăртан,
Пĕр çут тенки, сарлаки,
Çамки çинчи, çавраки,

Ялкăшать сар хĕвелле,
Кĕçех çырла нисмелле.
Ик енчи çÿç хĕррине,
Кăтраланса кайнине,
Кас тĕттĕмне сирнĕрен
Тулли уйăх темелле.
Юртан шурă кĕпине,
Шурçип пирле тĕртнине,
Çĕленĕ-мĕн пĕр çипсĕр,
Çавăнпа та çĕвĕсĕр.
Çитмĕл тĕслĕ пурçăнпа
Е кĕмĕлпе, ылтăнпа
Пике шурçип кĕпине
Тĕрленĕ хăй аллипе.
Чаплă кĕпе тĕрринче
Ерешленнĕ çут тĕнче.
Чăваш ен те пур унта,
Юхса выртан Çавал та.

Пике акăш ташшинчен,
Çурхи чĕкеç юрринчен
Тĕлĕнет яш-кĕрĕмĕр:
Патша хĕрĕ ку теççĕ.

Унтах пике ташласа,
Сар хĕвел пек çуталса
Сылтăмалла ал сулчĕ,
Çавра кÿлле тултарчĕ.

Кÿлĕ хĕрри хăмăшра,
Хуракăшсем йăвара.
Кăвакалсем чăмаççĕ,
Мерчен пĕрчи тупаççĕ.

Шурă тутăр кăларсан,
Сулахая ал сулсан —
Шетмĕ хĕрри çăкалăх,
Усланкисем симпыллăх.

Тутрине ик еннелле
Вĕлкĕштерсен лĕпĕшле —



Малта улăх ешерет,
Кайра урпа çитĕнет.
Улăхĕпех курăксем,
Чечек çинче пыл хуртсем
Симпыл пухса çÿреççĕ,
Кайран яла вĕçеççĕ.
Урпи кайсан кĕпçене
Тăри вĕçет тÿпене,
«Пĕтпĕлтик,— тет путене,—
Эпĕ кунта, курма кил».

Таш хыççăн иш-кĕрĕмсем,
Пÿрен — пурте кĕрнексем,
Тунката[1] выляççĕ,
Йăрăлăхне кăтартаççĕ.

Асу пулать тунката,
Пултарать вăл унта та.
Ашра шутлать ак çапла:
«Çав пикене тытмалла».
Хĕр ыткăнсан тилĕ пек,
Асу чупать вĕшле пек,
Пике юртсан пăланла,
Асу вара — арăслан.
Çăкалăха çитиччен,
Улăх çулне тухиччен
Асу хăвалать ĕлккене
Юратупа чĕтресе.
Юратупа хĕмленсен
Асу тытать сар хĕре.
— Эс килĕшрĕн чунăма,
Мĕн тумалла ĕнтĕ ман?

[1] Тунката — вăйă ячĕ. Ана ак çапла выляççĕ. Яш-кĕрĕмсем, мăшăрлисем, умлă-хыçлă тăраççĕ. Пĕр мăшăрсăрри — тунката — мăшăрлисем умĕнче тăрать. Ушкăн хыçĕнчи мăшăр тунката çумĕпе икĕ енчен малалла чупать. Тункатин чупакансенчен пĕрне мăшăрланма хăваласа çитмелле те ушкăн умне юнашар тăмалла. Мăшăрсăрри тунката тăрса юлать.

Çав вăхăтрах хĕрелсе
Чуптăвать сарпикене.
Пике аçу аллинчен
Хăтăлсанах çилленсе
Çулса ярать питĕнчен,
Яш куçĕнчен хĕм çиçет.
— Шара ятăн пурнăçа,
Манне çеç мар, сутăкçа[1],
Чăвашăнне, хăвăнне,
Тăват хутри тĕнчене.
Умрах вăрман çаралчĕ,
Пике таçта çухалчĕ,
Аçу тăрать тĕлĕнсе,
Сарпикене хĕрхенсе.
«Мĕскер пулчĕ-ха, ара,
Вăл çухалчĕ — ма вара?
Пике тăнă вырăнта —
Карăш кĕпçи çавăнта.
Эх, чĕкеçĕм, çĕмĕрт куç,
Сан куçра ма шурăмпуç?
Тен, эс пурнăç танати?» —
Терĕ пĕркĕт Услати.
Вирĕ хутчен шăхăрать,
Çилçуната йыхăрать,
Урхамахĕ тулхăрать,
Яш умĕнче тăп тăрать.
— Ах, Çилçунат, ăш çунать!
Саркайăкăм ăçта-ши,
Вăл хăш çĕрте пурнать-ши?
Унсăр пурнăç — пурнăç мар,
Ана мĕнле тупас ман?
Çилçунат та хумханать,
Çын чĕлхипе калаçать:
— Пирĕн енчи хĕр мар вăл,

[1] Сутăкçа — тăрлавсăр.







Çĕр амăшĕн хĕрĕ вăл.
Чăн кĕçĕнни. Амăшпе
Пурăнать çĕр айĕнче.
Пыл-çу тейĕн кăмăлран.
Аслай тейĕн ăстăнран.
Çак кунсенче Аслатин
Вăл пулатчĕ кĕçĕн кин.
Мĕншĕн ăна чуптурăн.
Ма телейне аркатрăн?
Çухатрĕ сан пиркнех
Емĕрлĕхе хĕр чысне.
Çавăнпа намăс кĕпине
Тăхăнмаллах ун ĕнтĕ.
Турăсен те пирĕн пек
Хĕрсен чысĕ хисепре.
Темле хытă савсан та,
Юратупа çунсан та
Çын умĕнче чуптуни —
Хĕре намăс кăтартни.
Турă хĕрне çын каччи
Хыт юратса чуптуни
Ун питĕнче налăрать,
Намăссăрне кăтартать.
Унăн пулас хуняκки,
Час ĕрлекен Аслати,
Пулас кинне вăл курĕ,
Чуп йĕррине асăрхĕ.
«Еркĕнлĕ ман пулас кин,
Çавăнпа ун чуп йĕрри.
Ун еркĕнĕ этемрен,
Пĕтеретĕп вĕсене!» —
Тесе анĕ тӳперен,
Çуй пуçланĕ çĕр çинче.
Çăлас тесен пикене
Сан ырă ĕç тумалла.
Мĕнле ыр ĕç çынсемшĕн



Эс халь тума пултаран?
Çӳлти тĕнче алăкне
Кĕле яма ĕлкĕрсен,
Пурнăçласан эс çавна,
Аслати çĕре анаймасть,
Çĕр çинче çуй пуçланмасть.
Вăхăт та халь сан майлă.
Ват Аслати çывăрать,
Эрнерен тин вăранать.
Васкар! Утлан ман çине,
Улăхăпăр тӳпене.
Тĕнчен аслă хапхине
Кĕле хурсам тул енчен.
Эсĕ кашни тĕрмĕшре
Çак пушăпа мана çап.
Малтан çапни тирĕме
Манне çуртăр шарт та парт!
Тепре çапни — çак тĕлтен
Çичĕ талăк патнелле
Ыраттартăр чĕрене.
Виççĕмĕш хут çапниччен
Пуç мимине çитиччен
Ырату пултăр — каснă пек.
Пуçне ухать урхамах,
Йĕкĕт чарнать хумханма.
— Эй, Чĕкеçĕм, ан кулян,
Эс пурпĕрех ман пулан! —
Тет те çапать ăйăра
Чĕн пушăпа аякран.
Ăйăр тирĕ шарт çурлать.
Пĕрех сикет тӳпене.
— Эй,— тет аçу ăйăрне,—
Çитрĕмĕр çул çуррине,
Ансам çĕре кунтанах.
Тепĕр кунне Услати, —
Вăл çумăра пăхать-и,—



21 Улип.

Ирех сиксе тăрать те
Урхамахне йыхăрать.
Çилçуначĕ тулхăрать,
Пĕр вырăнта вăл тăмасть.
  Шетмĕ хĕрне ансанах
Асçу вăр-вар утланать,
Ана çапать пушăпа
Вăйне хурса хырăмран.
Пушши вирлĕ тивнĕрен
Çурлать хырăм тирĕ те.
Ик чĕри те ыратсан
Айри сикет тӳпене.
— Эх,— тет асçу кулянса,—
Кĕле манран шит анчах.
Паян та ĕç ăнмарĕ,
Ыранхи кун мĕн калĕ.
  Тепĕр кунне сан асçун,
Паллах, ĕнтĕ хумхану.
Уя тухать, шăхăрать,
Урхамахне йыхăрать.
Çилçуначĕ кĕçенет,
Çутă тĕнче чĕтренет.
Вут-хĕм тухать сăмсинчен
Çич çухрăмран курниччен.
Утлансанах ут çине
Асçу хĕрет вăйилсе,
Мĕнпур вăйпа паттăрла
Ута çапать пушăпа.
Айрин туртса çапнăран
Пуç мимийĕ ыратать.
Ана çиллес пуснинчен
Çиçĕм çиçет куçĕнчен.
Ут тӳпене ыткăнать.
Сăмсинчен хĕм явăнать.
  Сут çăлтăрсем юнашар.
Алăк кĕли — алăра.



Тĕнче алăкне хупнă чух,
Ана кĕле янă чух
Ват Аслатн вăранать,
Çĕр халăхне ылханать.
Асçу вара çав кунах
Шетмĕ хĕрне ансанах
Сан аннӳпе пĕрлешет,
Хусах пурнăç ун пĕтет.
— Хаклă мучи, итлесем,
Вăхăту çук пулсан та
Атте çиччен татах та
Каласа пар. Тархаслап.
Пĕлес килет çавна та:
Атăл паттăр кам вара?
— Ай-ай, Улăп, эс мана
Тĕлĕнтертĕн чăнах та,—
Терĕ Туптул Улăпа
Ашшăн пăхса, хумханса.—
Калап эппин ун çинчен
Кĕскен кăна. Ан çиллен.
Вăл ĕç пулнă тахçанах,
Пĕр виççĕр çул каярах.
Çичĕ хутлă тĕнченĕн
Чи аялти хутĕнчен,
Сарă тĕнче тенинчен,
Йăва тума пикенсе
Вĕçсе килет Тăтамас —
Виçĕ пуçлă хăруш çам[1].
  Унăн йăви çавăн пек —
Çичçĕр хăлаç сарлакăш —
Пулнă теççĕ ват çынсем,
Ана куçпа курнисем.
Йĕкĕрешлĕ çăмарта
Çав йăвара пулнă тет.

[1] Çам — вуник пуçлă çĕлентен те хаяр тискер кайăк.

Çылăх чăпти пулнăран
Чĕппи пулать çăмламас.
Çав чĕп çутта юратман,
Мĕншĕн тесен çутăра,
Хĕвел пăхнă вăхăтра,
Çын миминчен туни те
Пырне ларнă апачĕ.
Хăй чĕппине Тăтамас
Çапла калать лăпланма:
— Кунта пĕччен юлан-ха.
Эс нимрен те ан хăра.
Эпĕ сана тўперен
Пăхсах тăрăп инçетрен.
Хупăрлатăп хĕвеле,
Тыткăнлатăп çутине.
Ун чух вара тўпере,
Çав вăхăтрах çĕр çинче,
Тĕттĕм тăрĕ тĕнчипе.
Чĕппĕм, савăн çавăншăн —
Манра ун чул вăй-халшăн!
Иксĕмĕр пек тĕттĕмре
Куракансем витĕрех
Урăх çукка тĕнчере.
Хырăму выçма тытăнсан
Çавна мана систерме
Карса ярсам çăварна
Хăлху патне çитмелле.
Çав вăхăтрах урупа
Карланкуна кăтăкла.
Пурнăçласан çавсене
Эпĕ сана ун чухне
Пур çĕртен те самантрах
Персе парăп çынсене.
Вĕсен выльăх-чĕрлĕхне.
Чурăшсене — тутлине,
Писнĕ пахчаçимĕçне,



Симпылне те пичкепе.
Манран вăйлă пулатăн.
Ун чух этем-тăшмана
Хăвăн айна тăватăн,
Тĕнче патшн пулатăн.—
Тет те нрсĕр Тăтамас
Чĕппи çинче явăнсан
Сарса ярать çунатне
Хĕвел енне ыткăнма.
Çунаттнпе хĕвеле
Карса илет вăр-варах,
Çутă çулне çавăнтах
Татса хурать — ним те мар.
Тĕнчипеле сĕм-тĕттĕм.
Куçран пырса чиксен те
Кураймастăн нимĕн те.
Çуй пуçланчĕ темелле.
Çавна кура чĕрчунсем
Хăравçăна тухрĕçĕ,
Ним тума та пĕлмеççĕ.
Тăтамаса савнăç ку —
Тĕнчипеле арпашу.
Услатипе Çилçунат
Ним пулман пек курăнаç.
Пĕри — ўхлет, кукалет,
Урипеле çĕр чавать,
Аяккалла сирпĕтет,
Сăмсинчен хĕм вĕçтерет.
Тепри — ларать ут çинче.
Тĕлĕнмелле стайлă-çке,
Пăхмашкăн та курăмлă.
Ик урари аттиниче,
Шир-Пăлхарта илиинче,
Ылтăн шермен[1] кашнинче,

[1] Шермен — шпор. Шерменлет — шпорлать.

Шăпчăк кĕвви вĕсенче.
Услатнпе йăрне —
Иккĕшне те пÿлĕхçĕ
Пĕр ÿт-пĕврен тунă тен.
Çавăнпа та иккĕшĕ
Хăюллă та тăнăçлă.
Анланаççĕ пĕр-пĕрне,
Пулăшаççĕ кирлĕ чух,
Хăрамаççĕ никамран.
Çавăнпа та Услатин
Çапла юхать сăмаххи:
— Çакă çутă тĕнчере
Тăвайман ĕç этемшĕн
Пĕрре кăна темелле:
Йĕмне пуçран тăхнаймасть.
Мĕн тăвăпăр халлĕхе?
Çилçуначе хуравлать:
— Çула тăсар тÿпене!
Тăтамас вăл яланах
Чееленме тăрăшать.
Анчах çавна чухлаймасть:
Чеелĕх вăл ĕмĕрех
Хавшак çынсен меслечĕ,
Путсĕр çынсен ăстăнĕ.
Эс ман çинче ларсан та,
Санра чеелĕх пулсан та
Тăшмансемпе çапăçма
Тытăнатăп хам малтан,
Мĕншĕн тесен тĕттĕмре
Эс курмастăн нимĕн те.
Паттăр пăхать тÿпене,
Çав вăхăтрах шерменлет
Çилçуната ик енчен.
Йăрăр çыртсан тÿпере
Тăтамаса хăлхинчен
Усăнать вăл çĕрелле.



Хĕвел çути вăй илет.
Çутн янăх пулсан та
Açу çакна асăрхать:
Тăтамасăн вичĕ пуç,
Кашни пуçра вичĕ куç.
Виççĕшĕнчен ик куçне
Мăчлатманран пĕрре те
Шăнса хытса ларнă тен.
Вичĕ пуçне харăсах
Хĕçне темле кассан та,
Ыткăнсан та аякка,
Майĕсемпе каяллах
Сыпăнаççĕ пĕрмаях.
Açу уншăн хумханмасть,
Хĕçне çакать хул çине.
Арăсланран йăрăрах
Пĕр самантрах пулать те
Пĕррех сикет йĕк çине.
Тăтамаса ыталать,
Пачăртаса хутлатать.
Тăшман вĕçет тÿпере
Урлă-нирлĕ ыткăнса,
Çав вăхăтрах хăй тавра
Пĕтĕркĕç пек çаврăнать.
Анчах та ун ĕç ăнмасть,
Паттăртан хăтăлаймасть.
Çавăнпа та çĕр çине
Персе анать месерле.
Анчах та вăл аçуна
Тĕп тăваймасть унпа та.
Сиксе тăрать, çĕр чавать,
Шур хурăн пек чăнк! тăрать.
Açу çĕре ыткăнмасть.
Ирсĕр чупать сиккипе
Тусансене вĕçтерсе.
Çав вăхăтрах тап! тăрать

Сан аçуна ывăтма.
Аçу хĕçне кăларать,
Пуçĕ тавра вылятать.
Тăтамаса çавăнтах
Пуçлать урлă турама.
Анчах ирсĕр Тăтамас
Турасан та йăванмасть,
Ним пулман пек — сып-сывах.
Аçу хытах тарăхать.
Тăтамаса тăрăхла
Касма пуçлать çурмаран
Пуç тўпинчен пуçласа.
Ирсĕр ўкет хăраса,
Тинĕселле ыткăнать.
Вăл аçуна тинĕсре
Чăмса тарăн вырăна
Чыхăнтарса ярасшăн,
Çапла чунне илесшĕн.
Анчах тинĕс инçетре,
Çитеймест вăл туххăмрах.
Çулне пăрать анăçа,
Чăмать тарăн Атăла.
Сан ват аçу унта та,
Сывлама çук пулсан та,
Пуçлать йĕке турама
Пуç тўпинчен пуçласа.
Вăтам пуçне тăрăхла
Туранă чух хĕçĕпе
Вăрттăн куçĕ туранать,
Çав вăхăтрах юхăнать
Атăл тĕпне çитмелле.
Çав пуç пулнă асам пуç,
Асам пуçра — асам куç.
Куç шăрçиче чĕрн ун.
Чĕрнне хĕç каснăран
Тăтамас вилет самантрах.



Тăтамасăн юнĕнчен
Ытла нумай юхнăран
Атăл каять хĕрелсе.
Çавах аçу ăна та
Хăйар витĕр юхтарса
Усал юнран тасатать.
Атăл выртать çуталса
Акăш куç пек тап-таса.
Шурпуç халăх ячĕпе
Çапла калать аçуна:
— Тăтамаса çĕнтертĕн,
Çут тĕнчене хăтартăн,
Тăшмана та Атăлтан
Эс сĕтĕрсе кăлартăн.
Атăл чаплă тĕнчере,
Ана тĕнче хисеплет.
Эс та паллă халăхра —
Атăл паттăр паянтан.



# *Çирĕм çиччĕмĕш юрă*

## ТУРĂСЕН КАНАШЛĂВĔ

***Турăсен канашлăвĕ.***
***Чăваша Улăппа пĕрле халăхсене нумай сиен туса çылăха кĕнĕ тесе айăплаççĕ. Ахплатра Улăпа чĕри пăрланиччен шăнтаççĕ. Çурри турă ун хутне кĕрет те сиене Ахплатран хăваласа ярать.***

Хĕл-хĕл кайăк, хĕл кайăк,
Çамрăксемшĕн сим кайăк,
Хĕл хĕлleме тытăнсан
Шур çăмарти йăвара[1].
Çăмартисем камăн-ши,
Хуçи халĕ ăçта-ши?
Ун хуçиĕ керменте,
Аслă турă патĕнче.
Унта пырать мăн пуху,
Татмалла-çке пĕр ыйту.
Мăн пухури шурпуççем,
Чи хисепре пулнисем,
Каларĕçĕ татăклах:
«Улăп пултăр Ахплатра».
Унта ларать Мăнтурă,
Хăйне тытать мăнаçлăн.
Хуса ярсан ыйăхне
Çапла калать сăмахне:
— Эсир килтĕр çич тĕнчерен çăтмаха.

[1] Сутмалли юмах. — Юр, юр çуни.



Килин лайăх. Анчах мĕнле сăлтавпа?
Çавна калăр мана, ачасем!
Ăнланмалла пултăр сирĕн сăмахсем.
— Çӳлти хутри тĕнчерен
Килтĕм кунта пĕр-пĕччен,—
Терĕ шăппăн пӳлĕхçĕ,
Аслă турă пултăрĕ.—
Чăваш халăх ытла та
Чăрсăрланса кайнă та
Пуçтахланать пĕрмаях.
Кĕрсессĕн те айăпа
Йышăнмасть вăл çавна та.
Аста вара, чее те
Йăвантарма айăпне.
Аса илме ирĕк пар.
Пĕр-ик пин çул каярах
Ача-пăча айăмне
Тытса çусан типĕтме
Пĕлĕт çине саратчĕç,
Уйăх çине çакатчĕç.
Уйăх мĕнле чăтăмлă,
Вăл та ун пек мăшкăла
Чăтаймасăр тарăхса
Çут тӳпене ыткăнчĕ.
Ку анчах-и! Пĕлĕте,
Вăл çĕр аçи пулин те,
Çĕртен тĕртсе уйăрчĕç,
Çăлтăр уйне çитерчĕç
Пĕлĕт пирки чăвашсем
Калаççĕ çакăн пек:
«Яка пырлă пулчĕç те
Тапса сикрĕç тӳпене».
Тыр акаççĕ чăвашсем,
Анчах та пĕр вырăна.
Тырри япăх пулсанах
Ятлаççĕ вĕт Мăнтурра:

«Аслати — хӑй ватӑ та
Ал арманне ҫавраймасть,
Ҫумӑр ҫумасть ҫавӑнпа.
Мӑнтурӑ хӑй шӑлсӑр та
Аслатие ятлаймасть».

Аслӑ турӑ хушнипе
Чӑваш йӑхне ҫӗнетме
Мӗн чул ҫиҫӗм ҫиҫрӗ-ши,
Мӗн чул аҫа ҫапрӗ-ши?
Вӗсем вилчӗҫ, сахал мар,
Виҫӗ ӑру таранах.
Анчах вӗсем тем майпа
Пурте лекрӗҫ ҫӑтмаха.

Картран тухса кайрӗҫ те
Хӑрамаҫҫӗ нимрен те.
Тӗнчен аслӑ алӑкне
Кӗле ячӗҫ тул енчен.

Ах, Мӑнтурӑ, калӑр-ха,
Малалла мӗн тумалла?
Хӑрамаҫҫӗ ҫуйран та,
Халь ятлаҫҫӗ сана та.
«Талайран юлнӑ ҫут тӗнче,
Пирӗнтен те юлӗ ҫав тӗнче»,
Тесе юрлать юррине
Чӑваш автан яшкинче.
— Пур чӑваш та ҫылӑхра,
Шеллес пулмасть чӑваша!
Кӑшкӑраҫҫӗ турӑсем,
Канашлури шурпуҫсем.

Аслӑ турӑ вӑрҫнӑран
Сас илтӗнет сылтӑмран:
— Халь чармасан вӗсене
Тем курӑнӑр ҫӗн ҫуйччен.
Тӗнче ҫиччен час-часах
Калаҫҫӗ ак ҫапла:
Ҫут тӗнчене никам та



Туман теҫҫӗ. Тамаша!
Мӗнле халь тет, яланах,
Тӗнче пулнӑ тахҫанах.

Сӳпӗлтетеҫ ҫапла та:
Ӗлӗк-авал ҫакӑнта
Пулнӑ кӑна: вут, шыв, ҫил.
Ҫав сӑмахран — вырт та вил!
Ун чух пӗлӗт ҫатмалла
Ҫӗр ҫине тет ӳпӗнсен
Кайӑк-кӗшӗк выляса
Чӑмнӑ пулать шыв тӗпне.
Ун чух кайӑк-кӗшӗксем,
Ҫӗре курнӑ та вӗсем,
Ана туртса кӑларнӑ.
Ҫӗре пурте юратнӑ.
Чӗптӗрленӗ тем тӗслӗ.
Ҫавӑнпа ҫӗр илемлӗ,
Пурне те вӑл кӑмалла.

Ҫӗре шывра путасран
Ун илемне упрама
Виҫӗ пулӑ ҫав ҫӗре
Айне выртса йӑтнӑ тет.
Анчах пӗри, вӗҫкӗнни,
Лапкӑ выртма пӗлменни,
Хӑй вырӑнне хӑварнӑ.
Ҫӗр самантрах улшӑннӑ.
Ҫӗр путӑннӑ вырӑнта
Тинӗс выртать шавласа.
Асат хуҫнӑ талкӑшра
Сӑрт хӑпарать таҫта та.

Чӑвашсене хӑратма,
Пире асра тыттарма
Аслӑ турӑ хушнипе
Ват Киремет раттипе
Тата ачи-пӑчипе
Анчӗ ҫӗрле ҫӗр ҫине.

Ват Киремет чăнах та
Алра тытрĕ чăваша.
Анчах чăваш ăна та
Улталарĕ майласа.
Мĕнле тетĕр? Ак çапла.
Ĕç пуçланнă çакăнтан.
Киремет пĕр чăваша
Хăйне путсĕр тытнăран
Кĕлмĕç хутаç çактарнă.
Ял-ял тăрăх çӳретнĕ.
Çав вăхăтра Киремет
Ĕçре хытах ĕшенет.
Çыврас умĕн раттние
Чĕнсе илет каçхине.
— Эп выртатăп çывăрма,
Ват шăмшака кантарма.
Çавна лайăх астăвăр,
Çуй килес чух вăратăр.
Кĕлмĕç пуçне тем кĕнĕ,
Çула тăрăх юрланă.
— Эй, çу килет, çу килет,
Çу çитсессĕн хĕн пĕтет.
Ват Киремет тĕпчекĕ
«Çу» сăмаха «çуй» тесе
Анланнă-мĕн чĕтресе.
— Эй, папай, тăр! Çуй килет,
Çуй пире те пĕтерет!
Ват Киремет вăранать,
Каçса кайсах тарăхать.
— Çуй килмесĕр вăратрăр,
Хăвăр валли шар турăр.
Вăратман-тăк пурне те
Пулăшаттăм çуйччене.
Ват Киремет вилсенех,
Çавна чăваш пĕлсенех
Киреметсен вырăнне



Сухалама пуçлаççĕ.
Ват Киремет йăхĕсем
Касă айне пуласран
Аслă Чăваш çĕрĕнчен
Шăвăнаççĕ хăраса.
Чăваша çуй ним те мар.
Халь те пичке пуçласан
Юрра ярать ак çапла:
«Вуниккĕн така пусмашкăн
Чавса çӳллĕш çынсем мар.
Çуй килсен те пĕтместпĕр.
Эпир сыхлавçă халăх вĕт!
Пирĕн сыхлавçă — шанчăклă.
Юрекке патша ун ячĕ.
Çĕр айĕнче пурăнать,
Çĕре путнă хулара,
Ячĕ унăн Шир-Пăлхар.
Юрекке пире пăрахас çук.
Ма кулянас, ма йĕрес,
Çуй килесрен ма чĕтрес?
Çуй килсессĕн сыхлавçă
Çĕр айĕнчен йăшт тухĕ,
Тимĕр туя кăларĕ,
Тимĕр карта çавăрĕ.
Çуй кун чăваш пуçтарнать,
Çав картара сыхланать.
Пире унта, чăваша,
Çуй та ним те тăваймасть».
Çавăнпа та чăвашсем,
Пур çĕрте те тенĕ пек
Сăвап тăпри[1] уçмаççĕ,
Туйăк айне хумаççĕ.
Уй хĕсĕре тухсассăн,

[1] Сăвап тăпри — вилнĕ çын валли шăтăк чавма пуçланă чухнехи тăпаткăл çĕр касси. Авалхи чăвашсем ĕненнĕ тăрăх, вилнĕ çынсем [illegible] пĕтнĕ чухне çав сăвап тăпри витĕр çĕр çине тухаççĕ.

Тыр-пул начар пулсассăн
Халăх пÿртне пухнаççĕ,
Вăрра кайма шутлаççĕ.
Хĕрсе «туя» каяççĕ,
Çĕр вăрласа килеççĕ.
Чăваш пирки Аслати
Тăрса юлчĕ кинсĕрех.
Çавсемшĕнех ăратти
Аталанмасть. Йăх сÿнет.
Çĕр амăшĕн пĕр хĕрне
Вилĕм ертсе хăварчĕ.
Кайран ăна чĕр çĕре
Ют тупăка вырттарчĕ.
— Пĕтермелле чăваша,
Ун кун-çулне татмалла!
Вăл яланах çылăхра,
Ун вырăнĕ — тамăкра! —
Кăшкăраççĕ турăсем.
Канашра нуç пулнисем.
Пĕр шуйттанĕ, хаярри,—
Вăл тамăкра чи асли,—
Çĕр айĕнчен çиçкĕнсех
Сăмах ваклать кĕвĕçсе.
— Пĕр Улăпран тамăкра
Тухать ахăрсамана[1].
Тархасшăн, пур чăваша
Ан ярăр-ха ман пата!
Çав вăхăтрах пĕр турри,
Иккĕленчĕкпе тусли,
Хăртма чăваш халăхне,
Çапла пуçлать сăмахне:
— Ун пек çеç мар çав халăх,
Кÿрентерет вĕçĕмсĕр,
Вăл шыва та час-часах

[1]Ахăрсамана — кунта: тамăк арканни.



Пĕрмай вăрçать сăмахпа.
Шыв,— тет,— тухрĕ еркĕне,
Хывнă пуль çав амăшне,
Татать арман пĕвине,
Юхтарать çуртне-йĕрне.
Ейĕве вăл кайсанах
Выртать вара сарăлса,
Унтан чаксан каялла
Хура çĕре хăйăрлать,
Халăха тек хур тăвать.
Чăваш тухсан çул çине,
Çăлкуçĕнче шыв ĕçсен
Никама та тав тумасть,
Сăмахĕпе улталасть:
«Ĕçекенни эпĕ мар,
Тутар майри ĕçрĕ халь».
Шыв алпастне йăпатма
Пăрахать кăна çăмарта.
Шыва кĕрет хăраса,
Унтан тухсан — патшара.
Юханшыва пĕвелет,
Анчах ăна сын памасть.
Чÿкне тăвать — ятне çеç,
Айăрпа мар, такапа.
— Чăваш тухрĕ картĕнчен,
Çылăхра вăл — пур енчен!
Çав çылăхлă халăха
Тĕп тумалла хăвăртрах! —
Кăшкăраççĕ кутăнсем,
Канашлури хăрхăшсем.
Вут-хĕм турри, çăткăнскер,
Шыв турринчен хăраса
Вутчульне пытаннăскер,
Кураймасăр чăваша
Çапла калать тарăхса:
— Эп паянах вĕсенне

Хулисене, ялсене,
Вăрманне те, уйне те
Хупăрласа илетĕп,
Кĕллентерсе ярatăп.
Канашлури сăмахсем,
Чăваш пирки тăснисем,
Çĕр амăшне чĕререн
Атпăрипе чикнĕ пек.
Çуткун туррăн, Тавçанăн,
«Чăваша пĕтерес тенинчен»
Хыт кулянса кайнинчен
Чĕри кĕçех çурăлас пек.
Çĕр амăшĕ пухура
Çапла калать Мăнтурра:
— Кунта — пурте турăсем,
Хамăра тытар турă пек.
Ытти халăх та çавах
Пĕр çылăхсăр пурăнаймасть.
Апла пулсан пурне те
Пĕтермелле-и çуйччеnex?
Улăпа та ятлатăр,
Темĕн те пĕр калатăр:
«Ун çылăхĕ — мăй таран,
Вăл чĕресĕр, вăл касмак».
Çавна кура ĕçне те
Хыт сивлетĕр çилленсех.
Вăл пин çухрăм таранах
Йĕрлет тетĕр Терпите.
«Хуса çитсен Терпите
Мĕн чул вилĕм юртинче»,—
Тетĕр эсир. Анчах та
Терпит хун хăй айăплă.
Эсир ăна, усала,
Пĕлетĕр вĕт тахçанах.
Чунĕ ытла хурараn
Мĕн чул халăх хĕн курать.



Ютри халăх чăваша
Пырса сăтăр тумасан
Вăл йăваш та кăмăллă,
Ют çынпа та хăналлă,—
Тесе ялан калаççĕ.
Улăп — чăваш. Çапла вĕт?
Екки те ун çавсеннех.
Ватă-вĕтĕ Ахплатра,
Чăлахсем те сахал мар.
Вăт çавсене пĕр çĕре,
Ишĕлекен кив пӳрте,
Пуçтарăпăр касхине.
Çав вăхăтрах Улăпа
Хăвалăпăр çав яла.
Унта ăна, паттăра,
Сив тулатăр çавăн пек —
Пăрланнччен чĕрнне.
Çынсемшĕн вăл мĕн тăвать,
Çавна курса хак парар.
Хĕл турри хăй ӳлнинче
Капмар кĕмĕл алипе
Пуçлать шур тĕк аласа
Ахплатра юр çутарма.
Улăп çитет Ахплата.
Ик аллипе шарт! çапсах
Тĕлĕнет хĕл ларнинчен.
«Çырла пиçет таврара,
Кунта шур юр пилĕкрен.
Сивви вара ай-ай-ай,
Кăрлач сивви темелле.
Пĕртен-пĕр пӳрт çак ялта
Тăрса юлнă пушартан.
Тăшман кунта пулнă та
Йăлт тустарнă çак яла.
Ял халăхне чурана
Хуса кайнă хĕн курма.

Хăйă çутн çав пӳртре.
Унта пурах чĕрĕ чун.
Кĕрсе курас çак пӳрте».

Çил турри çав вăхăтра
Туту калать васкаса.
Çичĕ тĕслĕ тутуран.
Çичĕ тĕслĕ çил унтан.
Ахплат çинче çил кĕрлет,
Çил-тăвăла вăй илет.
Пĕртен-пĕр пӳрт тăррине
Сирпĕнтерет çĕр çине.
Улăп анлă çурăмпе
Пӳрте пĕрмай хӳтĕлет.
Çиллес çиле, вĕçкĕне,
Пӳртелле çул уçтармасть.
Сив ашшĕ пĕр пӳртĕнче,
Йăлт пăрланса ларнинче,
Астăн парать çилленсе,
Ачисене пĕçертсе.
— Халех кайăр Ахплата,
Тупатăр пӳрт çавăнта.
Çичĕ енчен Улăпа
Хыт тапăнăр ушкăнпа.

Сив ачисем, çиччĕш те,
Ахплат ялне çитрĕç те
Урчĕç вара çавнашкал —
Тĕнчерен пăр тăвасла.
Шăлĕсене шаккаççĕ,
Ял тавралла кĕрлеççĕ.
Çиччĕшĕ те çавăнтах
Шăнтас тесе Улăпа
Чĕпĕтеççĕ, çыртаççĕ,
Вĕре-вĕре илеççĕ.

Сив ачисем вĕрнинчен
Амăрткайăк пеккисем
Вĕççен те хыт шăнаççĕ,
Çĕре ӳксе вилеççĕ.
Юмансем те, çӳллисем,
Тимĕр йывăç пеккисем,
Шарт! шартлатсах çурлаççĕ,
Çĕре персе ӳкеççĕ.
Юханшыв, ял вĕçĕнчи,
Çуткӳлли те çав енчи
Шăнчĕç тĕпне çитиччен,
Çичçĕр татăк пуличчен.

Улăп шăннă витĕрех,
Чĕри те ун пăр пекех.
Чăлахсене çавах та
Пăрахмарĕ йывăрта.
Шăнса кайнă аллипе
Хăй çиййĕнчи тумтирпе
Пӳрте чĕркет пур енчен,
Ашшăн вĕрет çĕрĕпех
Пӳрт ăшнелле тимлесе.
Ырă чăваш ачинчен,
Улăп паттăр ятлинчен,
Мĕнпур турă тĕлĕнет,
Янкавлн те ним чĕнмест.

Çур туррине лайăх мар,
Ун ăшчикĕ пăтранать,
Ахплата вăл ыткăнать,
Урса кайнă сивĕне
Сирпĕнтерет инçете
Хăйĕн пӳртне çитмелле.

Çурхи ăшă Ахплатра,
Улăп паттăр вăрманта.
Юхан савнăç куççульшĕн
Вăтанмасть вăл нимĕн те.



# Çирĕм саккăрмĕш юрă

## УЛĂП — ЧĂВАШСЕН АСЛĂ ЧӲК ПУÇЛĂХĔ

*Чăвашра аслă ăславçă,*
*вăлах аслă чӳк пуçĕ, вилнĕ. Патшапа Сарине халăх хушшинче çӳресе виçĕ юптару илтеççĕ. Ăстаçăсен пухăвĕнче çав юптарусене ăнкарма пикенеççĕ. Анчах пултараймаççĕ. Улăп пухура юптарусен тупсăмĕсене уçса парать, аслă ăславçа ларать. Вăлах — аслă чӳк пуçлăхĕ.*

Эреветлĕ-теветлĕ,
Кĕпе арки шăрçаллă[1].
Уи юррине итличчен
Хайлав пуçлар çакăн пек.
Тӳрĕ кăмăл Нухратăн,
Кĕçĕн хĕрĕ те ăслă.
Ват ашшĕне, Нухрата,
Аслă чăваш патшине,
Кĕçĕн хĕрĕ Сарине
Ыйту парать çакăн пек:
— Атте, ма эс салхуллă,
Кала, сана мĕн пулнă?
Тулайри ват çăхансем,
Ик уралă кашкăрсем,
Пирĕн енче пуласран
Хăратăн-и эс вара?

[1] Сутмалли юмах. — Çăхан.



Ывăл ача çуккишĕн
Хуйăх-и сан яланах?
Вуник ача — пурте хĕр,
Кăмăлсăр-и çавăншăн?
Кĕçĕн хĕрӳ ăнсăртран
Ват хĕр пулса юласран
Хăратăн-и, аттемĕр?
— Вĕсемшĕн мар ман чĕре
Хыт ыратать кунĕпе.
Тавах ăна, Мăнтурра,
Манманнишĕн мана та.
Улăп паттăр пирĕнпе,
Çавăнпа та эпĕ те
Çĕршывăмрн халăхпа
Хăрамастăп тăшманран.
Ывăл ача çук тесе
Лармалла-и ман йĕрсе?
Эс ху арçын ачаран
Ирттеретĕн ăс-тăнпа.
Ват хĕр ятне илтмешкĕн
Каччă çук-и пирĕншĕн?
Улăп сана юратать,
Килĕшет вăл мана та.
Вĕсемшĕн мар ăш çунать,
Ватă пуçăм усăнать,
Аслă ăславçă вилчĕ ман,
Чĕре касса ыратать.
Ун пеккине Чăвашра
Тупаймăп пуль нихçан та,
Вăт çав мана минретет,
Ыйăхăма вĕçтерет.
Хăвах пĕлен, Чăвашра
Чи ăславçа авалран
Чӳк пуçлăхне лартатчĕç,
Турă шутне хуратчĕç.
— Эй, аттеçĕм, çавăншăн

Ан кулян-ха, тархасшăн.
Аславçă пурах Чăнашра,
Анчах та вăл халăхра.
Яла тухса çӳрĕпĕр,
Хуласенче пулăпăр.
Ват çынсемпе калаçсан
Тупатпăрах аславçа.
Нухрат патша хĕрĕпе
Утать уй-хир çулĕпе.
Чăлахсем халь иккĕш те,
Ват çынсем пек имшеркке.
Утсан-утсан çул çинче,
Сĕм-сĕм вăрман хушшинче,
Тĕл пулаççĕ арçынна,
Калаçаççĕ çав çынпа.
— Паянхи кун — канăç кун —
Пурнишĕн те çавах пуль.
Ĕç кунĕсем сан валли
Çав тернех сахал-и?
Арçын хыçать ĕнсине,
Сăмах тăсать ерипе:
— Канăç кунне хамăн та
Ĕçлес килмест вăрманта.
Кашта çинчи шур чăхсем —
Вăтăр иккĕ ман вĕсем —
Пĕртте канăç памаççĕ,
Ирех ĕçе хăвалаççĕ.
Тепĕр кунне, ирхине,
Ват ашшĕпе Сарине
Тумланаççĕ урăхла,
Кĕлмĕçле мар, улпутла.
Мăн кăмăллă, укçаллă,
Сăмсисене каçăртнă,
Лавкка тăрăх çӳреççĕ,
Кăрлайсемпе пуплеççĕ.
Пĕр кăрлайĕ кӳренсе



Шăлнă чухне куççульне
Çын илтмелле çывăхран
Çапла калать хурланса:
— Пур чух сутма хатĕрччĕ,
Халь çук — сутăн илĕттĕм.
Анчах ăна сутмаççĕ,
Ана кивçен памаççĕ.
Ик эрнерен иккĕш те
Турă çынни пулчĕç те
Ял-ял тăрăх çӳрерĕç,
Пĕр ачапа тĕл пулчĕç.
— Эпир килнĕ инçетрен
Эс çак хура пӳртрен тен?
Аннӳ пур-и? Каласам.
Вăл халь килте мĕн тăвать?
— Çисе янă çăкăра
Анне таврать каяшша.—
Хурав пулчĕ ачаран.
Ачи — лутра пуканран.
Кун хыçĕнчен кун иртет,
Патша калать: вăхăт тет.
Çĕршывĕпе янрама
Йыхрав ярать васкаса:
— Нухрат патша, чăваш патши, итлĕр, чăвашсем,
Сире чĕнет хăй патне вăл, итлĕр, чăвашсем!
Юптаркана, виççĕ вĕсем, итлĕр, чăвашсем!
Кам ăнкарать, ăнлантарать, итлĕр, чăвашсем!
Аслă ăславçă çав çын пулать, итлĕр, чăвашсем!
Ана кайран патша чĕнет чаплă керменне,
Хăй çумне вăл ăна лартать пиллĕ çын тесе.
Патша ĕçне тунă чухне унтан ăс ыйтать.
Аславçă кирлĕ патшалăха. Ан манăр çавна.
Ку анчах мар. Йăла тăрăх, пурте пĕлетĕр,
Аслă ăславçă — чӳк пуçлăхĕ. Çавна ан манăр.
Укçине те, выльăхне те, çĕн кăш кĕрĕкне
Патша парать чӳк пуçлăхне — турă çынни те.

Çав вăхăтрах патша калать чунтан хытарса:
Юптаркана ăнланмасăр хуравлакана
Манмастăп тет, асра тытăп, итлĕр, чăвашсем!
Вĕсем валли парне пур ман, итлĕр, чăвашсем!
Парне çапли: çĕнĕ такан, итлĕр, чăвашсем!
Çĕн керменте пыл-çу тесе, итлĕр, чăвашсем!
Хатĕрлетĕп мăян çăкри, итлĕр, чăвашсем!
Кăкшăмпала шăратнă йĕс пултăр шерпет пек.
Кермен тенн — Атăл тĕпĕ, шанчăк вырăн тет.
Патша йыхравĕ янравлă,
Янравлă та чĕневлĕ.
Аслă Пăлхар хулине
Халăхваскать эрнипе.
«Асран айван пулсан та,
Ма пулас мар Пăлхарта»,—
Теççĕ хăйсем çул çинче
Юлташĕсем хушшинче.
Пăлхар хули чăнахах
Истанпултан кая мар.
Çитмĕл урам хулара,
Патша пахчи лапамра.
Юханшывпа юнашар
Ватă юман айĕнче
Нухрат патша умĕнче
Çĕр ăславçă сак çинче.
Çĕр ăславçă хушшинче
Çитмĕл çиччĕн ваттисем,
Çитмĕл çиччĕш хушшинче
Виç ăславçи Кийӳрен.
Пĕр ăславçи, хуларн,
Арăмçалла ун сасси,
Тусĕсемпе патшана
Паллаштарать пуç тайса.
Нухрат патша сăмахне,
Çич хут виççе каснине,
Хулипеле илтмеллех



Тăрса калать çакăн пек:
— Пурте илтнĕ ман йыхрава?
Эсир килнĕ ман патăма таçтан та.
Ман сылтăмра пушă вырăн халь,
Кирлĕ çыншăн усратăп-ха эп ăна.
Кирлĕ çынни — ăслай пултăр вăл.
Халăха та, патшана та кăмăллă пултăр.
Ăс çитмесен, айванлансан, мана та
Астăн патăр ун чухне вăл хăрамасăрах.
Тепĕр чухне эпĕ картран тухсанах
Ман çиллĕхе сирме пĕлтĕр çав çын яланах.
Чĕлхерен те çивĕч пултăр вăл,
Сăмаххисем халăха та кăмăла кайччăр.
Çав ăславçă шанчăклă пултăр.
Чӳк пуçлăхĕ пулмашкăн та тивĕçлĕ пултăр.
Турăсемпе калаçма та вăл пĕлтĕр.
Вĕсем пире кунĕн-çĕрĕн пулăшса тăччăр.
Хисеплесе сире чĕнтĕм кермене,
Мĕн курнине, мĕн илтнине сире пĕлтерме.
Леш эрнекун юри тухрăм пушă вăхăтра
Уçă сывлăш сывламашкăн вăрманта.
Унта ĕçлет, ним канмасăр, вăрман касакан.
Тĕлĕннипе ăна патăм йĕр ыйту кăна:
«Эрнекун вĕт. Ма ĕçлетĕн ун пек тăрăшсах.
Ĕçлев кунĕ çитмест-и-ха хальхи вăхăтра?»
Мана çав çын хуравларĕ, чăн та, юптарса:
«Каштара ман вăтăр ик чăх пулман-тăк,
Ĕçлес çукчĕ канăç кунне иртенпе эпĕ».
Юптарăва ăнланмастăп ку таранччен,
Аславçăсем, ун хуравне уçса парăр-ха.
Мĕн терĕ вăл юптарупа? Çавна калăр-ха.
Аславçăсем пухура
Тытаççĕ пек кулăшла:
Пĕрн пăхать маччана,
Тепри пăхать патшана,
Пайтул ятлă шурăпуç,—

Кĕреçе пек сухал ун,—
Куç хуппине сисмест те
Часах каять ĕмĕте:
«Эп чăн ватти Чăвашра,
Эп чăн асли Пăлхарта».
Мăнна хурса патшапа
Калаçать вăл ак çапла:
— Нухрат патша, кун-çулна
Турă тăстăр пин çула.
Эп чăн ватти сан умра,
Итлесем ман хурава,
Турă пĕлет пурне те.
Астăн парать — хăш-пĕрне!
«Кашта çинчи шур чăхсем,
Вăтăр иккĕ ман вĕсем,
Пĕртте канăç памаççĕ,
Ялан ĕçе яраççĕ»,—
Тенĕ вăрман касакан.
Юптарăва ăнланма
Чăн та йывăр мана та!
Эс курнă çын — çылăхра.
Киреметрен хăракан,
Хăравçă çын шикленет,
Хуравне те тĕттĕмлет.
Киремете юрасшăн,
Унтан пиллĕх ыйтасшăн,
Аçта вăрман çывăхра —
Киремет карти йывăçран,
Çавăнпа вĕсем кашталлă,
Вăтăр иккĕ юпаллă.
Çавăрччен картана
Канăçĕ çук пĕр кун та.
— Пайтул тĕрĕс ăнланать
Юптарăва. Вăл аслай,—
Теççĕ ытти ăслайсем,
Шур сухаллă шурпуçсем.



Улăп унтах. Халăха
Тĕрĕс мара кăтартма
Хăйĕн пуçне пăркалать.
Патша курать Улăпа,
Чĕнсе илет вăл ăна,
Ыйту парать тарăхса:
— Шăлна йĕрен мăшкăлла,
Пуçна пăран ăстайла,
Юптарăвăн шухăшне
Мана уçса парас пек.
— Шăла йĕрмеп нихçан та,
Шăл йĕрме мар Пăлхарта.
Аславçăсен тенĕшне
Ман та итлес килчĕ-çке,
Юптарăва ак çапла
Анланмалла ман шутпа:
Вăтăр ик чăх теекен
Вăтăр ик шăл пур теет.
Шăл апатсăр пурнаймасть,
Канăç кун та çавăнпа
Ĕçлеттерет хăш-пĕрне.
Ахальтен мар ват çынсем
Калаççĕ çакăн пек:
Ĕçле-ĕçле, ĕçле çи,
Ĕçлемесĕр ан та çи.
«Икĕ тĕслĕ хурава
Итлесе лар ухмахла»,—
Патша шутлать тарăхса,
Тĕртсе калать сăмахпа:
— Хуравларăр мана султанла,
Тĕлĕнмелле пуçа ватмалла.
Тепĕр ыйту пулать çакнашкал,
Лайăх шутлăр ăна пуç ватсах.
Пĕррехинче эпĕ тухрăм пасара,
Лавккасенче пултăм та вара
Илтрĕм кăрлай сăмахне,

Сасси янрать ман хӑлхара хале те.
«Хӑй пур чухне ӑна сутма хатӗрччӗ,
Хӑй халь ҫук та, ӑна сутӑн илесчӗ.
Ун пеккине никам та сутмасть,
Кивҫен илес — никам та памасть».
Аславҫӑсем, калӑр-ха мана,
Ун сӑмаххи мӗншӗн-ха апла?
Сирӗн хурав чӑнлӑхра пултӑр,
Ҫавӑнпа та лайӑхрах шутлӑр.
    Пайтул каллех ӗмӗтре:
«Аслӑ ӑславҫа лармашкӑн
Пултаруллӑ ҫын кирлӗ.
Кам ун пекки? Эпӗ ҫеҫ».
Хӑй ӑстӑнне кӑтартма
Пайтул калать ак ҫапла:
— Лавкка хуҫин яваппи —
Ерӗвӗҫсен халаппи.
Анраш мӑкӑнь[1] кӑрлая
Кирлӗ пулнӑ ман шутпа.
Анчах та вӑл анраша
Тупайман-мӗн хулара.
Килте анраш нумай чух
Ана сутма хатӗр вӑл.
Халь килӗнче анраш ҫук,
Унсӑр — пуҫра пӑтранчӑк.
    Ана Улӑп хирӗҫлет,
Хӑй шухӑшне пӗлтерет.
— Укҫа пулсан хутаҫра
Анраш тупан хулара.
Ашшӗшӗн вӑл хуйхӑрнӑ,
Ҫавна кура сӑмахӗ.
Суту-илӳ ӗҫӗнче
Ашшӗ хӑйӗн ывӑлне
Алла тытса вӗрентнӗ.

[1] Анраш мӑкӑнь — наркӑмӑшла мӑкӑнь, опиум.



Йӑнӑшсассӑн ятланӑ.
Анчах ӑна ӑс панӑ
Уншӑн пулнӑ чар тӑлли.
Тарӑхнипе ҫилленсе
Хӑйӗн тӑван ашшӗне,
Ун пек йӑла пулнӑ-тӑк,
Хатӗр пулнӑ сутмашкӑн.
Ашшӗ вилнӗ нрӗкре,
Анчах пурнӑҫ хӗсӗкре.
Ас паракан ашшӗ ҫук,
Ана сутӑн илме ҫук.
    «Икӗ тӗслӗ ӑнкару
Каллех иккен... Ну-ну»,—
Шутлать патша ӑшӗнче.
    Виҫҫӗмӗшӗ ыйтӑвӗ
Патшан пулать ҫакӑн пек.
Пӗчӗк ачан хуравне —
Астӑнӑма уҫмалла —
Анлантарса парӑр-ха.
«Аннӳ килте мӗн тӑвать?» —
Тесе ыйтсан хуравлать:
«Ҫисе янӑ ҫӑкӑра
Анне таврать каяшша».
    «Ман ҫавра пуҫ — пушӑ мар,
Арӑмҫӑн пек сӑн-сӑпат»,—
Шутлать Пайтул ӑшӗнче.
Пӳлет ӑсне кӑтартма:
— Ӳсет пуль-ха ашшӗсӗр,
Ҫавӑнпа та намӑссӑр.
«Ҫисе янӑ ҫӑкӑра
Анне таврать каккалла»,—
Тенӗ ача патшана.
    Улӑп унпа килӗшмест,
Ача хутне вӑл кӗрет:
— Ҫав ачана хурлар мар.
Ача селӗп калаҫать,—

Терĕ Нухрат патша та.
Ҫавна шута илĕпĕр.
Ача сăмахне уҫăпăр.
«Кивҫен илнĕ ҫăкăра
Анне таврать каялла
Камран илнĕ хуҫана».—
Тенĕ ача патшана.
Какка тесе калама
Ача ик-виҫ ҫулхи мар.
Вăл селĕплĕ калаҫнă.
«Каялла» тесе каласса
Вăл каланă «каяшша».
«Ку та ĕнтĕ ик хакпа». —
Патша каять тарăхса.
Аславҫăсем хăраççĕ.
Тухса тарма тăраççĕ.
— Эсир мĕншĕн васкаса манран таратăр.
Мана тĕрĕс хурав панă тесе шутлатăр?
Ҫапла мар-и, аславҫăсем? Ларăр вырăнтах!
Кам хуравĕ тĕрĕс? Калăр хăвăртрах!
— Хурав тĕрĕс Пайтулăн,
Аслă аславҫă пирĕн вăл,—
Теççĕ пурте патшана
Ват Пайтула ырласа.
Улăпа-и шанмалла?!
Ун хуравĕ янкавла!
Аславҫăсем умĕнче
Пуҫне чиксе тăрасчĕ.
Пуҫне йытта памалла!
— Юрать,— терĕ ват патша,—
Кама килĕ тамаша?
Чĕнсе килĕр виççĕшне,
Ыйту пулать вĕсене.
Кĕрет вăрман касакан,
Патша ыйтать ҫавăнтан.
— Манман пуль-ха эс ҫавна.



23 Улип.

Мĕскер терĕн эс мана?
«Канăç кунне хамăн та
Ĕҫлес килмест вăрманта.
Кашта ҫинчи шур чăхсем —
Вăтăр иккĕ ман вĕсем».—
Темерĕн-и эс мана?
Канăç кун та васкатса
Сана ҫавсем яланах
Хăвалаççĕ вăрмана
Пуртăпала вылятса
Ĕҫлемешкĕн кун каҫа.
Кала мана суймасăр.
Юптарупа мĕн терĕн?
— Вăтăр ик шăл ман, патша,
Ҫав хăвалать вăрмана.
Ĕç кунĕнче анчах мар.
Канăç кун та час-часах.
Ҫавăн ҫинчен каларăм
Сана ун чух. Каçарăр.
— Эс те, кăрлай, патшана
Уҫса пар-ха хуравна.
«Пур чух — сутма хатĕрччĕ.
Ҫук та — сутăн илĕттĕм».
— Патша, мана, йĕкĕте,
Йывăр килчĕ ҫав кунне,
Ҫавăнпа та аттене
Аса илтĕм ун чухне.
Сывă чухне аттене —
Хыт ятлаҫнă кун ĕнтĕ —
Сутма хатĕр пулнă эп.
Халь вăл вилнĕ. Кирлĕ вăл.
Ăна мулпа илĕттĕм.
Анчах ăна сутмаççĕ.
Кивҫенле те памаççĕ.
— Ну, эс, ачам, мĕн калан?
Эпĕ патша. Сатурлан!

«Çисе янă çăкăра
Анне таврать каяшша».
— Сан «каяшша» сăмаха
Эп ăнланап «каккалла».
— Сăмахăм ман урăхла!
«Какка» теме шĕпĕн мар.—
Хăй пуканран кăшт лутра.
Виç хурава ăнкарсан
Патша вĕçлет сăмаха.
— Аслă ăславçă паянран
Улăп пулать ăслайран.
Халăх ăна ырласан —
Аслă чӳкпуç ыранран.
Чалмаллисем. Пайтул та,
Хула кулли. Çавăнпа
Хĕрхенмесĕр вĕсене
Хуса ярăр хуларан.



# *Çирĕм тăххăрмĕш юрă*

## УЛĂП ТЕРПИТ ХУНА ÇĔНТЕРНИ

***Ватă карчăк Улăпа хĕвелпе***
***уйăх урлă ăратне чураран хăтарма тархаслать. Терпит хунăн чĕри хăйне усранмасан та Улăп ăна тупса вĕлерет.***

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Шыв юхсан та чул юлать.
Эпир вилсен мĕн юлать?
Улăп пиркн ят юлать.
Улăп тухсан хапхаран
Куçĕ çивĕч пулнăран
Курчĕ Енĕш хĕрринче
Пĕр карчăка ту çинче.
Карчăк ларнă кукленсе,
Ват аллине çĕклесе,
Вĕри куççуль юхтарса
Чĕнет Улăп паттăра:
— Сарă хĕвел, сарă хĕвел!
Кашни кунах эсĕ тухатăн.
Сарă хĕвел, сарă хĕвел!
Кашни кунах эсĕ анса ларатăн.
Эсĕ куратăн Улăп паттăра,
Эсĕ ăна кала ак çапла:
Сана тăлăх карчăк кĕтет тесе кала,
Мамлире вăл пĕр-пĕчченех юлнă тесе кала.
Сана вăл караппăл чĕпни амăшне кĕтнĕ
пек кĕтет те.

Сана вăл парăс çури
амăшне кĕтнĕ пек кĕтет те.
Сана вăл арăмĕ мăшăрне кĕтнĕ пек кĕтет те.
Тулли уйăх, тулли уйăх!
Кашни кунах эсĕ тухатăн,
Тулли уйăх, тулли уйăх!
Кашни каçах тухса анса ларатăн.
Тулли уйăх, тулли уйăх,
Эсĕ кашни каçах Улăпа куратăн.
Тулли уйăх, тулли уйăх,
Эсĕ, тархасшăн, пĕлтер ăна.
Сана тăлăх карчăк кĕтет тесе кала.
Мамлире вăл нĕр-пĕчченех юлнă тесе кала.
Сана вăл ăмăрткайăк чĕппи
амăшне кĕтнĕ пек кĕтет те.
Сана вăл арăслан çури амăшне
кĕтнĕ пек кĕтет те.
Сана вăл амăшĕ мăвăлне кĕтнĕ пек кĕтет те.
Улăп ватă карчăка
Ыйту парать ак çапла:
— Вĕри куççуль юхтарса
Ма чĕнетĕн Улăпа?
— Кунта пулчĕ Терпит хун,
Ик алли те юнлă ун.
Ху куратăн: ялсенчен
Мĕскер турĕ çав эсрел.
Яла чĕртсе çунтарчĕ,
Кĕлне çилпе вĕçтерчĕ.
Выльăх-чĕрлĕх юлманран
Кĕтӳ тухмасть çак ялтан.
Кĕсле сасси янрамасть.
Çепĕç юрă шăранмасть.
Ялта çынсем çуккипе
Мăян пусать уй-хире.
Мĕншĕн тесен Терпит хун,—
Хăçан тулĕ шалчи ун,—



Чуралăха çынсене
Хуса кайрĕ хĕнесе.
Арат мулне вышлăхпа
Шăлса кайрĕ шăпăрпа.
Выльăхсене пурне те
Хуса кайрĕ хăй çĕрне.
Хăвах куран: Мамлире
Хуйăх кашни кĕтесре.
Улăп кăна ясыртан*
Йăха çăлĕ — паттăр та.
Улăп ватă карчăка,
Ăна кĕтет пулсан та,
Ыйту парать çакăн пек:
— Сан ăрату мĕнлескер?
Тен, ăрату куян та —
Тарма тăнă тăшманран?
Ун пек йăха Улăп та
Çăлаяс çук ниçсан та.
Карчăк каять çилленсе
Куçне-пуçне çиçтерсе.
— Эсĕ... эсĕ... ма вара
Умрах хăртан ăрата?
Пирĕн ăрат çавăн пек —
Юмахлăхри юман пек.
Тĕлĕнмелле патвар та —
Илем кӳрет чăваша.
Пирĕн ăрат çавнашкал —
Хастар парăс кайăкран,
Мамли йăхĕ пулнăран,
Таса юхан çăлкуçран.
Пирĕн ăрат çавăн пек —
Сăртри ăмăрткайăк пек.
Çавах эпир вĕçместпĕр,
Арат ятне çĕртместпĕр.

* Ясыр — матурăллă хырăç.

Мĕн чул манăн ăратран,
Арăслан пек пулнăран,
Ертÿç пулнă чаплисем,
Тÿкĕçсем те хаклисем.
    Пĕлетĕн-и Нухрата,
Чаплă, чыслă патшана?
Вăл та манăн ăратран!
Калаçан çав айванран.
Çавăнпа пирĕн ăратпа
Патшасем те хаваспа
Юнĕсене çĕнетме
Тăрăшаççĕ пĕрлешме.
    Юрай турхан[1] — кăйкăрах,
Çапăçура — арăслан.
Ăрăмне вăл çак ялтан
Илнĕ ăрат чаплăран.
Арăмĕпе çав турхан
Пĕрле ларса шутласан
Тĕп хулинчи карманне[2]
Ятарнă тĕт çĕнетме.
    Терпит хуна ĕненнии,
Ана лайăх пĕлменни
Пĕтерчĕ ман ăрата.
Мĕнле тетĕр? Ăк çапла:
Çав хун — ирсĕр, хура чун,
Кунта пулчĕ калăм кун,
Йăпăлтатрĕ тилĕ пек,
Калаçрĕ вăл элчĕ тен.
«Эпĕ,— терĕ,— яланах

[1] Юрай турхан — сăмах Юрий Долгорукий кинç çинчен пырать пулмалла. Легендăра вăл чăваш патша хĕрне качча илнĕ тет. Арăмĕ питĕ ăслăран ăна курайманисем тухатмăш тесе айăпласа вутта пăрахма тăнă. Çав вăхăтра унта ярăмçă пулнă тет. Вăл кама айăплине пĕлес тесе: «Кам айăплă — çавсем çелен калтисем пулччăр, айăпсăррисем — кайăк пулччăр»,— тенĕ тет. Кинç арăмĕ сархайăк пулса Чăваша таврăннă тет. Лешсем — çĕлен-калтасем тет.
[2] Карман — крепость.



Сирĕнпеле тăванла
Пурăнасшăн çавăн пек —
Пĕр пурари сĕлĕ пек».
Эльмен вăйпут[1] пикинчен
Çулăк[2] илсен аллинчен
Вăл каларĕ: хам юртта
Таврăнатăп туй пухма.
Шуйттан асси — Терпит хун,—
Ах, вилĕмĕ ăçта ун? —
Юртне каяс вырăнне
Йĕлмĕçленет[3] çĕрĕпе.
Шуйттансемпе тĕл пулсан,
Чи аслипе туслашсан,
Ыйăх сарать çавăн пек:
Ăрат сыврать вилнĕ пек.
Кайран ăна тапăнать,
Кĕлленмелле çунтарать.
Этем-и вăл Терпит хун,
Илмейккертен ирсĕр чун,
Улăппала тĕл пулсан
Унăн шалчи тулатчĕ.
    Вată карчăк умĕнче
Улăп тăрать хĕрелсе.
— Кÿрентертĕм эп сана,
Каçар мана, айвана.
Эпĕ Улăп. Хуйăху
Мана кустăр. Терпит хун
Хăтăлас çук тек манран.
Ун юртĕнче пулапах!
    Улăпăн пĕр аллинче
Йăлтăртатать айпăлти,
Çав вăхăтрах тепринче

[1] Вăйпут — çар е хула пуçлăхĕ.
[2] Çулăк — сураçнă хĕр пулас упăшкине парнă тутăр.
[3] Йĕлмĕçленет — тискер чĕрчун пулать.

Хăрчĕ сиçет çав тери.
Улăп пырать вĕçтерсе,
Хун йĕррине йĕрлесе.
Çăпатине силлет те —
Тĕме выртать çав тĕлте.
Ури пуснă вырăнта
Айлăм юлать сарăлса.
Сĕм вăрманти усалсем,
Арçурисем, шуйттансем
Çулне татма пикенсен,
Вăл вĕсене ĕнселет.
Ват юмансем — хăрнисем,
Çилпе ӳкме маннисем,
Чăрмантарсан Улăпа
Куçаççĕ тил курăка.
Чăрмав сăрта тӳперен,
Пулсан та вутчулĕнчен,
Айпăлтипе касать те
Ишĕлтерет хирелле.
Улăп утти çавăн пек:
Çĕрĕн çийĕ чĕтренет.
Çавна Терпит сисет те
Чĕреренех шикленет.
Аса илет çавăнтах
Аталăкăн[1] халавне:
«Çуралать тет Чăвашра
Паттăр, Улăп ятли тет.
Çав паттăрпа тĕл пулсан
Кун-çул татлать ун чух сан.
Çавăнпа та яланах
Çав паттăртан эс сыхлан».
«Эп — вилĕмсĕр. Тавтапуç,
Никам кулли пулас çук,
Аллах мапа манмасан

[1] Аталăк — хана е ун ачисене пăхаканĕ.



Çӳç те ӳкмест ман пуçран,
Мĕншĕн хăрас Улăпран
Чунăм çумра çук пулсан?
Çапах та ман Улăппа
Тĕл пулас мар. Юрттама! —
Килте çĕтĕк халат та
Пулăшать тет йывăрта»,—
Терпит часах меликне[1]
Чĕнсе илет хӳмне.
— Ĕçсем киле йыхраççĕ.
Кунта юлма хушмаççĕ.
Çавăнпа та эп сана
Хытаратăп ак çапла:
Истанпулти[2] пасара
Асат кунти чăваша,
Вырьăхсене пурне те
Кайса сутсам Кийӳре.
Вайпут хĕрĕ, хитрескер,
Ту качаки евĕрскер,
Савăнмашкăн кун каçа
Хампа пулать юрттăмра.
Терпит хуи хăй айрине,
Урхамахла юртнине,
Ӳпне юртра илнине[3],
Ехрат шывне ĕçнине,
Йĕнерлесе утланать,
Хăй юрттине чуптарать.
Чура ялан утнипе
Тĕрĕк çулĕ яп-яка,
Вĕри куççуль юхнипе
Ним те ӳсмест таврара.
Мамлисем те çав çулпа
Утнă чухне хурланса

[1] Мелик — правитель, хуçалăха тытаканĕ.
[2] Истанпул — Стамбул — Турци империн тĕп хули.
[3] Ӳпне юртра илнине — кунта вăртăн çĕршыва кăтартать.

Вĕри куççуль тăкаççĕ,
Çав вăхăтрах юрлаççĕ:
«Уйăх ансанах хĕвел тухиччен,
Сисмен хушăрах, ним кĕтмен енчен,
Килчĕç те пусрĕç хурах тутарсем,
Хурах тутарсем, усал тăшмансем.
Пиçнĕ уйсене утпа таптарĕç,
Ялне-хулнне чĕртсе çунтарчĕç.
Çамрăк юмана, вăрман илемне,
Амăрткайăка, сăртра вĕçнине,
Сатур йĕкĕте, Тăлăм паттăра,
Куççуль юхтарса çĕре çунтарма
Илсе кайрĕçĕ хуйха-чурана,
Хуйхă-чурана, пасарта сутма.
Ешĕл улăхри сарă чечекле,
Çурхи хĕвел пек нарне çиçтерсе,
Тутар арăмĕ, çамрăк арăмĕ,
Çамрăк арăмĕ, хунăн арăмĕ
Кĕчĕ пасара, курчĕ йĕкĕте,
Яштай каччăран ыйтрĕ хĕрхенсе:
— Çиллĕ тăвăлран юлнă юманла
Эс тăран кунта сар пуçна усса.
Çунатне хуçнă ăмăрткайăкла
Хуйхăрса пăхан эсĕ тăвалла.
Аçтн çĕршывран, кам ывăль пулан,
Камăн йăхĕнчен, камăн кăкĕнчен?
Сенкер кăвак куç яштай йĕкĕтĕн
Тĕлĕнсе пăхать хунăн арăмне.
— Пăлхартан эпĕ, Çавал хĕрринчен,
Чăваш ывăлĕ, Питул йăхĕнчен.
Тăлăм ман ятăм, Патерик атте,
Тăшман пыриччен сумлăччĕ пурте.
Акăш кӳллинчи акăш чĕппи пек,
Вăрман хĕрринчи шурă хурăн пек
Хумханса илчĕ тутар арăмĕ.
— Кала-ха тата, мĕн ятлă аннӳ,



Пур-и сан, йĕкĕт, тăван йăмăку?
— Ман анне ячĕ, пĕлсем, Кĕлпике,
Пурччĕ йăмăкăм — хитре Туйпике.
Килчĕç те пусрĕç хурах тутарсем,
Тытса кайрĕçĕ ăна тăшмансем.
Тутар арăмĕ чĕтресе ӳкрĕ,
Хирти кăлкан пек шуралса кайрĕ.
Кĕçĕн йăмăкне — сарă чечекне,
Çурхи шăпчăкне — кĕçĕн йăмăкне
Аса илсенех яштай йĕкĕчĕ
Хурланса ӳкрĕ, сархайса кайрĕ.
— Пурччĕ йăмăкăм, хитре Туйпике.
Таврара пĕрре, кăвак куç нике.
— Эх, паттăр йĕкĕт, эп сан тăвану!
Эп сан тăвану, эп сан йăмăку!
Ылтăн читлĕхри уйăп кайăк пек,
Кĕрхи шур тăмран мăкăнь хăрнă пек
Тутар аллинче çирĕм çул типеп,
Çирĕм çул типеп, пĕр самант кĕтеп.
Пирĕн ялсене пуснă тутара,
Пирĕн уйсене чĕртнĕ Супая,
Атя вĕлерер, атя тĕп тăвар,
Атя тĕп тăвар, çапла хăтăлар.
Тăван çĕршыва унтан хăтарар,
Унтан хăтарар, Пăлхара каяр.
Çĕрле вĕлерсен Супая пăвса
Икĕ пĕртăван тарчĕçĕ тухса,
Тарчĕçĕ тухса тăван çĕршыве,
Тăван çĕршыве, Çавал хĕррине.
Тăпăрт та тăпăрт икĕ ут чупрĕ,
Тăпăрт та тăпăрт икĕ ут сикрĕ.
Куран тăшманран курăк хупларĕ,
Вăрă-хурахран вăрман сыхларĕ.
Çутă çăлтăрсем çӳлтен çутатрĕç,
Икĕ тăвана çул-йĕр кăтартрĕç.
Сарă хĕвел те саванса пăхрĕ,

Йăлтăр та йăлтăр çуталса çиçрĕ»*.
Улăп ясыр юррине,
Чĕре патне çитнине,
Илтсессĕнех аякран
Тăсрĕ хăйĕн утасне
Вунă çухрăм таранах.
Чурасене Терпит хун,
Ырра пĕлмен ирсĕр чун,
Сăнчăрланă уринчен,
Мăйкăçланă мăйĕнчен.
Мăйкăçĕсем юманран,
Шăнĕ мăйри суранран,
Нӳкерĕсем касмак та —
Нухайккисем тăхланпа.
Инкесене, хĕрсене,
Сар чечексем неккине,
Ват ĕнесен хӳринчен
Кăкарнă-мĕн пурне те.
Хăрхăмсене нӳкерсем,
Истанпулта ӳснисем,
Утаймасан хĕнеççĕ,
Çӳçрен тытса сĕтреççĕ.
Улăп çавна курать те,
Айпăлтине çĕклет те
Аслатиллĕ сасăпа
Кăшкăрать хыт тарăхса.
— Энĕ пĕр хут калатăп:
Ашкăнмашкăн чарăнăр!
Итлемесен пурсăр та
Кунта пуçна хуратăр!
— Çав гяура[1] тытăр та,
Хăлха чикки парăр та
Мăйкăçласа яриччен

* Çакăн пекрех юрă Валем Ахунăн «Палнай» кĕнекинче те пур.

[1] Гяур — мăсăльмансем ют тĕнлĕ çынсене мăшкăлласа панă [illegible]



Таканлăр ик уринчен,—
Тесе мелик кăшкăрать.
Нӳкерсене хăвалать.
Улăп енне нӳкерсем
Ыткăнаççĕ, вĕçкĕнсем.
Кĕçех çисе ярасла
Танăнаççĕ кашкăрла.
«Шĕпĕнсемпе çапăçма
Варалас мар алăма»,—
Тет те Улăп ерипен
Кайса ларать ту çине.
Илет тарăн сывласа,
Вĕрет тăвăл кăларса.
Терпит хунăн нӳкрисем,
Хаклă шутра тăнисем —
Кĕрхи шуйттан урапин —
Кусăнаççĕ çав тери.
Çухăраççĕ кусна май
Сыснасенчен кая мар.
Ухă йĕппине вĕçтерсен —
Ирсĕр сăмах кашиннех.
Ухă йĕппи питĕнчен
Тивсессĕнех çĕр хутчен
Улăп каять тарăхса,
Сиксе тăрать васкаса.
Айпăлтипе сулать те —
Çĕр-çĕр нӳкер çĕр çинче.
Хăртпа туртса касать те —
Тăшман вилли купипе.
Меликĕн пур паттăрсем —
Çитмĕл çиччĕ хаклă вĕсем.
Иртеннех юн ĕçнĕрен
Тухнă этем шутĕнчен.
Унта пĕри, тен, асли,
Кăкри çинче чыс палли,
Мăшкăлласа Улăпран

Кулса ыйтать мăнаçла:
— Шыв юхмасть-и сан айран?
— Пуçна килтĕр ун пекки,
Арăм-сарăм купенки!
Ухмах ыйту париччен
Аллахна чĕн виличчен,—
Улăп хирĕç хуравлать.
Тăшман хытă тарăхать.
Çитмĕл çиччĕн Улăпа
Тапăнаççĕ пур енчен.
Улăп пĕччен пулсан та
Хирĕç тăрать çапăçма.
Айпăлти — пĕр аллинче,
Хăрт текенни — тепринче.
Улăп сулсан вĕсене
Пуççăр тăшман çĕр çине
Ыткăнать-çке кĕлтелле.
Мамлисене лăпланма
Улăп калать ак çапла:
— Эсир пурте ирĕкре!
Тăван яла çул тытăр.
Унта выльăх-чĕрлĕхе,
Лаври мĕнпур пурлăха
Яла çитсен валеçĕр.
Сунарçăсем чурăша
Çакнă пекех Улăп та
Çатăрласа мелике
Çакать пештĕр çаккинчен.
Пĕр ĕç кăна меликĕн:
Терпит юрттине çитиччен
Çул кăтартса пымалла.
Терпит хун тĕп хулине,
Çурт-йĕрсенчен чаплине,
Карпа[1] тытса çавăрнă,
Çын юнĕпе сăрланă.

[1] Кар — крепость.



Кар хÿмисем тул енчен
Пăчăрккаллă, çитменне,
Пăчăрккинче, кашнинче,
Çын пуç шăмми ĕретпе.
Вĕсем шăлне йĕреççĕ,
Пăхма питĕ хăрушă.
Паллах, хунăн тĕп хули
Хуйхăпала чăп-тулли.
«Терпит хунпа хулинче,
Керменĕнче, пахчинче
Çапăçнă чух вилĕмле
Ним айăпсăр çынсене,
Тен, сиенлĕп пит нумай.
Ун пек туни — аван мар».—
Шутлать Улăп ăшĕнче
Терпит карне кĕриччен.
Салтса ярать мелике
Пештĕрĕнчен сыхнине.
— Ман сăмаха калама
Халех вĕçтер кермене.
Картан çичĕ сухрăмра,
Тĕрĕк çулĕ кукринче,
Сана Улăп хыт кĕтет,
Калаçасшăн санпа те.
Мелик чупать кермене.
Юратмалли пÿлĕме.
Унта Терпит пĕччен мар.
Сарпикепе калаçать,
Хаклă парне панă чух
Ун хакĕпе мухтанать.
Мелик кĕрет хун патне.
Персе ÿкет урайне.
Çапла пуçлать сăмахне:
— Хĕвел сăнлă Терпит хун,
Ялан пултăр телей кун.
Пире Улăп çул çинче

Тĕл пулчĕ те тапăнчĕ,
Сан кĕтĕвне аркатрĕ.
Кайран кăна тин ыйтрĕ:
«Кам кĕтĕвĕ ку пулчĕ?»
Вăл сан ятна илтсессĕн,
Хай йăнăшне сиссессĕн,
Кĕрхи йывăç çулçи пек,
Тытамака ерчĕ вĕт!
Хай айăпне çемçетме
Вăл пуçларĕ чĕтресе
Упаленсе çўреме.
Эпĕ ăна сан пата
Илсе килтĕм кăкарса.
Вăл сан умра хапăлсăр,
Сан кăмăлна пĕлмесĕр
Кунта илсе килмерĕм.
Умна пăрахса памарăм.
Уях лартса хăвартăм.
Хуларан вăл инçе мар,
Çич сухрăмра вăл санран.
Тĕрĕк çулĕ кукринче,
Ват хурама айĕнче.
Хурами паха туратран,
Çакма лайăх Улăпа.
Сана, чаплă çут хуна,
Сывлăх пултăр пин çула!
«Улăп хăрать ятран та,
Йĕне сăмса ман умра,
Çавăнпа та халь мана
Аталанăн сăмаххи —
Улăп çинчен янкани —
Ват карчăксен халаппи.
Эп ун айне пулап-и?!
Вĕри чунăм манра мар,
Пин çухрăмра вăл манран». —
Çав шухăшпа Терпит хун,—



Ун чĕринче хура юн,—
Висĕ хутчен уласан,
Çичĕ хутчен карăнсан
Айри çине утланать,
Улăп енне ыткăнать.
Улăппа тĕл пулсанах
Ыйту парать вăл ăна..
— Çапăçма е парăнма
Эсĕ килтĕн ман пата?
— Парăнма мар, çапăçма
Эпĕ килтĕм сан пата,—
Улăп хирĕç хуравлать
Хăрамасăр тăшманран.
Мăнаçланать Терпит хун,
Урхамах пек лаши ун.
Кулса ыйтать Улăпран
Леш утсăрах пулнăран:
— Эй, çараккай[1], каласам,
Урхамаху ăçта сан?
Кăтарт мана эс ăна!
Тен, вăл кĕне çĕввинче?
Юнна ĕçсе кўпнĕ те —
Ман тулпартан[2] вăйлăрах?
Апла пулсан... Эй, аллах,
Мана çăлсам Улăпран.
Айăпалтипе хăртсăр сан
Тата мĕн пур? Ну? Кала!
Ыр çын шутне кĕмешкĕн
Хуть хăрт çине утлансам!
Утсăр этем — çараккай,
Ман ума вырт тăсăлса.
Мĕншĕн тесен тулпара
Эпĕ илнĕ вутăшран.

[1] Çараккай — кĕлмĕç.
[2] Тулпар — çунатлă лаша.

Сăрта тапать — сăрт тÿнет.
Кайран ăна сĕтĕрет.
— Кулакана — кутран тет,
Эсĕ çавна ан мансам.—
Татса хучĕ сăмахпа
Улăп паттăр тăшмана.
Санра çылăх — пуç таран,
Эсĕ — тĕнче чикенĕ!
Ку таранччен сăмахпа
Терпит хуна, усала,
Татма хăйман ннкам та.
Ун ăшĕнче çавăнпа
Çилĕ кĕрлет тăвăлла.
Терпит хĕçне çиçтерет,
Урхамахĕ кĕçенет,
Урипе çав вăхăтрах
Касасшăн вăл Улăпа.
Улăп утран хăрамасть,
Урхамаха кăкăртан
Хăртпа касать тарăхса.
Анчах каснă вырăнта
Нимле йĕр те палăрмасть.
Лаша тапать Улăпа
Пĕççиччен ик урипе.
Улăп тапнă вырăна
Сĕрсе илет аллипе.
Тепре тапса иличчен,
Терпит ăна касиччен
Урхамаха уринчен
Ярса тытать çиййĕнчех.
Унтан ăна çавăрса
Йăтса çапать тарăхса.
Урхамахăн çавăнтах
Чунĕ тухать самантрах.
Терпит хун та ыткăнать,
Çĕре ÿксе ахлатать.



Çапах та ним пулман пек
Сиксе тăрать, пурăш тен.
Кукăр хĕçне вылятать,
Касма тăрать Улăпа.
Айпăлтиреи ун хĕçĕ
Тÿрчĕ таран таврăнать.
Улăп тепре ирсĕре
Туртса касать хăрчĕпе.
Анчах çич ют йăванмасть,
Суранĕнчен юн тухмасть.
Шарлакри пек капланса
Юн вырăнне тар юхать.
Хун тархаслать Улăпа:
— Тепре кас-ха пуçăмран!
Чунăм тухтăр хăвăртрах.
Хĕн ан кăтарт, тепре кас.
— Умлă-хыçлă хăрчĕпе
Паттăр касмасть ик хутчен,—
Татса калать вăл хуна
Çулне тытса хулана.
Улăп кĕрет кермене,
Хунăн аскăн пÿлĕмне.
Ай-ай, унта мĕн çук-ши,
Ун пек пуян кам пур-ши?
Ылтăн-кĕмĕл пур çĕрте,
Ĕнчĕ, мерчен тĕпелте.
Урайĕнче кавирсем,
Тир пичкинче эрехсем.
Кавир çинче, кĕтесре,
Улăп курать пикене.
Çунат хуçнă чĕкеçле
Сар хĕр ларать хыт йĕрсе.
Çавра пуçне чикнĕ те
Юрлать вĕри куççульпе:
«Çеçен хир варринчи йывăçа
Çиллĕ тăвăл авса хуçрĕ-çке.



24*

Ўсейсе те пĕве çитсессĕн
Пуçăм та харама кайрĕ-çке.
Енĕш шыв хĕрринчи улăхра
Тăм ўкнине чечек хăрать-çке.
Усалах та тăшман аллинче
Çамрăках та пуçăм пĕтет-çке.
Юсăм пул, савнийĕм, кил чупса,
Кăйкăр пул, савнийĕм, кил вĕçсе.
Мана хупнă кермен тăррине
Ларса манăн юрра итле эс.
Сарă хĕртен хăрхăм пуличчен
Хăрăк туйат ўксе пулас-мĕн,
Таçти-таçти арман пĕвниче
Пĕвеленсе ларса юлас-мĕн.
Хăй çыранне Çавал ватнă пек,
Аслатирен çуртсем çуннă пек
Уяр аçа çаптăр Терпите,
Кермене те вĕçтĕр кĕлленсе.
Шăши пулса чуйка тухасчĕ,
Чĕкеç пулса вĕçсе каясчĕ
Енĕш енне, тăван çĕршыва,
Карлăк çине ларса юрласчĕ!»
Пике курсан Улăпа
Сиксе чĕтрет хăраса.
Хăрасан та хĕр чысне
Сыхласшăн ик аллипе.
— Эсĕ манран ан хăра.
Лăплан. Пăрах макăрма.
Эпĕ Улăп. Чăвашран.
Ирсĕр çурта хăварар.
— Улăп тетĕн? Ах, турă!
Кунтан кай эс. Тархасшăн!
Темле паттăр пулсан та
Çĕнейместĕн эс хуна.
Терпит хун вăл — ăм йăххи.
Вĕри çĕлен хăраххи.



Ун ăшĕнче чун та çук,
Вилĕм унпа çыхланмасть.
Ана кассан çурмаран,
Тепре ыйтса кастарать.
Хăй кун-çулне таттарать.
Хуна тепре кассанах —
Эрешмен вăл самантрах.
Касакане сисмест те —
Часах лекет картине.
Хăвах чухла, ача мар.
Эрешмен хыççăн мĕн юлать?
Тут хырăмпа вăл кайран
Вăй шыв ĕçет ташласах.
— Апла эппин. Ал усма
Кирлех те мар ман шутпа.
Эпир кунта иккĕн те
Тупатпăрах ун чунне.
Тил чĕлхипе калаçса,
Саркайăкла юрласа
Вăйпут хĕрĕ Терпите
Кĕтсе илет каçхине.
Вăйпут хĕрĕ умĕнче
Терпит каять ирĕлсе.
Сарпикене шантарса
Сăмах тăсать ак çапла:
— Эс ман йывăр шухăша
Сирсе ятăн кăмăлпа.
Сисмерĕм — хăш вăхăтра
Вăй-хал патăн чунăма.
Вăт çакăнтах, паянах,
Çамрăк арăм пулан ман.
Сарă пике хуравлать,
Хăй чăтма çук хумханать.
— Сан чунна хĕр чĕччине
Ĕмтересшĕн халь, çиччĕх.
Хĕртен кулать Терпит хун.

Çапла калать чĕлхи ун:
— Çӳп шăтăкри шăпăрта
Чун усранать пытанса.
Пике часах шăтăкра
Тупать кивĕ шăпăра,
Ана тытса пиелет,
Чĕчĕ пама пикенет.
— Хăй чунне кам ухмаххи
Хурать çӳп-çап шăтăкне?
Кăмака милки ăшĕнче
Ман чун выртать чăн пахи.
Пике кăмака милкине
Кăкăр çумне чăмăртать,
Ахах, мерчен шăрçине
Милке çине вăл çакать.
Çич ют каççах ахăрать,
Калать сывлăш çаврăнсан:
— Эсĕ — чăваш ухмаххи!
Ман чун унта пулать-и?
Ман чун кунтан пит инçе,
Çичĕ тинĕс варринче.
Унта утрав çаври пур,
Çав утравра пĕр пӳрт пур.
Çитмĕл йывăç ун тавра
Ӳсет кăна авăнса.
Мĕншĕн тесен тăррисем —
Пӳрт никĕсĕн юписем.
Тымарĕсем, тачкисем,
Пăрăнчăклă ӳснисем,
Пӳрт таканне вырнаçнă,
Пӳрте кĕме памаççĕ.
Пӳрте кĕрес текенсен,
Хăрамăша маннисен,
Пӳрт таканне çĕрелле
Йăтса пеме пĕлмелле.
Пӳрт алăкĕ нăйкăшсан



Хăй тĕлленех уçăлать.
Пӳртре, тĕпел кукринче,
Кавир сарнă сак çинче,
Арча ларать ялкăшса
Кивĕ пӳрте çутатса.
Çав арчара ларчăк пур,
Ларчăкĕнче çăмарта пур.
Çăмартара ман чунăм.
Унта никам çитеймĕ.
Эй, эс, пике, ан кулян,
Эп пулатăп вис кунтан,—
Тет те Терпит пӳлĕмрен
Тухса каять типĕллех.
— Уйăп, халь мĕн илтнине,
Тăшман чунĕ ăçтине
Кайса кала Улăпа,—
Терĕ пике кайăка.
Уйăп вĕçет тӳпене,
Тупать чăваш ачине,
Сарă пике хушнă пек
Сăмах хушать хайхине.
— Хунăн чунĕ пит инçе,
Çичĕ тинĕс леш енче.
Унта утрав çаври пур,
Çав утравра пĕр пӳрт пур.
Çитмĕл йывăç ун тавра
Ӳссе ларать авăнса.
Мĕншĕн тесен тăррисем
Пӳрт никĕсĕн юписем.
Тымарĕсем, тачкисем,
Пăрăнчăклă ӳснисем,
Пӳрт таканне вырнаçнă,
Пӳрте кĕме памаççĕ.
Пӳрте кĕрес текенсен,
Ним хăрама пĕлменсен,
Йăтса пеме пĕлмелле.

Пўрт алăкĕ нăйкăшсан
Хăй тĕлленех уçăлать.
Пўртре, тĕпел кукринче,
Кавир сарнă сак çинче,
Арча ларать ялкăшса
Кивĕ пўрте çутатса.
Çав арчара ларчăк пур,
Ларчăкĕнче çăмарта пур.
Çăмартара хуи чунĕ.
Пит инçе тет, ах, турă!
Улăп каллех çул çинче.
Çичĕ тинĕс варринче.
Тинĕс шавлать, хумханать,
Хумĕ сăрт пек йăтăнать.
Ал айĕнче кимĕ çук,
Ана тума йывăç çук.
Асп илчĕ вăл тинех:
Шурă сăхман кĕсйинче
Алшăлли ун пулмалла,
Çавăнпа çул уçмалла.
Алшăллине илет те,
Пĕр вĕçĕнчен тытать те
Тинĕс шавне çĕнтерме
Калать шурпус сăмахне:
— Тинĕс патши, чăвашран
Парне ил-ха кăмăлран,
Утрав çине тухмалли
Çула уç-ха ман валли.
Алшăллине тинĕсе
Улăп перет çисterсе.
Лăпкă тинĕс варрипе
Утрав патне çитиччен
Тинĕс тĕппе якатса
Çул тăсăлать сарăлса.
Улăп тăсать хăй çулне,
Тухать кивĕ пўрт умне.



Такансене пўрт çинчен
Улăп перет çĕрелле.
Пўрт алăкĕ нăйкăшать,
Хăй тĕлленех уçăлать.
Терпит хуи, йыт, уи чухне
Тăнă пике умĕнче.
«Вăйă выляс» тесенех
Ирсĕр каять четресе.
— Чунăм ăçта вырттине
Каламан-и çынсене?
— Каламан,— тет сарпике.
Хăй те тăрать чĕтресе.
Терпит хĕре тапăнать,
Пике тарма тăрăшать.
Анчах Улăп кив пўртре
Тытса уçать ларчăкне.
Хытса каять Терпит хуи.
Ури утмасть ним те уи.
Куçне-пуçне çавăрать,
Сарпикерен вăл ыйтать:
— Чунăм ăçта вырттине
Каламан-и çынсене?
— Каламан,— тет сарпике
Çухатиччен ăстăнне.
Улăп илет çăмартана,
Терпит каять йăванса.
— Вăт сана,— тет,— тăшмана.—
Улăп ватать çăмартана,
Терпит выртать тăсăлса.
Улăп Терпит хулинче
Утать урам хушшипе,
Кĕрет Терпит керменне,
Ашшăн калать пикене.
— Айта, васкар Чăваша,
Хамăр таван çĕршыва.



## *Вăтăрмĕш юрă*

### УЛĂП КАЛАЙ ХУНА ПАРĂНТАРНИ

***Улăп çулĕ Калай хун енчелле.***

***Шурпуç Калай хуна мĕнле ял тупăннине Улăпа сĕрентет. Калай хуна сăй шывне виле шывне хатĕрлеме чарать, сĕлерет. Улăп вилнисене çынсене тăван çĕршывĕсене çитме, сăй-хал илме ăсе юнне ĕçтерет.***

Эй, ярар-и ярапа
Сенкер мерчен шăрçапа.
Курмарăр-и Улăпа,
Утмасть-и вăл айлăмпа?
Айлăм ялан савăнать
Икĕ Çавал юхнăран.
Вырăн пуян çырларан,
Çавăнтах пур пĕр васан.
Сар хĕвелте ўснĕрен
Çырли чĕнет ниçетрен.
Çĕр сĕткенне илнĕрен
Витĕр курнать пиçнĕрен.
Улăп çнет çырлине,
Шултрине те хĕрлине.
Усăнакан сар çўçне
Шăлса илет хăш чухне.
«Кунта вырăн пит хитре,
Савнăç кăна чĕрере,
Ма каяс-ха ют çĕре
Пулас тесе пур çĕрте?» —
Улăп шутлать ăшĕнче
Ватă юман айĕнче.
Ана кура шăпчăксен
Çичçĕр кĕвĕ çур çĕрччен.
Улăп ларать çул хĕрне,
Тăсса хурать урине.
Çав вăхăтрах çĕр çине
Персе ўкет месерле.
«Мăшкăл вĕт ку! Кам капла
Мана сĕтрет васанпа?»
Улăп вăрçать тарăхса,
Яка çулпа ярăнса.
Пуçне хăвăрт çĕклесшĕн,
Унтан сиксе тăрасшăн.
Васан ытла яка та —
Тытма май çук ниçтан та.
Аллине пуç вĕçнелле
Çавах тăсать çиçĕмле.
Сĕтрекене хулĕнчен
Ярса илет сиччен.
Çич ют хулне пăрнă май
Вăл хăй тавра çаврăнать.
Çапах тăшман аптрамасть,
Кĕç-кĕç алли хуçăлмасть.
Улăп перет пăлахая,
Шăвăнать вăл лăпланса.
Çич ют шутлать савăнса:
«Улăп кăнчĕ хăраса.
Тинех мĕнпур чăваша
Персе чикеп хам ая».
Туртнă чухне вăраххăн
Улăп тăрать сасартăк.
Ярса илет тăшмана,
Хулне пăрать тарăхса.
Хулĕ кăкран тăпăлать,
Çавах пĕрмай явăнать.

Улăп тăшман хулĕнчен
Хытса кайсах тĕлĕнет.
Мĕнле тăшман пулчĕ тет.
Хăйне кайса курас тет.
Хĕрĕх пўрне аллинче,
Хĕрĕх чĕрне пўрнинче.
Хура çатма тĕпĕ пек
Сумсăр унăн шатрисем.
Мĕн чул çынна месерле
Вăл сĕтĕрнĕ, юплешке!
Çавăнпа вырăн васанля,
Нисçтан тытма май çуккă.
«Кас та çитрĕ васкаса,
Ман та выртса канмалла.
Çутă курнать аякра,
Çав еннелле утас-ха».
Улăп утать хавасла.
Çич çухрăмлă утасла.
Персе тухать пўрт умне.
Пўрчĕ путиă çĕрелле.
Хуллен шаккать алăкран,
Сăмах хушать кăшт тăрсан:
— Темле чăрмав пулсан та,
Мана хваттер ярăр-ха!
Пўртре утни сисĕнет,
Ўсĕрни те илтĕнет,
Алăк уçăлать сас тусан —
Шурпус тăрать таянса.
— Кам-ха вара çĕрле те
Ашаланать çак енче?
— Эпĕ, Улăп. Кас пулчĕ, —
Алкумранах сас пачĕ.
— А... Эсĕ-и, ывăлăм,
Малалла ирт, çўревçĕм.
Юрать эсĕ чи малтан
Кунта кĕтĕн çула май.



Кĕмен пулсан пĕтеттĕн,
Çамрăк пуçна çиеттĕн.
Салансах лар. Калаçар.
Салма яшки юлнă ман.
— Ан чăрман-ха. Эн çинĕ.
Тутлă вăрман апачĕ.
— Мĕн чăрмавĕ, ан шарла.
Çулçўревçе апатла —
Чăваш йăли çавăн пек.
Пулас пулать вĕсем пек.
Сыпкалăпăр яшкине.
Çырткалăпăр çăкрине.
Пĕлместĕн пуль. Çак енче
Юханшыв пур. Çавăнта
Çĕр айĕнче, шăтăкра,
Тăшман пурнать тискерскер.
Калай хуи вăл. Çăткăнран
Пин хут усал шуйттанран.
Ирсĕр ĕçне шутласан
Ват çын пулать ачаран.
Çав ват хуна ирсĕрсем,
Ырлăх мĕнне маннисем,
Тур вырăнне шутлассĕ,
Путсĕр ĕçсем тăвассĕ.
Хăй вăл санран эрешмен.
Екки енчен — чи çĕлен.
Унăн хĕрĕх аллинче
Хĕрĕх пурне кашнинче,
Хĕрĕх пурне вĕçĕнче
Хĕрĕх чĕрне çеклешке.
Ярса тытсан аллипе
Вĕçертме çук нимле те.
Хĕрĕх патшалăха вăл
Тăсать ирсĕр аллине.
Никамран та шикленмест.
Шампа хырăм çавăн пек:

Вăйпиттирех çынсенне
Пĕр тумлам та юлмиччен
Сăрхăнтарать пĕрмаях
Паттăрлăхлă вăй-халне.
Çич çул хушши йӳçтерсе
Вăй шыв тăвать çавсенчен.
Пичкн тулсан вăй шывпе
Йăвантарать нӳхрепне.
Вăй чаракан шывне те
Хатĕрлет вăл çавăн пек.
Тăшманĕпе тĕл пулсан
Тытăçиччен вăл унпа
Сăмах ваклать çакăн пек:
«Нӳхрепре пур нк пичке,
Иккĕшĕ те пĕр пекех,
Уета шерпет хисепли,
Турăсене ĕçмелли.
Кам çавăнти шерпете
Çавăрмасăр сыпăша
Еçет тĕпне çутатса,
Çапăçăва çав пуçлать».
Вăл куç хывма ăста та
Нӳхрепĕнчи вăй шывне
Ялан ĕçет кӳпĕнсе.
Ялан çимĕк касхине
Хăй пек чунсăр çынсене —
Супетее, Терпите,
Вĕсемпе пĕрле Паттие —
Вăй шыв кăна ĕçтерет.
Сĕм-тĕттĕмре, çур çĕрте,
Вĕсем вăй шыв ĕçсенех —
Çулталăкпе пуçтахсем.
Никам айне пулмаççĕ.
Пурте чапра. Хан-хансем
Тесе чĕнме хушаççĕ.
Ку анчах мар. Калай хун —



Ытла ирсĕр ĕçĕ ун:
Вăйсăр юлнă çынсенне
Сăрăхтарать сĕткенне,
Вил шыв тăвать çавсенчен.
Çынсем кирлĕ яланах,
Хĕрĕх патшалăх çавăнпа
Ун аллинче чурара.
Ĕмĕчĕ ун ак çапла:
Айне тума тискерле
Явакласшăн тĕнчене.
Калай хун хăй ĕмĕтне
Пурнăçласан пĕтĕмпе
Ирсĕр йăхĕ вăй илет,
Тискерлĕхпе киленет.
Ун чух вара çуйччĕнех
Куççуль юхĕ вĕçĕмсĕр:
Айлăм — тинĕс пуличчен,
Сăртсем — çунса кайиччен.
Пуçтах, ирсĕр Калай хун,
Непĕсленнĕ ирсĕр юн,
Кунталла та аллине
Тăснă Чăваш çĕршывне.
Услатирен тарнине
Ирсĕр манчĕ халь иккен.
Ĕнтĕ Чăваш çĕрĕнче
Хуйхă, куççуль — ĕмĕре...
Эс ăçталла каясшăн,
Хăш çĕршывра пуласшăн?
— Калай хунпа тĕл пулма
Юри килтĕм калаçма,
— Улăп, ан кай ун патне,
Чунна илет вăл санне.
— Вăл ман чуна илеймест.
Çак вырăна çитиччен
Тăн кăтартнă эп ăна.
Çакна кура ун манпа

Каласмалла сыхланса.
— Каяссине кайăн та —
Ĕç ăнĕ-ши сан унта?
Лайăх шутла пуçупа.
Чĕнмен хăна эс унта.
Каях эппин! Паттăрлан.
Сана йывăр чарма халь.
Пÿлĕх сана пулăштăр.
Ас панине йышăнсам.
Эсĕ унпа тĕл пулсан,
Вăл мăнаçлăн калаçĕ.
Ал-урине хуçлатсан
Ешĕлтетме тытăнĕ.
Куçне-пуçне вылятсан
Пÿрнисемпе кармаклĕ.
Тĕксĕр пырне шаккасан
Чĕрнисемпе чавкалĕ.
Сана çапла хăратсан
Кăшкăрĕ çĕр çурасла:
«Сик, тунката, çавăра!
Эс хырăмра пулмалла!»
Ăна хирĕç хуравла
Хăрана пек курăнса.
Пуçна ан сул ман умра
Ман сăмаха хурласа.
Тепĕр чухне чее те
Çĕр паттăртан вăйлă тет.
Итле мана ăнкарса:
«Мана çăтса ярччен
Мунча хуттар эс ирччен.
Мĕнле эпĕ хуп-хура?
Тар пылчăкĕ ман çумра.
Мĕншĕн тесен, айванран,
Мунча кĕмен ачаран.
Мунча кайса кĕрсессĕн,
Симпыл ларса ĕçсессĕн



Çăтах мана çакăнта
Тултармашкăн хырăмна»,—
Тесе кала эс ăна.
Калай мунча хуттарĕ.
Мунча кайса кĕр тейĕ.
Хирĕç ăна хуравла:
«Сан та кирлĕ чухлама.
Аслă Чăваш çĕрĕнче,
Мал енче те кай енче,
Мунча хутса çунтарсан,
Ун сĕрĕмне кăларма
Хуçи каять чи малтан».
Вăл мунчана пырсанах
Урайне выртса канмаллах
Хыт çапăнать тарласан.
Хун ахлатма чарăнсан,
Урайнелле йăвансан —
Нÿхрепелле шăвăнсам.
Куçу курма пуçласан
Асăрхăн ик пичкене.
Иккĕшĕ те пĕр танах,
Уйăрма çук нимле те.
Пичкесенче шерпетсем.
Хăйне кура хакĕсем.
Пĕр шерпечĕ — вăй парать,
Тепри — вăя чакарать.
Калай хуна анрашма
Эс вĕсене арпаштар.
Улăп шурпуç сăмахне
Тимлĕн чикрĕ хăлхине,
Çул куркине ĕçрĕ те
Çулне тытрĕ шыв хĕрне.
Ун нумай-и, сахал-и —
Тухăçалла утмалла.
Çитес çĕре çитиччен
Шарламăпăр ун çинчен.

Шыв хĕррипе иртнĕ чух
Çĕр шăтăкне курчĕ вăл.
Хăрасси-мĕн унăн çук,
Шăтăкалла анчĕ вăл.
    Картлашкисем сахал мар.
Çитмĕл çиччĕ таранах.
Пĕр алăкĕ уçăлать,
Çитмĕл алăк хупăнать.
«Кун пек минрев алăкран
Мĕнле тухас ман кайран»,—
Улăп шутлать ăшĕнче
Хупă алăк умĕнче.
Ăна туртса вăл уçать,
Çитмĕл алăк шалт! хупнать.
Алăкĕсем кĕмĕлрен,
Хăлăпĕсем мерченрен.
Каллех уçать алăка,
Ку алăкĕ ылтăнран,
Сар хĕвелле ялкăшса
Çитмĕл алăк хупăнать.
    Улăп аслă пӳлĕмре.
Шалтан хӳме темелле:
Çаврашка та илемлĕ,
Пурçăн çапса çавăрнă.
Кавир çакнă пӳлĕме
Улăп уçать тимлесе.
    Çытар çинче Калай хун,
Чăн та шапа пуçĕ ун.
Икĕ куçне çĕмел тен,
Кĕçех сиксе тухас пек.
Сăмсн вара — лапчашка,
Катăк тути сарлака.
Пит-куçĕнче шатрасем,
Ӳт-пĕвĕнче кĕсенсем.
Пăхсан тухса тармалла,
Пĕрле ларсан хăсмалла.







Ватăр тăхăр аллине,
Йăшăлтатса илнине,
Çĕлен купи темелле,
Пӳрнисене хĕскĕч тен.
Пуçне çаврать — сив ярать,
Çĕмел куçне вылятать.
Ал-урине хуçлатса
Кăшкăрмашкăн тытăнать.
— Хăвах килтĕн ман пата?
Саншăн эпĕ кам? Кала!
Эп турăра шутланап,
Пуççапмалла сан мана.
Улăп мăшкăл сăмахшăн
Калай хуна çиллĕхлĕ.
Хырăмĕнчен тапĕччĕ,
Куклентерсе лартĕччĕ.
Анчах ăна тапма çук,
Ун шампинче[1] халăх пур.
Улăп тăрать лăпланса,
Калай хунпа тавлашмасть.
— Тăпăлтарсан пĕр алла
Тĕп турăм-ха усала,—
Терĕн пуль-ха мухтанса,
Çут тĕнчене култарса.
Эп пĕтеп-и пĕр алшăн?
Вăтăр тăххăр ман халь вăл!
Ыйтасшăн-и каçару?
Каçармастăп! Тарăху!
Шăнăçайман тарăхпа
Çăтса ярап халех ак!
— Çăтасса эс çăтăн-ха,
Унччен çакна калас-ха.
Мана çăтса яраччен
Мунча хуттар эс ирччен.

[1] Шампа — хырăм.



Эп — хуп-хура, айванран,
Мунча кĕмен ачаран.
Мунча кайса кĕрсессĕн,
Симпыл ларса ĕçсессĕн
Тултармашкăн хырăмна
Çăтах вара эс мана!
Савăниппе Калай хун
(Пăртан сивĕ юнĕ ун)
Хыт кăмăлне çемçетет,
Сӳпĕлтетет çакăн пек:
— Эс мунчара çăвăнсан
Чăнах пулан тутлăрах.
Чĕнсе илет чурине,
Калать шапа сассипе:
— Халех кай та мунчана
Хутса çунтар эс ăна.
Мунчи пултăр сĕрĕмлĕ,
Ăшши парсан — çунтартăр.
Чури чупать мунчана,
Хутма пĕлет вăл ăна.
Çичçĕр витре таранах
Хуранне шыв тултарать.
Хĕрĕх лав чĕр вуттине
Чĕртсе ярать хайхине.
Вутти çунать йĕсленсе,
Мунчи пулать нĕпсĕрле.
Калай хун — чăн мăкăркка,
Тек хăвалать Улăпа:
— Мунчана кай. Çăвăн та
Васкаса кил ман пата.
— Пирĕн енчи йăлапа
Сĕрĕм ăшши кăларма
Хуçи каять яланах.
Ирĕксĕрех Калая,
Вилме маннă усала,
Сĕрĕм ăшши кăларма

Кайма лекет мунчана.
Ана тарçи мунчара
Кĕтсе илет пуç тайса,
Лапка çине вырттарсан
Ашши парать шыв сапса.
    Ашши тухать чашлатса
Калай хуна çапăнса,
Çичçĕр тĕслĕ кĕсенне
Пÿрлентерет пĕçертсе.
Вăтăр тăхăр аллинче
Вăтăр тăхăр милке ун,
Ислентерет çавсемпе
Çанçурăмне Калай хун.
Шатри-кĕсен шăтсассăн
Пÿрĕ тухать тем чухлĕ.
Кÿпсе кайнă хырăмне
Шăлса сĕрет çавсемпе.
    Чунĕ лайăх каннăран
Калай ăшра шухăшлать:
«Кĕтмен-сисмен хушăра
Улăп килчĕ ман пата,
Хăй айăпне сиснĕрен
Мана хирĕç ним чĕнмест.
Алла илсен Улăпа
Кам пулăп-ши пурнăçра?»
Каллех шăлать хырăмне,
Сĕрет ирсĕр пÿрĕпе.
Тепре ăшши парсанах
Хăйне чышать аякран.
— Эй, чурасем, тав тăвăр
Аш хырăмра пулнишĕн.
Мĕн хушнине пурнăçлăр,
Вăй-халсенчен хăтăлăр.
Чурасене нимӗ çапать.
    Пичкесене юхăнма
Вăй сĕткенĕ сăрхăнать.



Унтан вара Калай хун
Тĕртсе калать: пичке, кус!
    Пичке çич хут çаврăнать,
Урапа пек кусăнать.
Уçать нÿхреп алăкне,
Пичке — хăйĕн вырăнче.
Пушă пичке тапранать,
Нÿхрепрен вăл час тухать,
Мунчаналла ыткăнать,
Лапка айне вырнаçать.
    Калай хыçать çурăмне,
Унтан хĕсет хырăмне.
Хырăмĕнчи сынсенне
Сăрăхтарать нишлĕхне.
Пичке тулать нишлĕхпе.
Вăй чакмалли сĕткенпе.
Пичке тăмасть вырăнта,
Урлă-пирлĕ çаврăнать,
Нÿхрепелле ыткăнать.
    Нÿхрепĕнче Улăп халь,
Тĕттĕмре те вăл курать,
Ик пичкене хăвăртрах
Арпаштарать вăр-варах.
    Улăп каллех пÿлĕмре
Кĕтсе ларать ирсĕре.
Калай алăк уçсанах —
Улăп калать усала:
— Сăмахăм ман ак çапла:
Тутлă пултăр мунчу сан.
Эп каятăп мунчана,
Унччен мана кĕтсе лар.
    Калай хытă савăнать,
Çав вăхăтрах шухăшлать:
«Йăпăлтатса калаçать,
Çавах ăна каçармап.
Килтĕр кăна çăвăнса,

Пичке тӗпне ҫутатсан
Ҫӑтап ӑна ним те мар.
Чим-ха! Шутлас лайӑхрах,
Мӗнле тусан аванрах?
Ҫӑтсан аслӑ хырӑма
Ҫурмасть-и вӑл тарӑхсан?
Улӑп хальхи вӑхӑтра
Хӑранипе ман патра.
Апла пулсан сехрине
Хӑпартасчӗ тӗппипе.
Сехри хӑпсассӑн вара
Улӑп пулать алӑра.
Айван пуҫне ҫавӑрсан
Акӑр йытти пулать ман.
Супетес — ертӳҫе —
Вӗрентнӗ пек ӑна та
Чӗр юн ӗҫме вӗрентес,
Этем ашне ҫитерес.
Кайран чунне алсашӑн
Сутатех вӑл шуйттана.
Ун чух вара маншӑн та
Пуҫне хурӗ савӑнса.
Уя тухса алсипе,
Ана хушса янипе,
Улӑмсенчен ҫар тӑвӗ,
Мӗнпур уя тултарӗ.
Ун пек пулсан эп чапра,
Мӗнпур ҫӗршыв — алӑра!
Ӗҫсем ӑнсан эп вара...
Аслӑ турра — хам ая!
Ун пек пулсан ҫич тӗнче
Пулать манра — кӗсьере!
Аслӑ турра эп вара
Тарҫа лартӑп тамӑкра.
Хам ҫӑтмаха куҫап та
Шуйттансене — хам пата!



Калай ирсӗр ӗмӗтне,
Тин пуҫланнӑ элхӗмне
Улӑп татрӗ йӑвашла:
— Эпӗ килтӗм мунчаран.
Улӑп сасси — йӑпӑлти,
Хунӑн вара — аслати.
— Эс ҫавӑнса тасалтӑн,
Ман хырӑмра пулатӑн.
Мӗнпур вӑйна пуҫтарса
Хӑвӑртрах сик ҫавара!
— Эсӗ мана ҫӑтӑн-ха,
Халь мар пулсан — кайран та.
Еккесене ҫиҫтерсе,
Унччен пӑхар кӗрешсе.
— Ҫук, кӗрешме тытниччен
Халь нӳхрепе анӑпӑр.
Унта шерпет ӗҫӗпӗр.
Нӳхрепре ман ик пичке.
Иккӗшӗ те пӗр пекех.
Унти шерпет чи чапли,
Турӑсене ӗҫмелли.
Сӑмах татар ак ҫапла.
Ҫӗн пичкери шерпете
Ҫавӑрмасӑр сыпӑша
Ӗҫекенни ҫӗнтерет.
Ҫапӑҫӑва ҫав пуҫлать.
Килӗшетӗн манпала?
Апла анар нӳхрепе.
Тӗлӗнетӗп эп санран.
Нӳхрепелле аннӑ май
Калай калать Улӑпа:
— Эс ман умра... каласан,
Хунав йывӑҫ вӗт кӑна!
Шеллеп сана ҫавӑнпа.
Пурнӑҫ-и вӑл хырӑмра?
Ман сӑмахран тухмасан

Çын пулатăн эс манпа.
Сăмахăм ман — суя мар.
Сана алса халаллап.
Ахалли мар, асамли.
Çут тĕнчере чи пахи.
Çĕмел патне пыран та,
Çав алсана тăхнан та
Кĕлтесенчи улăмран
Çар çыннисем тăвatăн.
Хăв та ертÿç пулатăн.
Урхамахпа çÿретĕн.
Эсĕ мана пулăшсан,
Ман сăмахран тухмасан
Супетейпе тан пулăн,
Патти хун та хисеплĕ.
Кăмăл пур-и? Тав сана!
Ĕçер çапла шаклатса.
Калай хун сар пичкерен
Ĕçет тумлам юлмиччен.
Çавăнтах вăйĕ чакнине
Часах сисет хайхине.
— Чим-ха, чим-ха! Тăхта-ха,
Ман валли те хăвар-ха!
— Хама та ку çитмерĕ.—
Татса хурать Калая
Улăп паттăр сăмахпа.
Пуш пичкене çĕклесе
Улăп çапать çавăрса...
Калай хуна сĕтĕрсе
Тухать тула тарăхса.
Калай вăйĕ пĕтнĕрен
Аллисене çĕклеймест,
Çавăнтах найкăш сасăпа
Тархаслать вăл Улăпа:
— Улăп, мана каçарсам,
Чунăма эс хăварсам.



Ĕмĕр сана итлетĕп,
Сан вăй-хала ÿстерĕп.
Тĕнче патши пулатăн,
Хăв пĕлнĕ пек пурнатăн.
Уншăн санран, паттăртан,
Тĕнче патши пулнăран
Çакна кăна ыйтатăп:
Кунне виç хут тутаран
Сĕртер шĕвек ăш çăвне,
Ун пек тусан эс манран
Курăн кăна ырлăхне.
— Çитет ун пек янкама!
Хура халăх куççульшĕн,
Ирсĕр ĕççем тунăшăн
Сан та хурав тытмалла.
Этем тени, хун, ан ман,
Чура пулма çуралман.
Кăйкăр пекех ирĕкшĕн
Çапăçать вăл — нурпĕрех.
Темле йывăр пулсан та
Сăнчăрне вăл майласа
Турта-турта тататех,
Чуралăхран хăтлатех.
Улăп ирсĕр Калая
Янклаттарать янахран.
Ярса тытать хырăмран.
Ана çурать çурмаран.
Хĕрĕх сĕршыв çыннисем,
Хырăмĕнче пулнисем,
Имшерленсе кайнисем,
Тухрĕç пакша çурилле.
«Мĕнле вĕсем килелле
Çулне тăсĕç имшертен.—
Улăп шутлать ăшĕнче,
Пăшăрхану кусĕнче.—
Калай хунăн пичкинчен

Вăй шыв ĕçрĕм тĕппипех.
Ман çав шыва каялла
Мĕскĕнсене памалла».
Улăп пештĕр тĕпĕнчен
Çĕçĕ илсе аллине
Суранлатать вăр-варах.
Нише кайнă çынсене
Ĕçтерет вăл хăй юнне.
Куç уменчех çыннисем,
Улăп юнне ĕçнисем,
Вăй-халланса каяççĕ,
Улăпа тав тăваççĕ.
— Хури, шурри, сарри те,
Эсир пурте пĕр пекех.
Çавна кура эп сире
Тĕрлĕ халăх пулин те
Анма хушап сакайне.
Унта пурлăх тем чухлĕ.
Вĕсем сирĕн. Валеçĕр
Пĕр-пĕрнне вăрçмасăр.
Кайран киле çул тытăр.
Телей курса пурăнăр.



# *Вăтăр пĕрремĕш юрă*

## УЛĂП УЛЕНКЕНЕ АСАПРАН ÇĂЛНИ

***Аслати тура Уленке ĕмпĕве сăнчăрланă.***
***Вăл хĕн курать, ăшкăнать. Улăп Уленкене ура çине тăратать.***
***Хăйне ăмăртхайăк пулса Уленкене Чăваш çĕршывĕпе паллаштарать,***
***ăна савăнтарать.***

Çыр хĕррнчи çырла эп,
Çавна кура çырă эп.
Халь саркайăк пулам-и,
Улăп çинчен юрлам-и?
Улăп каллех çул çинче,
Нухрат шывĕ хĕрринче[1].
Мăн сăмсах пур çавăнта,
Унтах шавлать вăрман та.
Улăп калать шурпуçа:
— Амак ерчĕ пуль кунта,
Чĕре кассах ыратать,
Çамрăк чуна пăтратать.
Тепĕр чухне, каçхине,
Выртатăп та çĕр çине,
Йăнăшнă сас илтĕнет,
Тухăç енчен килет пек.
Çав йăнăш сас камăн-ши,
Уленке ĕмпӳн сасси-ши?
Уннах пулсан — пĕр сăмах:

[1] Нухрат шывĕ — хальхи Вятка юханшывĕ.

Ёмпĕве ман çăлмалла!
— Ана çăлни — аванччĕ,
Мĕнле ăна çăлăн эс? —
Ыйтрĕ Шурпуç Улăпран
Пăхса ăшă кăмăлпа.—
Ана çăлма кайнисем,
Унтан сывах килнисем
Халăхпа тĕл пулсанах,
Халап-сăмах тапратсан
Айăпланса каяççĕ,
Унтан çапла калаççĕ:
— Ёмпӳ патне тухатăн,
Çавра кӳлле куратăн.
Вăл талккăшпех пăрланнă,—
(Хулăмăшне кам пĕлĕ?)
Çыранпа пăр хушшинче
Хăлаç çурă таранччен
Шывĕ шăнман нимĕн те.
Ялан кĕрлет, вĕрет пек.
Темшĕн унта пăс вĕçмест.
Сиксе каçан шыв урлă
Пăрĕ путать сасартăк.
Уленкене чикĕнме
Сăрчĕ сикет çӳлелле,
Уленкене чикĕнет.
Ёмпӳ хурлăн йынăшать,
Чун тухасла кăшкăрать:
— Кӳлĕ çине сикнĕрен
Сăрт хырăмран чикĕнчĕ —
Чăтма çуккă нимле те.
Чунăм тухни — ырлăхчĕ.
Анчах турă маннăран
Маншăн вилĕм хапсăнмасть.
Кӳлĕ çинчен тухсамăр,
Мана кунтах хăварăр!
Уленкене çавăнпа



Çăлаймаççĕ ку таран.
Халăхшăнах çав мĕскĕн
Хĕн-хур курать ĕмĕрех.
Сăмах çӳрет: Чăвашра,
Кӳль хĕрринче, пĕр ялта,
Паттăр ача çуралать,
Ёмпĕве çав çăлать тет,
Халăх хутне кĕрет тет.
Ват çын Улăп паттăра
Çĕм авалхи йăлапа
Ыталаса пил парать,
Тухăç çулне кăтартать.
Ейӳ сăрчĕ[1] Улăпран
Тăрса юлсан сылтăмра,
Ятсăр мăн сăрт хыçĕнчен
Кĕрленĕ сас илтĕнет.
Улăн пăхать тинкерсе:
Çула тăрăх хĕм сапса,
Çичĕ пуçне каçăртса
Çĕлен килет ярăнса.
Тепĕр чухне чарăнать,
Йывăççене вăл кăклать,
Çеçенхирти курăка
Чĕртсе ярать кусăнса.
Хӳрипеле çат! çапать —
Сăрта тĕнне аркатать.
Чĕрнисемпе çĕр чавса
Çырма туса хăварать.
Улăп умне ансанах
Çиет ăна çич куçпа,
Шăлĕсемпе шаккаса
Сăмах пуçлать.— Эй, тăмкай,
Эпĕ тăлăха юлсассăн
Мана ун чух мĕн терĕн?

[1] Ейӳ сăрчĕ — Урал сăрчĕ.

Аса ил-ха ҫав куна,
Ваткаласа тӑмпуҫна.
«Илмейккерӗн йӑх-яхӗ,
Вӑл анчах мар, шӑрши те
Ҫут тӗнчере ан пултӑр»,—
Терӗн эсӗ ун чухне
Шӑнӑҫайман тарӑхпа
Вӑркӑнтарса тухӑҫа.
Илмейккер чӗппи айван та
Кунти сӗм-сӗм вӑрманта
Выҫса кӑнать терӗн-и?
Аҫтах ҫӗлен пӗтет-и?
Куратӑн-и, эп сывах,
Сан мӑшкӑла эн манман!
Ҫиллес вӗрет кӑкӑрта,
Чунна илеп ҫакӑнта.
    Аҫтах ҫӗлен ҫулӑмпа
Ҫунтарасшӑн Улӑпа.
Вут-хӗм паттӑр сӑхманне
Ним тӑваймасть — пиллӗ те.
Улӑпа вӑл урнипе
Туртса ҫапать хӳрипе.
Паттӑрӗ те ҫиллексе
Хӑртпа касать ҫӗлене.
Ҫич пуҫӗ те ҫӗленӗн
Татӑлаҫҫӗ харӑссӑн.
Ҫӗлен пуҫӗ мӑйӗпе
Сыпӑниччен вӗҫӗнсе
Улӑп сулать самантрах
Айпӑлтине ҫиҫтерсе.
Аҫтахан пур мӑйӗ те
Ыткӑнаҫҫӗ ҫӗрелле.
Вӑй-халсӑртан мӑйӗсем
Аҫта ӳкнӗ — ҫавӑнтах!
    Шурлӑх урлӑ каҫсанах
Улӑп кӗрет вӑрмана.



Унта ытла чӑтлӑх та —
Урлӑ каҫман упа та.
Йывӑр килчӗ Улӑпа.
Утма май ҫук чӑтлӑхра.
Йывӑҫсене хӑрчӗпе
Паккуслать вӑл ҫава пек.
Ҫӑка ҫулҫи ҫуттипе
Ҫулне тӑсать эрнипе.
    Ун умӗнче ҫеҫенхир.
Вӑл пин тӗслӗ ҫӗн кавир.
Ҫеҫенхирӗн лаппинче,
Сарӑ хӗвел ӑшшинче,
Канма вырӑн шыраса
Улӑп ҫӳрет шутласа.
Ҫав вӑхӑтрах инҫетрен,
Ҫич тӑрӑллӑ сӑрт енчен
Тӑлтамаст чӗппи, ӳснӗскер,
Амӑшӗнчен тискерскер,
Сарса ярать ҫунатне.
Вӗҫет Улӑп еннелле.
Улӑп умне тухсанах,
Сӑрт сӑмсахне ларсанах
Ыйтать Улӑп паттӑртан:
— Эс мӗн ятлӑ? Чӑваш-и?
Ансӑртран, тен, Услати?
Вӑл мар тетӗн? Хӑракан
Хӑй ятне те манакан.
Суйрӑн пулсан — пӗтетӗн.
Ним шӑм-шаксӑр юлатӑн.
Сана тӑрра кӑларма,
Ват ӗмпӳпе калаҫма
Ҫул тӑсатӑп каялла.
Ман хыҫран мӗн юлнине
Ҫав чул ҫинче пӑхса лар.
Ан ман эсӗ ҫавна та:
Утас яран малалла.

Пуçу кусать каялла.
Кайӑк вӗçет тӳпене,
Хупӑрлать вӑл хӗвеле.
Унтан чӑмать çӗрелле
Вут-хӗмсене çиçтерсе.
Вӑрман тӑрӑх вӗçнӗ май
Чӗрнисемпе çаклатса
Йывӑççене тустарать,
Шурлӑхалла юхтарать.
Тепӗр чухне ярӑнать,
Пӗрӗхтерет вут-хӗмне,
Вӑрман çунать кӗрлесе.
Уленке умне ансанах
Пуçлать ӑна кӑшкӑрма:
— Эсӗ пӑх-ха аяла!
Атӑл паттӑр мар-и çав?
— Атӑл паттӑр — çамрӑк мар,
Чухламалла хӑвӑн та,—
Хуравлать ӗмпӳ кайӑка.
— Эсӗ кала паттӑра:
Кунтан кай те хӑвӑртрах!
Çамкайӑкӑн сӑмахне
Ӗмпӳ чикмест хӑлхине,
Улӑп патне анмашкӑн
Сӑнчӑрне вӑл татасшӑн.
Кайӑка çав килӗшмест,
Çиллӗхӗпе ӗрӗхет.
Уленкене тапӑнать,
Пуçлать çурма кӑкӑрне.
Уленке ӗмпӳн кӑкринчен
Сӑрт аркине çитиччен
Юн сирпӗнет çӗрелле.
Улӑп çавна курать те
Васкать ӗмпӳ еннелле.
Тӑлтамаст çилли капланать
Çил-тӑвӑлран кая мар.



Улӑп ӑна ухӑпа
Пеме шутлать лӑпланса.
Аса илет çавӑнтах
Туптул пиччӗш сӑмахне:
«Тӑлтамастӑн вӑй-халӗ
Вӑтам пуçри куçӗнче».
Улӑп ухӑ кантрине
Туртса ярать тӗллесе.
Йӗппи тӗле лекнӗрен
Кайӑк куçӗ сирпӗнет,
Унпа пӗрле вӑй-хал те.
Кайӑк ӳкет пӑр çине.
Вӑл ытла та йывӑр та
Сӑрта çӳллӗ сиктерет.
Уленке ӗмпӳ йынӑшать
Улӑп чунне çурмалла.
— Ах, эс, ачам, мӗн турӑн?
Асаплӑха вӑйлатрӑн.
Сӑрт тӑрри те шӗвӗр вӗт,
Кӑвапаран чикӗнчӗ.
Уленкерен юн юхать,
Пӑрлӑ кӳлӗ хӗрелет.
— Тӗнче кутӑн тӑрсан та
Ват ӗмпӗве çӑлапах,—
Тет те Улӑп пӑр айне
Чӑмать çӑрттан пулӑ пек
Куçӗ курать шывра та,
Хӑлхи илтет унта та.
Тӑлтамаст вил вырӑнне
Пӑр айӗнче пулсан та
Улӑп тупать тӗттӗмре.
Çавӑнтах виле тавралла
Пӑра ватать пуçӗпе.
Виле путать шывалла,
Сӑрт та чакать каялла.
Ӗмпӳ патне улӑхма

Çул курăнмасть ниçта та.
Çавăн Улăп аптрамасть.
Сăрт тăррине хăпарать.
Уленкене курсанах
Улăп каять хăраса:
Ёмпӳ выртнă тăсăлса.
Вилнĕ çын пек куç хупса.
Ут-пĕвĕ ун суранлă,
Суранĕсем хуртланнă.
Вĕсем ытла йышлă та —
Пĕр-пĕринчен çакăннă
Е чупаççĕ тавралла
Сурансене кăшласа.
Ватă ёмпӳн шур çӳçĕ
Чĕркуççине çитнĕ-мĕн,
Ун сарлака сухалĕ
Кăванниччен кăшт иртнĕ.
Вĕçене тура тивмен те —
Çапман сурăх çăмĕ пек.
Ытла та шел ёмпĕве:
Шăммисене касиччен
Сăнчăр çиннĕ ун ӳтне.
Сăрт тăрри кăшт çĕкленсен
Сăнчăр туртнă хăй енне.
Уленке ёмпӳ кăкрине
Лапчăтнă икерчĕ пек.
Тăлтамаст, мур, чĕрнипе
Уленкене чавниччен
Е вăл унăн кăкрине
Туртса çурма тăниччен
Этем çеç мар, арăслан та
Хăраннипе йăванĕ.
Ёмпӳ çинчи сăнчăра
Улăп татрĕ алăпах.
Усал-тĕсел йăхĕнчен
Сыхламашкăн ёмпĕве







Ӳпле турӗ пилешрен,
Ҫӗр ҫул таран ӳсниччен.
Тимӗр карта ҫавӑрсан
Ӗмпӳ вырӑнӗ сыхлавра.
Умра выртан шур чулсем,
Тункатасем, туратсем
Пилеш йывӑҫ вӑййӗнчен,
Тимӗр карта хӑватӗнчен
Пулса тӑчӗҫ шуйттансем,
Тухатмӑшсем, усалсем
Тата ҫӗлен-калтасем.
— Ах, вӑт камсем ӗмпӗве
Куҫ хуптарман пӗрре те,
Ку таранччен хӑратнӑ,
Ана хӗн-хур кӑтартнӑ.
Улӑп ши-ши! шӑхӑрсан
Мӗнпур усал таврашсем
Ыткӑнаҫҫӗ сӑртранах
Йӑтӑнакан чулсем пек.
Улӑп ватӑ хырсенчен
Мунча лартрӗ ҫиййӗнчех.
Ҫитмӗл ҫичӗ ҫӑлкуҫран
Хатӗрлерӗ шывне вӑл.
Ҫитмӗл ҫичӗ курӑкран
Сиплӗ имҫам турӗ вӑл.
Ҫӗн мунчара кунӗпе
Уленкене ҫурӗ вӑл.
Хӑй амӑшӗ вӗрентнӗ пек
Эмеллерӗ ватта вӑл.
Пӗрчӗн-пӗрчӗн тасатрӗ
Ват Уленкен ҫӳҫне вӑл.
Ҫӳҫӗпеле сухалне
Кӗл шывӗпе ҫурӗ вӑл.
Ӗмпӳн ҫӳҫӗ — шур мамӑк —
Кӑтраланчӗ хӑех вӑл.
Анчах пуҫпа аптрать-ха.



Тупсан йӗспе пӑхӑра
Вӑл унтан та хӑтлӗ-ха.
Вӗсем кунта пулмаллах.
Ана куҫ та курчӗ ман.
Илмс тӑчӗ курнине —
Чул муклашки аллинче.
Ӗҫӗ ӑнса пыманран
Улӑп ҫитрӗ аптраса,
Хӑй ҫине хӑй тарӑхса
Алне сулчӗ сӑрталла.
Ҫав вӑхӑтра сӑмсахран
Кулнӑ сасӑ илтӗнчӗ,
Кайран хӑй те курӑнчӗ.
Уҫҫӑн пӑхать сарпике
Йӗкӗт ҫине чӗкеҫле.
Анчах та вӑл сӑн-питрен
Саринене ҫитеймест.
Сарпикене уйӑх тен —
Ҫурхи хӗвел Сарине.
Сассисем те пӗр пек мар.
Шӑпчӑк юрри Саринен.
Чӗкеҫ чӗппин — сарпикен.
— Итле, йӗкӗт, эс мана.
Йӗспе пӑхӑр шыраса
Шӑмшаккуна ан ватсам.
Калаҫӑпӑр татӑклах.
Йӗспе хӗрлӗ пӑхӑра
Тыттарсассӑн халь сана
Эс ӗмпӗве сыватан.
Ура ҫнне вӑл тӑрсан —
Пурӑнма куҫ ман пата.
— Чипер пике эс сӑнран.
Анчах чӗлхӳ — усалран.
Хӑв еккӳне кантарма
Тӑрӑшатӑн. Аван мар.
Эпӗ чӑваш — ӑнлансам.

Ун пек чăваш хăтланмасть.
Тĕнче мулне ман ума
Пĕтĕмĕшпе хурсан та
Эпĕ тăван халăхран
Уйрăлмастăп нихçан та!
— Йĕкĕт, ун пек ан кала,
Хĕр чĕрине çурмалла.
Эс çĕр чаврăн çакăнта —
Йĕспе пăхăр çук çĕрте.
Çак алрисем — иккĕш те
Урăх çĕрте тупнисем,
Пăхăрпала йĕсĕ те.
— Вĕсем тимĕр курăксĕр
Эмеллĕхре юрăхсăр.
Мĕн чул ăна шырарăм,
Анчах нисăта тупмарăм.
Ун пек курăк, пикеçĕм,
Сирĕн енче ӳсмест-им?
— Ӳсет. Анчах кунта мар.—
Пике утрĕ сукмакпа
Сăрт аркипе тăвалла.
Пурçăн тутăр кăларчĕ,
Ана вĕл-вĕл вĕçтерчĕ,
Шăппăн темскер каларĕ,
Тимĕр курăк курăнчĕ.
Пĕршерĕн мар, талккăшпех,
Сенкер кăвак чечекпех.
Вĕсенчен турĕç пĕр кĕлте,
Халь вăл Улăп йĕкĕтре.
Улăп çĕнĕ мунчара,
Ват ĕмпӳ те унпа халь.
Улăп ăстаç пулнăран
Йĕспе пăхăр çап-çавра,
Тенкĕсенчен хитререх.
Вĕсемпе амăш вĕрентнĕ пек
Сурансене имлетет.



Тимĕр курăк сĕткенпе
Ĕмпӳ пуçне вăл çăвать.
Пуçĕ ытла сурнăран
Тенкисене майласа
Пуçне çыхать тутăрпа.
Тĕрлĕ эмел курăкне
Вĕретрĕ те ĕçтерчĕ.
Юлашкипе çавăнтах
Чĕркерĕ ват ĕмпĕве.
Уленке çыврать вилнĕ пек,
Тарĕ юхать пĕрмаях.
Улăп шăлать çав тара
Шур тутăрпа яланах.
Улăп алли çăмăл пуль,
Ура çинче ват ĕмпӳ.
Хăех ларчĕ чул çине,
Çӳçне турарĕ ерипе.
Улăп калать ĕмпĕве:
— Вăт халь эсĕ сып-сывах,
Вăрăм çула чăтатнах,
Чăваша çул тытăпăр,
Тĕп хулана çитĕпĕр.
Аслă Пăлхар ун ячĕ.
Вăл Кийӳрен кая мар,
Истанбултан япăх мар.
Сана унта кĕтеççĕ,
Ялан сана аснаççĕ.
Сана пăхĕç ача пек,
Хисеплĕ ват патша та.
— Çук, çук, ачам, апла мар,
Унталла çул тăсар мар.—
Пӳлсе хучĕ Улăпа
Ватă ĕмпӳ татăклах.—
Ав çавăнта Аслати!
Вăл вĕт манăн чунилли.
Эпĕ кайсан Чăваша,

Унта курсан вăл мана
Хаяр хĕмлĕ сăннипе
Тӳрех перĕ, вĕлерĕ.
Çав вăхăтрах ӳплене
Кĕрсе тăчĕ чиперкке.
Улăп ăна палларĕ:
— Элпине-çке?! Кĕтменччĕ,
Мĕнле килме пĕлтĕн эс?
— Кĕтменнине пĕлетĕп,
Çавăнпа эпĕ çак енче.
Улăп хай Элпинене
Паллаштарчĕ ĕмпӳпе,
Пике тути йăл кулчĕ,
Вата çынна вăл курчĕ.
Паттăр ăна каларĕ:
— Чăваш патши вăл, пике.
Тыткăнран çăлни эрне çеç.
Патша хĕрĕ темерĕн,
Пике çавăнтах улшăнчĕ.
Пуçне тайрĕ. Пĕшкĕнчĕ,
Çапла сăмах каларĕ:
— Аслă патша, чăваш патши,
Хĕвел пек ăшă параканни,
Сывлăх сана пин çуллăха!
Аслă патша, чăваш патши,
Уйăх пекех çиçекенни,
Телей сана пин çуллăха.
Аслă патша, чăваш патши,
Çăлтăрсем пек çунаканни,
Вăй-хал сана пин çуллăха!
Уленке ĕмпӳ пикене
Ачашларĕ ашшĕ пек,
Хăйпе лартрĕ юнашар,
Сăмах кайрĕ вăрăма.
Вата ĕмпӳ пикене
Усрĕ Улăп ĕмĕтне:



— Мана, ватта, кунтанах
Çитересшĕн Пăлхара.
Çитейĕп-ши эп унта?
— Çитен,— терĕ сарпике
Тухнă чухне ӳплерен.
Улăп Уленке ĕмпĕве
Тăхăнтартрĕ ача пек.
Аш тумтирпе ĕнтĕ вăл.
— Эпĕ хатĕр, тухсамăр.
Чăваш çĕрне кайăпăр,—
Сас илтĕнчĕ тул енчен.
Улăппала Уленке
Амăрткайăк çинче халь.
Сăртсем урлă вĕçеççĕ,
Атăла та кураççĕ.
Унта чаплă кимĕсем,
Акăш пекех пуçĕсем.
Уленке пăхать тинкерсе
Аслă Пăлхар еннелле,
Савăннипе ачалла
Сăмах хушать ак çапла:
— Хуласемпе хулашсем,
Алла çитнĕ-ха вĕсем.
Мĕн чул унта керменсем,
Çине ылтăн витнĕ пек.
Аслă Пăлхар хулинчен
Пин-пин илем çиçет пек,
Ун пек чаплă хулана
Начар халăх çавраймасть.
Улăп, хăвах пĕлтертĕн:
Чăваш патши Нухрат тен,
Ыр кăмăллă патша тен,
Виççĕр çулта вăл халь тен.
Халăх куççуль тăкмасть тен.
Савăнатăп çавăншăн.
Вĕçĕ çуккă уй-хирĕн,

Чаплă сĕм-сĕм вăрманĕ,
Тинĕс хумле шав шавлать
Çынтан çÿллĕ тыр-пулĕ,
Партас пекех пучахĕ.
Ĕненетĕп эп сана,
Пăлхар пуян, чăнах та.
Сала пекех ялĕсем,
Патвар вара çыннисем,
Сăмах юхнă майĕпе
Эс каларăн çакăн пек:
«Эпĕ чÿкпуç Чăвашра».
Пăлхар хули ман айра,
Чÿк керменĕ инçе мар.
Каламалли сăмаха
Çакăнтанах калам-ха.
Улăп, итле ват çынна,—
Эп чăн ватти Чăвашра —
Пил сăмахĕ вăл саншăн.
Пирĕн халăх авалран
Сумра тăнă яланах.
Мĕншĕн тетĕн? Çакăншăн:
Унăн пулнă çĕршывĕ.
Халăх ăна юратнă,
Тăшмансенчен сыхланă,
Уншăн пуçне хунă вăл.
Унăн пулнă тăванлăх,
Ана хытă сыхланă,
Темле йывăр вăхăтра
Ана аркатма вăл паман.
Унăн чĕлхи — авалран,
Нихçан çĕртмен тымарне.
Ана пăхнă ача пек,
Капăрлатнă ĕмĕрех.
Малашне те çавăн пек
Сумра усрăр вĕсене.

## Вăтăр иккĕмĕш юрă

### УЛАП ÇУТКУН ÇĔРШЫВĔНЧЕ

*Çуткун çĕршывĕнче пурнăкан вăй илнĕ, начарлăх пĕтнĕ, халăх тăванла пурăнать. Улăп Çуткун çĕршывĕнче. Нипел патша Улăпа патшалăхри йĕркене сарма вĕрентет. Улăп пирлĕ сăмаха манас мар тесе киле çитиччен пĕрре те çывăрмасть. Йупăр кушак пулса Улăпа çывăратса ярать, пирлĕ сăмаха мантарать.*

Сарпикесен мĕн хуйхи?
Çăлран сив шыв йăтасси,
Каçпа вăйăа тухасси,
Саркайăкла юрласси.
Аннепе ман мĕн хуйхă?
Ял-ял тăрăх çÿресси,
Улăп çинчен юрласси,
Ун ыр ятне сарасси.
Улăп упан мăн пуçне
Çиме ларсан чул çине
Шурпуç тухрĕ ун умне
Аран йăтса туйине.
— Мучи, ларсам, хăна пул.
Каçхи апат пултăр ку.
Улăп алри какайне
Парать халсăр мучăшне.
Мучăш ăна тав тăвать.
Ват куçĕпе хыт савать,
Уштан парать ыйтăвне

Пĕлме Улăп шухăшне:
— Улăп, сана мĕн пулнă,
Ларан ытла салхуллă?
Йывăр шухăш пусать-и
Е чир сана туллать-и?
— Сывах-ха эп. Вăл енчен
Үпкевĕм ҫук, ĕненсем.
Йывăр шухăш чăнах ман,
Хăтлаймастăп ҫавăнтан.
Эсĕ нумай пурăннă,
Хура-шурра та курнă.
Тăван ҫĕршыв илемне
Хак парсамччĕ ват ҫын пек.
Пăхсам йĕри-тавралла.
Мĕскер ҫук-ши Чăвашра?
Сăртра кăйкăр явăнать,
Хирте тăри ярăнать,
Сĕм вăрманĕ илемре,
Ҫĕмĕртлĕхĕ чечекре.
Чечек ҫинче пыл хуртсем,
Пĕсехинче симпылсем.
Хуртсем яла вĕҫеҫҫĕ,
Савăннипе нăрлаҫҫĕ,
Вĕллисене кĕреҫҫĕ,
Караса пыл сапаҫҫĕ.
Юманлăхра пакшасем,
Ҫăмне тăкса килнисем,
Мăйăр тĕшши ҫиеҫҫĕ,
Пĕлтĕрхисем ку теҫҫĕ.
Пирĕн енчи шăпчăксем
Шуҫăмпа тан тăраҫҫĕ,
Пин-пин тĕслĕ кĕввисем
Ҫур ҫĕрчченех янраҫҫĕ.
Саркайăксем Чăвашра,
Кăнтăрта хĕл каҫнисем,
Кĕввисене тăсаҫҫĕ.



Чăваш ҫĕрне мухтаҫҫĕ.
Ҫăкалăха пыратăн —
Вĕҫне-хĕрне тухмастăн,
Ҫулҫисем те ҫавăн пек,
Мĕн каласа ҫырнă тен.
Уҫланкăна тухатăн,
Ҫакна кăна куратăн:
Курăкĕсем ҫын ҫӳллĕш,
Чечекĕсем пин тĕслĕ.
Хирпе утса пыратăн,
Тĕлĕннипе чарнатăн,
Ырашĕсем шăркара,
Ҫурхи тырă — хăмăшра.
Юханшывсем сахая мар,
Кашнин шывĕ ҫыранран,
Пăхан — тĕпне куратăн,
Шыва кĕрсе савнатăн.
Ярăнаҫҫĕ пуллисем,
Ҫитмĕл ҫичĕ тĕслисем,
Вăлчисене сапаҫҫĕ,
Атăлалла ишеҫҫĕ.
Аслă Чăваш ҫĕрĕнче,
Мал енче те кай енче,
Чурăшсем те сахал мар
Самăр апат нумайран.
Чăваш ĕҫлет вăй-халпа,
Ĕҫсĕр лармасть нихҫан та.
Унăн тем те пулмалла,
Ырă кăна курмалла.
Анчах пурнăҫ Чăвашра
Темшĕн вара ун пек мар.
Пĕрин пурнăҫ — пыл та ҫу,
Теприн — хĕн-хур, ай тур-тур.
Мĕн сăлтавпа? Кала-ха!
— Тепĕр чухне хам та эп
Ҫавăн ҫинчен шутлатăп,—

Терĕ Шурпуç Улăпа.—
Пурнăç тытма çăмăл мар.
Атăл урлă каçни мар.
Пăх-ха хăвăн аллуна,
Мĕскер куран эс унта?
Пур пÿрне те пĕр пек мар.
Çавăн пекех пурнăç та
Аçтан пултăр пĕр танах?
Ват асатте ман пурччĕ.
Темĕн те пĕр пĕлетчĕ,
Юмах яма ăстаччĕ,
Хăш чух çапла калатчĕ:
«Çут тĕнчере, пĕр çерте,
Шавла тинĕс леш енче,
Пур тет чаплă патшалăх,
Унта пурнать çĕр халăх.
Çавăнта тет, чăнах тет,
Телей пурнăç унта тет.
Пуянлăх вăй илнĕ тет,
Начарлăх тет кăннă тет.
Пуринщĕн те унта тет
Ĕç ĕçлесси савнăç тет,
Ĕçлеççĕ тет пĕччен мар,
Ушкăнпа тет пухăнса,
Апат-çимĕç кашнин тет,
Çич çуллăха хатĕр тет,
Пурăнаççĕ туслă тет,
Пĕр пурари сĕлĕ пек.
Çав патшалăх ячĕ тет
Тĕлĕнтерет пурне те:
Çуткун теççĕ çĕршывне,
Ннинел теççĕ патшине».
Асаттене ялсенче
Кут хыçĕнче чухне те
Чăн-чăн паттăр тенĕ тет.
Ялан сумра тăнă тет.



Çапах та вăл Çуткуна
Çитсе курман — кайсан та.
Çуткунăн тет алăкĕ
Чаплă Сĕрен кĕперĕ.
Умне пырсан пытанать,
Урăх çĕртен курăнать.
Çав алăкран никам та
Ку тарниччен тухайман.
Çуткун енчи пурнăçа
Никам кайса курайман.
Санра вăй-хал — паттăрсен,
Астăну та ăсчахсен.
Темле йывăр пулсан та
Кайса кур-ха Çуткуна.
Унти пурнăç йĕркисем
Килĕшсессĕн сана та
Вĕрентĕттĕн пире эс
Çуткунри пек пурăнма.
Шурпуç халап-юмахне
Вилĕм вăрттăн илтнĕ те
Ĕмĕчĕпе хыпăнса
Кускалама пикеннĕ:
«Çуткун ятлă çĕршыв та
Пур-иç çутă тĕнчере.
Ман çавăнта пулмаллах,
Кăтартмалла еккене.
Эпĕ унта вырнаçсан
Çуткунта çуй. Ай, аван...
Сĕрен витĕр ямасан
Ун урлă та каçмалла.
Çунат çукки — ним те мар.
Кунта Улăп пур вĕт ман.
Вăл çилленсен — тем тăвать,
Тÿпене те ывăтать.
Улăп мана ывăтсан
Сĕрен кĕперĕ ман айра.

Эп ун урлă каçапах,
Çуткупра та пулапах.
Ĕçе пуçлас çакăнтан —
Улăпран та иксе мар.
Шурпус выртать ман умра»
Шурпус çумне ларсанах
Вилĕм ĕçе тытăнать.
Ват çын чунне кăлармо
Ун шăмшакне муталать,
Улăн çавна асăрхать,
Тарăхнипе вăл ыйтать:
— Эс кунта мĕн хăтланан,
Ма ват çынран мăшкăллан?
Тасал кунтан хăвăртрах!
Итлеместĕн? Ак сана!
Ярса илсен Вилĕме
Аллипеле çÿçĕнчен
Ыткăнтарать çÿлелле.
Вилĕм вĕçет тÿпене
Çичĕ талăк темелле.
Çĕре персе ÿкиччен
Сехри хăпать çавăн пек
Ним курăнми пуличчен.
Икĕ эрне ват çынна
Улăп пăхать ачалла,
Ватă çынни вăй илсен
Киле кайма вăхăт тет.
Улăпа вăл ыталать,
Чĕреренех тав тăвать,
Çав вăхăтрах вăл унтан
Çапла ыйтать кăмăлпа:
— Çуткун пирки халапа
Манман-и-ха? Аван-ха.
Ывăлăм, сана пил пултăр,
Çуткун çулне вăл уçтăр.
Улăпваскать Çуткуна,



Сĕм вăрманпа — пил пур та
Çеçенхире вăл тухать,
Çуткун çĕрĕн алăкĕ
Юнашарах Улăппа.
Тухма тăрать ун витĕр —
Алăк кусна айлăма.
Улăп каллех ун енне
Çулне тăсать васкаса.
Алăк таçта пытанать,
Тепĕр енче ялкăшать.
«Алăк чăн та илемлĕ,
Анчах екки ултавлă.
Хăйне кура çакăнта
Шахвăртмалла ман ăна».
Çав шухăшпа вăл ларать,
Ик урине час салтать.
Çăпатинчен тăприне
Тасатать вăл çĕççипе.
Унта тăпра нумайран
Тĕме пулчĕ çавăнтан.
Каллех сырать урине
Васкамасăр пĕрине.
Сырнă чухне теприне —
Сĕрен кĕперĕ юнашар.
Мĕнпур вăйне пуçтарса
Алăк витĕр шăвăнма
Арăсланла ыткăнать.
Çăпата кантри, хăямат,
Çĕр тĕминчен çакланать
Улăп ÿкет тăсăлса.
Сĕрен тарать хăраса.
Улăп çавах хăй ĕçне
Пăрахмашкăн килĕшмест.
Кунĕн-çĕрĕн пикенсе
Йĕрлет Сĕрен кĕперне.
Çавна çÿлти тÿперен.

Чаплă сенкер керменрен
Кăвак хуппи хĕрĕсем
Сăнанă-мĕн иртенпех.
Çулăк тутри паманран
Вĕсем пурте пике-ха.
Тĕлĕнмелле пĕр сăнлă,
Тумтирĕсем пĕр тĕслĕ.
Çыпăçуллă çинçешке,
Пурте — яштак хурăнран,
Çÿçсем кăтра пулин те,
Çивĕчĕсем урапан.
Куç харшисем çавăн пек —
Тин çуралнă уйăх тен,
Сенкер кăвак куçĕсем —
Илĕртÿллĕ пур енчен.
Калпакĕнче ĕнчĕсем
Ик-виççĕ мар, çĕрех тен.
Чăн пысăкки — илĕртмĕш,
Çиçсе илет самант çеç.
Çынсем çавна кĕтеççĕ.
Кăвак хуппи ку теççĕ.
Йăлтăрт çиçсе сÿниччен
Пире пулăш çав енчен
Тесе час-час ыйтаççĕ.
Вĕсем ун чух ыйтнине
Пурнăçлаççĕ кашнинне.
Кăвак хуппи хĕрĕсен
Улăп çинче куçĕсем.
Пĕр-пĕринпе хумханса
Калаçаççĕ ак çапла:
— Çÿлтен нумай курăнать,
Кун пеккине тин сăнан.
Йĕкĕт мĕнле тăрăшать,
Сăн-сăпачĕ нит аван.
Унпа аслă Чăвашра
Кам пурнĕ-ши савăнса?



Йĕкĕт пуçне çавăрар,
Хамăр енне уттарар.
Çичĕ пике кăкринчен
Çич астармăш илĕртет,
Сар хĕвел пек ăшăтса
Улăп чунне хумхатать.
Çулне тăснă вăхăтра
Улăп шутлать: «Ма вара
Çамрăк чĕре хумханать,
Вĕриленет чунăм та?»
— Çамрăк чунăм, лăплансам,
Хумханмашкăн пăрахсам,
Астăнăма çивĕчлет,
Çуткун çĕрне çитерсем.
Хăйне тытма пĕлнĕрен
Улăп чĕри лăпланать.
Йĕрлет Сĕрен алăкне,
Ывăнни те палăрмасть.
— Кăвак хуппи хĕрĕнчен
Куçне пăрман турă та.
Ак ку йĕкĕт, сын кăна,
Пирĕн енне пăхмасть те.
Эпир ăна аякран
Çавраяс çук ниxçан та,
Хирĕç тухар ун умне,
Çапла татар ун çулне,—
Теççĕ çич хĕр тÿперен,
Кăвак хуппи хĕрĕсем.
Улăп çулне татмашкăн
Çулне тытрĕç çĕрелле,
Çитмĕл çич тĕс чечекрен
Пуç кăшăлне майларĕç.
Алла-аллăн тытăнса
Хурăн тавра çаврăнчĕç,
Çуркуннехи шăпчăкла
Çепĕç юрă юрларĕç.

«Пĕлĕт те мар, уяр мар,
Кĕçех çăвас çумăр мар.
Ни хура мар, сарă мар,
Эпир каяс каччă мар.
Акăш вĕçет киклетсе,
Шурă хура астарса.
Кунта килет сар ача
Пикесене хумхатса.
Ан вĕç, шурă акăшăм,
Шурă хура астарса.
Ан кил, йĕкĕт, пĕркĕтĕм,
Пике пуçне çавăрма».
  Улăп хĕрсен çумĕпе
Иртнĕ чухне çулĕпе
Лекет хĕрсен картине,
Итлет вĕсен юррине.
  «Чăпар-чăпар çăмарта,
Йĕп чикмешкĕн вырăн çук.
Эпир вăййа тухсассăн
Качча тăма вырăн çук.
Тăма вырăн çук тесе
Эрленĕн-и эсĕ те,
Çĕр сум укçа пур тесе
Вылясшăн мар пирĕнпе?»
  Улăп хăй те юр ăсти,
Юрламасăр тăрать-и?
Илет тарăн сывласа,
Юрă пуçлать ак çапла:
«Кăçатăн çĕввн çук тесе
Шывсем çинче ан çӳрĕр,
Пĕрре ура йĕпенет,
Тепре кăçат исленет.
Эпĕ кунтан кайсассăн
Сăмах айне ан тăвăр.
Пĕрре чунăм хурланать,
Тепре халăх кулянать.

Çăлкуç тăрă шыв тесе
Кĕпе кайса ан чӳхĕр.
Пĕрре шывĕ пăтранать,
Тепре çăлкуç йăтăнать.
Эпĕ кунтан кайсассăн
Кĕтмен йĕкĕт ан тейĕр.
Пĕрре чунăм хурланать,
Тепре халăх кулянать.
Улми ӳснĕ-ха тесе
Хĕрслмесĕр ан çийĕр.
Пĕрре çисен шăл шанать,
Тепре выртсан хăй çĕрет.
Эпĕ кунтан кайсассăн,
Çула татма ан тăрăр.
Пĕрре чунăм хурланать,
Тепре халăх кулянать.
— Улăп, апла ан юрла
Хĕр чĕрине çурмалла,—
Теççĕ хĕрсем-пикесем,
Çут тӳпери шăпчăксем.
— Вăрăм çулна татиччен
Хăрăк турат пулас-мĕн,
Тaçти арман пĕвинче
Пĕвеленсе выртас-мĕн.
— Анчах, йĕкĕт, çавах та,
Вăрттăнлăх пур пулсан та,
Хăвна мĕнле шаннă пек
Пире шансам — пурне те.
Сан çул ăçта вĕçленет,
Хăш çĕршывра пулан эс?
— Ман çул вĕçĕ çавăнта,
Çуткун çĕрĕн уйĕнче.
Ялан чăрмав ман умра,
Мĕнле хăтлас ман унтан?
Çав мур Çуткун алăкне,
Йĕп-йĕкĕлти Сĕрене

Мĕнле çаврас хам енне?
Мĕнле тухас ун витĕр?
— Эс ун пирки ан кулян.
Калама та аван мар,
Эпир çиччĕн пĕртăван,
Эс чĕрере паянтан.
Сăмахăмăр чăн пултăр,
Сана çапла калатпăр:
Хуйху пултăр пирĕнте!
Эпир Сĕрен кĕперне
Хамăр майлă çавратпăр.
Унччен кунта юлатăн,
Юри вилнĕ пек çывăр.
Асту, Сĕрен кĕперĕ
Умран иртĕ вăрахăн.
Сĕрен витĕр тухсанах
Эсĕ ун чух шар курăн.
Каччă сăнне çухатса
Сарă пике эс пулăн.
Хĕрсем кайсан кермене
Улăп выртать çывăрма.
Харлаттарма тытăнсан
Çырать тетĕн вилнĕ пек.
Кăвак хуппи хĕрĕсем
Астармашкăн пĕлеççĕ.
Сĕрен кĕпер еннелле
Чĕре ăшши яраççĕ.
Сĕрен чĕри ирĕлет,
Ĕмĕчĕпе çĕкленет,
Шуса хĕрсен кермене
Юратупа хĕмленет:
«Кун пеккине вĕсенчен
Тем чул ĕмĕр кĕтнĕ эп.
Эпĕ вĕсен чĕрине
Ӳкнĕ пуль-ха, чун сиссе».
Сĕрен кĕнерĕн леш енче



Улăп пулчĕ сарпике.
Чăваш тумĕ ун çинче —
Чаплă патша тумĕнчен.
Çири тумĕ çĕвĕсĕр,
Пин-пин çиппе тĕрленĕ.
Чăваш çĕрĕн илемĕ
Тĕррисене вырнаçнă.
Пуçĕ çинчи тухйине
Илемлетнĕ ĕнчĕпе.
Тенкисем — шур кĕмĕлтен,
Çнçекенсем — мерченсем.
Пике çӳçĕ кăтринче
Туллн уйăх пăхать-çке.
Пикен кĕпе айĕнче
Пиçнĕ улма — пур енчен.
Ик уринчи аттине
Шнр-Пăлхарта тунă пек:
Йăлтăртатса çиçеççĕ.
Каччăн пуçне çавраççĕ.
Утти — акăш ишин-çке,
Сасси — шăпчăк юрри-çке.
Куç харшийĕ пĕкĕ пек.
Çинçе тути çырла пек.
Ик куçĕ те мерчен пек,
Хитре çурхи пĕлĕтрен,
Çнçсе кăна тăраççĕ.
Хĕре нар çеç параççĕ.
Кăвак хуппн хĕрĕсем —
Хаярланнă пек вĕсем,
Сĕрен кĕперне ятлаççĕ,
Тĕртсех çапла калаççĕ:
— Эсĕ кĕрӳ качча мар,
Хăнчăр ватă куянран.
Çавăнпа та сан айран
Тухать тимĕр шапа та.
Куратăн-и сар хĕре?

Халь сан витĕр тухрĕ вăл.
Эсĕ çавна, пикене,
Каялла кăлар чăрмавсăр,
Ун чух вара кăмăлсем
Çавăнĕçĕ сан енне.
Улăп-пике — сар чечек,
Çуткун çĕрне хыт васкать,
Ку таранччен çав енне
Çитсе курман никам та.
Улăп сăртсем хушшипе
Тухсассăнах ирхине,
Пĕр сăрт тăрри çĕкленет,
Тискер Перкĕç[1] сиккелет,
Ал-урийĕ — çĕр хăлаç,
Вăл та пулин сусăрлă,
Сăмси пысăк пуçĕнчен,
Аçтан пултăр вăл чечен.
Куçне-пуçне пăркалать,
Улăп-хĕре хупăрлать,
Хĕрĕн пуçне çавăрма
Пуçлать çапла калаçма:
— Сăртра ман мул — кăрманпа,
Çавна сана халаллап,
Перкĕç ратне тăсмашкăн
Çамрăк арăм пулсамăр.
— Мулпа ман пек пикене
Çавăрасшăн-и вара? —
Ыйту парать Перкĕçе
Улăп хытă йĕрĕнсе.
Перкĕç пуçлать сĕрлеме,
Хăй аллине хăй ĕмме,
Чарăймасăр вĕчĕхне
Часах каять кÿпĕнсе.
— Çивĕт айне йăштасан,

[1] Перкĕç — хаяр, усал.



Кутăнăшран тасалсан
Хăвах туян эп мĕнле
Çавăратăп хĕрсене.
Ярса илет пикене
Çивĕтĕнчен çилленсе.
Улăп-пике усала
Янклаттарать хăлхаран.
Хăтăлма ун аллинчен
Тепре парать кăкринчен,
Унтан ăна майĕнчен
Час яваклать çивĕтпе.
Перкĕç каять антăхса,
Алтăр куçне çавăрса,
Каллех ăна хăлхинчен
«Пике» парать виç хутчен.
Усал каять ыткăнса,
Шăмшаккине аркатса.
— Çула татма тăнăшăн
Шăмшаккуна салатрăн,—
Тет те «пике» малалла
Утать çулпа васкаса.
Çулĕнчен вăл пăрăнмасть,
Канăç çинчен шутламасть.
Ана Нăрна[1] асăрхать,
Çавăнтах чăмлать (мĕн тетĕр?),
Хаяр чăмлать таттисĕр.
Чăтлăхра вăл тем ĕçет,
Питне-куçне çиçтерет,
Сÿпĕлтетет «пикепе»:
— Эсĕ килтĕн ман пата,
Кунтах юлан пурăнма,
Хаяр акса ÿстерен,
Ана мана çитерен.
Мана саван, ыталан,
Хыт юратса чуптăван,

[1] Нăрна — хаяр, усал.

Ĕмĕр манпа пурнатăн,
Ман ăрата тăсатăн.
— Хăв патăнтан ямастăн,
Çула тăсма памастăн?
Юрать эппин. Çав пултăр:
Ман ытама чăтсассăн
Эпĕ кунтах юлатăп.
Улăп-пике мăйĕнчен
Ыталарĕ Нăрнана,
Ирсĕр чечче питĕнчен
Куç ыткăнчĕ шывалла,
Чунĕ тухрĕ вăркăнса.
«Пике» ирсĕр Нăрнана
Ыткăнтарать çырмана.
Çулĕ вăрăм, тикĕс мар,
Çавах «пике» ывăнмасть,
Каллех тăсать хăй çулне,
Çитсе тухать шыв умне.
Шывĕ шавлă — тинĕс тен,
Хура юн пек тĕсĕ те.
Улăп умне çăмламас
Siksе тухать шавласа.
Хăлхи — чăн та вăлашка,
Çăварĕ те кăмака.
Пĕртен-пĕр куç — чармашка,
Арман чул пек çаврашка.
Хырăм тăрăх чечене ем —
Çĕртен иртнĕ карчăксен.
Ик урнинче чĕрнесем,
Уйăрма çук сенĕкрен.
— Эпĕ Пире[1]. Паллашар!
Пĕрле тăрсам юнашар.
Хĕрачасем ăнсăртран
Йывăрлансан вăйăра —

[1] Пире — хаяр, тискер усал.



Мана суса лăпланаç,
Намăслăхран хăтăлаç.
Эсĕ килтĕн ман пата,
Арăм пулан паянах.
Манпа пурнăç — пыл та çу.
Эс те мана тытса су.
Ан ман çавна, пикеçĕм,
Тарăхтарсан — эп çиçĕм!
Çунатăн та кĕлленен,
Çавра çилпе вĕçĕнен.
Халь — манпа лар юнашар,
Вылясшăн-ха эп санпа.
Ахальтен мар эп Пире,
Çĕрме пуян та хитре!
— Эсĕ манран, лĕпсĕрчĕк,
Йывăр çынах тăвасшăн,
Каскаланса каймашкăн
Ман кăкăра ĕмесшĕн?
Пултарăн-ши эс ĕмме
Ак çакăн пек чĕччĕме?
Улăп Пире çăварне
Персе чикет чышкине.
Ирсĕр Пире сывлăшне
Çавăраймасть нимле те.
Пире вилет антăхса
Усал шăршă кăларса.
Улăп Пире виллине
Ыткăнтарать пит инçе.
Шавла тинĕс ашкăнать,
Сăрт çÿллĕш хум кăларать.
Хум çырана çапăнсан
Çĕр кисреннĕн туйăнать.
Пике шупăр кĕсйинчен
Шур алшăлли кăларать,
Çырана хум çĕмриччен
Тинĕс хĕрнех çывхарать.

Алшӑллине вӗҫтерет,
Хумсем ҫине ӳкерет.
Тинӗс урлӑ ҫул вырттать,
Ҫав ҫулпа вӑл ҫул тӑсать.
Шавла тинӗс леш енче
Пӑрӑнсанах хирелле
Курать ҫуртри пуссине,
Унта тырӑ вырнине.
Йӑран сукка пусӑра,
Тыр выраҫҫӗ савӑнса.
Улпут тавраш курӑнмасть,
Саламат та вылямасть.
Ушкӑнпала акнӑран
Тырри ӳснӗ ут таран.
Улӑмӗсем хӑмӑш пек,
Пучахӗсем партас пек,
Тӗшшисем те йӗкел пек,
Ялкӑшаҫҫӗ ылтӑн пек.
Шурпуҫ курать Улӑпа,
Унпа пуплет кӑмӑлпа:
— Эс ҫипуҫран кунти мар,
Лар-ха манпа юнашар.
Кала: ӑҫти ҫӗршывран
Эсӗ килтӗн ку таран?
Мӗн шухӑшпа? Хураала!
Манпа уҫӑ пулмалла.
— Эпӗ — Атӑл хӗрринчен,
Аслӑ Чӑваш ҫӗрӗнчен.
Хуласенче, ялсенче
Сӑмах ҫӳрет вӑл енче:
Пур тет сутӑ тӗнчере,
Ҫав-ҫав ҫӗрте, пӗр ҫӗрте,
Ҫуткун ятлӑ ҫӗршыв тет,
Халӑх унта — ырлӑхра.
Унти пурнӑҫ урӑхла,
Тӗлӗнмелле ӗҫ унта.



Пуянлӑх тет вӑй илнӗ,
Начарлӑха тӗп тунӑ.
Эп ҫавсене илтрӗм те,
Айван пуҫа чикрӗм те
Ҫуткун ҫӗрне шыраса
Килсе ҫитрӗм сан пата.
Чӑваш ҫӗрӗ япӑх мар,
Халӑхӗ те сахал мар,
Хӑшпӗрисем ҫапах та
Хӗн кураҫҫӗ начартан.
Ҫуткун пурнӑҫ йӗркине
Пӗлес килет тӗппипе.
Кунти йӗрке килӗшсен
Ана сарӑп хам енче.
— Ӗмӗтӳ сан пит аван,
Йӑх тымарӗ сан ӑҫтан?
Аҫу-аннӳ мӗн ятлӑ?
Хӗр мар вӗт эс? Эс — каччӑ.
— Хӗр пулмасӑр ҫак енне
Ҫитме май ҫук имле те.
Ятӑм — Улӑп, асатте,
Услати-ха ман атте,
Анне — Чӗкеҫ. Иккӗш те
Ҫӗре кӗчӗҫ вӑхӑтсӑр.
Ӗнтӗ ҫак ҫут тӗнчере
Эп пурнатӑп вӗсемсӗр.
Йӑхӑм пырать авалран,
Уленкепе Ваҫнсран.
Кунти пурнӑҫ йӗркипе
Паллашасчӗ тӗппипе.
Шурпуҫ Улӑп-пикене
Чӗнсе кӗртет пӑлтӑра.
Ана кермен тесен те
Намӑс пулмасть инхҫан та.
— Сан тӗп тымар тасаран
Эс халӑхшӑн тӑрӑшан.

Кунта ҫитме ҫӑмӑл мар.
Пур чӑрмав та тӑшманран.
Вӗсем кунти пурнӑҫа
Сарасшӑн мар халӑхра,
Эсӗ ҫитрӗн ман пата,
Кӑтартам-ха япала,
Ҫуткун халӑх пурнӑҫне
Паллаштарма ҫӗрӗпе.
Ват ҫын лартать Улӑпа
Тӗкӗр умне кӑмӑлпа.
Тӗкӗр илет ялкӑшса,
Улӑп чунне ӑшӑтса.
Тӗкӗр витӗр чиперех
Паттӑр курать ҫаксене:
Кунти халӑх тӗслӗрен,
Тумӗсем те хӑйсен пек.
Ҫуккӑ кунта харкашу,
Пурте тӑван, пурте тус.
Тус-тӑванлӑх тымарне
Никам килсе кӑклаймӗ.
Хуласенче, ялсенче,
Вӑрмансенче, хирсенче
Халӑх ӗҫлет ушкӑнпа,
Ӗҫне кура савӑнать.
Унта авӑн ҫапаҫҫӗ,
Кунта кермен лартаҫҫӗ,
Пӗрле ӗҫкӗ ӗҫеҫҫӗ,
Тӑванла ҫӗре параҫҫӗ.
Укҫа-тенкӗ кунта ҫук,
Парӑм парас хуйхи ҫук.
Аҫта ҫиме чун туртать —
Унта кай та апатлан.
Ҫут керменте ушкӑнпа
Апатланан халӑхпа.
Килте пӗрле кил-йышпа
Ҫиес тесен апата —



Сӗтел авнать апатран
Тем тӗсли те пулнӑран.
Чаплӑ ҫурта кӗреҫҫӗ,
Ҫӗнӗ ҫипуҫ илеҫҫӗ,
Пахчаналла утаҫҫӗ,
Пӗрле ларса канаҫҫӗ.
Ҫуткунпа йӑлт паллашсан
Улӑп-пике хумханса
Ыйтать Нинел патшаран:
— Мӗншӗн кунти Ҫӗршыва
Ҫуткун теҫҫӗ халӑхра?
— Ыйту панн вырӑнлах,—
Терӗ Нинел Улӑпа.—
Эс пӗлӳшӗн ҫунатӑн,
Тӑрӑшатӑн халӑхшӑн.
Пурӑнмашкӑн тӑванла
Мӗн чарать-ха халӑха?
Вӗсем тӑваттӑ, ман шутпа.
Тен, эс шутлан урӑхла?
Амсанулӑх — пӗрремӗш,
Ҫаткӑнлӑх — иккӗмӗш,
Кахаллӑх — виҫҫӗмӗш,
Тӑваттӑмӗш — чӗлхе вӑл.
Чи сывӑхри тӑшман вӑл
Ҫниӗнчех ӑна чармасан.
Шӑмми ҫук та, тем калать.
Кашни ҫыннӑн чӗлхи тет
Виҫӗ тӗслӗ касать тет.
Пӗри ырлӑх сармашкӑн,
Тепри — хурлӑх хушмашкӑн,
Виҫҫӗмӗшӗ — ак ҫапли:
Унталли те кунталли.
Ҫыннӑн та пур пахалӑх.
Анчах калӑр — аҫта вӑл?
Унӑн чӗлхи вӗҫӗнче.
Ӑна чарма пӗлниннче.

Çак çĕршыври халăха
Тăванлăхра пурăнма
Çуткун турă пулăшрĕ.
Çуткун турă чăваш вăл[1].
Мĕнле турра ларнă вăл?
Хам илтнине пĕлтерем.
Чăваш турри Аслати,
Пуринчен те хаярри,
Çич ăратран пĕр ăрат
Хăварсассăн чăвашра
Ăрат пуçлăхĕ ват Тавçа
Турă амăшпе тĕл пулать,
Аслатне хурласа
Элек парать пуççапсах.
Турă амăшĕ Тавçана
Татса калать сăмахпа:
«Турра ларса хăв пăх-ха,
Хăвна мĕнле тытăн-ха».
Турра ларчĕ ват Тавçа,
Çавах манмарĕ чăваша,
Сапаланчăк халăха
Вăл пуçтарчĕ çакăнта.
Тавçа турă пирĕнне
Çăткăнлăха пĕтерчĕ,
Кĕвĕçлĕхе çĕнтерчĕ,
Кахаллăха тĕп турĕ,
Тăванлăха вăйлатрĕ.
Кунта тăванлăх — таçта та.
Тăванла пĕрле ÿсеççĕ,
Тăванла пĕрле ĕçлеççĕ,
Тăван йĕркипе пурнаççĕ,
Тăванла куçа хупаççĕ.

[1] Чăвашсен паллă ученăйĕ И. Д. Кузнецов пирĕн [illegible] калаçура мана çакна асăрхаттарнăччĕ: Америкăри индеецсен [illegible] сăмаха «Çуткун турă» тесе ĕненеççĕ. *Автор.*



Тăванла çĕре параççĕ.
Патшалăх та çавăнпа
Çуткун ятпа упранать.
Тавçа турă халь ĕнтĕ
Çуткун турă пирĕншĕн.
Эсĕ çитнĕ ман пата
Хĕн-хур курса май таран.
Çавăнпа та пуш алпа
Ямалла мар ман сана.
Эсĕ Аслă Пăлхара
Пĕрле ил-ха ак çакна
Усă курма Чăвашра.
Ан ман вăрттăн сăмаха.
Ана мансан ăнсăртран
Аййăпĕ пулĕ хăвăнта.
Пăшăлтатса хăлхаран
Каларĕ вăл вис сăмах.
Хытарчĕ хăй çавăнтах:
— Ан ман çав виç сăмаха.
Вĕсем тăшман хăлхине
Ан çитчĕрех — нимле те.
Эп вĕрентнĕ сăмаха
Каласассăн йĕркеллех
Чăваш кунти йăлапа
Пурăнмашкăн тытăнать.
Анчах асту çавна та:
Чăтайăн-ши эс ăна?
Аçу пўртне çитмесĕр
Тем тусан та ан сывăр.
Каламалли сăмаха
Сыврсанах манатăн.
Халь çеç илтнĕ сăмахсăр
Пулăшу çук манран та.
Улăп, ан ман çакна та:
Тăшманусем — таçта та.
Сана кашни хăй майлă

Çывратмашкăн тăрăшĕ.
Эс, тен, курăн хӳтĕре
Тин çеç сарнă тӳшеке.
Тен, тĕл пулăн çул çинче
Улмуççие улмипе.
Самай шăрăх вăхăтра
Курăн юхан çăлкуçа.
Темле ăшу хыпсан та
Ан ĕç сив шыв эс унран.
Мĕн курнине ан тĕкĕн.
Вĕсем — пурте амăшсем.
Эс тĕп тунă усалсен.
Шикленмелли вырăна
Асăрхасан — ан хăра.
Эс ăна çак кантăкпа
Çунтар çапла çут ярса.
Улăп-пике ĕмпĕве
Ас панăшăн тав турĕ.
Япали ун çумĕнчех —
Чăваша вăл çул тытрĕ.
Тинĕс урлă вăл каçрĕ,
Ана тӳшек илĕртрĕ,
Улăп унта выртмарĕ,
Кантăкĕпе çунтарчĕ.
Улăп курать çул çинче
Улмуççие улмипе.
Кантăк çуттн ăна та
Кĕллентерчĕ самантрах,
Сăртран, сукмак тĕлĕнче,
Çăлкуç юхать шерпетле
Шыв ĕçтерме шăрăхра.
«Пикен» ăшĕ хыпсан та
Унтан тумлам ĕçмерĕ.
Ăна кантăк çунтарчĕ,
Кĕлне çилпе вĕçтерчĕ.
Сĕрен кĕпер «пикене»



Кăларсан хăй айĕпе,
Улăп каллех йĕкĕт-çке,
Утассн çич çухрăм çеç.
Çичĕ уйăх хушшинче
Çывăрмарĕ пĕрре те.
Халь вăл ашшĕ çуртĕнче
Çенĕкĕнче, тĕттĕмре.
Пӳрт алăкне кантăкпа
Çутатать вăл савăнса.
Алăк çинчн усалсем —
Хуп-хура кĕл халь вĕсем.
«Тинех çитрĕм эп киле,
Çывăрмарăм пĕрре те».—
Улăп шутлать ăшĕнче
Тытса алăк хăлăпне.
Çенĕкре, пĕр кĕтесре,
Кушак сасси илтĕнет,
Улăп каять савăнса
Илтсессĕнех çав сасса.
— Ах, мăнтарăн кушакки,
Мĕн чул унпа выляни,
Манман мана, савăнать,
Кис-кис, сиксем ман пата!
Тытсассăнах кушака
Улăп каять çывăрса.
Вупăр пусать паттăра,
Шахвăртрăм-ха эп ăна
Тесе кулать савăнса.
Улăп кусне уçсанах
Сиксе тăрать хăрасах.
Кирлĕ сăмах асра çук,
Халь ĕнтĕ ним тума çук.
Хăйне хăй вăл хыт ятлать,
Çав вăхăтрах вăл калать:
— Телей çук çав чăвашăн,
Ĕмĕтленнн ăнăçсăр.



# *Вăтăр виççĕмĕш юрă*

## УЛĂП ÇИЧĔ ИНКЕКЕ ÇĔНТЕРНИ

*Улăп ашшĕн еткерне шыраса çичĕ инкек витĕр тухать. Мерчен Улăпа çичĕ инкек вырăнне çичĕ телей кăтартма пулать — вăл унпа мăшăрланасшăн, ун çĕршывĕнче пĕрле пурăнасшăн. Улăп ашшĕн Çилçуначĕпе, сутхĕçне чăвашах таврăнать.*

Урам урлă каçрăмăр,
Куçлă çĕрĕ тупрăмăр.
Улăп çĕрри пулнăран
Хаклăрах вăл ылтăнран.
Улăп халь тет çав енче —
Хир лашисем патĕнче.
Унта шырать урхамах.
Ĕçĕ ăнмасть нĕрмаях.
Урхамахсем нумай-ха...
Вĕсем Улăп валли мар.
Утлансанах авнаççĕ,
Пилĕксĕре тухаççĕ.
Улăп ларать кулянса,
Сăр ту çинче хурланса.
Çавна ват çын асăрхать,
Унтан ыйтать хĕрхенсе.
— Эс — мĕскĕн-и? Ма ун пек
Пуçна чиксе ларан эс?
Мĕн çинчен-ха шутлатăн,
Каласа пар тархасшăн.



— Тем çинчен те шутлатăп,
Ĕçĕм ăнмасть темскершĕн.
Пăхма лайăх ăйăрсем,
Урхамахсем кусем тен.
Анчах тытса утлансан,
Пĕр-ик утас пустарсан,
Кукленеççĕ чĕтресе
Е хуçаççĕ пилĕкне.
Ĕнтĕ темскер тумалла,
Ман валли çук урхамах.
— Ана хам та куртăм-ха,
Чĕре кайрĕ ыратса
Сана пăхса аякран.
Эх, эп питĕ ватă çав.
Пуç мими те шĕвĕ ман.
Эсĕ хывнă аçуна,
Çавăнпа утсем чăтăмсăр.
Чăтăмлăху пур пулсан
Урхамаха тупан эс.
Ун пек ута тупиччен,
Ана тытса тухиччен
Çичĕ инкек курмалла,
Таса чунпа юлмалла.
Эс çавсене чăтăн-ши,
Таса пулса юлăн-ши?
Чăтăмлăху çук пулсан
Шырама та кирлĕ мар.
— Ал-урасем сывах ман,
Хăравçă тавраш манра мар.
Темле инкек-синкеке
Чăтатăпах — пурне те!
Вĕсенчен мар йывăрлăх,
Çулне-йĕрне пĕлместĕп,
Хăш еннелле каймалла? —
Çавăншăн чун ыратать.
— Çулне-йĕрне чухлап-ха,—

Терĕ ват çын Улăпа.—
Эп хушнă пек çул тытсан
Сапун айне эс тухан,
Унта куран çич юман,
Ун пек юман эс курман.
Çиччĕшĕ те пĕр кутран,
Йĕкелĕсем ылтăнран.
Çулĕ вăрăм, пит кăткăс,
Пуçпĕтти çул ан пултăр.
Унта çитсе куриччен
Шутласа пăх çич хутчен.
Улăп паттăр мучĕшне
Пуçне тайсах тав турĕ,
Утма çулпа утрĕ те
Шурлăх умне вăл тухрĕ.
«Кĕпер çуккă шурлăхра,
Каçаймăп çав вăхăтра».—
Тет те сăхман çаннине
Улăп таврать аллипе.
Туртса кăклать хырсене
Ывăçн-ывăçипе.
Çăка сĕвет вĕренлĕх,
Сулă ярать пит лайăх.
Сулă тăслать çухрăма,
Ним те путмасть шурлăхра.
Шурлăх урлă каçсанах
Темскер пулчĕ тĕнчене.
Улшăнать куç умĕнче,
Тĕнче пĕтет темелле.
Сар хĕвел те çухалать.
Чиксессĕн те куç курмасть.
Хăлха çурăлса каясла
Çав вăхăтра тем шавлать.
Пур енче те тĕттĕмре
Хĕмлĕ куçсем çиçеççĕ,
Шăлĕсене шаккаççĕ



Вăр-вар туртса çурасла,
Кĕçех çăтса ярасла.
Кĕмсĕртетни илтĕнчĕ,
Вутлă шĕвек сирпĕнчĕ.
Улăп еннех вăл юхать,
Умне çитсен чарăнать.
Таврашĕпех хĕм çунать,
Хуллен сÿнсе лăпланать.
Унтах вутчуль — кустармăш —
Хыçран хыçах кусаççĕ.
Улăпа пырса çапнаççĕ.
Кайран вĕсем — купара.
Вут-шĕвекрен хăтăлсан,
Купа çине хăпарсан,
Улăп паттăр çав-çавах.
Çутă парать хĕвел те,
Ним улшăнман кунĕ те.
Çич тăрăллă юмана
Ун чух курать аякра.
Юман айне ларсанах
Пăхать йĕри-тавралла.
Кайăк юрри янăрать,
Кайран хăй те курăнать.
Кайăкĕ пит илемлĕ,
Çăтмахранах килнĕ пек.
Унăн тĕкĕ çиçĕмлĕ,
Пин-пин çăлтăр унта теп.
Чĕвĕлтетет, ивăнать,
Сăрт еннелле ярăнать.
Улăп каять хыçĕнчен,
Чупать хуса çитиччен.
Сапун енне тухсанах
Умри кайăк çухалать,
Кайăк аннă шăтăка
Тасатсанах çÿп-çапран
Улăп кĕрет шăвăнса.

Шăтăкра çул асланать.
— Улăп, еана мĕн пулчĕ? —
Кулнă сасă илтĕнчĕ.—
Чĕрӳ чĕрне вĕçĕнче.
Çапла мар-и, йĕкĕтĕм?
«Çиллипе мар çын паха,
Пулас-ха хам туртарах»,—
Шутлать Улăп шăтăкра,
Хăй çиллине шăнарса.
Сисмен-кĕтмен хушăрах
Сар хĕвел пек курăнса
Ума тухать хитре хĕр.
Йӳле пилĕк, çӳллĕскер.
Çӳçĕ пилĕк таранах,
Куçĕ — чаплă ахахран,
Кулли — хĕвел шевлинчен,
Сасси — кĕсле кĕввинчен.
— Хăраканăн çак енче
Хăйпе пĕрлех инкекĕ,—
Терĕ пике Улăпа
Ашă, ырă кăмăлпа.
Пике тутăр çĕклерĕ,
Вĕл тутарса вĕçтерчĕ.
Умри сăрчĕ уçăлчĕ.
Çав сăрт витĕр тухрĕçĕ.
Куç умĕнче хĕр çĕтсен,
Тăри юрри илтĕнсен
Сăрт самантрах çухалчĕ.
Халăх кĕрлет аякра,
Улăп тухать пасара.
Мĕскер кирлĕ чĕрене
Пасар сутать — пурне те.
Унти халăх шавласан,
Юрла-юрла ташласан
Улăп тавра сыранчĕ,
Хăналама тытăнчĕ.



Улăп паттăра вĕсем
Ылтăн алтăр тыттарчĕç.
Мăн пичкери эрехне
Çав алтăра тултарчĕç.
— Улăп паттăр, тав сана!
Сывламасăр ĕç çакна.
Алтăр тĕпĕ курăнтăр,
Вĕри юну вылятăр.
— Тавах сире — пурне те!
Сывлăх сунап кашнине.
Хĕр-упраçсем — сире те!
Куç ан хывăр ман çине,—
Терĕ Улăп шӳтлесе.
Улăп ылтăн алтăртан
Эрех ĕçет тумлам çеç.
Алтăрне вăл ялти пек
Çӳретесшĕн йĕркерен.
— Ĕçес пулать тĕппипе
Пулас тесен пирĕнпе.—
Терĕç пасар каччисем.
Улăп тавра тăинсем.
— Ан ĕçтерĕр вăй хурсах,
Пулас килмест ман ухмах.
Чăваш калать çакăн пек:
Кашни алтăр тĕпĕнче
Хуйхă-суйхă, инкек те
Масартинчен нумай тет.
Эрех ăнран кăларать,
Çат-çарамас хăварать,
Çирĕп йăва арканать,
Пĕтĕм пурнăç саланать.
Çав вăхăтрах кермене,
Çӳлти хутри пӳлĕмре,
Кĕсле сасси янăрать,
Çепĕç юрă шăранать.
Усĕр çынсем Улăпа

Пит илемлĕ чул çулпа
Илсе кĕчĕç çав сурта,—
Хĕр-упраççем çавăнта!
    Инкесенчен нар юхать[1],
Куçĕсенче шух вылять,
Йĕкĕтсемпе ташлаççĕ,
Ясар куçпа пăхаççĕ.
Хĕр-упраççен кăкрисем —
Пиççе ситнĕ улмасем,
Çӳхе чипер тутисем —
Пахчари çĕр çырлисем.
Ыталаса чуптусан
Сиксе чĕтрен урапан,
Тӳшек çине вырнаççан,
Чунпа ӳте кантаран.
    Хăйă çутти сӳнсенех
Сас илтĕнет пӳлĕмрен:
— Улăп, мĕскер тăратăн,
Ак, вăт, типпех юлатăн.
Пĕччен унта тăриччен
Килсем çынсем куриччен.
Эпир, хĕрсем, начар-им,
Пирĕн çӳпçе пушă-им?
Эпир саншăн хыткан-им,
Чăвашсенчен начар-им?
Çичĕ çӳпçе кашнинех,
Арчасем те туллиех.
Пирĕн тупра вĕр-çĕнех,
Таса акăш куçĕнчен.
Юррăмăрсем шăпчăкран,
Тӳшексем те мамăкран.
Эпир вĕри хĕвелтен,
Çырла пиçет пирĕнтен.
— Эй-эй, йĕкĕт, эй, йĕкĕт,

[1] Нар юхать — чăтма çук хитре.



Сăнран шуртăн, мĕскер эс?
Эсĕ мĕншĕн çилленсе
Тăран пире кĕвĕççе?
«Чăх вăл вĕçен кайăк мар,
Хĕрарăм та этем мар»,—
Ыттисем пек шутлан пуль,
Çавăнпа тен кăмăл çук?
— Эпĕ ун пек шутлама
Çухатман-ха тăнăма,—
Терĕ Улăп кăмăлсăр,
Сар хĕр енне пăхмасăр,—
Хĕрарăмран кулакан —
Хăйне куçран суракан.
Анчах апла пулсан та,
Манмалла мар çакна та.
Пурнăçра пур ирсĕрлĕх
Чыссăрлатать ĕмĕрлĕх.
Чăтма йывăр пулин те
Усрамаллах хĕр чысне,
Ак çакăнти инкесем,
Хăш-пĕр шухă пикесем
Хăйсен чысне пĕтерчĕç,
Питне кĕççе çĕлерĕç.
Эрех ĕçсе ташласан,
Ыталанса юрласан,
Курман-пĕлмен арçынпа
Выртрĕç намăс шухăшпа.
    Ют мăшăрпа пыл çиен,
Хăвăнниинчен шыв ĕçен
Тесе чуна кантарин —
Çăмăлттайла хăтланни.
    Сасартăках тем пулчĕ,
Çĕр кисреннĕн туйăнчĕ.
Улăп паттăр тĕлĕнче
Хаяр сасă илтĕнчĕ.
— Апла пире хурлатăн,

Пите кӗҫҫе ҫӗлесшӗн.
Ак сан валли шӑтӑк пур,
Курмаллине кай та кур!
Ҫӗр шӑтӑкне, тӗрмене,
Улӑп кутӑн сирпӗнет.
Шӑтӑк тӗпне ҫапӑнсан
Ирӗксӗрех шухӑшлать:
«Сӗм тӗттӗмех шӑтӑкра
Кусран чиксен кураймӑн.
Мана кунтан никам та
Ҫӑлакании пулаймӗ.
Кунтан ҫавах тухмалла!»
Ик аллине тӗттӗмре
Улӑп паттӑр аптраса
Тӑсать ӑшра шикленсе.
Ун аллине шӑм лекет.
Вӑл ҫавӑнтан тӗлӗнет.
«Ҫӗре кӗмен шӑмшаксем
Аҫтан? Мӗнле халӑхсен?
Ҫӗре паман шӑмсенчен
Арҫурисем пулаҫҫӗ.
Пур шӑмма та ҫынсенне
Ҫӗре пама тивӗҫлӗ».
Улӑп пуҫлать ҫӗр чавма,
Кӗреҫесӗр, алӑпа.
Шӑтӑкри шӑмшаксене
Ҫӗре парать — пурне те.
Суранӗсем сурнипе
Хӳме ҫумне таянать,
Хӑйне тытма пӗлнипе
Тӑнӑҫемӗн лӑпланать.
Кус тӗттӗме хӑнӑхсан
Хӳме ҫинчи сырӑва
Вулать, ӑна ӑнланать,
Ашра ҫапла вӑл калать:
— Кунти шӑмсем — паттӑрсен,



Ҫак шӑтӑкра вилнисен,
Вӗренӳ-мӗн пулманран
Вилӗм тупнӑ айванран.
Хут пӗлнӗ-тӗк вулатчӗҫ,
Кунтан тухма пӗлетчӗҫ.
Тӗрӗс ҫырнӑ пулсассӑн
Каламалла пулнӑ ҫеҫ:
«Хура Марта — хуртӑмӑш,
Хуп-хупламӑш, ҫул парӑр».
Вара такам вӑййепе
Ҫӗр шӑтӑкӗ ҫуталчӗ,
Йывӑр тӗрме алӑкӗ
Ик еннелле уҫӑлчӗ,
Улӑп тухсан тулалла
Тӗрме хӑвӑрт хупӑнчӗ.
Улӑп каллех тӗлӗнчӗ,
Ашра ҫапла каларӗ:
— Тӗрӗс сӑмах ваттисен,
Сӗм авалах хунисем:
Вӗренни вӑл — ҫутӑ тет,
Вӗренменни — тӗттӗм тет.
Каллех тулта сар тӗнче,
Улӑп паттӑр пӳлӗмре,
Тӗреклӗ ҫын умӗнче.
Кӗмӗлленнӗ ун ҫӳҫӗ.
Сухалӗ те ҫав тӗслӗ.
Ун ҫипусӗ пархӑтран,
Атти сарӑ сӑранран,
Чӗнтӗрленӗ ӗнчӗпе.
— Ҫак тӗнчене мӗн майпа
Эсӗ килтӗн ман пата?
Кунта ҫитме ҫӑмӑл мар,
Хӑрамарӑн никамран.
Эп туятӑн: ҫипусран
Эсӗ килнӗ чӑвашран.
Эп пӗлетӗп ҫавна та:

Нумай çулсем Пăлхарта
Лăпкă тăмасть самана.
Çавăнпа эс яланах
Çанăçатăн тăшманпа.
Менле кунта, ман патра,
Лăпкă тăрать самана.
Кунта канăç яланах.
Ман пата куç пурăнма.
Эп — сăрт патшн, качар мар.
Мул пĕтесрен хăрар мар.
Шурпуç сулчĕ аллипе,
Çичĕ алăк уçăлчĕ,
Часах тĕпел кукринче
Çичĕ пике курăнчĕ,
— Ман мĕн пурĕ çичĕ хĕр,
Çиччĕшĕ те ĕçре тек,
Кĕçĕн хĕрĕм ман кунта
Ялан тăрать хуралта.
Ун аллинче сăрт мулĕ.
Мулпа сăртсем илемлĕ.
Эсĕ, Мерчен, Улăпа
Паллаштар-ха ман мулпа.
Кайран каçпа тĕпелте
Калаçатăп йĕкĕтпе,—
Терĕ Шурпуç пикене,
Кĕçĕннине, Мерчене.
Кĕçĕн хĕрĕ хĕрелчĕ,
Çÿхе тути йăл кулчĕ.
Улăп паттăр енелле
Пăхсан — хĕвел темелле.
Улăп ăна палларĕ,
Ашра çапла каларĕ:
«Тимĕр курăк кĕлтине,
Йĕспе пăхăр таткине
Çак хĕр мана тыттарчĕ».
Пике тухрĕ пÿлĕмрен,



Улăп та ун хыçĕнчен.
Пике тутăр кăларчĕ,
Кăнтăралла вĕçтерчĕ.
Улăп паттăр умĕнче
Ылтăн çиçет пур енче.
Шур çăм тутăр кăларчĕ,—
Çичĕ мăн сăрт курăнчĕ.
Пур сăрчĕ те кĕмĕлрен,
Ялкăшаççĕ тĕрлĕрен.
Хура пустав вĕçтерчĕ,
Анăç енне çитерчĕ,
Сăртри тимĕр-тăмăра
Хĕр кăтартрĕ паттăра.
Шур çип тутри кăларчĕ,
Ала çăлтăр курăнчĕ,
Ахах сути вăй вылять,
Мерчен çути таш ташлать.
— Ну, куртăн-и ман мула?
— Мулсем çитчĕр пин çула.
Ан чактăрччĕ кайран та,—
Терĕ Улăп патшана,
Хисеплесе пуç тайса.
— Ман мул чакмасть нихăçан
Мĕн ыйтнине эс нарсан.
Мана кирлĕ çак кăна:
Ылтăн читлĕх ăшĕнчи
Çыру-кĕнеке текенин.
Киреметрен эс ăна
Туртса ил те мана пар.
Ĕмĕр кунта пурăнма
Мансам тăван халăхна.
Пĕр каварлă пулăпăр,
Мула хушса пуркăпăр,
Ылтăн çинче çывăрăпăр.
Улăп паттăр патшана
Хуравларĕ ак çапла:

— Янтă пурнăç — пурнăç мар,
Сутăнчăк çын — усалран.
Сутăнчăка тухиччен
Çерти çÿп-çап пулас-мĕн.
Ан ман çавна: нихçан та,
Темле йывăр пулсан та,
Чăваш телей çырăвĕ
Чăвашрах пулать — суймастăп.
Суйсан мана çĕр çăттăр.
— Эсĕ кайрăн кăмăла,
Сăмахусем пит аван.
Кунта çитме çăмăл мар,
Хăрамарăн никамран.
Çак тĕнчене ансассăн
Пĕр никекрен хăтăлтăн.
Пасарта та эс пултăн,
Якăлтине тухмарăн,
Эрех ĕçсе кÿпмерĕн,
Ана эсĕ хыт хăртрăн.
Ют мăшăртан пыл сиен,
Хăвăннинчен шыв ĕçен
Теннне эс хурларăн,
Çапла чысна сыхларăн,
Инкеке вычă хăвартăн.
Вĕреннĕ çын пултăн та,
Лексессĕн те шăтăка,
Çĕр айĕнчи тĕрмерен
Эсĕ тухрăн сып-сывах.
Çĕнтерсе улт инкеке
Эсĕ çитрĕн ман пата.
Сана янтă пуянлăх
Сĕтĕрмерĕ енчĕкне,
Çавăнпа та сутăнчăк
Эс пулмастăн ĕмĕрте.
Çĕнтертĕн çич инкеке.
Таса — тăрна кусĕ пек.







Эп те юлмăп парăмра.
Сана кирлĕ Çилçунат.
Эс çавăнпа ман патра.
Ман витене çул уççам.
Мĕн килĕшет — сан пулать.
    Улăп кĕрсен витене
Айăр илчĕ кеçенсе.
Хÿме çинче хĕç курать —
Улăп паттăр санăнать.
Кунти хĕç те япăх мар —
Çиççе тăрать вутхĕçле.
Айри тăрать, кукалет,
Ана Улăп йĕнерлет,
Ярса тытать вутхĕçе,
Çакса ярать хăй çине.
— Тавах сана, Пÿлĕхçĕ!
Аттен хаклă еткерĕ
Каллех кусрĕ тĕпкĕчне.—
Терĕ Улăп витере.
    Улăп тухса кайиччен
Мерчен тухать килĕнчен.
Тунсăх унăн кусĕпче,
Хуйхă вĕри чĕринче.
— Апла кунта юлмастăн,
Чăваш çĕрнех каятăн?
Улăп, пăхсам ман енне,
Тен, хĕрхенĕн Мерчене?
Ан кай, Улăп, тархасшăн,
Эпĕ санна пуласшăн,
Нумай-нумай пурнасшăн,
Санпа телей курасшăн.
Çичĕ ниќек тÿсрĕн эс,
Манпа телей курăн çеç.
Пĕрре çеç мар, çич телей,
Анлан, Улăп, çич телей!
Çирĕп сывлăх эс малтан



Кунта илсн, чăнах та,
Чир-чĕр мĕнне эс манан,
Ун шăрши те çук кунта.
Ялан пулĕ ĕç умра,
Ĕç — телей вăл пурнăçра.
Ĕçпе чапа тухатăн,
Ырă ятпа пурнатăн,
Атте-анне ăслă ман,
Пÿлĕхçĕ те хурламан.
Кунта пĕрле пурăнсан
Эс пит чаплă çын пулан.
Аслă-тăнлă пулнишĕн,
Чĕрÿ хастар тапнишĕн
Çунса кайсах ыталăп,
Вĕриленсе юратăп.
Юратуран хакли çук,
Юратушăн ватлăх çук..
Упăшкишĕн арăмĕ
Сĕм авалран ак çакă:
Çытар — пĕрле шутлама,
Вырăн — ялан савăнса
Вăрлăх акса хăварма.
Сивĕ çапсан вучаха
Вучах сыхлавçи вăл пулать:
Хÿмеленет çийĕнчех —
Сăрт тăррине çитиччен.
Анчах мăшăрĕ арăмне
Хисенлеме пĕлмесен,
Ултавăçла пурăнсан
Е çын çумне тек хушсан
Хÿме тăрне юр çавĕ,
Купаланса усăнĕ.
Ун пек чухне пÿлĕх те
Пулăшас çук мăшăрне.
Мана тĕрĕс ăнлансам:
Мăшăру пулăп — хакли сан.

Вăрлăх аксан вырăна
Эп çуратăп çич ача.
Сана хывĕç ывăлсем,
Мана хывĕç хĕрĕмсем.
Юлашкинчен эп санран
Тăн çухатсах савнăран
Çĕрме пуян тăвăттăм,
Мулна хуша парăттăм.
Саккун пулĕ сан алра,
Санран чĕтрĕç таврара.
— Мерчен, чипер пикеçĕм,
Эсĕ мана ан çиллен,
Эп ачаллă-пăчаллă,
Арăмпала телейллĕ.
Арăм çиччен мĕн терĕн —
Ман арăм çав чикĕре.
Эп вĕсемпе — ĕмĕрех!
Маншăн çутă тĕнчере
Вĕсемсĕр пуçне мĕн хакли?
Тăван çĕршыв чи хакли!
Сыв пул, пике! Ан çиллен,
Чипер каччă тĕлне пул!



# *Вăтăр тăваттăмĕш юрă*

## УЛĂП МАТЕР ХАЛĂХНЕ НУШАРАН ХĂТАРНИ

***Сикпăрçа Арпат патша кĕрӳшĕ.***
***Матер халăхĕ[1] тăшманран хĕн-хур тӳсет. Улăп, Çĕрпӳ паттăр тата кĕçĕн çынсем, Сикпăрçапа Катрине, аттĕ ăратне асапран çăлаççĕ. Матер патши Арпат кĕрӳшне ăратăн таппарне парать.***

Хĕвел çути — кун çути —
Çут тĕнчене ешерме,
Уйăх çути — каç çути —
Юратăва ӳстерме.
Чăн юрату çитĕнсен,
Çунатланса вăй илсен
Ăна уйăх та пиллет.
Ун пек вăхăт çитсенех
Хĕрпе каччă пĕрлешет,
Çĕнĕ çемье çуралать,
Йăх тăсалать малалла.
Катринепе Сикпăрçа
Вĕçернеймен йăларан,
Йăх тăсмашкăн малалла
Пĕрлешмелле уйăхран.
Çураçнă хĕр килĕнче
Çипуç тавраш хатĕрлет,
Эрешне те çĕнетет,
Тĕрлесе илемлетет.

[1] Матер халăхĕ — хунта: мадьяр халăхĕ пулас.

Катринен пур инкĕшĕ,
Чăваша качча тухнăскер.
Чăваш кăткăс таппарне,
Унти нумай йăлана
Тÿснĕ вăл хăй сахал мар.
Хĕрсемĕршĕн кулянать,
Çавăнпа вăл мăрлатать:
«Катринен пулас упăшки —
Çара çерçи хăраххи.
Пуянлăхĕ — вăй кăна,
Вăрçă хатри — çумĕнчи.
Кил-çурчĕ те кермен мар,
Вăл та кайран тÿнет ак.
Хĕрсемĕре савнăç-и
Ашшĕ-амăшсĕр пуранни?
Вăл арăмне пăхать-и?
Унашăн айри — чи хакли.
Хĕрсемĕре курмалла,
Калаçмалла унпа ман».
Çавăнпа та ун патне
Инкĕш çитет вĕçтерсе.
Катринене чуптусан
Пĕрле ларать юнашар.
— Юри килтĕм сан пата
Чĕреренех калаçма,—
Тет вăл сăмах пуçласа.—
Çулăк тутри каччăра —
Улшăнмалла пурнăç сан.
Хаш еннелле? Паллă мар.
Çнелтен пăхатăн пурнăçа,
Тĕлĕнетĕп çавăнтан.
Чăваш халăх йăлине
Чухлаймастăн нимĕн те.
Юрату, мур, сан пуçна
Карса илнĕ, туршăн та.
Çумра пулсан Сикпăрçа



Сана ним те кирлĕ мар.
Улăппала Сикпăрçа
Кураймаççĕ пусмăра.
Çавăнпа та килĕнче
Çуккă чура шăрши те.
Патша хĕрĕ пулсан та
Хăвах куçан чурана.
Ан ман çавна: Чăвашра
Тÿр пилĕклĕ çынсене,
Патша хĕрĕ пулсан та,
Ĕç еçлесе пиçменрен
Ним вырăнне хумаççĕ,
Шамшаккуна çăваççĕ.
Кĕçĕн çын ячĕ хĕрсене
Савăнтарать чĕререн.
Ун нурнăçĕ пыл-çу мар.
Яваплăхĕ мăй таран.
Çулталăкпе хĕн кăна,
Мĕнле чăтăн-ши ăна?
Кĕçĕн çыннăн тумĕнче
Нумай кĕмĕл тенкĕсем:
Хушпу — çавра пуçĕнче,
Умра — йывăр шÿлкеме.
Мĕн чул ама-аçасем!
Вăчăрасем хаклисем,
Вун-вун тĕслĕ шăрçасем,
Ĕнчĕ, мерчен — темтепĕр.
Шутлас пулсан пурне те
Алра çитмĕ пÿрне те.
Çавсене сан пĕтĕмпе
Ашăра та, сивĕре,
Шăрăхра та, йĕпере,
Уявра та, ĕçкĕре,
Ута çулнă кунсенче,
Пахчаçимĕç тунă чух,
Уй ĕç пухса кĕнĕ чух —

Темле пăчăх пулсан та
Хăваи чысна упрама
Тăхăнмалла яланах,
Кĕçĕн çыннăн эрĕшне
Çыврас чух тин хывмалла.
Çӳрес пулать акăшла
Тĕлĕнтерсе ял-йыша,
Упăшкуна савтарса.
Хăш-пĕрисем çавăнтан,
Тӳсме йывăр пулнăран,
Катăкланса юлаççĕ,
Ĕмĕр асап кураççĕ.
Асту эсĕ çавна та:
Унта кулă, мăшкăл та.
Пуçна сурпан сырсанах,
Мăшăр витре парсанах
Каяи çăла шыв ăсма.
Шывне ăсма йывăр мар,
Йывăр киле çитерме.
Эсĕ туллн витререн
Тумлам кăна шыв тăксан
Шăмшаккуна çунă май
Яту сарлать таврана.
Сурасна хĕр эсĕ халь.
Чӳкпуç умне тăриччен,
Мăшăрлатса нриччен
Сĕм авалхи йăлапа
Чун туртмаиран çăлăнма
Пĕр шанчăк пур сан валли:
«Тухать-и те тухмасть-и?»
Туйра юрă янриччен,
Туй халăхĕ снсиччен
Килтен тухса тармалла.
Унщăн сана никам та
Ятлас та çук йăлапа.
Хăй инкĕшне Катрине
Хуравларĕ хирĕçсех:
— Ана акăш сăнĕпе
Вĕçнĕ чухне тӳперен
Эпĕ курнă хам куçпа.
Тӳсмелле мар йăлана
Илтнĕ хамăн хăлхапа.
Киреметрен, усалтан
Асап куртăм — сахал мар.
Караппăлран хăтăлма
Эп чăмăттăм кӳл тĕпне.
Унта шур чул выртатчĕ,
Çавăнтах хăмăш чăтлăхчĕ.
Çавсем мана тăшманран,
Кулса «сĕте» сăвасран,
Сив чирĕ те ласкасран
Ялан çăлса хăваратчĕç,
Чунăма та ăшăтатчĕç
Асапран та мăшкăлран.
Мана Улăп хăтарсан
Эпĕ пĕлтĕм ак çакна:
Шур чул пулнă Сикпăрça.
Иксĕмĕрен çавăнпа
Пĕр ăраскал пулмалла.
— Апла пулсан эп сана
Кил вучахне сыхлама
Ас парам-ха тăванла.
Ана илтнĕ Чăвашран,
Виççĕр çулхи карчăкран.
Упăшкипе арăмĕ
Йĕнпе çип пек пулмалла.
Çавăнпа та халь ĕнтĕ
Пурăнсамăр йĕркеллĕ...
Малтан, качча кайиччен,
Пуçа сурпан сырниччен,
Юратсамăр пĕр-пĕрне
Сухатниччен тăнсене.

Кĕçĕн çынсем пулсанах
Кунĕн-çĕрĕн, пĕрмаях
Хулпуççинчен çакăнса
Ан юратăр туртăнса.
Нумай çисен çĕн пыл та
Йăлăхтарать мăй таран.
Ашшĕ савать ывăлне
Хăй çулĕпе утнине,
Амăш ырлать хăй кинне
Ун йĕррине пуснине.
Аçу-анну килĕнчен
Уйралмашкăн ан васкăр.
Йывăр кайран тĕл пулсан,
Уйрăлнă чух — татах та.
Татăлсассăн чун-чĕре
Куççуль юхать ӳпкеврен,
Аçăрпала аннĕре —
Хăвăнне, мăшăрăнне —
Хисеп тусам пĕр пекех.
Пăлчав кукли[1] çитерни
Сикпăрçашăн хĕпĕрти.
Çавăнпа çĕн пӳртĕнче,
Туй пулас чух лартнинче,
Арçын туйĕ иртеппех...
Туй юррисем янраççĕ,
Çич çухрăма çитеççĕ.
Туй арăмсен, инкесен,
Хушпу — кашнин пуçĕнчех.
Кашнин кĕмĕл тенкисем
Ялтăраççĕ çăлтăр пек.
Сар сăранлă атăсем
Йăпăрт-йăпăрт шăвнаççĕ,
Ташша илем параççĕ.

[1] Пăлчав кукли — хĕре çураççан туй пуличчен кучченеç улăштарни.



Кĕслерен те, шăпăртан,
Чĕмпĕр енчи сăрнайран,
Çич параппан-тампăртан
Çичçĕр кĕвĕ шăранать,
Туйри халăх савăнать.
Туй ачисем — паттăрсем,
Сикпăрçанăн тусĕсем,
Ялти чаплă каччăсем.
Çĕр чĕтренет ташсенчен,
Ют çĕршывран килнинчен.
Хĕре лартса каймалли —
Айăр, анчах йăвашши.
Параппансăр туй пулмасть,
Юрламасăр чун канмасть.
«Туй-туй, туй тесен,
Туй-туй, туй тесен,
Пурăнас йытта вĕлерсе
Çĕн параппан турăмăр,
Çавăнпа кунта килтĕмĕр».
Туй каччисем лăпланчĕç,
Туй никисем хумханчĕç.
Çак юрăсăр хĕр тухмасть,
Çĕнĕ семье хутшăнмасть.
«Тухать-и, тухмасть-и,
Тухать-и те тухмасть-и,
Тухать пулсан час тухтăр,
Эпир киле каятпăр.
Час тапранса тухмасан,
Час тапранса тухмасан
Çын хатĕрпе тухать тет,
Çын хатĕрпе тухать тет.
Час тапранса тухсассăн,
Час тапранса тухсассăн
Хăй хатĕрпех тухать тет.
Хăй хатĕрпех тухать тет.
Эпир панă укçине,

Эпир пана укçине
Сĕтел ури тайлниччен,
Сĕтел ури тайлниччен.
Тавай пире япала,
Тавай пире япала
Урапа кашти хуçличчен,
Урапа кашти хуçличчен».
Туй таврăнать кĕрлесе
Сикпăрçасен кил енне.
Мăнтурăна асăнса
Пихампара çырлахма
Чӳк нарине памалла.
Чӳк вучахĕ умĕнче
Сикпăрçапа Катрине.
Чӳк пуçлăхĕн аллинче
Пилĕх хатри, чи пахи.
Чӳк пуçлăхĕ ватăскер,
Виççĕр çултан иртнĕскер.
Çĕн мăшăра чысласа
Пиллет çапла каласа:
— Мăшăрланас йĕрке пиртен тухнă йăла мар.
Кайăк-кĕшĕк те мăшăрланса чĕпĕ каларать,
Хурт-хăмăр та мăшăрланса пыл тăвать.
Эсир те мăшăрланса пирĕн умра паян.
Пире шуратрĕç, сире те çавăн пекех шуратчăр.
Пире савса пуç таяççĕ, сире те çапла хисеплеччĕр.
Саркайăкла савăнса пурăнăр,
Хуракăш пек мамакланса пурăнăр.
Кайăк пек мăшăрланса иккĕн выртса виççĕн тăрăр.
Уй пек аслă пулăр, шĕшкĕ пек хунавлă пулăр.
Кăнтăрлахи е каçхи ĕçе хусамăр пĕлсе тăрăр.
Сав вăл пурнăç тыткăçи.
Арăму йывăр çын пултăр, вуник хырăм çĕклетĕр.
Тăхăр ывăл пултăр, виçĕ хĕр пултăр.
Ывăлсем ял-йыша, пускилле юрăхлă пулччăр.
Хĕрсем ютта юрăхлă пулччăр.



Сыпăкран сыпăка хунав хушмалла пулччăр.
Аннĕ ури вырăнне ывăлĕ пусмалла пулччăр.
Кинĕ хунямăшне хисеплесе пурăнтăр.
Ури ырăнне пустăр.
Сак тулли ача-пăча, карта тулли выльăх-чĕрлĕх пултăр,
Кĕреке тулли çăкăр-тăвар пултăр.
Пура тулли тырпул пултăр.
Пурарин те, кĕрекерин те перекечĕ пултăр.
Пĕр сумран çĕр сум пултăр.
Турăран хăрăр, этем ывăлĕнчен вăтанăр.
Килти сăмаха яла илсе ан тухăр,
Ялти сăмаха киле илсе ан килĕр.
Ял-йыша юравлă пулăр.
Аçу-аннӳ сăмахĕнчен ан тухăр.
Пите кĕççе çĕлесе çӳремелле ан пултăр.
Ял каланине ан манăр.
Арçын хĕрарăм хыçне кĕрсе ан выртăр.
Хĕрарăмăн сăр илмелле ан пултăр.
Шыв патне кайсан хыçалти çынна кĕтсе ан тăтăр.
Умри çынна хуса çитсе иртсе кайтăр.
Шакалтатса савăнса йӳтиччен пурăнмалла пултăр.
Урари çăпатине кутăн сыриччен пурăнмалла пултăр.
Урари тăллине пуçа сыриччен пурăнмалла пултăр.
Майри сурпана тăлла вырăнне сыриччен пурăнмалла пултăр.
Эй, аттисем, асаттесем, ват-ват асаттесем!
Асаннесем! Ват-ват асаннесем!
Эпир те килсе ырă сунса, ĕçсе-çисе кайăр.
Пирĕн ĕçке пăсăк тума ан парăр.
Эй, турă, пирĕн виç сăмаха хапăл тăвсамăр.
Нумай каларăм нуль.
Мана, ухмаха, каçар.
Эпир пурне те пĕлместпĕр.
Юрлăр та ташлăр.
Ĕçĕр те çиĕр.
Çапла пултăр.
Сире те, пурне те халаллăх!

Кун иртет те, каç килет,
Сикпăрçапа Катрине
Мăшăрланни савăшса
Ик-виç уйăх та иртет.
Ватă Çĕрпӳ паттăрпа,
Тин çеç килнĕ Улăппа,
Сикпăрçа хăй мăшрипе
Ларать улма пахчинче.
Сăмах ваклать кăмăллăн,
Шерпет ĕçет вăрахăн.
Çав вăхăтрах пӳрт тăрне
Икĕ кайăк ларчĕç те —
Аçи калать мăшăрне,
Улăп илтет вĕсене.
— Эсир — пурте амасем,
Тупсассăнах мăшăрсем
Аçу-аннӳне манатăр,
Хăвăршăн çеç пурнатăр.
Кунта пурнать савăнса
Арпат хĕрĕ Катрине.
Вăл хĕр чухне мĕнлеччĕ?
Ашшĕ-амăшшĕн çунатчĕ.
Халь вăл мĕнле? Вĕсене
Асăнмасть те килĕнче.
Пурăнать вăл киленсе,
Çĕр çырли пек нар илсе.
Катринен халь йĕмелле,
Хуйхăпала типмелле.
Ахальтен мар каланă:
Хĕрĕн чĕрн ютшăнать
Качча тухса кайсанах.
— Мĕншĕн? Кала суймасăр?
Хăвăнтан ним те хушмасăр.—
Ыйтать ами аçинчен,
Тин пĕрлешнĕ варлинчен.
Аçи калать амине:



— Ват Кирĕшмет еккинчен
Матер халăхĕ инкекре,
Хĕн курать вĕт — чăтма çук.
Арпат йăхĕ пĕтет пуль.
— Пулăшмалла Арпата,
Хĕн куракан халăха.—
Терĕ Улăп хĕç çакса,
Çилçуната сас парса.
Висĕ паттăр — чăвашсем,
Çемçе кăмăл кашниннех,
Каллех тухрĕç çул çине.
Çил касаççĕ лашисем.
Улăп паттăр чăн малта,
Çĕрпӳ паттăр хыçалта.
Çав паттăрсем хушшинче
Çамрăк мăшăр ут çинче.
Ĕлĕк унта пулнăран
Çилçунат хăй çул пĕлет,
Çилтен малта чупнăран
Вăрăм çулĕ кĕскелет.
Çитес çĕре çитсенех
Вĕсем курчĕç ак çакна:
Чултан туман çут кара
Купаланă темскерле.
Карĕ — йĕри-тавралла,
Пахсан — куçа шартмалла.
Шăрантарса карнăран
Яка, чăн та, кантăкран.
Ниçта алăк курăнмасть,
Уçса кĕме май пулмасть.
Çавах кар сас тытаймасть,
Сас сарăлать çав картан.
Шалта, мăн кар варринче,
Унти халăх хушшинче
Ача-пăча йынăшать,
Ватă-хĕтĕ кулянать.

Хěвел тухса çитнччен
Çап-çавра кар тăрринчен
Кулнă сасă илтěнет,
Лутра Шурпуç чалт сикет.
Пěр чавса ун çÿллěшě,
Çичě чавса сухалě.
Катăк шăллă, уксахлать,
Шур туйине вылятать.
— Арпат, итле эс мана
Ик хăлхуна тăратса.
Эс çак картан нихçан та
Тухаймастăн ăратпа.
Хěрÿ патне хăв кайса
Кала: «Пăрах мăшăрна,
Кирěшмете качча кай».
Эсě çапла каласан,
Эс çакăнтан тухатăн,
Ылтăн айне пулатăн.
Телей пулать сан алра.
Итлемесен пěтетěн,
Йăхпах çěрен çакăнта.
Çавра кара уçакан,
Ăна çапса ватакан
Çуралман-ха Чăвашра.
Килěш манпа хăвăртрах!
Килěшместěн? Ну, юрать,
Виличчен сире хурт çитěр!
Шăммăрсене йыт çăттăр!
Паттăрсене витлесе
Кирěшмет вěçет йăвине.
Улăп паттăр, Сикпăрça,
Çěрпÿ паттăр та унтах,
Хěçěсене кăларчěç,
Çěн кар тавра çаварчěç.
— Кара Кирěшмет хывнăран
Вăл пулмалла асамра.



Çавăнпа та çак кара
Чи малтан хам тапăнам.
Улăп касать çут кара
Вăй-хал хурсах вутхěçпе.
Кара каснă çěртенех
Турпас вěçет шăранса.
Кар турпасě Улăпа
Çунтарасшăн ялкăшса.
Анчах Улăп сăхманне
Чěртеймест вăл — пиллě те.
Турпас каллех шăранчăк,
Кар çнелле вěçет вăл,
Каснă çěвве çухатма
Хăй вырăннех вырнаçать.
«Ак тамаша! Вутхěç те
Илеймест-и çак кара?» —
Улăп тăрать шутласа. —
Эпир тăваттăн çакăнта,
Тен, йăтăпăр çак кара?
Кашни тăчě кěтесе,
Кара тытрěç çěклеме.
Çут кар çěртен хăпăнсан
Асамлăхне çухатрě,
Çавна пула карě те
Сывлăш пулса вěçěнчě.
Хěрě ашшě уменче,
Чăвашсем вěсем çумěнче.
Тÿре калать вěсене:
— Вилěм тарчě пирěнтен,
Хăтăлтăмăр тискертен.
Тăшман ирсěр пулчě те
Апат-çимěçе, пирěнне,
Кěллентерсе вěçтерчě,
Пире выçça хăварчě.
Юхса выртан шывне те
Юхтарчě çěр тěпнелле.

Тавтапуç хам йăхăма,
Тухмарĕ ман калăпран.
Ун хĕрĕшĕн пĕтмелле
Тесе мана хăртмарĕ.
Чăваш халăх ĕлĕкрен,
Хура-шара пĕлнĕрен,
Хĕн куракан халăха
Пулăшмашкăн тăрăшать.
Пĕрн парать тумтирне,
Тепри — лаши-ĕннне,
Вăрлăхне те хĕрхенмест,
Вырăнĕ çитсен акма тет.
Нухрат патша халь хăй те
Пăлхар халăх ячĕпе
Çапла калать сăмахне:
— Вуннкĕ ăстаçă ман кунта —
Чăн чаплисем Пăлхартан.
Вĕсем сана ку чухне
Пулăшаççех чĕререн.
Улăп эмел курăкпе,
Çав вырăнтах ÿсинпе,
Чир тапăннă çынсене
Кунĕн-çĕрĕн эмеллет,
Ура çине тăратать.
Арпат патша хумханать,
Чăвашсене тав тăвать,
Каяс умĕн кĕрÿшпе
Тăрать çапла пуплесе:
— Качча илтĕн ман хĕре,
Çап-çарамас юлнине.
Витĕр пăхсан халь эп те
Унпа пĕрле. Çавах та
Манра пур-ха çут шăрçа.
Çав çут шăрçа, хаклăскер,
Йăхăма та кирлĕскер.
Ку таранччен ăратăм
Темле йывăр пулсан та
Шăл айĕнчен кăларман.
Унпа усă та курман.
Чăваш хăй те телейсĕр,
Çавах пире пулăшрĕ,
Çавăнпа та эп сана
Парап çав çут шăрçана.
Шăрçн — ахаль шăрçа мар,
Асамлама пултарать,
Мĕн ыйтнине пурнăçлать —
Пĕтĕмпе те çиччĕ çеç.



# *Вăтăр пиллĕкмĕш юрă*

## УЛĂП КИРĔШМЕТЕ ТĔП ТУНИ

***Улăп чăваш телейне çăлма***
***Кирĕшмет патне каять. Шăпатанпа Вупăр чăваш паттăрсене çиме тытасшăн. Улăп, Çĕрпӳ паттăр, Сикпăрçа пĕрле пулса Кирĕшмете хупăрлаççĕ, чукне кăлараççĕ. Чăваш телейĕ каллех чăвашра.***

Пăхрăмăр та çӳлелле —
Çут çăлтăрсем пин-пиние,
Пăхрăмăр та мал енне —
Вис юланут йĕрĕсем.
Вăтам йĕрĕ Улăпăн
Çилçунат сул уснăран.
Сулахайри — Сикпăрçан.
Ун çумĕнчи, сылтăмри,
Ват Çĕрпĕвĕн ут йĕрри.
Иккĕшĕн те айрисем —
Чăваш енчи — чаплисем,
Çилçунатран юлмаççĕ,
Вĕçсе кăна пыраççĕ.
Хăлхисенчен çил шăхрать,
Сăмсисенчен хĕм сапнать.
Сĕм вăрмансем, уй-хирсем,
Шывсем, Атăл пеккисем,
Сарăлайса выртаççĕ,
Хыçа тăрса юлаççĕ.
Çитмĕл çичĕ сăрт енчен,
Шуçăм шывĕ айĕнчен



Ишсе тухрĕ çăмламас,
Пĕврен илсен — хыçăнкас[1].
Çăмламаса кайăк тес —
Курма çуккă çунатне,
Çăмламаса çĕлен тес —
Çăварĕнче сăнни çук.
Çăмламаса упа тес —
Урисем ун ухват пек.
Çăмламаса кашкăр тес —
Мĕнпур кусĕ — пĕрре çеç.
Карса ярсан çăварне
Хыр вырнаçать кăкĕпех.
Сурать, вĕрет, çухăрать,
Çитмĕл çич сас кăларать,
Каюралла çĕр чавсан
Алтăркусла шăрш ярать.
Паттăрсене Çăмламас
Шуçăм урлă каçармасть.
Вăл шыв ĕçсе кӳпĕнет,
Çыран тăрăх сĕтĕрнет.
Йăваланать улăхра —
Мĕнпур курăк юшкăнра.
Висĕ паттăр сыхланса,
Çав юшкăнран пăрăнса
Сăмсалăха улăхрĕç,
Утсем çинчен вăшт анчĕç,
Виççĕш пĕрле кар тăчĕç.
— Ах, тартăр-и юшкăнран? —
Тесе ирсĕр кăшкăрать.
Хăвăр виççĕн пулсан та
Эпĕ сире малашне
Кăтартапах çырлине.
Сăмсалăх та çакăнта
Хута кĕмĕ нихçан та.

[1] Хыçăнкас — юмахри ту пек нĕрсĕр кайăк.

Кӳнне шывне пӗрӗхет,
Ҫав хушӑрах ихӗрет.
Шыв ҫавӑнтах пӑс пулать,
Пӑс ҫумӑра час куҫать.
Ҫав ҫумӑртан хӑтӑлма
Улӑп хывать сӑхмане.
Пиллӗ сӑхман пуҫ ҫинче,
Вӑл парӑнмасть ҫумӑра.
Карнӑ сӑхман ҫунма мар,
Шӑтӑкланма шутламасть.
Усал ҫавах ашкӑнать,
Ҫӗр ҫурасла кӑшкӑрать:
— Эй, вут чулсем, ҫаврисем,
Кирӗшметрен юлнисем,
Сӑмсалӑха ыткӑнӑр,
Виҫ тӑмсая тапӑнӑр!
Арман чул пек пурсӑр та
Кӑрстин-кӑрстин кусӑр та
Виҫ тӑшмана аркатӑр,
Ҫӑнӑх туса кӑларӑр.
Вут чулӗсем юшкӑнлӑ,
Пӑхмашкӑн та хӑрушӑ,
Сӑмсалӑха ыткӑнчӗҫ,
Арманланма тытӑнчӗҫ,
Виҫ паттӑра тапӑнчӗҫ.
Хӑйсен ӑшне туртасшӑн,
Чаерах ҫӑнӑх тӑвасшӑн.
Анчах вӑйсем ҫитменрен
Вӗсенчен ҫӑнӑх пулмарӗ.
Кӑрстин! кӑрстин! авӑрчӗҫ,
Вут хӗм сапма тытӑнчӗҫ.
Паттӑрсене канӑҫ ҫук,
Ниҫта кайма памасть мур.
Сикпӑрҫа шӑл хушшинчен
Сутӑ шӑрҫа кӑларчӗ.
Вара шӑрҫа хӑй енчен



Ана ҫакна пӗлтерчӗ:
— Тухатмӑш вӑл. Шапатан.
Вӑт ҫав Чӑваш ҫӗрӗнчен
Нухрат патша умӗнче
Киревсӗр ӗҫ тунӑшӑн
Вутта тытса перерен
Ҫак еннелле шӑвӑннӑ.
Кунта кӑштах пурӑнсан,
Чӗтремешкӗн пӑрахсан
Персе ҫитет кӗркунне
Кирӗшметӗн чул суртне.
Ана хуҫи ӗшкӗртет,
Ҫав вӑхӑтрах хӗсӗрлет
Хуралҫӑра лармашкӑн,
Чӑваш чунне илмешкӗн.
Ҫавӑнпа вӑл ҫакӑнта
Хӑйне тытать усалла.
Шӑпатана, ирсӗре,
Чӑркӑш асар-писере,
Ҫӗнтермелле пилешпе,
Ҫекӗлленсе ӳснипе.
Халех вӗҫтер вӑрмана,
Ун пек пилеш чӑтлӑхра.
Шурӑ шӑрҫа вӑйӗпе
Сикпӑрҫаран майӗпе
Пулса тӑчӗ сар сӑпса.
Сӑпса вӗҫрӗ нӑрласа
Сӗм-сӗм чӑтлӑх вӑрмана,
Ура пусман вырӑна.
Сӑпса тупать пӗр ҫӗрте
Ҫекӗлленнӗ пилеше.
Хуҫсан ҫекӗл туратне
Амӑрткайӑк пулать те
Вӗҫет Шуҫӑм хӗррине.
Улӑп паттӑр умӗнче
Каллех вӑл ҫын — Сикпӑрҫа.

Çӑмламаса, асамçа,
Çамки урлӑ çилленсе
Çапать çекӗл пилешпе.
Çӑмламас халь — Шӑпатан.
Чапрасланнӑ вӑл аван.
Сехри хӑпса кайнипе
Лекет Улӑп аллине.
— Мӗншӗн эсӗ алхасрӑн,
Пирӗн çула ма татрӑн? —
Ыйтать Улӑп усалран.
Вилме маннӑ Шӑпатанран.
Шӑпатан тӑрать чӗтресе,
Тытамакла ехлетсе,
Куçӗ-пуçӗ уй чармак
Кӗçех сиксе тухасла.
— Çакӑнти çул кукринче
Эс хуралçӑ, пӗлмелле.
Ват Кирӗшмет йӑвине
Пирӗн мӗнле çитмелле?
Çул кӑтартса яратӑн —
Сывах тӑрса юлатӑн.
Çул-йӗр тупса памастӑн —
Кунтах вилӗм тупатӑн.
Шӑпатан тӑрать антраса,
Хӑрӑк шӑлне кӑтартса.
Халь те Улӑп умӗнче
Ирсӗр шухӑш пуçӗнче.
Шӑпатан ирсӗр шухӑшне
Пытармашкӑн тӑрӑшать.
Çавӑнпа Улӑп умӗнче
Йӑпӑлтатма тытӑнать:
— Пархатарлӑ ĕçӳ сан.
Мӗн хушатӑн — тӑватӑп.
Ĕçӗ пулать çавӑн пек:
Йӗк Кирӗшмет тӗпленет.
Чӑваш телейӗ вӑй илет.



Хура халӑх хӗпӗртет.
Çавӑншӑн, Улӑп, эс мана
Пӑлхар халӑх умӗнче
Хӳтӗлесе калаччӗ,
Халӑх телейне хӑтарма,
Кирӗшмете аркатма
Пире Шӑпатан пулӑшрӗ
Тесем халӑх пӳртӗнче.
Аслӑ Пӑлхар хулиниче.—
Терӗ Шӑпатан хӑраса
Çеклӗ пилеше курсанах.
— Каçаратпӑр çавӑншӑн,
Хамӑр хушша илетпӗр.
Ват Кирӗшмет çӗрӗнче
Паттӑрсем халь — виççӗш те.
Çул тӑсӑлать уй-хирпе,
Катмар чулсем хушшипе.
Ват Кирӗшмет çӗрӗнче
Тӗлӗнтерет çулӗ те.
Яка — кантӑк сарнӑ пек.
Такансӑр ӳт ӳкмелле.
Çул айккисем — çут хӳме.
Вӗсенчен юлмасть маччи те.
Кунти сывлӑш пӑрланнӑ.
Аяккалла çул çуккӑ.
Тавралӑха пӑхатӑн.
Йӑлтах витӗр куратӑн:
Выльӑхсене, чурӑшне.
Кайӑксене, сынсене.
Анчах вӗсем чулланнӑ.
«Вилнӗ вырӑн» ку тетӗн.
Сисмен-кӗтмен хушӑрах
Çул улшӑнчӗ самантрах.
Кайма май çук малалла.
Чакма та çук каялла.
Улӑп пуплет хӑй тӗллӗн:

— Чăвашăн пур пĕр кăлтăк.
Енечет вăл çăмăллăн.
Шăпатана ĕненсе
Лекрĕмĕр серепене.
Юратнă тус, Сикпăрçа,
Мĕскер калать çут шăрçа?
Сикпăрçа çут шăрçана
Шăл айĕнчен кăларчĕ,
Шăрçа çамрăк паттăра
Йăлт-йăлт çиçсе каларĕ:
— Виç çул сирĕн умăрта.
Пĕрремĕшĕ — хыçăрта,
Иккĕмĕшĕ — шăтăкра,
Виççĕмĕшĕ — умăрта.
Хыçалти çул сехетрен
Çиçсе пулать шур çипрен.
Каялла çул тăсатăр —
Шăпатан кулли пулатăр.
Каяс тесен утпала
Çĕр шăтăкне сикмелле.
Унта виç çул куратăр.
Виçĕ çултан пĕр çул çес
Кирĕшмет патне çитерет.
Сикпăрçа çут шăрçине
Шăлĕ айне хурнччен
Хушрĕ кăштах шутласан:
— Кĕпе пăрçи ту манран!
Çав вăхăтрах Сикпăрçа
Пулса тăчĕ ват пăрçа.
Çĕр пăрçинчен лутрарах,
Çын пăрçинчен çутăрах.
Çул питĕрĕнсе ларнччен,
Йăлт пăрланса кайнччен
Пăрçа пырать сиккипе.
Çĕрпӳ паттăр йăйăрне
Сиктерчĕ çĕр шăтăкне.



Шăтăк çутн — ячĕ çеç,
Ана туять Сикпăрçа.
Пăхать йĕри-тавралла,
Ашра калать ак çапла:
— Куитн çулсем юнланнă.
Виççĕшĕ те виç тĕслĕ.
Çулсем çинче йĕрсем пур.
Анчах темшĕн пĕр пек, мур.
Тĕрĕслем-ха. Васкас мар.
Çав çулсемпе кам чупать?
Çĕрпӳ паттăр йăрине
Выртма хушрĕ çул çине.
Хăй те выртрĕ тăсăлса.
Вилнĕ çын пек курăнса
Çӳлте, умри çул çинче.
Сывлăш пĕтсе çитиччен
Хăрхашла сас илтĕнчĕ:
«Милке çинче ват карчăк.
Çын вупăрĕ? Чăн та вăл!» —
Улăп паттăр сăмсинчен
Юнĕ тапать ик енчен.
Вупăр карчăк савăнать,
Çавăнпа вăл, ват кушак,
Антăхакан Улăпа
Пусса выртать ахăрса.
Çын шутĕнчен кăларма
Пăвать, туллать, муталать.
Кушак каллех ват Вупăр,
Пăхма ытла тăрлавсăр.
Милке çине утланать,
Çĕрпӳ паттăр çумĕпе
Хăй çулĕпех ыткăнать.
Ват Кирĕшмет Вупăра
Кĕтсе илет йăвара,
Кĕрсессĕнех ыталать,
Çурăмĕнчен ачашлать.

Пăрçа хытă çыртнăран
Вупăр карчăк шарт! сикет.
Кирĕшмете янахран
Пуçĕпеле лектерет.
Капан шăлне çавăнтах
Хуçса хурать хăрăкран.
Кирĕшмечĕ тарăхать.
Чармак куçĕ хĕм сапать:
— Эс манран-и мăшкăллан,
Куç умĕнчех ашкăнан?!
Тухса тасал йăваран,
Савин мар эс паянтан!
Вупăр хытах есĕклет,
Кирĕшмете хирĕçлет:
— Хăвалатăн? Вăт çапла
Тав тăвасшăн эс мана?
Эп мĕн чуҫтĕ вăй хутăм,
Сан тăшманна тĕп турăм,
Кай енелле тинкерсен
Шартах сикет Кирĕшмет.
Вупăр уçнă çул-йĕрпе
Сывлăш пырать кĕрлесе,
Улăп паттăр карăнса
Илет тарăн сывласа.
Улăп тăрать, утланать,
Вут хĕçне те кăларать.
Ирсĕр туйрĕ самантрах —
Улăп çитет йăвана.
Çĕр айĕнчи çул çинче —
Çĕрпӳ паттăр ут çинче.
Вăт Кирĕшмет — кăн-кăвак:
Тарăхнипе кускалать,
Çилли хытă хыпнăран
Тем те калать Вупăра:
— Эс мана тĕп тăвасшăн,
Ман пурлăхпа савнасшăн,



Çавăнпа та вĕсене
Çул кăтартнă ман енне.
Вăт Вупăра Кирĕшмет
Тытса лăскать çӳçĕнчен.
Вупăр карчăк та вара
Ана чавать питĕнчен.
Улăпĕ те пикенсе
Пĕрех сулать хĕççипе.
Хӳме пуçлать ишĕлме,
Ерипелен ирĕлме.
Çав вăхăтрах Вупăра
Пăрçа пуçлать кăшлама.
Усал пуçлать хыçăнма.
Хыçăннă чух вăт пăрçа
Кирĕшмет çине ыткăнать.
Çĕвĕ айне пытанать.
Шăлĕсене тасатать.
Кирĕшмет асам туйнпе
Тивретесшĕн Улăпа.
Çав вăхăтрах пăрçи те
Çыртса илет чарсăрла.
Туя лекмест Улăпа.
Тулли уйăх хăпарать.
Улăп çулне çутатать.
Вăт Кирĕшмет ахлатать,
Ним тума вăл аптăрать,
Куçран калать Вупăра:
— Пулăш мана йывăрта!
Кирĕшмете хĕрхенсе,
Вупăр çӳçне вĕçтерсе
Уйăх патне вирхĕнет.
Çулне тăсать çил касса.
Уйăха вăл тапăнать.
Кышламашкăн тытăнать.
Уйăх çути çухалать,
Сĕм тĕттĕм, ним курăнмасть.

Кирӗшмечӗ саванать,
Ашра ҫапла шухӑшлать:
«Ҫак Улӑпран тӗттӗмре
Вутчуль пулать — сисмест те».

Ҫав вӑхӑтрах читлӗхрен
Телей-ҫыру ялкӑшать,
Хӑй ҫутипе ниҫетрен
Улӑпа ҫул кӑтартать.
Читлӗхрен ҫут тухнӑран
Ват Кирӗшмет тарӑхать,
Шур туйипе ҫаваншӑн
Читлӗхе вӑл ҫапасшӑн.
Анчах пӑрҫа ҫыртнӑран
Читлӗхе ним тӑваймасть.

Улӑп паттӑр сывхарать,
Ват Кирӗшмет кускалать,
Урлӑ-пирлӗ пӑхкалать,
Туртса илет туйине,
Пеме тӑрать тӗллесе.
Анчах пӑрҫа ҫыртниччен
Туйӑн ӳкет ҫӗрелле.
— Эс те Улӑп майлӑ-и,
Эсӗ ҫакна маннӑ-и? —
Тет те асам туяна
Тытса хуҫать ҫурмаран,
Хӑй шӑтӑка пытанать.
Курать: Ҫӗрпӳ сывхарать.
Кирӗшмет час хӑй ҫулне
Улӑштарать. Ун умне
Сиксе анать Сикпӑрҫа.
Ҫулне татать — халь ҫын та.
Кирӗшмет те кай енне
Тарма тӑрать аптраса,
Улӑп паттӑр ун умне
Тухать хӗҫпе хӑмсарса:
— Тинех лекрӗн, Кирӗшмет,

Вилме маннӑ шеремет!

Улӑп лӑскать усала,
Кирӗшмете, аскӑна.
— Мӗнле чулсем ман умра?
Лешсем мӗншӗн купара?
— Умри чулсем — шур чулсем,
Купарисем — вутчульсем!

Сикпӑрҫари ҫут шӑрҫа:
— Суять,— терӗ тарӑхса.—
Шурӑ чулсем — чӗрчунсем,
Йывӑҫ-курӑк — вутчульсем.

Тӑшман умрах суйнӑран —
Хӑлха чикки ҫавӑнтах.
Улӑп лӑскать усала
Кӗҫех чунӗ тухмалла.
— Ан вӗлерӗр тархасшӑн,
Асамлӑха сиретӗп.

Ват Кирӗшмет туйине,
Паҫӑр хуҫса пенине,
Туртса илет хӑй енне
Ҫыхӑнтарса ик вӗҫне.
— Пӑлтан-пултан хушнипе,
Алри туя тулкишпе
Мӗнпур асам сирӗлтӗр,
Чулсем, пурте чӗрӗлӗр!

Ак тамаша! Вӑр-варах,
Пӑхса тӑнӑ вӑхӑтра,
Чулӗсенчен ҫын пулчӗҫ,
Улӑп тавра пухӑнчӗҫ.

Умри тӗнче ешерет,
Кичемлӗхе пӗтерет.
Читлӗх Улӑп аллинче,
Телей чӑваш хушшинче.



# *Вăтăр улттăмĕш юрă*

## ПАТТИ ХУН ЧĂВАШ ÇĔРШЫВНЕ ТАПАННИ

*Чăвашра халăх телейлĕ.*
*Анчах çав пурне те килĕшмест, вĕсем Улăпран хăтăласшăн. Улăпа вĕтерме Киев аслă кĕнеçне, Патти хуна тархаслаççĕ. Патти хун Паштан паттăрпа Чăваш çĕрĕнче. Улăп Паштан паттăрпа çапăçать, ăна çĕнтерет.*

Ан кулянăр, ваттисем,
Пурнăçпала шурнисем.
Вилĕм кунта пулмасть тек,
Парахăçа тухнă тет.
Çыру-телей халăхра,
Ырă пурнăç Чăвашра.
Çавăнпа чăваш савăнать,
Çиме пустав тăхăнать.
Вĕр çĕн атти-пушмакки,
Урана шывсем яманни.
Выльăх-чĕрлĕх картишпе,
Пыл-çу тăрать каткипе.
Тĕлĕнмелле айрисем.
Тип аш çисе ÿснисем.
Çава тухсан вĕсене
Çĕн çунана кÿлмелле.
Хĕл ларсассăн кашнине
Урапана тĕртмелле.
Çула тухсан уй-хире
Вĕçен кăйкăр темелле.



Тыр-пул ÿксе пулнипе,
Пур ĕç ăнса пынипе
Пура тулли тыр-пулсем,
Çÿпçе тулли çипуççем.
Уяв çитсен ĕçкĕре.
Мал енче те кай енче.
Кĕрекере пуш вырăн,
Вăл чапли те пит капăр.
«Улăп валли» ку теççĕ.
Курка тытса юрлаççĕ.
Улăп паттăр, Улăп паттăр, çак ĕçкĕре çук,
Вăл Пăлхарта, вăл Пăлхарта, Нухрат патĕнче.
Халăха вăл, халăха вăл унта манас çук,
Халăх кăна, халăх кăна унăн чĕринче.
Хисеплетпĕр, хисеплетпĕр Улăпа эпир.
Тав тăватпăр, тав тăватпăр, халь ăна эпир.
Халь çак ĕçке килес пулсан — пушă вырăн пур.
Çĕр витреллĕ çĕн пичкере симпыл сăрн пур.
Çуркуннепе сарпикесем урам хушшинче
Каска çинче юрă хывса çапнă шур пире.
Çĕр çырлн пек пиççе çитнĕ хĕрĕн çÿпçинче
Икçĕр сÿре шур пир пулнă теççĕ кашнинче.
Каçалапа ял варринчи йăмра айĕнче
Тĕр тĕрленĕ чăваш хĕрĕ тантăшĕсемпе.
Тĕр тĕрленĕ пурçăн çиппе, савăннипе-çке.
Улăп паттăр сăн-сăпачĕ тĕрре ÿкнĕ те.
Кас пулас чух херупраççем вăййа пухăннă.
Каччисем те килте ларман, вăййа хутшăннă.
Ват уйăхăн ват чĕри те хумханса тăнă,
Тепĕр чухне хумханнипе анма та маннă.
Йывăç пахчи çимĕçĕсемпе йăтăнса тăнă,
Кĕркуннепе пахча хуçи ăна пуçтарнă.
Лав-лавĕпе умлă-хыçлă Пăлхар хулине
Вăл çимĕçне сутма кайнă хăй ÿстернине.
Çав хулара тем чул хуçа, вĕсен тем те пур,
Укçа пултăр, кăмăл пултăр — паха тавар пур.

Çитмĕл çичĕ патшалăхран хуçасем ларнă,
Таварсене Атăл тăрăх вĕсем турттарнă.
Китай хуçин пурçăн пирĕ çитмĕл тĕсли-çке,
Ăна илме чăвашăн та укçи пур иккен.
Ирак хуçин лавккинче пур хура хутаççем,
Исĕм çырли, айва, улма, инжир, майăрсем.
Хазар хуçи кашни çулах кĕтĕвĕпе тухнă,
Уйра ӳснĕ айăрсене Чăвашра сутнă.
Вырăссем те çав хулана килнĕ сут тума,
Таварĕсем чаплă вĕсен — пĕлеççĕ сутма.
Чăвашсем те таварсене чаплă хăварнă,
Ютран килнĕ хуçа чунне ялан хумхатнă.
Хăш-пĕрисем Чăваш çĕрне юриех килнĕ,
Ун пеккисем чăвашсенчен питĕ тĕлĕннĕ.
Чăваш тăнлă пуçлă пулнă, тем те пĕр пĕлнĕ.
Хутсем çине, ылтăн çине сăнсем ӳкернĕ.
Хăш-пĕрисем ятарласа чулсем якатнă,
Унта вара чулсем çине çырусем çырнă.
Хура çăхан улпутсем,
Тата хăш-пĕр вайпутсем,
Халăх ырă курнишĕн,
Куçран пăхма маннишĕн,
Кӳтсе çитнĕ тарăхпа
Ылханаççĕ Улапа.
Улăп çулне татмашкăн,
Ăна сăтăр тумашкăн
Çĕрме пуян тавращсем,
Ик уралла кашкăрсем
Ӳпĕнтернĕ витресем,
Катка, чашăк-тирĕксем.
Çавах Улăп çул çӳрет,
Ташмансене вăл тӳнкет.
Хура халăх ыр курать,
Ăна ялан ыр сунать.
Аптранипе улпутсем,
Сĕнтĕр мăрса тусĕсем,



Çич ту çинчи Кийӳне
Тĕттĕм каç чух, кĕркунне,
Вăрттăн янă элекçĕ.
Çав элекçĕ кĕвĕçсе
Кийӳн аслă ĕмпĕвпе,
Улатимĕр ятлипе,
Çвяттуй ятне илнипе,
Сӳпĕлтетнĕ елчелле,
Суя нрсĕр куççульне
Тăкма пĕлнĕ Кийӳре.
— Аслă ĕмпӳ, хĕрхенсем,
Хута кĕрсем çвяттуйла.
Улăп пире çаратать,
Çарамаса хăварать.
Сахал мар сан маттурсем,
Улăпран та сатурсем.
Эс вĕсемпе Пăлхара
Çит те тĕп ту Улăпа.
Унщăн ахаль тумастпăр,
Куланайсем саплатпăр,
Сан самахран тухмастпăр,
Чăваш патши пулатăн.
Аслă ĕмпӳ çвяттуйла
Хуравланă ак çапла:
— Чăваш халăх пуставпа,
Кашнин атă урара.
Мана куçран пăхас çук,
Куланайне тӳлес çук.
Вырăс халăх ăстай та
Çĕрме пуян ылтăнпа.
Татах пуйма Пăлхара
Мĕншĕн вара каймалла?
Чăвашпа вырăс хушшинче
Туслăх пĕтĕ çавăн чух —
Çак сăмаха эс асту —
Мунчари шур чул çинче

Хăмла шăтса ӳсессĕн,
Хăмлн сăра тунă чух
Шурă чул пек путсассăн.
Хăмла ун пек путас çук.
Чул çинче те ӳсес çук.
Чăвашпа вырăс хушшинче
Туслăх пĕтмĕ нихçан та.
Аслă ĕмпӳ хуравĕ
Улпутсемшĕн — çивĕч хĕç.
Вĕсен кĕвĕç чĕрине
Касса çурать кашнинне.
Çавна кура улпутсем,
Пуяс тесен — пурсуйсем,
Самай тĕттĕм каçхине
Ватă ăвăс хӳттинче
Каварлăхпа хыпаççĕ,
Пĕр-пĕрине калаççĕ:
— Тĕпрен пуян çынсене,
Чаплă улпут йăхсене,
Çĕр кăвапи пулсан та,
Упрансан та ыр ятпа
Аслă ĕмпӳ Кийӳрен
Пулăшмарĕ нимĕн те.
— Халăх пире итлемест,
Улăп пире пĕтерет.
Аçта кайса кĕмелле,
Аçта пуçа чикмелле?
Пире хальхи асапран,
Тен, хăтарĕç тухăçран?
Унтах Патти хун та халь.
Супетей те çавăнтах.
Патти пуçне çавракан
Евчĕ кирлĕ пире халь.
Сĕнтĕр марсан чĕлхине
Шуйттан тупса çакнă тен,
Çампа тем те кастарать,



Такам пуçне çавăрать.
Патти хунпа калаçма
Ана ярар тухăçа,
Сĕнтĕр мăрса çул-йĕрне
Пĕлтерер мар никама,
Суя сăмах илĕртме
Юри сарар халăхра.
Сăмах пултăр ак çапла:
Кăмăллă хĕр тупманран
Сĕнтĕр мăрса авланман.
Халь хĕр шырать тулайра.
Ашшĕ ятне каласан
Ана такам хĕр парĕ,
Асне-тăнне кăтартсан
Хун хĕрне те çураçĕ.
Сĕнтĕр мăрса çич ютра,
Кĕрт йытти те — вăтанмасть,
Патти хунпа якалса
Ĕскĕртмелле калаçать.
— Ах, хĕвел хун, каçар мана, хăв чуруна,
Чăрсăр сăмах вакланишĕн эп сан умра.
Ах, уйăх хун, Нухрат патша — вăл тункатă,
Вăл сан пата парне ячĕ çак хутаçпа,
Вата сыснан хуртлă пуçне ай сарăмне.
Мĕнле мăшкăл! Чăтма йывăр ун кулăшне.
Эс — аллах пек. Пирĕн патша, Нухрат патша,
Йӳтеленчĕ Улăп хыççăн пĕрмай кайса.
Улăп ăна мĕскер хушать, çавна тăвать.
Сана хурлать. Тем те калать, ăна савать.
Çын умĕнче Улăп санран хыт мăшкăллать.
Уй качаки, пыйтлă çăхан тесе калать.
Эс Чăваша çитсенех
Пăлхар аслă хапхине,
Йăлт хурăçран тунине,
Çапатпăр та вататпăр.
Ярн уçса яратпăр.

Улăпа тĕп тусассăн
Хунсен хунĕ пулатăн.
Эпир пурте Пăлхарта
Хисеплесе яланах
Сана йăтса çӳрĕпĕр.
Саиран эпĕ, Паттн хун,
Çут тĕнчери ырă чун,
Аллахран пек ыйтатăп:
Чурусене пулăшсам,
Пире пĕтме ан парсам.
Хансен ханĕ, Паттн хун,
Эсĕ маншăн аллах пул:
Нухрат патшан пĕр хĕрне,
Унăн ячĕ Саріне,
Улăп тăшман арăмне,
Мана, Сĕнтĕр мăрсана,
Кăмăл туса халалла.
Паттн каять тарăхса.
Вăрçса калать Мăрсана:
— Сана вăл мар, саламат
Кирлĕ паян ман патра!
Нухрат хĕрĕ Сарине,
Улăп паттăр арăмĕ,
Çĕтмах пахчи чечекĕ,
Аллахăн ыр шерпечĕ
Терĕн мана шантарса.
Савăнтартăн эс мана.
Улăп паттăр арăмĕ,
Уйăх сăнлă Сарине,
Манпа йывăр пулатех,
Ачи — йытта юратех.
Эпĕ Паттн, хунсен хун,
Ман пекки çук ырă чун.
Пăтă куçне çнекен
Теççĕ мана тĕнчере.
Утап — тĕнче чĕтренет,

Сурап — халăх тĕпленет.
Эпир иккĕн Паштанпа
Тĕп тăватпăр чăваша,
Кайран Улăп паттăра...
Параппан нултăр ун тирĕ!
Ӳтне-пуçне йыт çитĕр.
Итле, визир, эп сана
Ĕç хушатăп паянах:
Чăваш мулне тустарма,
Сар хĕрсемпе вылямма
Çарпа тухан ман хыçран.
Хăçан тетĕн? Ыранах!
Аллах мана вăй патăр,
Тасамарсем тĕп пултăр!
Çапах Паттн çӳçенет.
Чатăрĕнчен тухиччен,
Патша патне кайиччен
Чĕркуçленет Паттн хун,
Кĕл тумалли вăхăт ун.
— Эсĕ вилнĕ пулсассăн та, Калай хун,
Ан ман мана, вĕри çулăм, Калай хун.
Аçу кăвак чул сан, Калай хун,
Аннӳ — хĕрнĕ хурăç, Калай хун.
Кĕлтăватăп сана, Калай хун,
Эп тăшмана аркатсассăн, Калай хун,
Эп чăвашран таврăнсассăн, Калай хун,
Аш кăмăлпа сана парап, Калай хун,
Тихан ăшри çуне, Калай хун.
Эсĕ мана телей парсам, Калай хун,
Урхамаха çунат парсам, Калай хун,
Алăма та сулăм парсам, Калай хун,
Ватă пуçа ăстăн парсам, Калай хун.
Аллах!
Аллах!
Аллах!
Паттн хуна йăтса тухрĕç.

Лаши çине утлантарчĕç,
Кукăр хĕçне çумне çакрĕç,
Паштан енне çул кăтартрĕç.
Тĕпсĕр тарăн мăн çырмара
Вăл Паштана çапла йыхрать:
— Э-э! Э-э! Паштан паттăр!
Эп — Патти хун! Кĕтеп сана, паттăр!
Эс ман умма тухма васка,
Чăваш çĕрне пĕрле каяр!
Тĕпсĕр çырма варринчен,
Катмар чулсем хушшинчен
Сиксе тухрĕ арăслан,
Вăл пĕтĕмпех ылтăнран.
Паштан паттăр уласан,
Чĕринсемпе çĕр чавсан
Чăвашалла кастарчĕç,
Пĕр лапамра чарăнчĕç.
Унта, çаран пуçĕнче,
Кÿме юпи лартрĕç те
Тултан карчĕç тирсемпе,
Шалта сарчĕç кавирне.
Унтан Пăлхар хулине,
Нухрат патшан тĕп килне
Хуса ячĕç йыхравçа,
Капан шăллă Ураçа.
Ураç çитет Пăлхара
Мăн сăмсине каçăртса,
Калать чăваш патшине
Кастарса йыт сассипе:
— Хăнуна эс, хунсен хунне, Патти хуна,
Хĕвел хунне, уйăх хунне, Патти хуна,
Уипа пĕрле чи паттăра, Паштана та,
Паттăрсенчен чи паттăра, Паштана та,
Хирĕç тухса кĕтсе илтер, Нухрат патша,
Нухрат тăмпай, эс паянтан патша та мар.
Эс паянтан хунсен хунĕн чури анчах,



Çапла калать хунсен хунĕ таса Патти,
Çапла калать Паштан паттăр. Хăлхуна чик.
Хĕрĕх те пĕр ват юманран çуна тутар,
Хĕрĕх те пĕр ăйăра эс халех пустар.
Вĕсемсĕр пуççăр Çилçуната шариклеттер,
Аш çăвĕпе нкерчсене лайăх сĕртер.
Шерпетне те, симпылне те хатĕрлеттер.
Эс çавсене çĕр çунана тиеттерсем.
Эс вĕсене хăвах леçен. Çавна асту:
Кавир сарма, апатланма, ура çума,
Таш ташласа е юрласа хунăн чунне уçма
Улăп арăмне, Саринене, манпа яран.
Ун çнпуçĕ чаплă пултăр хун хĕрĕнчен.
Нухрат патша вăл хушнă пек тумасассăн,
Паттипе эс тилĕ вăййи вылясассăн,
Сан Пăлхартан Чĕмпĕрти пек чул та юлмĕ,
Тĕп хуларан кĕл купнсем кăна юлĕ.
Çур халăху пуçне хурĕ, ан ман çавна,
Пуç хуманнн — чура пулĕ, ан ман çавна.
— Эпĕ, хун пек, çăхан пулнă пулсан,
-Патти хун пек, кашкăр пулнă пулсан,
Йыт чĕлхÿне тататтăмччĕ санне паян,
Ик куçна та шăтараттăм санне паян.
Чăваш — йăваш, айванран мар, ыр кăмăлран.
Чăваш халăх хăравçă мар, сатур вăйран.
Паттн хуншăн йыхравçăна айăпламасть,
Йыхравçăна хăй çĕрĕнче хĕн кăтартмасть.
Хăв асапна хăвах курăн Эсĕ кунтан,
Ман хыçран ут, кайса пăхар халь кантăкран.
Улăп паттăр Патти хунпа йĕк Паштана
Тăн кĕртнине кăтартам-ха халь эп сана.
Авă унта — Макаç лаппи. Куратăн-и?
Çав лапамра Улăп паттăр. Куратăн-и? —
Терĕ патша йыхравçăна мăн пÿлĕмрен.
Ураç сиксе чĕтрет мĕн курнинчен,
Аслати пек Улăп сасси янранинчен.

— Йыхрав ятăр патшана,
Çаванпа эп çаканта!
Ма тухмастăр ман пата? —
Улăп ыйтре тăшмантан.
Лешсем сиксе тарсанах,
Хĕççисене çаксанах
Кăшкăраççĕ ăмăртса,
Куçне-пуçне вылятса.
— Çапăçма е парăнма
Эсĕ антăн лапама?
— Эпĕ килтĕм лапама
Парăнма мар, çапăçма! —
Терĕ Улăп тарăхса
Аслатиллĕ уç саспа.
Паштан паттăр лăш вĕрет —
Чукун итем курăнать.
Улăп паттăр ал çĕклет —
Тимĕр итем хывăнать.
Паштан тимĕр итемре
Урлă-пирлĕ кускалать.
Патти хун ун хÿттинче
Каçăр сăмса, чăнах та.
Патти хунăн кукăр хĕç.
Улăпăн та пур вутхĕç.
Кукăр хĕçрен вутхĕçĕ
Чăнкăрт туса çеç илчĕ.
Вутхĕçĕнчен кукăр хĕç
Виçĕ татăк пулчĕ-мĕн.
Паштан паттăр кăшкăрсан
Çутă тĕнче чĕтрерĕ,
Улăп çиме ыткăнсан
Çырта-çырта илейрĕ.
Анчах Улăп тумтирне,
Кукамăшĕ панине,
Паштан шăлĕ витеймест,
Улăп çавна им сисмест.



Улăп сулать вутхĕçне —
Хĕçĕ çиçет хĕмленсе.
Паштан пулать çурмаран,
Çавах ÿкмест ураран.
Те ылтăнран тăнăран,
Те ăмланса кайнăран
Паштан паттăр ирĕлет,
Хытсан каллех вăй кĕртет.
Пĕр-пĕринпе пĕрлешет.
Çапăçмашкăн чарăнмасть.
Сике-сике кăшкăрать,
Асав шăлне кăларать.
Улăп çиме ыткăнать,
Майран çыртса усăнать.
Пăва-пăва пĕр-пĕрне
Тач ÿкеççĕ çĕр çине.
Каллех сиксе тăраççĕ,
Пĕр-пĕрине тарăхса
Çавра-çавра çапаççĕ.
Çич сухрăма çитиччен
Тимĕр итем тĕпренет,
Вутăн-хĕмĕн сирпĕнет.
Улăп паттăр Паштана,
Çичĕ ютри тăшмана,
Хăйне çыртма тăрнччен
Ярса илет хÿринчен.
Пĕр хутчен мар, çич хутчен
Çавра-çавра çапать те
Ÿпĕнтерсе вырттарать,
Унтан чуне кăларать.
Ярса илет Паштана,
Явакласа хÿререн,
Пуçĕ тавра çавăрса
Ыткăнтарать инçете,
Каракума çитмелле,
Унта çĕрсе пĕтмелле.



# *Вăтăр çиччĕмĕш юрă*

## УЛĂП КĂТРА ĂРАТНЕ ÇĂЛНИ

***Чăвашсен аслă чӳке. Чӳк пуçлăхĕ Улăп. Пăлхарта вĕрмече улăпĕнчи çамрăксен ăмăртăвĕ. Улăп ывăлĕ Уртем маха тухать, парне илет. Улăп Кăтра халăхне хупăрлакан çич ютсене çапса аркатать. Кăтра валли кар çавăрать.***

Темел тени чĕнтĕрлĕ,
Арки вĕçĕ кĕмĕллĕ[1].
Эрчен-мерчен Чĕмпĕрте,
Эпир хамăр хăш енче?
Эпир хамăр çав çĕрте,
Чӳк керменĕ умĕнче.
Паянхи кун — чаплă кун,
Кунта паян аслă чӳк.
Çавна пурте пĕлнĕрен
Аслă чӳке ирттерме,
Пӳлĕхсемпе калаçма
Чăваш килнĕ пур енчен.
Пӳлĕхсем те сахал мар,
Çĕре пĕрре çитеймест.
Чӳк керменĕ те капмар,
Хуралтуран çӳллĕрех.
Чӳк керменĕ çумĕпе
Мăн шыв юхать ерипе,
Шывĕ ытла тасаран

[1] Сутмалли юмах — Çăхан.



Тĕпĕ курнать аванах.
Чӳк керменĕ хӳттинче,
Мăн юханшыв хĕрринче,
Самăрлатса янăран
Кĕтӳ выртать тутăран.
Аслă ăславçă пулнăран
Аслă чӳкпуç Улăп халь.
Ĕçе тĕплĕ тунăран
Мухтавра вăл яланах.
Улăпри чӳк тумĕ тет,
Шир-Пăлхартан юлнн тет.
Аслă чӳкпуç вырăнче
Улăп тăрать хисепре.
Юрласа кĕлтăвать те,
Ик аллине çĕклет те
Çапла калать сынсене:
— Пӳлĕхсене юрама,
Кăмăлĕсене çемçетме,
Пире йăла хушнă пек
Кайса ăсăр Тан шывне.
Тан шывне, кăшт сиввине,
Тăрна куç пек тасине.
Выльăхсене сапрĕç те
Унтан çапла каларĕç:
— Выльăх тăр-тăр чĕтрере,
Мăнтурра та килĕшрĕ.
Улăп тăрать пуççапса
Тухăçалла çаврăнса.
Тăсать мăнчӳк кĕллине,
Авалтанах хунине:
«Эй, Мăнтурă!
Эй, Аслă Кепе турă!
Эй, Пихампар турă!
Эй, Çуткун турă!
Ытти турăсем те пире ан манăр.
Пирĕн хута кĕрĕр.

Сирĕнтен пуççапса ыйтатпăр.
Сирĕнтен тархасласа ыйтатпăр:
Ырлăх-сывлăх парăр пире,
Хĕй-хурсенчен çăлса хăварăр пире.
Тăшмансене пирĕн енне çулсем ан кăтартăр.
Çумăрĕ те çутăр кирлĕ вăхăтра.
Юрĕ те хĕл каçа хулăм пултăр уйра.
Пăр ан çаптăр, ăш ан тивтĕр тыр-пула.
Хĕвелĕ те ăшăтса пăхтăр.
Тыр-пулсене çынтан çÿллĕ ÿстерĕр.
Пучахĕсем партас пек пулччăр.
Тĕшшисем йĕкел пек пулччăр.
Çитмĕл çичĕ йăпăр сире паратпăр,
Çитмĕл çичĕ вăкăр сире паратпăр,
Çитмĕл çичĕ така сире паратпăр.
Сире валли çитмĕл çич хуран шÿрпе пĕçеретпĕр,
Сире валли çитмĕл çичĕ хуран пăтă пĕçеретпĕр,
Сире валли çитмĕл çичĕ катка чăкăт хатĕрлетпĕр.
Çитмĕл çичĕ пичке шерпет хатĕрлетпĕр.
Çырлахăр!
Çырлахăр!
Çырлахăр!»
Çавăнтах йăла хушнипе
Каркаланса тăчĕç те
Мăнтурă тавра çаврăнчĕç,
Çак юрра та юрларĕç:
«Çаврăнса пыракан Тан шывĕ —
Сыпса пăхсан симпыл тути калать-çке.
Валем вырăнне тĕме ларинччĕ.
Çаврăнса пыракан Тан шывĕ —
Сыпса пăхсан эрех тути калать-çке.
Валем вырăнне — тулли пÿлмеччĕ».
Халăх çиет шÿрлине.
Есет мăнчÿк сăрине,
Юрлать уйăх анниччен,
Чÿк керменне хупиччен.



Турăсене çитерме
Такса хăварчĕç апатсем.
Улăпваскать Пăлхара,
Ун халь килте пулмалла.
Ыран уяв. Вĕрмиче[1].
Çав уявра, ирхине,
Ун пулмалла ачипе.
Унта ялан савăнăç,
Вăйă-кулă, ăсталăх,
Амăртусем — тĕслĕрен,
Суту-илÿ пур çĕрте.
Вунçич çулхи ачасен —
Мăйăхĕсем мамăк çеç —
Кашни çулах мухтанма
Çав куи юлать асĕнче.
Нухрат патша вĕсене,
Йĕпе-сапа кунне те
Çĕн хунава пуçтарать.
Çар уттипе уттарать.
Ун вăйăйне вылятать.
Нухрат патша уявра
Çулĕ нумай пулсан та
Пăхать ăмăрткайăкла.
Улăп паттăр сылтăмра,
Ват патшапа юнашар.
Сулахайра Сарине,
Хăй хĕрĕпе. Силпипе.
Патша сулать аллине,
Параппан пуçлать ташшине.
Тимĕр алăк уçăлать.
Çамрăк хунав курăнать.
Пурте арçын ачасем.
Пурте яштак — хурăн пек.

[1] Вĕрмиче — аслă чÿк кунĕ уяв. Анне калакă тăрах, ăна кашни 11 çул хыççăн кĕркунне ирттернĕ. *(Авт.)*

Параппан сасси янăрать,
Вăрçă ваййи пуçланать.
Кашни йĕкĕт аллинче
Вĕренмелли хĕçсем çеç.
Пĕр-пĕрине касаççĕ,
Çавăнтах чиксе илеççĕ.
Патша çÿлти вырăнтан
Лайăх курать — кам малта.
Уртемшĕн вăл хĕпĕртет:
«Çапăçать вăл йĕркеллех,
Хам вĕрентнĕ меслетпех,
Нумайăшне çĕнетсе».
Çавăнтах çĕн хунавсем,
Çиеле тухнă йĕкĕтсем,
Карах тăчĕç ĕретпе.
Чи нисетри парнене
Кашни перет ухăпа.
Тĕл — илемлĕ те паха,
Тÿмерен кăшт пысăкрах,
Анчах вăл та аякра —
Тивретмешкĕн çăмăл мар.
Уртем кăна парнене
Сирпĕнтерчĕ çĕрелле.
Халăх мухтать Уртеме,
Патша савнать çавăншăн.
Нухрат патша хастарлă,
Хушать çамрăк хунава
Кĕме çавра кермене.
Унта тĕрлĕ парнесем,
Çитмĕл çичĕ тĕслисем.
Суйласа ил вĕсенчен
Хăшĕ чуна туртнине.
Çамрăк ăру керменрен
Тухсассăнах парнепе
Иртрĕç патша умĕнчен
Парнисене çĕклесе.



Парне тăрăх çавăнтах
Патша пĕлчĕ çаксене:
Вĕсен сумлă ĕмĕтне,
Вĕсен ăшри туртăмне,
Вĕсен ăстăн картăшне.
Улăп ачи Уртем те
Çав пÿлĕмре кăмăлпа
Парне илнĕ суйласа.
Анчах Нухрат патшана
Ун пек парне килĕшмест.
Тĕртсе калать Улăпа:
— Сан ачуна, Уртеме,
Кĕлмĕç пурнăç илĕртет.
Шутласа пăх пуçупа:
Патша юнĕ вĕт унта.
Аçта хурас намăса?
Ĕнтĕ калĕç таврара
Тулайра та çакăн пек:
«Пăлхар патши ратĕнче
Кĕлмĕç юнĕ вăй илет.
Ун пек юнпа малашне
Кам пĕрлешме килĕшет?
Пăх-ха, ытти йĕкĕтсем,
Ман керменре пулнисем,
Парне илчĕç — мĕнлине?
Пулас ертÿç çĕлĕкне,
Пулас усламçă паллăхне,
Пулас ăсчах тумтирне.
Сан Уртему... Пĕр сăмах:
Ан тĕл пултăр вăл манпа!
— Эп вĕсене анчах мар
Асăрхарăм. Çакна та:
Унта, пĕрин аллинче,
Пулас патшан туйине.
Тĕрĕслĕх çук çиллĕхре,
Каласса пăх эс хăйпе.

Ун хуравне ăнкарсам,—
Терĕ Улăп патшана.
Уртем патша умĕнче
Хурав тытать çакăн пек:
— Мана, патша, хуравшăн
Ан çилленĕр тархасшăн.
Йăнăшрăм-тăк, каçарсам.
Пурнăç сакки сарлака,
Ун çийĕ те — яка мар.
Çавăнпа çак хутаçа
Эпĕ илтĕм кăмăлпа.
Çав хутаçра ак çаксем:
Çăкăр сăмси. Кĕнеке.
Çăкăрсăр эп анчах мар,
Тĕнчери пур патша та,
Тен, турă та пурнаймасть.
Эпĕ — ача. Астăн та
Çампа манăн айван-ха.
Калас килет татăклăн.
Уншăн мана каçарăр.
Пурничен асли тĕнчере
Çăкăр кăна темелле.
Манри парне, иккĕш те,
Тухнă ăсчах аллиичен.
Хăй те кĕлмĕç пулсан та
Кĕнекинче ăстăнсем.
Çав ăсчаха ăнлантăм:
Хырăма тыт тутăра,
Вĕренинне — пусăнта.
Мĕнпур халăх уявра
Каларĕçĕ ак çапла:
— Уртем хуравĕ тĕрĕсех,
Вăл та хывнă ашшĕне!
Патша Уртем çамрăка
Пусран шăлчĕ юратса,
Анчах ашшĕ ывăлне



Ыталарĕ кăшт кăна.
Уртем тăван ашшĕпе
Пĕрмай пĕрле килĕнче.
Пушă пулнă вăхăтра
Унран ыйтать калама
Мĕн курнине, илтнине,
Аллипе мĕн тунине.
Ашшĕ уншăн савăнать.
Ашра кăна ялanах
Çапла калать час-часах:
«Ывăлăм ман — тимлĕхре,
Анкарасшăн пурне те».
Уяв иртсен Уртеме
Хăйпе лартать юнашар,
Кайран пуçлать сăмахне
Çар вăйĕнне асăнса.
— Санăн,— тет вăл сăмах май,—
Сывлăху та начар мар.
Çителĕклĕ вăй-хал та,
Пуçу та сан пушă мар.
Йăрăлăху пуç таран.
Анчах вăрçă уйĕнче
Вĕсем санран пăрăнĕç.
Çавна уяв кăтартрĕ.
Эсĕ ун чух йĕке пек
Çаврăнтăн темле те.
Сан йăрăлăх ун пекки
Ик сехете çитĕ-ши?
Ан ман çавна нихçан та:
Вăрçăн — хăйĕн меслечĕ,
Вăрçăн — хăйĕн хăюлăх,
Вăрçăн — хăйĕн пуççăрлăх,
Вăрçăн — хăйĕн вăрттăнлăх,
Вăрçăн — хăйĕн хăрушлăх,
Вăрçăн — хăйĕн куççулĕ.
Кашни халăх çар çынинн

Хăйне майлă çĕнесси,
Хăйĕн айне тăвасси.
Тăр-ха, ывлăм, ман ума,
Ана туян манран та.
Эс — çар сынни — чăвашран,
Эпĕ пулам — тутартан.
Ну, пуçлăпăр «тытăçма».

Ачипе ашшĕ хушшинче
«Çапăçу» пырать ывниччен.
«Тутар» пĕлет сыхланма.
Чăваш сикет кашкăрла,
Анчах та вăл яланах
Çĕре ӳкет кĕлте пек.

Вĕсем каннă вăхăтра
Ана çинче çăхансем.
Çăхан патши çавăнта
Сăмах тăсать савăнса.
Улăп илчĕ ăнкарса
Ун сăмахне — пурне те.
Нумай ларчĕ чĕнмесĕр,
Уртемрен куç илмесĕр.
Уртем унтан тĕлĕнчĕ.
— Эсĕ ĕнтĕ ача мар,
Хура-шурра уйăран.
Пурнăçăн пур хăй йăли,
Шăла сыртса чăтмалли.
Çавăнпа та эп сана
Астăн парап шантарса.
Темле йывăр пулсан та
Çухатмасăр ăстăнна
Хăвна тытсам алăра.
Сисетĕп эп çавна та:
Ывăлăм, сан еккӳне
Куçнă аттен хавалĕ,
Унтах аннӳн ăсчахĕ.
Ан çухат эс вĕсене.



Паллаштартăм сана эп
Эмел курăксемпе те,
Çиме юрăхлипе те.
Анчах тĕнче чĕлхине
Ĕлкĕреймерĕм вĕрентме.
Эсĕ уншăн ан кулян.
Ана вĕренĕн кайран та.
Кунти çăхан ушкăнче
Пулчĕ çăхан патши те.
Пĕлетĕн-и, мĕн терĕ
Çăхан патши ун чухне?
«Хура тинĕс хĕррине
Ыран вĕçер ирхине.
Унта Кăтра раттине,
Вирьял енчен куçнине,
Тăшман пырса çулăхнă,
Хаяр вăрçă пуçланнă».

Ман çавăнта пулмалла,
Тăшмана тĕп тумалла.
Çĕр амăш — ман кукамăй,
Сăмах панă эп ăна:
Халăх хутне кĕмешкĕн,
Ялан унпа пулмашкăн.
Эс те пулсам çавăн пек,
Халăх хутне ялан кĕр.
Тăван халăх чи пахи,
Тăван çĕршыв чи хакли —
Тăван çĕршыва сыхлама
Ан шеллесем пуçна та.

Килтен Улăп паттăра
Ял-йышĕпе пухăнса
Асатаççĕ хурланса.
Ашшĕ калать татăклăн:
— Аслаçу ватă, хăв куран,
Çулĕ пусать çĕрелле.
Эс пулмасан çакăнта

Хăв юратнă аннĕрс,
Таса чунлă йăмăкна
Сыхлаканни кам пулать?
Эсĕ кăна. Шаннăран
Вĕсене санна хăварап.
Уйрăлатпăр. Сыв пулăр!
Улăп ĕнтĕ ут çинче,
Канлĕ пурнăç çук ĕнтĕ.
Çулне тытать анăçа
Кăтра патне васкаса.
Кăтра çĕрне курсанах
Улăп утне тăратать,
Унтан хыттăн кăшкăрать:
— Эй, тăвансем, тантăшсем,
Атăлçи енчи чăвашсем,
Эпĕ — Улăп! Сирĕнпе!
Парăнмăпăр ютсене!
Улăп тăшман хушшинче,
Вутхĕç унăн аллинче.
Хĕçне сулать — çунтарать,
Тăшмансене тустарать.
Улăп пиншĕ пўртĕнче,
Кăтра Улăп умĕнче.
Калаçать вăл Улăппа,
Тулса килнĕ кăмăлпа.
— Сана, паттăр, пурсăмăр
Тав тăватпăр чĕререн.
Улăп, кунта юлсамăр,
Пирĕн ĕмпў пулсамăр.
— Кăтра пиншў! Тăвансем!
Атăлçи енчи чăвашсем!
Ĕмпў пулма ан сĕнĕр,
Ман сăмахпа килĕшĕр.
Эпĕ кунта юлмастăп,
Кунтан часах каятăп.
Арăвна та, сана та



Пĕрле ертсе каймалла.
Анчах кунти çĕршыв та
Кунта юна тăкнăран
Сирĕншĕн вăл пит паха.
Çерем уçăр малалла,
Ĕлĕкхи пек, Чăвашра.
Асатте те çакăнта
Пуçне хунă халăхпа,
Сирĕнпе тан ĕçленĕ,
Паттăрланса çапăçнă.
Туса пĕтмен çĕн кара
Пĕрле тытса çаврăпăр.
Çакă çĕн кар ячĕпе
Плиска чапĕ упрантăр.
Улăп сулать вутхĕçне
Сăрт тăррине татмалла,
Касăлнă сăрт тăррине
Йăтса анать ик алпа.
Сăрт тăррине вакласа
Чул хатĕрлет мăн карлăх,
Чулĕсем те яп-яка
Ятарласа тунăран.
Çурмаш сăртăн тăррине
Кар çавăрать чаплине.
Таçтан курнать çĕнĕ кар.
Савăнтарса ялтăрать.
Улăп паттăр йăхăрпа
Тавăрнас чух Чăваша
Çапла калать хурланса:
— Эсир ĕнтĕ нимсĕр мар.
Çĕн кар сыхлĕ тăшманран.
Кунта тăшман çитсессĕн,
Ана хирĕç кар тăрăр,
Çапа-çапа аркатăр.



## *Вăтăр саккăрмĕш юрă*

### УЛĂП ЭСРЕМЕТПЕ ÇАПАÇНИ

***Çилçунат анăçран таврăннă чухне çул çинче тахăлать. Улăпа Чăваша тăшман тапăнни çинчен пĕлтерет. Улăп Эсреметпе çапăçать. Эсремет Улăп айне пуласине сиссе Чăвашран тухса тарать.***

Тумил-тумил тумтирпе,
Хура сăран атăпа,
Ларсан ларать касмакла[1],
Кăшкăрать вăл шуйттанла.
Çавăнпа пуль Çилçунат
Тулхăрать те такăнать.
— Эх, Çилçунат, Çилçунат,
Аяккунта ик çунат.
Çавах эсĕ такăнтăн,
Виçĕ хутчен тулхăртăн.
Сана япăх пăхрăм-и?
Сĕлĕ сахал патăм-и?
Эпĕ саншăн йывăр-и?
Тен, эс Кăтра ăрăвне
Пулăшиипе ывăнтăн?
Аслă Чăваш çĕршывне
Çитессине шанмастăн? —
Улăп ыйтать хуйхăрса.

[1] Сутмалли юмах.— Çăхан.



Çилçуната тăратсах.
Урхамахĕ иленет.
Паттăрпала вăл пуплет:
— Уншăн мар эп такăнтăм.
Виçĕ хутчен тулхăртăм.
Ик чĕре ман карт турĕ,
Хытă туртса ыратрĕ.
Ахальтен мар çĕр чĕтрет
Аслă Чăваш çĕрĕнче —
Ирсĕр тăшман иртĕхет.
Çав хыпартан Улăпăн
Паттăр чĕри юнланчĕ.
Çилçунатăн та тӳрех
Юртти сич хут хутшăнчĕ.
Вăрман урлă каçрĕçĕ
Çăка çулçи çутипе,
Ял-ял витĕр тухрĕçĕ
Чăрăш хăйăн çуннипе.
Чăваш çĕрне тухрĕç те,
Улăп çакна курчĕ-çке:
Вăйпиттири йĕкĕтсем
Пурте вăрçă тумĕпе.
Тăшмансемпе çапăçма
Вĕсем çула тухнă-мĕн.
Улăп паттăр малтанах,
Пăлхар умне тухсанах,
Читлĕх енне вăскарĕ.
Çамрăк чĕри ыратрĕ.
Ылтăн читлĕх тĕпĕнче
Телей-сыру юн çинче.
Çапах та вăл Улăпа
Сăмах хушрĕ ак çапла:
— Чăваш çĕрне тутар çитнĕ.
Супетей тет ун ертӳçĕ.
Вăл шуйттана чунне сутнă
Сĕм касхине, çавăншăн вăл

Тĕшмĕшлеме алса илнĕ.
Çав алсапа кĕлтесенчен
Нӳкер тăвать çĕрте пĕр тет.
Пĕр капанран çĕр каçиччен
Măн çар тăвать уй туличчен.
Супетейĕн çарĕ сумсăр.
Ун сум вĕçне кам тытайĕ?
Çав ват кашкăр киленниппе
Хĕрхенес çук чăвашсене.
Тăшман сумсăр çарĕнче
Паттăр — пурĕ çичçĕр пĕрре.
Пĕр паттăрĕ — чи вăйли тет,
Унăн ячĕ Эсремет тет.
Çав Эсремет чуллă сăрта
Ытамлать те çантах вара
Тĕпреттерсе чулсем тăвать,
Сăр пек шыва ăшăхлатать.
Ку анчах мар, вăт çав усал
Тĕпсĕр тырне кăтăкласа
Çĕр айĕнче пытанмалла
Măн хулана çĕрле туртать.
Улăп калать: —Васкас пулать.—
Унăн чĕри хытах сурать.
Çилçуната вăл ачашлать,
Тăшман енне çулне тăсать.
Çул вĕçленсен çакна курать:
Тӳрем çинче ик çар тăрать,
Ертӳçĕсем хĕç кăларнă,
Хатĕр вĕсем çапăçмашкăн.
Ют ертӳçĕ — йĕк Супетей,
Харсăр вара урнă йыт пек.
Çарĕ умне тухса тăрсан
Сăмаххине çапла тăсать:
— Сан çарăнта мĕн чул паттăр.
Нухрат патша, каласамăр.
Ман халь вĕсем — çичçĕр улттă,



Пурте вĕсем урхамахлă.
Куратăн-и, епле ман çар?
Айта, нумай калаçар мар.
Нухрат патша, парăн мана,
Çавна пĕлтер пур чăваша.
Кунта эс мар, эпĕ хуçа!
Кутăнлансан — çнен пуçна.
Сан пуçунта ăстăн пулсан
Шутласа пăх: кама шанан?
Ахплат паттăр санпа. Юрать.
Ман çак пӳрне упран вăйлă!
Ват пуçупа, йӳтеннипе,
Çĕрпӳ паттăра кĕтетĕн эс?
Çăхан чавнă ун ик куçне,
Çавра пуçне шаккал çинĕ.
Кĕтен пуль-ха Сикпăрçана?
Вăл чура та халь Багдатра.
Улăпу сан аслашшĕпе
Кӳль тĕпĕнче пул апачĕ.
Эсреметпе, ман паттăрпа,
Çапăçмашкăн кам хăять-ха?
— Эпĕ! Эпĕ! — сас илтĕнчĕ,
Тăшман умне Улăп тухрĕ.
Эсремечĕ йăраланса
Тухса тăчĕ Улăп умне,
Хулпуççиччи пысăк сăртпа
Кăларасшăн Улăп чунне.
Улăп паттăр хăрамарĕ.
Вутхĕçĕпе сăрта касрĕ.
Пысăк сăртран иккĕ пулчĕ.
Супетейĕн сехри хăпрĕ.
Сăрт тăррийĕ йăвансанах
Унăн çарне ая турĕ.
Пин-пин нӳкер пуçне хучĕ.
Алра юлнă măн сăрт пайĕ
Селĕм тукшан Эсреметшĕн.

Çавăншăн вăл хыт савăнчĕ,
«Тукшанăм ман аван»,— терĕ,
Улăпа вăл çампа çапрĕ.
Улăп паттăр кусçусĕнчен
Вут-хĕм тухрĕ ялтăртатса,
Çав вăхăтрах ун сăмсинчен
Юнĕ юхрĕ шăпăртатсах.
Улăп çавна туймарĕ те —
Сулса ячĕ вăл вутхĕçне.
Хĕçсĕ татрĕ тукшан сăрта,
Вут чулĕнчен пулсассăн та.
Сăрт татăкĕ çĕре ӳкрĕ,
Эсремечĕ ай-ай! терĕ.
Ун урине сăрт татакки
Лапчăтнă-мĕн йывăр пирки.
Улăп паттăр Эсремете
Вутхĕçĕпе касма тăчĕ,
Йĕк ţăшманăн сехри хăпрĕ,
Урн вĕçпе сурса илчĕ,
Ун умĕнче çĕр çурăлчĕ,
Çав шăтăка усал сикрĕ,
Çĕр çурăкĕ питĕрĕнчĕ,
Çĕр айĕнчен сас илтĕнчĕ:
— Маншăн мĕн вăл Улăп паттăр?
Эп кунта чух халь вăл сурчăк.
Улăп паттăр çав вăхăтрах
Çĕре путрĕ пĕр самантрах.
— Тинех эсĕ алла лекрĕн,
Тăван çĕрӳ тупăк пулчĕ.
Эсĕ кунтан тухаймастăн,
Çут тĕнчене кураймастăн.
Улăп паттăр енчĕкĕнчен
Кукамăшĕн çӳçне илчĕ,
Сывлăш сукран антăхиччен
Çӳç пĕрчине аран чĕртрĕ.
— Кукамайăм, пулăшсамччĕ,



Çак йывăрта ан мансамччĕ,
Тăван халăх, ан ман мана,
Парсамччĕ эс вăйна-хална.
Çав вăхăтрах çĕр чĕтрерĕ,
Улăпăн та вăй хутшăнчĕ —
Мăн сăртсене аркатмалăх,
Тăшмансене тĕп тумалăх.
Улăп часах çĕре сирчĕ,
Эсремете ярса илчĕ.
— Улăп,— терĕ Эсремечĕ
Чăх чĕппи пек чĕркуçленсе.—
Эсĕ хĕçпе, эп пуш алпа,
Ку вăл вара çапăçни-и?
Ик сăрт ларать ав леш енче,
Вутчулĕнчен иккĕшĕ те.
Кам та кам çав чул сăртран
Пĕрре çапса хăйăр тăвать,
Çав çын пулать чăн-чăн паттăр,
Вăл мĕн хушать — çавă пултăр.
— Юрать,— терĕ Улăп паттăр,—
Эс каланă пекех пултăр.
Вутчуль сăрта эсĕ малтан
Çапакание. Эпĕ — кайран.
Вутчуль сăрта Эсремечĕ
Ик чышкипе шатлаттарчĕ.
Вутчуль сăрта кăшт лапчăтрĕ.
Анчах хăйăр вăл пулмарĕ.
Улăп паттăр сăрта çапрĕ —
Сăрчĕ хăйăр пулса юхрĕ.
Сехре хăпнă Эсремечĕ
Çĕр çурăкне каллех сикрĕ.
— Эпĕ урăх Чăваш çĕрне
Ĕнтĕ килмĕп ĕмĕрте те!
Çĕр айĕпе çулне тăсрĕ,
Ейӳ сăрчĕ вăрăмланчĕ.



# *Вăтăр тăххăрмĕш юрă*

## УЛĂП ВИЛĔМĔ

***Тăшмансем Асамçăсем пулăшнипе Улăпа вĕлереççĕ. Чăвашсен телей кĕнекине ĕнене чăмлаттарса яртараççĕ. Супетей асамлă алсапа вĕлтĕсенчен çар тăвать. Пăлхар хулине хупăрлать. Хулара хĕрлĕ автан. Сикпăрçапа Çĕрпӳ паттăр çапăçура вилеççĕ. Хула тăшмана парăнать.***

«Атте-анне — чи пахи,
Тăван çĕршыв чи хакли».
Ун пек пиллĕ сăмаха
Чăваш пĕлет ачаран.
Çавăнпа вăл вăрçăра,
Хире-хирĕç тăшманпа.
Эсремечĕ тарсанах,
Улăп утне тытсанах —
Ту тăрринче Супетей.
Вăл тулхăрать иртеппех,
Алтăр куçне çавăрса
Çарне çапла кăшкăрать:
— Мĕскер пулчĕ, йĕкĕтсем,
Манпа тĕнче курнисем!
Мăн сăрт хайăр пулнăран
Хăрарăр-и çавăнтан?
Куçусене чармаклăр,
Куçпа чăваша шăтарăр!
Пăхăр! Пăхăр! Лайăхрах!



Туймастăр-и çавна та?
Çĕр хут сумлă чăвашран
Эпир кунта яланах.
Эпир — тинĕс — хаяртан,
Типен кӳлĕ — чăваш халь!
Ши! шăхăрса Супетей
Çарне пĕрмай ĕскĕртет.
Вăрçă пырать тискеррĕн,
Чĕркуççирен сын юнĕ.
Çав вăхăтрах Сикпăрçа
Тăшмансемпе çапăçса
Тухать Çĕве хĕррине,
Вырпса ĕçет тăр шывне.
Супетей, йĕк, Улăпран
Тарать чăтлăх вăрмана,
Сехри сиксе тухнăран
Ухмах пекех туйăнать.
— Аçта чикес пуçăма,
Аçта хурас намăса? —
Тет те çĕрте йăванать,
Калай хуна кĕлтăвать:
— Эсĕ вилнĕ пулсассăн та, Калай хун,
Пулăшсамччĕ малтанхи пек, Калай хун.
Ан ман мана, вĕри çулăм, Калай хун.
Аçу — кăвак чул сан, Калай хун.
Аннӳ — хĕртнĕ хурçă, Калай хун.
Сана кĕлтăватăп, Калай хун.
Чăвашсене тĕп тумашкăн, Калай хун,
Пулăшсамччĕ малтанхи пек, Калай хун.
Мана ăстăн парсассăнах, Калай хун,
Сан тутуна ăш çу сĕретĕп, Калай хун.
Усал тени — усалах,
Инкек тума юрататъ.
Ирсĕр ĕçсем тăвакан
Каçарусăр усалтан,
Ватă Вупкăн, тухатмăш.

Вилесене çăтатмăш,
Улăпа тĕп тăвасшăн,
Кайран çăтса ярасшăн.
Анчах алли кĕске те,
Ана пĕччен тăваймасть.
Çавăнпа та вăрманта
Супетее курсанах
Савăнăç ун чĕринче.
Ирсĕрлĕх шур пусĕнче.
Супетее пуç таять,
Çав вăхăтра ыр сунать,
Туйн çние тайăнса
Сăмах тăсать малалла:
— Куçăнта сан — мăн хуйăх,
Йĕкĕт, сана мĕн пулнă?
Шанан пулсан эс мана
Каласа пар хуйăхна.
— Чăн та хуйăх пысăк ман,
Пуç çаврăнать çавăнтан.
Улăп мана çул памасть,
Кун-çулăма кĕç татать.
Çав Улăпран хăтăлма
Мĕн тумарăм пурнăçра.
Çапла пĕрре, касхине,
Çур çĕр иртсе кайиччен,
Керменĕмре — ўплере —
Ват юмăççем пулчĕç те
Ыйту патăм вĕсене:
«Миçе халăх ман айра?
Миçе халăх таврара
Сиксе чĕтрет ятранах?
Миçе пин çын ман çарта?»
Хуравларĕç ак çапла:
«Аслă Атăл хăйăрне
Кам шутланă пĕрчине?»
«Миçе çул эп чăвашпа
Çапăçатăп тарăхса?
Вĕсемпе хыт çапăçса
Мĕн чухлĕ çар пĕтрĕ ман,
Анчах вĕсем çав-çавах
Парăнмаççĕ паян та.
Сиртен хăшĕ Улăпа
Çĕнтермелли май тупать —
Çав пурăнать ман патра
Çăтмахри пек пурнăçпа».
    Ват юмăççем — пурĕш те,
Хаярри те, ырри те
Ман ыйтăвран шăп пулчĕç,
Шăлĕсене шарт! сыртрĕç.
Пусĕсене кустарма
Тытăнсанах тин вара
Вĕсенчен пĕри, чи ватти,
Йўтемешкĕн пуçлаíн,
Мана çапла каларĕ:
«Аслă ертўç, Супетей,
Хунсен хунĕ вĕт эсĕ?
Ним айăпсăр çынсенне
(Эпир — вĕсен шутĕнче)
Пуçĕсене тек ан тат.
Çав Улăпа, паттăра,
Пĕтермелли ăрăма
Темле сылăх пулсан та
Хамах парап каласа».
    Эп йўтенĕ карчăка
Хăтăрласа ятларăм:
«Эй, ватсупнă кăрчамас,
Мĕншĕн мана малтанах
Каламарăн? Хуравла!
Мĕншĕн манран пĕлĕвне
Эс хăтлантăн пытарма?»
    Карчăк пулчĕ юман пек,
Чĕлхи касрĕ — çĕçĕ тен:

«Эй, Супетей ертӳç!
Ма чăваша пĕтересшĕн эсĕ?
Никама та шар туман вăл ку таранччен.
Улăп вăйне пĕтермелли меслете
Çут тĕнчере пĕлекенни — иккĕн çеç.
Каламастăп çавна — пурпĕрех!»
    Эпĕ çав ват асамçа
Асапларăм темле те.
Шутламасан ылханне
Тухмарĕ ун нăйкăш та.
Ывăл куçне пĕркĕтпе
Чавтарнă чух ӳхлетсе
Карчăк тути усăлчĕ.
Унтан çапла каларĕ:
«Улăп çӳрен çул çинче
Шăтăк чавтар каçхине:
Çитмĕл хăлаç сарлакăш,
Çичçĕр хăлаç тарăнăш.
Йывăç сартар ун çине
Сĕм вăрманта касинне.
Йывăççене çавăнтах
Шăналăкпа виттерттер.
Унтан ăна çиелтен
Тип тăпрапа хуплаттар.
Чăваш çарĕн таймăшне
Йывăç чăтать — ан хăра.
Улăп ытла йывăр та,
Пулать шăтăк тĕпĕнче».
    Чăнах та çав шăтăка
Улăп лекрĕ уйăхран.
Ну, теп, шутлап ăшăмра,
Улăп вилет выçăпа.
Чăвашсене аркатсан,
Чура тăвап чăвашран...
    Улăп каллех ман патра,
Турать, таптать ман çара.



Чăваш каллех ирĕкре.
Хам эп — намăс-симĕсре.
    Кайран пĕлтĕм ак çакна:
Пулнă чух вăл шăтăкра
Танаçланнă хăтăлма.
Шăтăк тарăн, çиме çук.
Выçă кăшлать — чăн та мур.
Çăхан вĕçсе килинне
Улăп курать инçетрен.
Ура çине тăрать те
Çĕклет икĕ аллине,
Тархасласа кăшкăрать:
«Эй-эй, çăхан, эй, çăхан,
Эс ирĕкле кайăк та,
Таçта-таçта çитетĕн,
Пулман çĕрте пулатăн,
Тăвата кĕтеслĕ тĕнчере
Эсĕ вĕçсе çӳретĕн.
Чăваш çĕрне кайсамччĕ,
Тăван халăха пĕлтерччĕ:
Тăшман мана ултавпа
Ячĕ тарăн шăтăка.
Халь эп шывсăр, апатсăр,
Типсе хăрсах куç хупăп,
Мана килсе çăлсамăр».
    Çăхан манна пĕр калăп,
Аçтан мана вăл суттăр,
Çавăнпа ун хуравĕ
Маншăн пулчĕ кăмăс пек.
Çăхан хуравĕ çакăн пек:
«Вилех, вилех! Вилсессĕн
Куçна чавса кăларăп».
    Тăрсан-тăрсан, çав куннех
Чакак вĕçсе çитнĕ-мĕн.
Улăп ăна тархаслать:
«Эй-эй, чакак, эй, чакак,

Эс ирёклё кайăк та
Таçта-таçта çитетĕн,
Пулман çĕрте пулатăн,
Тăвата кĕтеслĕ тĕнчере
Эсĕ вĕççе çÿретĕн.
Чăваш çĕрне кайсамччĕ,
Тăван халăха пĕлтерччĕ:
Тăшман мана ултавпа
Ячĕ тарăн шăтăка.
Халь эп шыйсăр-апатсăр,
Типсе хытсах куç хупăп.
Мана килсе çăлсамăр».
Чакакăн та сăмаххи
Маншăн пулчĕ чун уççи!
«Вилех, вилех! Вилсенех
Çинчех ситĕп вĕçтерсе
Вĕçсе анма шăтăкна,
Куçна чавса кăларма»,—
Терĕ чакак саванса,
Чакăлтатса ташласа.
Курах каять: ун урлă
Вĕçсе иртет хуркайăк.
Пур вăй-халне пуçтарса
Çапла калать шăтăкран:
«Эй, хуркайăк, хуркайăк,
Тархаслатăп чĕререн!
Вĕçетĕн вĕт тÿпере
Таçта-таçта çитиччен,
Пулман çĕрте пулатăн,
Сăртсем урлă каçатăн.
Эс çÿретĕн ирĕкре
Тăват кĕтеслĕ тĕнчере.
Чăваш çĕрне вĕççе кай,
Халăхăма каласам.
Тăшман мана ултавпа
Ячĕ тарăн шăтăка.



Мана апат памаççĕ,
Ĕçтермеççĕ шывне те,
Вĕлересшĕн типĕтсе.
Каласамччĕ чăваша,
Эп юратнă халăха.
Васка-васка ман пата
Хĕрĕх те пĕр лавпала
Тиесе килтĕр сÿс вĕрен.
Вĕренĕ пултăр çирĕпрех,
Хĕрĕх хăлаç хулăмăш,
Çичçĕр хăлаç ун тăршшĕ.
Эп хушнине тумасан
Улăп пĕтет тăшманран».
Кик-как, кик-как хуркайăк
Çунаттипе çил касса
Çулне тытать чăваша.
Вĕççен-вĕççен айлăмра
Чăваш çĕрне асăрхать:
Вăл тăшманпа çапăçать.
Вĕрн юнне юхтарать.
Хуркайăкĕ чăваша
Паратъ йăлтах каласа.
Улăп мĕнле инкеке
Лекни çинчен пĕлтерет.
Улăп паттăр хушни пек
Хĕрĕх те пĕр лав çине
Чăваш тиет вĕренне,
Çĕр каçиччен явнине.
Хĕрĕх те пĕр лав çинче
Апат-çимĕç чи пахи,
Ĕçмеллисем — чи хакли.
Çулĕ вăрăм, тикĕс мар,
Çар та манăн çывăрман.
Анчах пире шахвăртса
Улăп патне шăтăка
Çавах çитнĕ чăвашсем.

Апатланӑ Улӑпа,
Ура ҫине тӑратнӑ.
Улӑп каллех ирӗкре
Ман сумсӑр ҫар умӗнче.
— Апла эппин, Супетей,
Ӗҫӳ япӑх — пур енчен,—
Тере Вупкӑн ертӳҫӗ.—
Ҫару сумсӑр пулсан та
Ҫӗнтерейместӗн чӑваша.
Мӗншӗн тесен Улӑпа
Йывӑр килсен самантрах
Кукамӑшӗ пулӑшать.
Вӑй та илет халӑхран.
Эсӗ мансӑр Улӑпа
Ҫӗнтерес ҫук — нихҫан та!
Ылтӑн паран мӑй таран —
Астӑн парап ҫакӑнтах.
Пике качча юратсан,
Ҫавӑна качча туймасан,
Сар хӗр ҫӳрет хурланса,
Асне-тӑнне ҫухатса.
Ун пек хӗртен ан хӑра.
Кантра яван ҫавӑнтан.
Кантра пӑвать шуйттана.
Улӑпа-и? Ним те мар.
— Ун пек хӗре ман ӑҫтан
Тупмалла-ха, ват ҫӑхан?
Сарине-и? Ан лӑрка!
Вӑл сутать-и Улӑпа?! —
Хирӗҫ калать Супетей
Ват Вупкӑна — йӗксӗке.
— Вӑл анчах-и? Урӑххи.
Саринерен шанчӑкли.
Ӑҫта тетӗн? Ҫав ҫӗрте,
Ҫич тӑрӑллӑ сӑрт енче.
Унта Мерчен ярӑнать,

Ярӑнать те явӑнать.
Мерчен кайӑк сӑнӗнче
Мерчен пике пытанать.
Улӑпа хӑй ӑшӗнче
Тӑн ҫухатсах юратать.
Кунӗн-ҫӗрӗн асӑнать.
Ҫывӑрсан та лӑпланмасть.
Эс Улӑпа   ултала
Тилӗ ҫынпа майласа.
Сан тилӗ пур, ан хӑра.
Улталать вӑл турра та.
Кам тетӗн-и? Ват Супар!
Мулшӑн хӑйне те сутать.
Ырми пысӑк ҫарпала
Хыттӑн ҫапӑҫ чӑвашпа
Чака-чака сӑрталла.
Сӑрт хысӗнче лӑплан та
Супара чӗн хӑв патна.
Ӑна ылтӑн тыттарсан
Эс хушнине хӑй майлать.
Супетей итлет Вупкӑна,
Ӗҫне тӑвать хушнӑ пек.
Ҫапӑҫнӑ май чӑвашпа
Чакса пырать сӑрталла.
Ылтӑнӗпе астарса
Чӗнсе илет Супара.
— Хӑтарсанах Улӑпран
Ылтӑн парап арчапа.
Укҫа тесен Супарӑн
Ҫаткӑн куҫӗ — тил куҫӗ.
Чӗлхипе чул шӑратӗ.
Сӑхӑ аллн тем тӑвӗ.
Улӑп паттӑр чатӑрне
Персе ҫитет — тилӗ тен,
Талпас — кӗрхи чакакран,
Ыр ҫынах тен сӑмахран.

— Ҫич вӗҫлӗ сӑрт хушшинче,
Сӑнкай-Сенкер ятлинче,
Чаксассӑнах ҫарӗпе
Супетей ҫӳрет таркӑнра.
Кӗлте-ҫӗмел сӑрт тавра
Курӑнмасҫӗ — ниҫта та.
Пӗтнӗ ҫарне Супетей
Тултараймасть — пурпӗрех.
Самай лайӑх вӑхӑт халь
Супетее аркатма.
Супетее тӗп тусан,
Сумсӑр ҫарне аркатсан,
Аслӑ Чӑваш ҫӗрӗнче
Тӑшман пулмӗ ӗмӗрте.
Улӑп йытта ӗненчӗ,
Сӑнкай сӑрта ҫул тытрӗ.
Супар йытӑ килӗнче
Укҫа шутлать шӑл йӗрсе.
Ҫулне тӑснӑ вӑхӑтра
Темскер пулчӗ Улӑпа.
Ыйӑх пусать, анаслать,
Шур сӑхмане вӑл сарать
Ҫавӑнтах выртса ҫывӑрма.
Катмар шур чул ҫухалать,
Таврари ҫӗр улшӑнать.
Пин-пин тӗслӗ чечексем,
Вӗсем ҫинче пыл хуртсем.
Мерчен кайӑк курӑнать,
Улӑп ҫинче явӑнать.
Кӑтра тӗтре хӑпарать,
Мерчен кайӑк ҫухалать.
Кӑтра тӑман саланать,
Чипер пике курӑнать.
Савнӑҫ Мерчен куҫӗнче,
Чун савни ун умӗнче.
— Улӑп, кунта килтӗн-и?







Мӗн чул сана эп кӗтнн?!
Ҫывӑр, чунӑм, ҫывӑрах,
Ҫак вырӑнта лайӑх кан.
Эп снсесшӗн ҫавна та:
Юратмастӑн эс мана,
Саринене эс саван,
Уйӑрлас ҫук эс унтан.
Сан юрату — тап-таса,
Пӑтратмастӑп эп ӑна.
Ҫывӑр, чунӑм, улнутла,
Вӑратмастӑп чуптуса.
Ман халь кнле каймалла,
Ыран килен сан пата,
Манаймастӑп эп сана!
Хурлӑх юрри шӑранать,
Мерчен куҫран ҫухалать.
Мерчен кӗҫӗ сӑрт ӑшне
Пӗлтермешкӗн ашшӗне:
«Улӑп ҫыврать, нмҫе мар,
Ана хӑна тумалла».
Супар Сӗнтӗр мӑрсапа
(Иккӗш те пӗр калӑп та)
Утланчӗҫӗ ут ҫине,
Ыткӑнчӗҫӗ сиккипе
Сӑнкай-Сенкер хӳттине.
Вӗсем — выҫӑ кашкӑрсем —
Вупкӑнпа тӗл пулнисем.
Улӑпӑн чи никекне,
Асамҫӑ ҫулҫи йӗррине
Хӑш вырӑнта пулнине
Ирпех пӗлнӗ Вупкӑнран,
Ҫавӑнпа та Улӑпа
Яш-яш чикрӗҫ ҫӗҫӗпе.
Улӑп вырткать ҫӗр ҫинче,
Чунӗ юман тӑррннче.
Юнӗ юхать кӗрлесе.



Шуҫӑм шывне хӗретсе,
Тӗттӗм каратъ хӗвеле,
Пӗлӗт каять шӗвелсе,
Улӑп паттӑр вилнӗрен,
Хуйӑх пусса илнӗрен
Халӑх чӗри юнланать.
Ӳсен-тӑран тӳр тӑмасть,
Кайӑк-кӗшӗк юрламасть.
Хуласенче, ялсенче,
Кашни килтех кунӗпе
Улӑпа хыт асӑнса
Чӳк тӑваҫҫӗ хурланса,
Каласҫҫӗ ак ҫапла:
— Нумай юхрӗ унран юн.
Ҫав кун аслӑ Чӑвашра
«Юн кун» ятпа упрантӑр,
Каҫне вара «Вил каҫ» тес.
Супетей кӑна савӑнать,
Асам алса тӑхӑнать,
Айрн ҫине утланать,
Пӑлхаралла ҫул тытать.
Пӑлхар умне тухиччен,
Чӑваш халӑх снсиччен
Улмурине курсанах
Ана тытса аркатать,
Асамлама тытӑнать.
Нерӗп алси ҫурӑлмасть,
Ҫӗтӗлни те курӑнмасть.
Улӑмсенчен ҫар тӑвать,
Пӑлхар тавра тӑратать.
Ӳпре ҫилсӗр кунсенче
Мӗнле тапӑнать юн ӗҫме,
Ҫавӑн пекех Пӑлхара
Тӑшман илет ҫавӑрса
Ним юлмиччен аркатма.
Упасене купара

Кӑткӑ мӗнле сырӑнать,
Ирсӗр тӑшман Пӑлхара
Ҫавӑн пекех тапӑнать.
Ватнӑ вӗлле кайӑкӗ
Мӗнле сӑхать йӑвашӑн,
Сӗмсӗр тӑшман Пӑлхара
Ҫавӑн пекех ҫулӑхать.
  Чӑвашӗ те парӑнмасть,
Тӑшмана тек аркатать,
Тӑшман пуҫӗ ыткӑнать,
Сумсӑр ҫарӗ юхӑнать.
— Чӑваша тӗп тумасан,
Ҫак Пӑлхара илмесен
Паттӑн мана каҫармасть,
Курман асап кӑтартать,
Кайран вутта пертерет,
Йӑхӑма та нӗтерет.—
Выртса йӗрет Супетей
Хӑй юртӗнче пӗр эрне,
Ҫурхи кӑлӑк чӑххи пек
Кускалать вӑл уйӑхпех.
Хӑранипе вар чир те
Ернӗ иккен ирсӗре.
  Ҫавах ҫӑхан-Супетей
Алла илет хӑйне хӑй,
Пиипуҫа вӑл чӗнтерет,
Сӳпӗлтетет ҫакӑн пек:
— Инҫех те мар Шӑпатан
Пурӑнать тет вӑрманта.
Ҫав асамҫаваскатсах
Чӗнсе кил-ха ман пата.
  Сӗм вӑрманта каҫхине
Вун юланут сиккипе
Чӑтлӑх витӗр пыраҫҫӗ.
Пӗр уҫланка тухаҫҫӗ.
Уҫланкӑри... мӗскер ку?



Чӑх уралла киве пӳрт!
Юман ҫинче ӳхе пур:
Хура кушак — унти мур.
Ӳхӗ илет ӳлесе,
Хӗмлӗ куҫне ҫиҫтерсе.
Унпа нӗрлех кушакӗ
Тӑсса макрать ҫич тӗсле.
  Пиипуҫ анать ут ҫинчен,
Сӑмах калать ҫакӑн пек:
— Пӳрт хыҫ пултӑр ман умра,
Умӗ кусӑр хыҫала.
  Пӳрт вырӑнтан тапранать,
Ҫав вӑхӑтрах ҫаврӑнать
Малти хыҫра пуличчен,
Хыҫри мала куҫиччен.
Пӳрт алӑкӗ уҫӑлать,
Тухатмӑш та курӑнать,
Пиипуҫпа вӑл калаҫсан
Супетей патне ҫул тӑсать.
Кӑмака милки урхамах
Шӑпатанӑн яланах.
  Супетей унпа калаҫать:
— Ҫичӗ ҫул та ҫич эрне
Хупӑрларӑм Пӑлхара,
Ҫичӗ ҫул та ҫич эрне
Ҫапӑҫатӑп чӑвашпа,
Илейместӗп хулана.
Ҫав хулана илмешкӗн
Вӗрент мана, тархасшӑн.
Унӑн ахаль тумастӑп,
Ылтӑн айне тӑватӑп.
  Ылтӑн паха асамҫа,
Сиксе чӗтрет укҫашӑн.
Супетее ӑс парать:
— Мана чӗнни — тӗрӗс вӑл.
Чӑваш вӑйӗ — тӑванлӑхра.

Чăваш вăйĕ — сырура,
Чăваш вăйĕ — юрăра.
Чăваш вăйĕ — туслăхра.
Вĕсем пурте туслăран
Ĕç çавăнпа ăнмасть сан.
Çав туслăха пĕтерсен
Эс Пăлхара тин илен.
Çав туслăха аркатма,
Пĕр-пĕринпе вăрçтарма,
Ятарласа Пăлхара
Вĕçтер хĕрлĕ автана.
    Шăпатан пуçлать ашкăнма,
Хĕрсе каять çавăнтан.
Урлă-пирлĕ чупкалать,
Милкипе те хăмсарать,
Тем тĕслĕ сас кăларать,
Тен, такампа калаçать?
Кайран пăштах лăпланать,
Çакса ярать хуранне.
Вĕре-вĕре илет те
Йăшăлтатать васкаса.
Кĕл улма пек пулсанах
Йăс-йăс тухрĕ имçамран,
Авă пулчĕ кăвартан,
Кўкĕрт — вутă-шанкăран.
— Çаксем,— терĕ Шăпатан,—
Шуйттансенчен кая мар.
Сана вĕсем лайăхах
Пулăшаççĕ, ан хăра.
Кўкĕртпеле ăвăна
Парсам Сĕнтĕр мăрсана,
Панулмине вăрттăнра
Тыттар тилле — Супара.
Хĕр кўлли пек лаптăкра
Итем тутар хыртарса
Тулă саптар çавăнта,



Ним шелсĕрех васкаса.
Хĕвелпе тан вăрансан
Кăвакарчăнсем вызăпа
Апатланма тырăпа
Вĕçсе килĕç Пăлхартан.
Сан вĕсене тытмалла.
Çавăнпа та васкатсах
Итем çине сартарма
Серепе çыхтар пин таран.
Эс вĕсене тытсанах,
Мĕн тытнине васкатсах
Эп хушнипе майлаштар.
Вĕсен кашнин урине
Çыхтар ăвă-кўкĕрте.
Хĕвел каçа сулăнсан
Эсĕ ăвва чĕртсе яр.
Серепери кайăксем
Вĕçсе кайĕç Пăлхара.
Ун чух эсĕ — мĕн куран?
Пурте вĕсем — йăвара.
Хĕрлĕ автан хулара.
Нухрат патша пахчинче,
Ылтăн читлĕх умĕнче
Панулмине, хĕрлине,
Супар çитĕр касхине.
    Супетей чĕри савăнать,
Шăпатана тав тăвать,
Унпа пĕрле ял парать,
Вăтăр ик ял таранах[1].
    Супетей ертўç хушнипе
Икĕ эрне хушшинче
Итем хырчĕç тап-такăр,
Тулă сапрĕç икçĕр пăт.

[1] Çав ялсем Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнче пулнă. Кайран çав ялсене Тутарай тенĕ чăвашсем.

Çич эрне те талăкран
Ĕртӳç пĕрмай варçнăран
Серепнсем — ниĕш те —
Итем çнне сарăнчĕç.
Хĕвел тухса сарлайман —
Кăвакарчăнсем — Пăлхартан!
Итем çинче вьсăран
Тулă çисе çӳреççĕ.
Серепине лекеççĕ.
Кăвакарчăнсен урине
Авă, кӳкĕрт çыхаççĕ.
Хĕвел шусан каçала
Авва чĕртсе яраççĕ.
Серепесене уçсанах
Кăвакарчăнсем вĕçеççĕ
Аслă Пăлхар хулине,
Хăйсен тăван йăвине.
Хĕрлĕ автан хулара,
Çурт-йĕр çунать шартлатса,
Теттĕм каçа çутатса.
Ют сырăнать Пăлхара
Ӳпресем пек сумсăртан.
Арасланcем чăвашсем
Аркатаççĕ тăшмана.
Виле выртать паккусла
Юнĕсене юхтарса.
Вĕсен ухă кантрисем,
Сарă чĕнрен явнисем,
Вăрçă хĕрсе пынăран
Кăмрăкланчĕç, мĕн тăван.
Ухă юлсан кантрасăр —
Çапăçура ним хаксăр.
Хĕрлĕ автан аснăран
Кантра çыхма ним юлман.
Тăшман пĕлет ун çинчен
Сĕнтĕртен çав касхинех.



Тĕкĕрçсене вăслатса
Супетей калать ак çапла:
— Хĕрлĕ автан Пăлхарта
Эрне вĕçет алхасса.
Унта юлман чĕнпе сӳс,
Уххисен те кантри çук.
Ыран Пăлхар пурпĕрех
Пулать ура айĕнче.
Унччен пурте пикенсе
Лайăх хăйрăр хĕçсене.
Чура пулать кашниннех
Пурăнмашкăн кати[1] пек.
Чăвашĕ те сывăрман,
Ик аллине лашт усман.
Хĕрарăмсем Пăлхарта
Алла хачă тытнă та,
Çӳçĕсене каснă та
(Çӳç касман çын хăварман)
Хастарланса çĕр каçа
Çӳçрен явнă кантрасем
Чăтăмлине — хурăç пек.
Пур кантри те ухăра,
Пăлхар хули — вăй-халра.
Хĕрарăмсем арçынла
Хăрт, хĕç тытса паттăрла
Çапăçаççĕ тăшманпа,
Сумсăр çара аркатса.
Пăлхар ачи-пăчисем,
Çичĕ çултан иртнисем,
Чул муклашки илеççĕ,
Пушă вĕçне çыхаççĕ,
Сивĕ куçпа пăхаççĕ,
Пушăпала чулсене
Ывăтаççĕ çилленсе.

[1] Кати — чиновник, мусульмансен тĕн çынни.

Чул шăхăрса вĕçнĕрен
Ют пуçĕнче шăтăксем.
Шăтăк пуçлă тăшмансем —
Çăхан валли апатсем.
Шăпатан асамçă хушнă пек,
Йĕклĕ Супар каçхинех
Панулмине, хитрине,
Хыпса çăтать тилĕ пек.
Супар сăнĕ улшăнать,
Хура ĕне вăл пулать,
Хытă чăмлас килнĕрен
Читлĕх енне вĕçтерет.
Чăваш кĕнеке-сырăвне,
Чăваш халăх телейне,
Унпа пĕрле читлĕхе,
Шир-Пăлхарта çыхнине,
Чăмла-чăмла чыхăнса
Çăтса ярать карăнса.
Чăваш юлать çырусăр,
Çавăнпа та телейсĕр.
Тăшман вăйĕ хутшăнать,
Чăрсăрланса тапăнать
Аслă чăваш халăхне,
Чаплă Пăлхар хулине.
Сĕве енчи Сикпăрçан
Чĕри сурать çураслах,
Шăл айĕнчи шăрçинчен
Хуллен ыйтать ирхине:
— Шăрçа, кала: Пăлхарта
Мĕскер пулнă Улăпа?
Çилçуначĕ кĕçенмест,
Вутхĕçĕ те çиçĕнмест.
Тĕксĕмленчĕ çут шăрçа,
Кĕç тухас пек прахăçа.
Шăппăн калать хуçине,
Çурса паттăр чĕрине:



— Улăп вилли лапамра,
Пăлхар хули тамăкра,
Чăваш кĕнеке-çырăвне,
Хаклă чăваш телейне,
Çăтса янă пĕр ĕне.
Темле йывăр пулсан та
Ал усмарĕ Сикпăрçа,
Шăрçана вăл хуйхăрса
Шăппăн хушрĕ ак çапла:
— Сĕве енчи чăваша
Кайăк туса ярсамăр,
Пăлхарсемпе пĕрлештер.
Шăрçа куç мăч тăвиччен
Кайăк турĕ çынсенчен.
Амăрткайăк — Сикпăрçа,
Ун çул уçса пымалла.
Ыттисем, çар çыннисем,
Вăрçă çынни маррисем —
Хуракăшсем, тăрнасем,
Кăвакалсемпе чарлансем.
Амăрткайăк хыçĕнчен
Вĕсем Сĕве хĕрринчен
Вĕçрĕç Пăлхар хулине,
Анчĕç патша пахчине.
Читлĕх çуккă, чăнах та.
Амăрткайăк Сикпăрçа
Кайăксенчен çын тума
Çут шăрçине кăларать,
Унпа пуçлать калаçма.
Хура ĕне шăрçана
Пырса çапать хўрипе,
Хăй те тăсать урине.
Шăрçа таçта ыткăнать,
Аçтан тупан халь ăна?
Пысăк хуйăх Сикпăрçан:
Çын пулмасть халь нихçан та

Никамран та, унран та.
Тулса ҫитнĕ тарăхпа
Ыткăнать вăл тӳпене,
Унтан чăмать ҫĕрелле.
Ҫухрăм тăршшĕ ҫунатпа
Туртса ҫапать тăшмана.
Тăшман шĕвĕр пăта пек
Путать вăштах ҫĕр тĕпне.
Ҫав вăхăтра Пăлхарта
Ирсĕр Сĕнтĕр — йытă та —
Улпутсене илĕртет,
Хăруш кавар хатĕрлет:
Мĕнпур тăшман сыннине,
Тытканрисем тенине,
Касаматран кăларать,
Кар алăкне уҫтарать.
Тăшман кĕрет хулана,
Часах тухать аскăна.
Вата Ҫĕрпӳ паттăра
Сырăнаççĕ хулара.
Ҫĕрпӳ паттăр хĕççипе
Ютта эрне турасан
Кайса ӳкет чун тухсан.
Сикпăрса та тăшмана,
Вĕссе ăмăрткайăкла,
Ҫунаттипе, чĕрнипе
Тата кукăр сăмсипе
Тек ҫĕр ҫине пăталать,
Чунĕсене кăларать.
Икĕ уйăх хушшинче
Ана пĕрмай амантсан,
Юнĕ чакса ныхăран
Ҫĕре ӳкет тӳперен,
Айне тăвать ютсене.
Вăй илеҫҫĕ тăшмансем,
Савăнăҫра касмаксем.



# *Хĕрĕхмĕш юрă*

## САРИНЕ УИАХ ҪИНЕ УЛАХНИ

***Сарине, ашшĕ хушнă пек,***
***хăрхăмран хăтăлма кăмакарчăн пулма килĕшмест. Улăпа ҫĕре пама каять. Унăн атте ҫĕрри сĕм авалра урхамахсенчен пулнă сăвăрсенчен каллех урхамахсем тăвать те хĕрарăмсен ҫарĕн ертӳҫи пулса Пăлхарти тăшмана ҫапса аркатать, хăрхăмри хĕрсене ирĕке кăларать. Саринене Мерчен тĕл пулаҫҫĕ. Вĕрле чĕр шывпа вил шыв илме каяҫҫĕ. Улăпа вилĕмрен чĕртеҫҫĕ. Улăп Сарине асамат кĕперĕпе уйăх ҫине хăпарнине курсан хурланса кукамăшĕ патне кайма ҫĕре путать.***

Инкек килет нимепе,
Тухса каять чĕпкĕмпе.
Ҫавна кура Нухрат та,
Чаплă патша пулсан та,
Вуник хĕрпе мăнукне
Чĕнчĕ аслă керменне.
— Итлĕр аҫу сăмахне.
Мĕнле пурнăр малашне?
Йĕк Супетей Пăлхара
Илсессĕн ҫак уйăхра
Лекетĕр-ске тыткăна.
Ун чух мăшкăл чăт кăна.
Ҫавна курса эп сиртен
Хăрхăм пулса ҫӳрччен
Ыйтап кайăк пулмашкăн,
Кунтан вĕҫсе каймашкăн.

Нухрат патша тӗлӗнче
Кӗмӗл чӳлмек курӑнчӗ.
Вуник пике умӗнче
Вуник алтӑр ярӑнчӗ.
Ылтӑн куркн, ҫаврашки,
Виҫӗ хутчен ярӑнса
Ун аллинех вырнаҫать.
Вунпӗр хӗрӗ алтӑрпа
Имҫам ӗҫрӗҫ хуйхӑрса.
Кӗҫӗн хӗрӗ, Сарине,
Ним тытмарӗ аллине.
Уртем ылтӑн куркаран
Ӗҫмесӗрех тумлам та
Ҫӗре сапрӗ имҫамне,
Персе ячӗ куркине.
Аслашшӗн кусӗ ҫемҫелчӗ,
Мӑнукне те ырларӗ,
Ҫар хатӗрне тыттарчӗ,
Кайран ҫапла каларӗ:
— Тӑшман умӗнче ан куклен,
Пулма тӑрӑш аҫу пек.
Патша темскер каласан
Кӑвакарчӑнсем — пикесем,
Юртан шурӑ тӗкӗсем.
Вунпӗр кайӑк пӳлӗмре
Юлашки хут керменре
Ашшӗ умне ларчӗҫӗ,
Пӗрле куҫҫуль тӑкрӗҫӗ.
Куҫҫульсене шӑлсассӑн
Вунпӗр чӳрече уҫӑлчӗ,
Патша алне сулсассӑн
Шӑппӑн ҫапла каларӗ:
— Хӑварӑр мана, аҫуна,
Вӗҫсе тухӑр халь тула,
Ан пурӑнӑр Пӑлхарта,
Вӗҫӗр пурте ялалла.



Вунпӗр кайӑк, мӗскӗнсем,
Вӗҫсе тухсан керменрен
Пӑлхар тавра ҫаврӑнчӗҫ,
Ялсем тӑрӑх саланчӗҫ.
— Эх, Сарине, Сарине,
Каллех тухрӑн сӑмахран.
Асту, хӗрӗм, мӑрсаран
Ыр курас ҫук урнӑран.
— Атте, апла ан кала,
Ман та ҫын пек пулмалла.
Кайӑк сӑнне илмерӗм,
Аккасемпе вӗҫмерӗм.
Тӑрлавсӑр мар эп, атте,
Ан пӑшӑрхан нимӗн те.
Ирӗк парсам калама,
Ыйтап мана каҫарма.
Ҫӑкӑр-тӑвар пурнӑҫра
Хире-хирӗҫ япала,
Ҫавна, атте, патшан та
Ялан асра тытмалла.
Атте, саншӑн, халӑхшӑн
Тата тӑван ҫӗршывшӑн
Улӑп нумай вӑй хучӗ,
Тӑшмансене тӳшкерӗ.
Улӑп вилнӗ ҫапӑҫса,
Вилли выртать Сӑнкайра.
Ана ҫӗре памасан —
Вӑл арҫури — виҫ кунтан.
Унччен ӑна тупмалла,
Тупсан ҫӗре памалла.
Ан ҫилленсем тархасшӑн
Улӑп патне кайнӑшӑн.
Патша хӗрӗ, Сарине,
Чупса тухсан керментен
Ҫулне тӑсрӗ каҫхинех
Сӑнкай енне — тухӑҫа.

Тулли уйăх çуттипе
Вырнă ыраш пуссипе
Çулне тăсать Сарине
Кив çĕмелсем хушшипе.
Çĕмелĕсем тайăннă,
Нумайăшне аркатнă.
«Пурте килĕр ман пата», —
Сас илтĕнчĕ аякра.
Саринене — пикене —
Туйăнчĕ çын сасси пек.
Çын ниçта та курăнмасть.
Ватă сăвăр çеç умра.
Туйрĕ камсем ун тавра
Пухăнчĕçĕ.— Араттн.
Авалтанпа упранин.
— Ах, вăт, мĕншĕн Супетей
Нÿкерсенчен хĕсĕкре:
Алса вăйне çĕнтерме
Эснр уйри çĕмеле
Çĕр каçиччен, пĕрлешсе,
Аркататăр пикенсе.
Супетее хур турăр.
Чăвашсене пулăшрăр.
Тавах сире, сăвăрсем,
Ырлăх сунап пурне те!
Ват сăвăра Сарине
Тытнă чухне аллине
Çĕррĕн куçĕ ялкăшрĕ.
Сăвăр çере ыткăнчĕ,
Тÿрех сăнран улшăнчĕ.
Вăл халь ĕнтĕ сăвăр мар,
Тимĕр кăвак урхамах,
Çынла лайăх калаçать:
— Аслă патша, Юрекке,
Хăй хĕрарăм пулин те
Тĕлĕнмелле ăсчахчĕ,



Астаç енчен чаплăччĕ.
Çапла пĕрре, çуркунне,
(Шăрăх кунччĕ ун чухне)
Илсе килчĕ çак енне,
Нихçан курман çĕн çĕре.
«Ватă ĕнтĕ эп,— терĕ,—
Урхамахпа çÿреймĕп.
Тăшмансене аркатма
Ал вăйĕ те чакрĕ ман.
Пурнăç сакки сарлака,
Тем те пулать пурнăçра.
Эп çуралнă вырăна
Килĕ йывăр самана.
Чи йывăрлăх халăхшăн —
Тĕтĕм сÿнин ĕмĕрлĕх.
Хамăр тăван йăхăма
Йывăр чухне пулăшма,
Çав вăхăта чухлама
Хăваратăп çĕррĕме.
Çĕррĕм пулать пикере,
Хам суйласа илнинче.
Хăйĕн куçлă çĕррипе
Юрекке патша пирĕнтен
Сăвăр турĕ çур çĕрчен».
Урхамах хыт кĕçенчĕ,—
Сăвăрсем ун умĕнче.
Патша хĕрĕ Сарине
Алла тытрĕ кашнине.
Сĕре-сĕре çĕррине
Туса ячĕ вĕсенчен
Урхамахсем, чаплисем.
Çут кăмăллă Сарине
Юрекке пекех ут çинче.
Унăн ăйри çÿренскер,
Юреккере пулнăскер.
— Эй, сар хĕрсем — пикесем!

Катартар-и тăшмана
Чăваш херĕ мĕнлине!
Хĕрсем ĕнтĕ ут çинче,
Вăрçă хатри аллинче,
Тăшман енне ыткăнчĕç,
Супетее тапăнчĕç.
Çапăçура Сарине
Чаплă ертӳç темелле.
Пике-и халь? Арăслан!
Пăхать — ăмăрткайăкла,
Хĕçне сулать паттăрла,
Тăшман выртать паккусла.
Супетейĕн нӳкрисем
Ытла сехри хăпнипе
Кăшкăраççĕ чĕтресе
Çĕçĕ айĕнчи сысна пек:
— Пирĕн умра Амасан!
Ал суламĕ — Юреккен!
Ĕнтĕ эпир пĕтрĕмĕр!
Аллах! Пире хĕрхенĕр!
Хĕр çарĕн те хĕççисем
Сарă хĕвел шевлинче
Ялкăшаççĕ çиçĕмле...
Тăшман пуçĕ — çĕр çинче
Кусать кĕрхи кавăн пек.
Çарти хĕрсен кĕрнекĕ
Арçынсенчен иртет тен.
Весен пуçри хушпăвĕ
Тенкĕсенчен тăрсан та
Çирĕп пăлат хурăçран —
Ухă йĕппи çапанать,
Хăйă евĕр хуçăлать.
Тăшманăн кукăр хĕçĕсем —
Хĕртсе хăварман кусар çеç.
Мăкалаççĕ çиййĕнчех,
Пĕрре касса илсенех.



Саринепĕн куçĕнче
Йывăр хуйăх — чăтма хĕн.
Сăнкай енне, тухăçа,
Каллех тăсать сукмака.
Сăнкай сăрчĕ айĕнче,
Улăп вилли тĕлĕнче,
Вăл чарăнчĕ хурланса,
Вĕри куççуль юхтарса.
Курать: юман айĕнче,
Улăп пуçĕ вĕçĕнче,
Кайăк ларать хутланса,
Ик çунатне ласт усса.
Асăрхасан пикене
Кайăк таçта сухалчĕ.
Кăтра тĕтре тухсанах
Ачаш çил те вăранчĕ.
Çилпе тĕтре салансан
Умра Мерчен курăнчĕ:
— Эх, Сарине, тархасшăн,
Каçарсамччĕ, тантăшăм.
Чăн айăпли — эп кăна,
Ман пирки эс хуйхăра.
Килмен пулсан çак енне
Вилместчĕ вăл çакăн пек.
Анлан мана, Сарине.
Туйсам ман ăш çунинне.
Юратнипе эп ăна
Сăрт хӳттинче сывратрăм.
Кам ĕнентĕр халь мана,
Ухмахăмпа шар турăм.
Сĕнтĕр мăрса, кĕрт йытти,
Ылхан Супар — чун сутти.
Халăха хыт тарăхса,
Тăшмансене сутăнса
Татрĕç Улăп пуриăçне.
Унпа Чăваш вăйлăхне.

Каçар мана, мĕскĕне,
Сăрт хуçине, Мерчене.
— Çынна хуйхă çывхартать,
Туслăх çулне кăтартать,
Маншăн хаклă тус нулсам,
Шăтăк чавма пулăшсам.
— Шăтăк чавса тăмăпăр,
Атăл хĕрне вĕçĕпĕр,—
Терĕ Мерчен макăрса,
Вĕри куççуль юхтарса,—
Унта, Атăл хĕрринче,
Юман ӳсет сарăлса
Асаннене упраса,
Асанненĕн килĕнче,
Вată юман кутĕнче,
Пур тет икĕ тĕслĕ шыв:
Чĕр шывпала виле шыв.
Мерчен нике умĕнчен
Тĕтре иртрĕ сăрт енчен,
Мерчĕн таçта çухалчĕ,
Амăрткайăк курăнчĕ,
Вăл пикене йыхăрчĕ:
— Лар ман çине эс, тантăш,
Хăрамасăр, шанчăклăн,
Атăл хĕрне вĕçĕпĕр.
Амăрткайăк пикепе
Çĕрпе пĕлĕт хушшипе
Атăл хĕрне çитиччен
Вĕçрĕ анăç еннелле.
Пысăк шурлăх варринче
Ват юмана курчĕçĕ,
Çавăн умнех анчĕçĕ.
Вată юман хыçĕнчен,
Ним палăрман çĕрпӳртрен,
Карчăк тухрĕ туяна
Пăхса ăшă кăмăлпа.



— Лар-ха, хĕрĕм. Кам пулан?
Мĕнле çитрĕн-ха кунта?
Шурлăхĕ те çăткăн вĕт? —
Ыйтрĕ карчăк пикерен.
— Сарние эп, мĕскĕнни,
Патша хĕрĕ, кĕçĕнни.
Эпĕ килтĕм Пăлхартан
Йывăр хуйхă пуснăран,
Улăп вилчĕ вăрçăра,
Хĕн-хур пусрĕ чăваша.
Эпĕ кунта çавăнпа.
Тăван халăха хĕрхенĕр,
Йывăрлăхра пулăшăр.
Вил шывĕпе чĕр шыва
Парса ярăр, тархасшăн.
— Чăвашсене тем пекех
Пулăшаттăм чĕререн.
Анчах вĕсем сыхлавра,
Сыхлавçисем — çнч çăра.
Кашнин — уйрăм çăраççи,
Юрекке патша тутарин.
Ун уççипе уçмасан
Çĕрĕ майкăч кăларать,
Çич тĕслĕ хĕн кăтартать.
Ку таранччен этемлĕх
Курман теççĕ ун пек хĕн.
Çăраççисем шăпах тет
Çĕррĕн çавра кусĕнче.
Çĕррине тет Юрекке
Чĕчĕ ачине панă тет.
Санăн та пур куслă çĕр,
Илем парать сана вăл.
Тен, çавăнта уçăсем —
Юрекке аллинчен тухнисем?
Хăрамасан асапран,
Чăн юрату пулсан сан,

Санран хăюлăх тармасан,
Тен, çăлатăн халăхна.
Вĕсем санра пулмасан
Эсĕ халех кунтан кай,—
Тесе хучĕ татăклăн
Сарнене ват карчăк.
    Хăюллăнах Сарние
Юман патне çывхарчĕ,
Çав вăхăтрах çĕррине
Юман енне çĕклерĕ.
Çĕррĕн куçĕ ялкăшрĕ,
Юман çине çут ÿкрĕ.
Юман çинчи кăмпасем
Çĕре вĕçрĕç сулçă пек.
Юман хуппи сĕвĕнчĕ,
Икĕ алăк курăнчĕ.
Икĕ тĕлтен юманран
Ик валашка ярăнчĕ.
Икĕ витрĕ çавăнтах
Шывпа тулса ларчĕçĕ.
Вил шыв тени — пĕрнинче,
Чĕр шыв тени — тепринче.
Кĕвенте те курăнчĕ,
Витресене çĕклерĕ.
    Ват карчăка Сарние
Пуçа тайсах тав турĕ.
Карчăк темшĕн çавăнтах
Утрĕ хытах талкăшса,
Кайран ларчĕ кукленсе,
Унтан выртрĕ тăсăлса.
Сывлăшĕ çук — нимĕн те!
Кинемĕшне вил шывпа
Сапма тăчĕ. Вăхăтра
Карчăк тăчĕ вăр-варах,
Сăмах хушрĕ ак çапла:
— Шывсем лекрĕç ыр çынна



Ырă ĕççем тума çеç.
Чунăм çавна пĕлтерме
Юрекке патне çитмелле.
    Карчăк вутпа хыпăнчĕ,
Çунса кайса кĕл пулчĕ.
Ват юман та кăкланчĕ,
Шурлăхалла ыткăнчĕ,
Унта юман çул уçрĕ.
    Карчăк кĕлне Сарние
Çĕре пачĕ куççульпе.
Тимĕр карта ун тавра
Çавăрсассăн каларĕ:
— Шупа карта çаврăнтăр,
Ĕмĕр-ĕмĕр Чăвашра
Çав ятпа вăл упрантăр
Тимĕр карта тавралла.
    Витресемпе Сарние
Амăрткайăк çинче халь.
Сăнкай патне çитмеллех.
Çул тăсăлать мал енне.
Улăп тĕлне çитсенех
Амăрткайăк çунатне
Хуçрĕç ухă йĕппипе.
Кайăк ларчĕ çĕр çине,
Кĕрсе кайрĕ çĕр айне.
Патша хĕрĕ Сарние
Çĕклемĕпе, хаклипе,
Улăп патне çитесшĕн,
Ăна шывпа сапасшăн.
Анчах ним те тума çук,
Çулĕ çинче Сĕнтĕр пур.
Вăл ун çулне татасшăн,
Ăна алла илесшĕн.
    Йывăр хуйăх Сарнине,
Йывăр шухăш пуçĕнче:
«Улăп патне çитиччен

Мĕнле хăтлас ирсĕртен.
Сĕнтĕр айне выртиччен
Хăрăк турат пулас-мĕн,
Пĕр-пĕр арман пĕвниче
Пĕвеленсе выртас-мĕн».
Ниçта каймa çул çукран,
Сĕнтĕр кулли пуласран
Тӳпенелле хĕр пăхать,
Куççуль тăкса тархаслать:
— Сарă хĕвел, пулăшсам,
Çак ирсĕртен хăтарсам.
Хĕвел ним те чĕнмерĕ,
Ана хута кĕмерĕ.
— Çут çăлтăрсем, хăтарăр,
Сĕнтĕр кулли ан тăвăр!
Усси çуккă вĕсенчен,
Хăтармарĕç Сĕнтĕртен.
— Тулли уйăх, хĕрхенсем,
Хăвăн патна çитерсем! —
Йĕре-йĕре тархаслать,
Куççулĕпе çăвăнать.
Тулли уйăх чунлă-мĕн,
Сарине хĕрхенчĕ.
Хĕвел пăхнă вăхăтрах
Асамат тунă кĕпере
Вăшт антарчĕ çĕр çине.
Кĕпер çине Сарине
Чупса кĕчĕ çĕклемпех,
Улăп патне çитсенех
Чĕри çунсах ыратрĕ.
Вил шывĕпе чĕр шывне,
Атăл енче ăснипе,
Улăп тĕлне çитсенех
Чашт! тутарчĕ çĕрелле.
— Улăп, мана каçарсам,
Каçарсам та ан мансам,—



Терĕ пике макăрса,
Уйăх енне çул тăсса.
— Эх, Сарине, Сарине,
Ма унталла çул тăсрăн? —
Капмар шур чул хӳттинчен
Сăвăр сасси илтĕнчĕ.—
Эсĕ, пике, çар ертӳçчĕ,
Урхамаху чапличчĕ.
Тăшман умне тухаттăн,
Юрекке патша куçĕпе
Сиввĕн кăна пăхаттăн.
Ирсĕр тăшман хушшинче
Сехре хăппи хуçаччĕ.
«Амасан каллех ку енче
Пире тĕппе пĕтерет».—
Тесе кунтан таратчĕç.
Эх, Сарине, Сарине,
Ман сăмаха ма мантăн,
Мана мĕншĕн шанмарăн?
Кĕпер çине хăпартăн,
Чăвашсенчен уйрăлтăн.
Çавăнпа халь самантрах
Çĕррĕн вăйĕ хавшакрах.
Ĕмĕрех хĕн курмашкăн
Пире килчĕ йывăрлăх.
Чаплă ертӳç куçĕпе
Çаврăнса пăх çĕрелле.
Хĕр çарĕнчен мĕн турăн?
Урхамахсем пулинсем —
Пурте ĕнтĕ сăвăрсем.
Пикесем, çар сынинсем,
Утсем çинче мар вĕсем.
Ват Супетей умĕнче
Вĕсем ĕнтĕ хăрхăмсем.
Йĕк Супетей еккипе.
Хăрхăмсенчен çуррине

Хыр пĕрени вырăнне
Сарчĕç тусан çул çине.
Юлашкине ик енне
Çула тăрăх тăратрĕç.
Ват Супетей саванать,
Халь вăл ылтăн кӳмере,
Тĕрĕк кавир çапниче.
Ларать пуçне каçăртса.
Ун кӳмине тарçисем,
Икĕ енчен йăтнисем,
Пикесене таптаççĕ,
Ирсĕр çулне тăсаççĕ.
Сарпикесем, хăрхăмсем,
Çул хĕррипе тăнисем,
Вĕри куççуль тăкаççĕ.
Çапла каласа юрлаççĕ.
— Чаплăççĕ Пăлхар, сумлăççĕ Пăлхар,
Таçти элче те кунта килетчĕ.
Чаплăççĕ Пăлхар, сумлăççĕ Пăлхар,
Кийӳ хули пек çиçсе ларатчĕ.
Вутлă тăвăл пек килчĕ Супетей,
Пăлхар хулине йăлтах çунтарчĕ.
Килчĕ те пусрĕ хаяр Супетей,
Пăлхар хулине çилпе вĕçтерчĕ.
Ваттн-хĕттине, ачи-пăчине
Хуса путарчĕ Акăш кӳллине.
Паттăр арсене, йĕкĕт яшсене
Тискер нӳкерсем тухрĕç вĕлерсе.
Нар пек хĕрсене, пике хĕрсене,
Илсе кайрĕçĕ хуса хăрхăма.
Çапла тĕп турĕ пусах Пăлхара,
Хура тăвăл пек ишрĕ Пăлхара.
Чаплăççĕ Пăлхар, сумлăççĕ Пăлхар.
Кийӳ хули пек çиçсе ларатчĕ[1].

[1] Ку юрă Валем Ахунан «Палнай» ятлă кĕнекинче те пур.



Вил шыв Улăп суранне
Пĕр самантрах тӳрлетрĕ,
Шăтăк суран вырăнне
Нимле йĕр те çук ĕнтĕ.
Чĕр шыв Улăп паттăра
Сывлăх пачĕ вăр-варах.
Малтанхинчен кая мар
Çĕн вăй халĕ Улăпра.
Ăшĕ хыпса килнĕрсн
Улăп выртса шыв ĕçрĕ.
Шыв юлманран çăлĕнче
«Хура çăл» ку ят илчĕ.
Ăшĕ канса çитнĕрен
Ик урине силлерĕ.
Ик çăпати тăпринчен
Тăрса юлчĕ ик тĕме.
Тăчĕ. Пăхрĕ тӳпене,
Курчĕ Асамат кĕперне.
Укта утать Сарине
Пуçне усса çĕрелле.
Улăп ăна кăшкăрчĕ,
Анчах пике илтмерĕ,
Паттăр чунĕ хурланчĕ,
Çапла кăна каларĕ:
— Эх, Сарине, Сарине,
Каçар Вирьял ачине.
Ыйăх чăпти пулнăран
Сана ларса калаçма
Çитеймерĕм Пăлхара.
Çилçунатне кăшкăрать,
Урхамахĕ çил касать,
Улăп паттăр тĕлĕнче
Тап! чарăнать кĕçенсе.
Улăп ăна ачашлать,
Тутинчен те чуптăвать,
Кайран ларать утланса,

Çулне тăсать лапампа.
Аякранах Супетей
Асăрхасан Улăпа
Тапса сикет тилĕ пек
Сĕм вăрманта çăлăнма.
Улăп хытах тарăхать,
Тăшман çарне тапăнать,
Ана часах аркатать.
Кайран халăх хушшинчен
Сасси сарлать инçете:
— Тытса çакăр ирсĕре,
Сутăнчăка — Сĕнтĕре!
Вутта перĕр асамçа,
Пилсĕр чуна, Шăпатана!
Вĕсенчен çĕршыв тасалтăр,
Вĕсене тарма ан парăр!
Халăх Сĕнтĕр мăрсана
Тытса çакрĕ ăвăсран.
Кайран вара йывăçа
Хăртрĕ çапла каласа:
— Сан айăнта çак мăрса,
Тăшмана хăй сутăнчĕ.
Тĕнче касса çӳрерĕ.
Питне кĕççе çĕлерĕ.
Эсĕ пĕлнĕ ун çинчен,
Пĕлтермерĕн ма пире?
Çавăнпа та ылханса
Халь хăртатпăр ак çапла:
— Ĕмĕр ларсам хурланса,
Хăв тĕллĕн хăв калаçса.
Çĕрĕк ертĕ[1] ĕмĕрлĕх,
Пĕренере — юрăхсăр.
Тутарай ял хыçĕнче
Кăвайт сунать кĕрлесе.

[1] Ертĕ — Йывăç варри.



Шăпатана, пилсĕре,
Ывăтрĕçĕ кăвайта.
Улăп ячĕ айăрне,
Кайса ларчĕ чул çине.
Пăчăх ярса тытнăран
Улăп калать хурланса:
— Эх, ăраскал, ăраскал,
Мĕншĕн-ха эс хыт кукар?
Мĕншĕн вис касă кăна
Эс пиллетĕн пурнăçра?
Пĕр каççипе касна чух
Тыр выратчĕç шăрăх кун,
Çухра-çухра, хыт йĕрсе
Кăкăр сĕтне çитерме
Кĕлте тĕми хӳттинчен
Эп пĕлтертĕм хам çинчен.
Анне алли яланах
Мамăк евĕр кăпăшчĕ,
Сар хĕвелтен ăшăччĕ.
Анне кăкри маншăнччĕ
Сарă хĕвел ăшшиччĕ.
Хаклă анне чĕрçинче
Маншăн тĕнче аслăччĕ.
Пурнăçăм та пыл-çуччĕ.
Ун пек пурнăçăм сана
Каймарĕ-им кăмăла?
Ачалăха эс татрăн,
Аттесĕрех хăвартăн.
Сан пиркипех — тепри те,
Çут çамрăклăх касси те.
Вăшт! касарчĕ хăй урлă.
Çав касăпа каççанах
Ман пурнăçра вăй илчĕç
Юратупа ĕмĕтлĕх,
Путсĕрлĕхпе пуççăрлăх.
Тепĕр чухне выçлăх та

Каснă çамрăк чунăма.
Тепĕр каçă юлчĕ ман —
Курманнине курмалли.
Араскал сасси илтĕнчĕ:
«Этемлĕхе сан тăрăх
Кирлĕ вилĕмсĕрлĕх, тен?
Турă анчах вилĕмсĕр!
Çавна асра тытсамăр.
Çапах та сан хурланса
Мана хăртма кирлĕ мар.
Ĕмĕр асра юлмашкăн
Этемлĕхе мĕн кирлĕ?
Ылтăн-кĕмĕл тени мар,
Хаклă йышши чулсем мар,
Тутлă апат çимĕç мар,
Чаплă çипуç тени мар,
Юратнă мăшăр? Вăл та мар.
Ана кирлĕ пуянлăх,
Çав пуянлăх урăхла.
Эсĕ çавна ăнкарсам.
Вĕсен шучĕ нумай мар.
Анкар — вĕсем ак çаксем.
Пуянлăх вăл — çырулăх,
Кĕнекене куçнă ăс.
Хăвах пĕлен, халăхра
Самай сĕм-сĕм авалран
Асчахсене хакласçĕ,
Астаçсене ырласçĕ.
Санра халăх ăсчахĕ,
Аслă чŭкпуç пултăн эс.
Сан пек лайăх çырăва
Пĕлекенни Пăлхарта
Пулман тесе каласан
Çылăх пулмасть — ниxçан та.
Çутçанталăк чĕлхине
Пĕлекенĕ сан чухлех



Тĕнчипе те пулман, тен?
Ару валли ăсчахна
Ĕмĕрлĕхе упранма
Кĕнеке ларса çырмарăн,
Çавăнпа чăваш пит чухăн.
Пуянлăх вăл çав ĕнтĕ:
Çирĕп сывлăх кашниннех.
Алăра пултăр ялан ĕç —
Çав та хаклă пуянлăх.
Тăванлăх пулсан халăхра
Çав халăхăн çĕршывне
Мăян пусмасть ĕмĕрне,
Вăл та ĕнтĕ пуянлăх.
Араскал эп — саншăн та!
Сана калап хам ятпа:
Юлашки кĕперŭ паянтан
Вăрăмланать, ан кулян.
Çитсе курăн виличчен
Тепре Атăл хĕррине.
Пĕлĕн чăваш пурнăçне,
Пĕлĕн унăн ăсчахне,
Пĕлĕн унăн ĕмĕтне,
Кунран-кунри савнăçне
Е куççуллĕ хуйăхне.
Ан ман ун чух çавна та,—
Кайран, çĕнĕ ăру та
(Хальхи чăваш халăх пек)
Сана ялан асăнмĕç.
Эпир Улăп йăхĕнчен,
Улăп паттăр çĕрĕнчен
Тесе хăш чух асăнсан —
Вăл та аван, ан кулян».
Улăп тăван халăха
Тăрса калать ак çапла:
— Пуçа чиксе лармасан,
Эсир мана манмасан,

Эп килнине куратăр.
Мана хирĕç тухсамăр.
Эп килетĕп сирĕн пата
Тĕнче алăкне чăваш уçсан.
Атăл шывĕ каялла
Юхăнмашкăн тытăнсан.
Эп килнĕ кун таврана
Лайăх пăхсан сăнаса,
Куратăр ик пĕлĕте.
Пĕри — хура темелле,
Тепри вара хĕп-хĕрлех.
Çав вăхăтрах пĕлĕтсем
Юланутла курнаççĕ.
Иккĕшĕ те хĕççине
Аллисемпе сулаççĕ.
Вĕсем çынсен мĕлкисем,
Пĕлĕт çине ӳкнисем,
Хĕрлĕ мĕлке эп пулап,
Хура мĕлке — ман тăшман.
Икĕ мĕлке хушшинче
Çапăçу пырĕ çич кунччен.
Эп тăшмана çĕнтерĕп.
Чăваш çĕрне çитетĕп.
Йывăр пурнăç килсессĕн,
Мана курас тесессĕн
Чӳк тĕтĕмне вăйлатăр.
Макран пулăш! — Ан манăр.
Тăван халăх, сывă пул,
Сывă пул та çирĕп пул.
Тăванлăха хыт тытăр,
Тĕрлĕ халăхсемпе те
Туслă пулăр яланах.
Улăп сулчĕ вутхĕçне —
Çĕр çиĕ яр! уçăлчĕ.
Çилçунат та ерипен
Кĕчĕ Улăп хыçĕнчен.

## *Юрă вĕçĕ*

Эй, тантăшсем, ял-йышсем,
Акатуя килнисем,
Юррăмăра вĕçличчен,
Эпир сирĕнтен уйрăличчен
Саринене манар мар,
Юррăмăра кăшт тăсар.
Патша хĕрĕн Саринен
Ним тума та пĕлмекрен
Ашĕ вăркать — чăтма çук.
Ура вăйĕ пĕтнĕ ун.
Хăйне алра тытасшăн,
Куççуль çавах юхать-мĕн.
Тăчĕ. Пăхрĕ çаврăнса
Çĕрелле вăл пĕшкĕнсе,
Унта курчĕ çаксене:
Пĕчĕк хĕрне Силпие
Тăшман алла илесшĕн,
Унтан хăрхăм тавасшăн.
Нухрат патша Уртемпе —
Иккĕшĕ те арăслан —
Çапăçаççĕ тăшманпа
Çăлас тесе Силпие.
Асамат кĕперне сиксе
Сарине илчĕ чĕтресе.
Чĕри сикет — çурлас пек,
Хуйăхпа чун тухас пек.
Ачисемшĕн амăшĕн

Хуйхăрнине, кĕтнине,
Йăхсăр çĕр касніне,
Вĕсемшĕн чунне паннине
Çакă çутă тĕнчере
Вичмелли шай пур-ши çав?
Çук пулмалла. Çавăнпа
Тулли уйăх кĕперне
Туртса хăпартас вырăнне
Ана çĕре антарчĕ.
Сарине çĕрри вăй илчĕ.
Сăвăрсем халь урхамах*.
Пикесем те ут çинче.
Пăлат хĕççи вĕсенче —
Пурте тăшман хушшинче.
Хĕççисене сулаççĕ —
Тăшман пуçĕ çĕр çинче.
Супетей пуçĕ ăçта тен?
Хăрăк йывăç тăррнинче.
Халăх Нухрат патшапа
Пăлхара çул тăсрĕçĕ.
Пăлхар хули — кĕл кăна.
Кĕл айĕнчи кăмрăка,
Ку таранччен сӳнменне,
Хăйсемпе пĕрле илчĕçĕ.
Урăх çĕре куçрĕçĕ.
Пирĕн енче халап пур.
Ун çинчен те калас пуль.
Нухрат патша ватă та —
Уйрăлнă чух Пăлхарпа
Çĕре кĕнĕ çав кунах.
Амăшĕпе Уртемĕ,
Вĕсемпе юлнă халăхĕ
Пĕр çĕрелле пухăнсан

Куçса кайнă çĕн çĕре,
Аслă Çавал хĕррине.
Унта Уртем амăшне
Çĕре парсан хуйхăрса
Тĕме юлать çĕклесе
Асăнмашкăн ĕмĕрлĕх.
Сарине çĕре кĕнĕрен
Çĕррĕн хăвачĕ сӳнчĕ тет.
Урхамахсем — пурте тет
Сăвăр пулса ларчĕç тет*.
Уртем, Улăп ачи, тет,
Ял вырăнне шыраса
Сĕм вăрмана кайрĕ тет.
Унта çăлкуç умĕнче
Пĕр пикене курчĕ тет.
Ял вырнаçсан çавăнта,
Йăла тăрăх, çав пике
Çулăк тутăр Уртеме
Панă тет те туй туса
Ана илсе кайнă чух,
Хапха айĕнчен тухнă чух,
Хăварнă тет шаккаса
Вăт çакăн пек каласа:
— Паттăр ялĕ пайтах пултăр.
Сĕнтĕрвăрри пĕррех юлтăр.

1936-1994 çç.

* Аслă Çавал хĕрринче Михайловка станци тĕлĕнче сăвăрсем питĕ йышла пурăнаççĕ. Халь çав вырăнта сăвăрсен заказникĕ.



*Çуйăн Хĕветĕрĕ (Симон Федорович Федоров) Чăваш Республикинчи Çĕрпӳ районне кĕрекен Актай ялĕнче 1913 çулхи çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕнчен, Хĕветĕр Григорьевичран, ачаллах çурма тăлăха тăрса юлнă. Ăна амăшĕ, Агапия Дмитриевна, пĕччененех пахса çитĕнтернĕ. ВăЛ 1947 çулта вилнĕ.*

*Çуйăн Хĕветĕрĕ асла пĕлӳ илнипчен учительте ĕçленĕ, аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн республикăри тĕрлĕ учрежденисенче планпа финанс пайĕн пуçлăхĕнче вăй хунă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçлансан вăл çар училищинчен вĕренсе тухса офицер ятне илет. Тăшманпа Карели фронтĕнче çапăçать. 1943 çул вĕçĕнче йывăр аманать, иккĕмĕш группăри вăрçă инвалидĕ пулса тăрать. Ăна çапăçусенчи паттăрлăхшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, Отечественнăй вăрçăн I-степеньлĕ орден тата тĕрлĕрен медальсем панă.*

*Чăваш эпосне вĕркелесе çырас тĕлĕшпе Çуйăн Хĕветĕрĕ 60 çула çитла ĕçлет ĕнтĕ. Вăл çапăласа çырнă «Улăпăн» хăш-пĕр сыпăкĕсем тĕрлĕ вăхăтра республикăри хаçат-журналсенче кун çути курнă. «Улăпăн» кĕскетнĕ варианчĕ уйрăм кĕнекен 1980 çулта пичетленсе тухнă.*

## ХЫÇСАМАХ

Эпĕ утмăл çич çул хушшинче «Улăп. Чăваш эпосĕ» алçырăвне тăхăр вариант туран çыртăм. Çиччĕмĕш вариантне çухатрĕç те, пите хытă кулянипе вăй-халран кайрăм. Тен, ун çинчен пĕлтерме те кирлĕ марччĕ пуль? Анчах та мана юлашки çулсенче «Улăп» алçырăвĕсем тĕлĕкре «ăнре мĕншĕн мантăн?» тесе хĕсĕрлеме тытăнчĕç.

Мĕншĕн-ха эпĕ ачаллах Улăппа интересленнĕ?

Пĕрре, 1924—1925 çулсенче, херсе утă çулнă вăхăтра анне сасартăк чирлесе ӳкрĕ те, эпĕ анне хушнипе хăмăр ял юмăçĕ патне кайрăм. Ялта çав юмăçа Феоктист Васильевич тетчĕç. Эпĕ ăна Хветӳк пичче теттĕм. Хайне вăра вăл ӳсерĕлсен Актай турри ырăнне хуратчĕ. Вăл юмăç пăхнă май: «Ерхипвар пуçĕнчи усал Окани тытнă пулсан, тенкел, вăççĕ шаккаь»,— терĕ. Тенкел виçĕ хутчен шаккасан вăл мана çапла каларĕ: «Аннӳне Ерхипвар пуçĕнчи усал тытнă. Çав усала халех çырлахтармасан аннӳ, тен, кĕçĕрех вилет».

Килте эпĕ анчах. Пичче ачисемпе лаша çитерме çĕр касмаллах вăрмана кайнă. Акка, тахçанах качча тухнăскер, хăй çемйипе урăх ялта пурăнать. Усалсенчен пите хăратăп пулсан та хĕвел анас умĕн Ерхипвар пуçĕнчи усала çырлахтартăм. Анне ик-виç кунтанах сывалчĕ, кайран час-часах хăй çумне чăмăртаса, пуçран ачашласа: «Улăп пекех пултăн, ачам»,— тетчĕ. Телĕр чухне эпĕ ăна шухăша ярсан вăл мана: «Улăп пекех пул»,— тетчĕ.

1928 çулта Çĕрпӳри иккĕмĕш сыпăклă шкулта вĕреннĕ чухне чăвашсен паллă этнографĕпе, «Тăхăрьял» авторĕпе Г. Т. Тимофеевпа пĕр хваттерте пурăнтăм. Григорий Тимофеевич пире чăваш чĕлхи вĕрентетчĕ. Эпĕ, шкул ачи, ун патне час-часах кăçна кайса параттăм. Пĕрре Григорий Тимофеевич Чăваш кĕнеке издательствинчен куляпса килсен мана килĕнче нумай тытса ларчĕ. Эпĕ, сăмах юхнă май, ăна аннерен илтнĕ Улăп çинчен çӳрекен халап-юмахсене каласа патăм. Вăл мана çавăн пек халап-юмахсене аннерен анчах мар, ытти çынсенчен те çырса илме хушрĕ. «Улăп — халах паттăрлăхĕ...— терĕ вăл лăпсăрка хура çӳçне пӳрнисемпе тураса.— Ним тума та çук, халь эпоссемпе интересленмеççĕ. Ямвар! Ун пирки темшĕн халăхра табу пур. Табу тени — чару тени пулать. Çав табу тăрăх Улăп чăваша тавăрăнмалла. Уиччен, вăл

таврăнниччен. Улăп çинчен сÿпĕлтетсе çÿреме юрамасть. Атту çич ют Улăп юлес вăхăта пĕлсен шентермексене[1] ÿпĕнтерсе лартма пултарать те пуççапрăнăмĕш çулне тататъ. Кам та кам халăх чăрăвенчен тухать, çав çын хăй вилĕмĕпе мар, халăх ылханĕпе вилет. Çитменнине, хальхи вăхăтра Улăппа пачах интересленмеççĕ. Айвансем çавна та чухлай-маççĕ вĕт, Çимăн! Ваттисем вилсе пĕтеççĕ, вĕсемпе пĕрле Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсем те. Хальхи вăхăтра хăш-пĕрисем, аслисем, пысăк вырăнта ларакансем, чăваш эпосне «Улăпа» халăх хушшинче ятарласа пухса, çĕнетсе, вăйлатса ăна халăх хушшинче тепĕр хут сарасси пĕсенчен килет пулсан та «Улăп» эпосĕ пире халь мĕн тума кирлĕ тесе хураççĕ. Çавсем пиркиех ĕнтĕ «Улăп» улмуриччи ылтăн уçă пулса юлать те — шыра вара ăна! Ак çакăншăн та Чăваш кĕнеке издательствипе сут-лашмалла пулать ĕнтĕ»,— терĕ те вăл тарăхса алçырăвĕпе сĕтеле çапрĕ.

Çавăнтан вара эпĕ халăх хушшинче Улăп çинчен çÿрекен халап-юмах-сене пуçтарма тытăнтăм.

Эпĕ Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсене хамăр ял çыннисенчен кăна мар, хамăр таврари чылай ял çыннисенчен те çырса илтĕм.

Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсене шыраса Чăваш Республикине урлă-пирлĕ те, тăрăх та утса тухрăм, çĕр-çĕр ялта пултăм. Тутар Рес-публикинче те, Оренбург, Самара, Саратов тата Пенза облаçĕсенче те, Çĕпĕрте те çÿремелле пулчĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче те Улăп çинчен манмарăм. Унта политработник пулнă май Улăп паттăрпа ытти халăх паттăрĕсем тăван çĕршыва тăшмансенчен мĕнле сыхлани çинчен каласа параттăмччĕ, легендăсем те çырса илме вăхăт тупаттăмччĕ.

Иртнĕ вăрçăра эпĕ хытă аманнипе хăлхасăр пулса юлтăм. Хăлха аппарачĕпе командировочнăй удостоверенисĕрех ялсем тăрăх Улăп çинчен калакан халап-юмахсене пухса çÿренĕшĕн пĕррехинче Вăрнар районĕнче «шпион» тесе милици аллине те пама тăчĕç.

Тавтапуç турра! Ял-ял тăрăх Улăп çинчен калакан халап-юмахсене пухса çÿренĕ вăхăтра карьеристсемпе мар, ырă кăмăллă та ăстăнлă çынсемпе ытларах тĕл пултăм. Карьеристсемпе тĕл пулнă пулсан эпĕ, тен, Магадана та çитсе кураттăмччĕ пуль.

Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсене пухнă вăхăтра темле йывăр-лăхсем пулчĕç пулсан та, Г. Т. Тимофеев сăмахĕнчен тухмарăм, халăх хушшинче Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсене, унăн тĕрлĕрен вариан-чĕсене шутламасăр, çĕре яхăн çырса илме ĕлкĕртĕм. Вĕсенчен 67 халап-юмах Улăп çинчен, 15 — Улăп ашшĕ-амăшĕ çинчен, 15 — Çĕрпÿ тата Сикпăрçа паттăрсем çинчен.

Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсем Чăваш Республикинчи Çĕрпÿпе Красноармейски районĕсенче чылайрах упранса юлнă.

Эпĕ Улăппа çыхăннă халап-юмахсене чăн малтан хамăр ялта, Çĕрпÿ районне кĕрекен Актай ялĕнче, аннерен Агапия Дмитриевна Дмитриевă-ран, П. Т. Тимофеевран (ăна ялта Ирçе Петри тетчĕç), Ф. Васильевран, Н. И. Хомскинчен (Качака Микулинчен), Чиркÿллĕ Патĕрялĕнчи

[1] Ш е н т е р м е к с е м — савăт-сапа (витре, хуран, чÿлмек, катка т. ыт. те).



Р. Н. Комиссаровран, Кайри Анатриелĕнчи Т. П. Павловран çырса илнĕ. Çак çÿлте асăннă çынсемпе пĕрлех Тăвай районне кĕрекен Тăрмăш ял çыннисене, çул маçтăрне Федорова, Оренбург облаçĕнчи Каширинск метеорологи станци пуçлăхне И. Т. Тимофеева, Саратов облаçĕнчи «Еруслан» совхоз кĕтÿçне А. Шумалкина та ырăпа асăнас килет.

Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсем вĕсем чăваш эпосĕнчен упранса юлнă халăх пуянлăхĕ. Çав пуянлăха пирĕн асаттесемпе асаннесем сĕм авалранах ăратран ăрата, сыпăкран сыпăка каласа хăварнă пирки ку таранччен упраннă. Çÿлте асăннă çынсем халăх пуянлăхне ламран лама малалла та упранса юлтăр тесе мана шанса каланăшăн вĕсемшĕн вил тăпри çăмăл пултăр!

Петр Тимофеевич сĕм-суккăрччĕ, хура пÿртре пуранатчĕ. Вăл кăмака çумĕнчи сак çине ларатчĕ те кукăр чĕлĕмне мăкăрлантарса çур çĕр иртиччнех юмах яратчĕ. Çав юмахсем хушшинче Улăп çинчен те илтме пулатчĕ.

Петр Тимофеевич юмах яма ăстаçă пулнă пулсан та, аннен Улăпĕ ун Улăпĕнчен пуянрах сăнлаччĕ, интереслĕрехчĕ.

Анне каланă тăрăх, Улăп çинчен вăл Дарье кинемирен илтнĕ. Дарье кинеми, хутаç çакса ыйткаласа çÿрекенскер, анне аллинче вилнĕ тет. Вăл вилес умĕн аннене хытарсах çапла каланă имĕш: ман хыçран эпĕ вилсен Улăп çинчен ман пек каласа ан çÿре. Халь Улăп çинчен калама вăхăт çитмен. Хам чĕлхене чарманшăнах ĕнтĕ ман çакăнта, çул çинчех, халăх ылханĕпе чун тухать пуль.

Анне вилес умĕн мана час-часах çапла калатчĕ: «Петĕр пичу ачи-сем пăхманнипе выçă вилчĕ, Хветĕк пичу урине хуççан асап чирĕпе вилчĕ, Микулай пичу та машин айне пулса вилчĕ. Сана Улăп çинчен кала-нăшăн хам та ыр вилĕмпе вилместĕп пуль».

Анне, Агапия Дмитревна Дмитрева, 1872 çулта Чăваш Республи-кинчи Красноармейски районне кĕрекен Крентекасси (Мăкăш) ятлă ялта çуралнă. Вăл ашшĕнчен пĕчĕклех тăлăха тăрса юлнă, амăшĕпе тата кĕçĕн шăллĕпе, Иванпа, качча кайиччнех пĕрле пурăннă.

Анне 1947 çулта август уйăхĕнче Шупашкарта вилчĕ, ăна Богдан Хмельницкий урамĕнчи çăва çинче пытарнă.

Аннен те кун-çулĕ тутлах пулмарĕ. «Улăп пирки чĕлхене чарман-нишĕн çак пуриăçа куратăп пуль, ачам»,— тени халь те ман хăлхара янăрать.

Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсене пăхса тухсан XIX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче чăвашсен паллă этнографĕ В. Г. Магницкий сăмахлăх тĕслĕхĕсене пухнă май чăваш халăхĕн эпос пурри çинчен «илтмен» тесе çырнă, Н. И. Ашмарин чăваш эпосĕ аталанман тесе çырнă, М. Сирот-кин «ни эти насыщенные былевыми элементами волшебно-героические сказки, ни бытовавшие отдельно от них разрозненные сказания не послужили основой для возникновения самостоятельных произведений в виде развернутых эпических песен и былин»[1], В. Канюков «Сказания об Улыпе уже давно расценивались преданьем старины глубокой...

[1] *М. Я. Сироткин.* Чувашский фольклор. 1965 ç.,88 с.

Человек сознавал, что Улып изжил себя» — тесе çырнисем вырăнлă мар теме пулать.

Чăвашсен героикăллă эпос пулнă. Ăна чăвашра çуралса аталанмалли условисем пайтах.

Эпоса çуралмалли чи паха услови — патшалăх. Чăвашсен патшалăх пулнă — сĕм авалтанах, тĕрлĕ вырăнта.

Шухăшăма çирĕплетме X ĕмĕре кăна илер. X ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Киев Русĕ Хазар каганатне çапса аркатсан Атăл тăрăхĕнче Пăлхарсемпе сăварсем (чăваш çаксен йăхĕ) хăйсен патшалăхне тунă. Çав Пăлхар патшалăхĕн çурçĕр чикки Чулман Атăл юханшывĕпе тăсăлнă, хĕвелтухăç чикки — Шуçăм, вырăсла Шешме юханшывĕпе пынă. Кантăр чикки — Сăр юханшывĕпе чикĕленнĕ.

Патти (Батый) хан уртичи çарпуçĕ Супетей (Субедей) ертсе пыракан тутар-монголсен хăватлă çарĕ 1236 çулхи кĕркунне Аталçи Пăлхар тĕп хулине Пăлхара туртса илсен йалтах çаратса, çунтарса янă хыççăн чăвашсемшĕн йывăр самана пуçланнă: икĕ виççĕмĕш пайĕ сĕм вăрмана салиннă, ыттисем, сĕм вăрмана саланма ĕлкĕрейменнисем, тутар-монгол чурисем пулнă.

Чăваш тутар-монгол пусмăрĕнчен хăтăласса шанинă. Ун пирки тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ вырăнта халап-юмахсем хывнă. Çав халап-юмахсем тăрăх, чăвашпа Улăп паттăр чăрарăн хăтарать. Унăн Çилçунат пур, аллинче вутхĕç çиçет. Вăл çич юта хăй айне тăвать.

Улăп паттăр çинчен хывнă халап-юмахсене вăхăтра çырса илмен. Хальхи вăхăтра çав халап-юмахсем ытла та кĕскен Улăп пурнăçĕн татăк-кĕсĕккене кăна çутатса парассĕ...

Эпĕ историк мар, тĕпчевçĕ те мар. Эпĕ улмуриче халăхан ылтăнпран та хаклă пуянлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтаракан кăна. Эпĕ утмăл çул ытла, лăпсăркка çыра çÿçлĕ ачаран пуçласа шап-шурă пуçлă старик пуличченех, халăхăн ылтăнран та хаклă пуянлăхне ятарласа шыраран. Сарманĕтейĕн сарă чăхан пек халахан ылтăнран та хаклă саланчăкла пуянлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн сăха-сăха пуçтартăм та пурçăн çип çине тирсе халăх пуянлăхĕнчен шăрçаласа ярăм турăм. Манăн пĕртен-пĕр ĕмĕт: Улăп çинчен калакли халап-юмахсене, вĕсем пите сахал упранса юлнă пулсан та, пуянлатса, çичĕ тăрăллă сăрт пек капмарлатса, эпос шайне çитерсе халăх хушшине тепĕр хут сарасси. Хам ĕмĕте кĕске ĕмĕрĕмре тивĕçлĕ пурнăçлама пултарайманăм пулсан — тăван халăх, каçар мана!

Ман шутпа, 700—800 çул каярах пирĕн аслă ват асаттесемпе асаннесен ĕмĕтне, савăнăçне, ăслăлăхне, ăсталăхне палăртакан палăл мифсене, паттăрла тата сутмалли юмахсене, вĕсем тĕрлĕ ĕмĕрте, тĕрлĕ сăлтавпа çуралнă пулсан та, тĕрлĕ вăхатра пулса иртнĕ ĕçсене пĕр вăхăтра пулнă пек кăтартса, Улăп тавра энциклопедилле пĕрлештерсе халăх хăй эпосне хывнă.

Чăваш халăх хушшинчи Улăп çинчен çÿрекен халап-юмахсене тĕпчесе пăхсан çакна асăрхатăн: Улăп чăвашра икĕ сăнарлă. Пĕрн — çеçенхир Улăпĕ, тепри — вăрман Улăпĕ. Вĕсем чăваш халап-юмахĕнче пĕрпĕрне хирĕçлемеççĕ. Халап-юмахра Улăп хăйне вирьялсем тет. Ун пек



калани вăл Г. И. Комиссаров вирьялсем пурăннă вырăна чикĕлесе кăтартнă районпа çыхăнмасть. «Вир» сăмах — хир, уй-хир, уй тени пулать. Улăп хăйне «вирьялсем» тени, ман шутпа, уйра пурăннине кăтартасшăн пек.

«Улăп. Чăваш эпосĕ» — чăвашăн паттăрла халапĕ, ăна сăвăласа çырни кăна. Эпос халăх историйĕпе çыхăнать пулсан та, вăл истори кĕнеки мар. Çавăнпа та Улăпăн паттăрла ĕçĕсем истори хронологине çыхăнмаççе.

Ман шутпа, Улăп урлă чăваш халăхĕ хăйĕн ăс-хакăлне, шухăшкăмăлне, ăсталăхне, пурнăçне, савăнăçпе хурлăхне, чăтамлăхне е хастарлăхне, йĕрке-тирпейне амăшĕн кăкăр сĕтĕнчен илнине кăтартать.

Улăпра хĕрĕх юра. Вĕсенче эпĕ Улăп паттăрлăхне, унăн ĕçĕсене, шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене тĕрлĕ енчен çутатса пама тăрăшрăм. Унти ĕçсем историри хронологие çыхăнмаççĕ пулсан та произведенири тĕп герой сăнарне пĕрре те тĕксĕмлетмеççĕ.

Халăх хушшинче çÿрекен халап-юмахсене шута илсе эпос матриархат вăхăтне те, Тамерланпа Супетей пурăннă вăхăтсене те, Владимир Святоя та, Аслă Пăлхартан пĕр ушкăн пăлхар халăхĕ хĕвеланăçне, Дунай юханшыв хĕрне куçса кайнине те, мадьяр (венгр) халăхĕ хĕвеланăçне куçса кайнă чух мĕнле асап курнине, вĕсене чăвашсем мĕнле пулăшнине те кăтартать.

Улăп халăх сăмахĕнче кĕтÿç те, сухаçă та, чÿкпуçĕ те, сăвăç та, юрăç та, кĕслевçĕ те, çурт-йĕр лартакан та, çар çынни те. Эпĕ çав сăнарсене уйрăм юрăсенче кăтартрăм.

«Улăпа» çырма чухне мана чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер, чăваш халăх писателĕ Илпек Микулайĕ сахал мар пулăшрĕç. Анчах та вĕсем чăваш эпосĕ уйрăм кĕнекепе тухассине кĕтсе илеймерĕç, çĕре кĕчĕç. Çемçе пултăр вĕсен вилтăпри!

М. Р. Федотова — профессора, филологи наукисен докторне, Чăваш патшалăх университечĕн чăваш чĕлхин кафедра заведующийĕ пулса ĕçленĕ доцента В. П. Никитин (Станьял) поэта, çамрăк ученăйсене В. Г. Родионовпа Г. Т. Юмарта, чăваш халăх писательне А. С. Артемьева, чăваш искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченне М. К. Антонова йывăр вăхăтра ман хута кĕнĕшĕн тата чăваш эпосне йĕркелесе çитерме пай-халăма çĕклентерниешĕн чунтан-вартан тав тăватăп.

1990

*ÇУЯН ХЕВЕТĔРЕ*

## ТУПМАЛЛИ


*Юрă пуçламăшĕ* . . . 4
I. Улăп ашшĕ Услатп . . . 8
II. Улăп амăшĕ Чĕкеç . . . 21
III. Улăп ачалăхĕ . . . 32
IV. Улăп тŷперен курнă тĕлĕнтермĕшсем . . . 42
V. Чăваш тăшманĕсем . . . 53
VI. Чăвашсем çĕнĕ çĕре куçни . . . 66
VII. Улăп аслашшĕ патне кайни . . . 78
VIII. Улăппа Ахăрьян . . . 86
IX. Улăп ыр аш тупни . . . 96
X. Улăп Алпастипе çапăçни . . . 104
XI. Улăп Хĕвел амăшĕ патĕнче . . . 114
XII. Шăпатан суя Улăп пулни . . . 126
XIII. Улăп кукамăшĕ патĕнче . . . 139
XIV. Улăп Çĕрпӳ паттăра çăлни . . . 157
XV. Улăп Сикпăрçана асамлăхран хăтарни . . . 166
XVI. Улăппа Нухрат патша хĕрĕ Сарине . . . 176
XVII. Нухрат патша . . . 194
XVIII. Улăп Кăтра пиипуç халăхне
асапран хăтарни . . . 200
XIX. Сĕнтĕр мăрса Саринене качча илме талпăнни . . . 214
XX. Улăп Эшкел çыннисене пулăшни . . . 226
XXI. Улăп Майрус асамлăхне сирсе яни . . . 234
XXII. Улăп Маçик мучăшне тĕрмерен хăтарни . . . 246





XXIII. Асамат Улăп валли хăртпа айпăлтн тунн . . . 264
XXIV. Улăп Алтăркуçа тĕп тунн . . . 280
XXV. Ментелейпе Сентелей Улăпа
ашшĕн вутхĕçĕпе Çилçуната шырама сĕнни . . . 297
XXVI. Туптул Улăпа ашшĕпе амăшĕ çиичен
каласа кăтартни . . . 310
XXVII. Турăсен канашлăвĕ . . . 330
XXVIII. Улăп — чăвашсен аслă чӳк пуçлăхĕ . . . 342
XXIX. Улăп Терпит хуна çĕнтерни . . . 355
XXX. Улăп Калай хуна парăнтарни . . . 378
XXXI. Улăп Уленкене асапран çăлни . . . 399
XXXII. Улăп Çуткун çĕршывĕнче . . . 417
XXXIII. Улăп çичĕ иикеке çĕнтерни . . . 442
XXXIV. Улăп матер халăхне нушаран хăтарни . . . 461
XXXV. Улăп Кирĕшмете тĕп тунн . . . 476
XXXVI. Паттн хун Чăваш çĕршывне тапăнни . . . 488
XXXVII. Улăп Кăтра ăратне çăлни . . . 560
XXXVIII. Улăп Эсреметпе çапăçни . . . 512
XXXIX. Улăп вилĕмĕ . . . 518
XL. Сарине уйăх çине улăхни . . . 543
*Юрă вĕçĕ* . . . 563
Хыçсăмах . . . 567

# УЛЫП

**ЧУВАШСКИЙ ЭПОС**

*Чувашские легенды*
*собрал и стихотворно изложил*
***Федор СЮИН***
*(Федоров Симон Федорович)*

На чувашском языке

Редактор *П. Е. Димитриев*
Художник *Г. Бритвин*
Художественный редактор *Г. С. Самсонова*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *Р. К. Игнатьева*

ИБ 2910

Сдано в набор 21.08.95. Подписано к печати 1.02.96. Формат 60×90 1/16. Бумага офсетная № 1. Гарнитура литературная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 36,0. Усл. кр.-отт. 144,5. Учетно-изд. л. 31,15. Тираж 3000 экз. Заказ № 1601. Изд. № 55. Цена «С»06.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары,
пр. Ленина, 4. Типография № 1
Министерства информации и печати Чувашской Республики,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

**Хв. Сюин**

УЛЫП. Чувашский эпос.

«Улып» — чувашский эпос, сохраненный в памяти многих поколений, величайшее достояние чувашского народа. Из рода в род, из поколения в поколение передавались среди чувашей сказании о добром великане Улыпе. Эпические сказания об Улыпе более полувека собирал и в стихотворном изложении воссоздал эпос «Улып» Хведер Сюин. Книга содержит сорок песен. Имеются примечания, комментарии и послесловие. Издание богато оформлено.

**-Khv. Syuin**

«ULYP», the Chuvash epos remaining in the memory of many generations, is the greatest property of the Chuvash people. Legends about the kind giant, Ulyp by name, have passed from generation to generation of the Chuvash people. For more than 50 years Khveder Syuin has been collecting and recreating these legends in poetry. The book all in all contains 40 songs. There are notes, commentaries and afterword. The edition is well designed.

**Çуйăн Хĕветĕрĕ.**
С 98 Улăп: Чăваш эпосĕ.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1996.—573 с.

Чăваш эпосĕ «Улăп» — халăхра упранса юлнă пысăк пуянлăх. Чăвашсем Улăп çинчен çӳрекен паттăрла халап-юмахсене ăруран ăрăва, ламран лама каласа пырса паянхи куна çитерме пултарнă. Çуйăн Хĕветĕрĕ вĕсене 60 çул хушши пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса, çĕнетсе, саваласа эпос шайне çитернĕ. Кĕнеке хĕрĕх юрăран тăрать.

ББК 84 Чув 7-5

$$С \frac{4702710202-06}{М\ 136(03)-96} 55-96$$